И87
1-46513

# Николай Исмуков

## Ҫырнисен пуххи

*Иккĕмĕш том*

Национальная библиотека ЧР
4-046513

«ЧĂВАШ ЕН»
Издательство-полиграфи комплексĕ»
уçă акционер обществи



ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

# ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

*Иккĕмĕш том*

Шупашкар
2014

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос-Чув)6
И 87

И 87 **Исмуков Н.А.**
**Çырнисен пуххи.** Иккĕмĕш том. Шупашкар. - 2014. - 314 с.

«Ахăрсамана» кĕнекере репрессин синкерлĕ вăхăтне Услей поэтăн кун-çулĕ урлă кăтартса панă.

И-46513
Национальная библиотека
Чувашской Республики

ISBN 978-5-86765-480-1
ISBN 978-5-86765-482-5 (II том)

© Исмуков Н. А., 2014
© ОАО «ИПК «Чувашия», 2014

## УМĔН КАЛАНИ

Ĕç-пуç Чăвашра тата Çĕпĕрте пулса иртет. Тĕп геройсен сăнарĕсене чăн пурнăçран илнĕ: Units Услей Исков («иск» сăмахран – явап тыттармалла) – национализм ярлăкне çакса янă поэт, Таниле Тынов («тынă» сăмахран, вырăсла – свидетель) – Кузнецов, вăл ĕçтешĕсене айăпланă чух свидетельте нумай çӳренĕ, Сахъя Августина Ярмужевна – Сахъянова М.М. (Атăл тăрăхĕнче репресси пуçлаканĕ, вăл хушнипе 1937 çулта кăна Чăвашра 2500 çынна тĕрмене хупнă, 455 çынна персе вĕлернĕ), Кĕверки Гаврилов – пĕтĕмĕшле сăнар (Сидоров ректор, Гаврилов милиционер, Яковлев партком секретарĕ), Сутов – Шитов, Чăваш НКВД пуçлăхĕ (ăна Розанов хыççăн уголовлă ĕçсене суялăхпа çирĕплетнĕшĕн персе вĕлернĕ) т.ыт.те. Хайлав чăнлăхран ан тухтăр тесе тĕрлĕ архив документчĕсемпе усă курнă.

Репресси вăхăтне Услей Исков поэт шăпи урлă кăтартса панă. Малтан вăл парти хушнипе калхуссем йĕркелес ĕçе хастар хутшăннă, кулаксене кăкланă, «сутă пуласлăхăн» рупорĕ пулнă. Каярах, репресси пусăмне чăтнă май, ун шухăшĕ тĕпрен улшăнать.

Киремет (коммунизм идеи) нумай чӳк парни ыйтать. Вăл этем çылăхĕсене, чир-чĕрне хăй çине илет. Ун ячĕпе парти çыннисем (хăшĕ ирĕклĕн, хăшĕ ирĕксĕр) çутă пуласлăхшăн пĕр-пĕрне сутса-вĕлерсе, чӳк парса коммунизм ĕненĕвне пĕтерессĕ. Киремет йывăççи хура аçа çапмассерен хуçăлса-чĕрмеленсе кукăр-макăр тăрса юлать.

Услей Исков тĕрмерен таврăнсан, тăван ялĕнче пăрçа хуралĕнче тăнă чухне, иртнĕ пурнăçне пĕтĕмлетет: халĕ ун тусĕсем те (хăшĕ чапа тухнă, хăшĕ сутăннă, хăшĕ Çĕпĕртен килеймен), çемйи те (арăмĕ «вилнĕ хут» илсен качча кайнă), сывлăхĕ те çук. Чун тасалăхĕнче лагерьти юратăвĕ анчах – Лисук.

*Редактортан.*

# АХӐРСАМАНА

*Сӑвӑлла трагеди*

**Услей Исков** – поэт.

**Ҫӑлпи** – Услейӗн ҫураҫнӑ хӗрӗ, каярахпа арӑмӗ пулнӑскер.

**Элекҫей Сатуров** – НКВД аслӑ следователӗ.

**Кӗверки Гаврилов** – НКВД следователӗ.

**Лисук** – Элекҫей йӑмӑкӗ, каярахпа Кӗверки арӑмӗ пулнӑскер.

**Сухви** – Лисукӑн хӗр-тантӑшӗ.

**Таниле Тынов** – партин облаҫри культура пайне ертсе пыраканӗ.

**Сахъя Ярмужевна** – ВКП(б) Тӗпкомӗн контроль комиссийӗн уполномоченнӑйӗ.

**Илле** – бригадир, лагерьте ларса тухнӑскер.

**Солдатов**<br>**Нуся**<br>**Сантӑр Васков**<br>**Петро**<br>**Йӑван** – лагерьте ларакансем.

Яш-кӗрӗм, поэт-писательсем, надзирательсемпе конвоирсем, ытти пуҫ янӑ ҫынсем, НКВД-МГБ сотрудникӗсем. Ӗҫ-пуҫ Чӑвашра, Ҫӗпӗр ҫӗрӗнче 1937-1947 ҫулсенче пулса иртет.

## ПОЭТ МОНОЛОГĔ

Вылять иккен тĕнче. Вăрман çинче
Чăпар куккук чарусăр авăтать,
Пĕр каçăхса каять, пĕр такăнать.

Ку-ку, ку-ку! Пĕр çывăх, пĕр инçе
Саккăрланать те сасă мал енче, –
Çук, татăк ахрăм мар, кун тăкăнать.

Куккук, куккук! Сăвапсăр çĕр çинче
Кун тăкăнса пĕтсессĕн мĕн юлать?
Çут уçлăхри пек тĕттĕм каç пулать.

Апла кала-ха эсĕ, паллакан,
Килет-и те каять-и васкакан?

Куккук чечекĕ шăтнă кунсенче,
Пĕлетĕп, çутçанталăк хуçăлать,
Çу алăкĕ алтарь пек уçăлать.

Çак улшăну майпен ман витĕр те
Тăварлă шыв пек сăрхăнса кĕрет –
Ахаль-им вăл шăмшакăма хуçать!

Пуçа ыраттарса, астăвăма
Çул иртнĕ май йĕркелесе тăма
Иккĕленӳ иккĕленсе куçать:

Кайни килет-и, е килни каfive?
Тен, çут тĕнче çавăрăнса тăрать? ...

Салам, çулла! – пӳ янӑ сар пике,
Эс ман вӑталӑх йӑмӑкӑм пекех:
Сӑпайлӑ та тӳр кӑмӑллӑ, ӗçчен.

Тӑм тирӗк пек çавра уçланкӑна
Хӗвел, сар çу пек, çаврӑнса ӳксен,
Питне çӑвать çырла яра куна.

Ӑçтан ун чухлӗ сисӗм сан, çулла?
Ыран качча каяс пике кӑна
Чиперленме пултарӗ çаплалла.

Ылмашӑвӑн чӗтревлӗ чиккинче
Пӑлат хӗç евӗр çивӗч-мӗн тӗнче.

Кашнийӗн хӑйӗн вӑхӑчӗ – мӗнех!
Пӗр аслӑ Куç пек çут тӗнче умне
Çавӑрӑнса тухар-и йӗрӗлчен?

Кайран мӗн пулӗ? – Асӑнса çиме,
Уçланкӑ пек çавра сӗтел çине,
Сар çулçӑ – сар икерчӗ – ӳкиччен

Умри куна тумлам-тумламӑн мар,
Туй каччилле шалтти туса парар,
Курка тӗпне вара сапар çӗре:

Пӗри кайса тепри килмессерен
Пӗлӗтпеле Çӗр пулччӑр виçере.

Йӑли-йӗркийӗ пултӑр ӗмӗрхи:
Виçе тытан танлаштару йӗрки
Ытлашшине илсе, çитменнине парать.

Çапла пĕр иксĕлсе, пĕр çитĕнсе,
Хăй тĕллĕнех аталанан тĕнче,
Пăркăчласа хытарĕ пурнăçа.

Вара тĕнчен пĕр пĕтĕм йĕркипе,
Чĕрре кĕмесĕр, кăмăл еккипе,
Майпен утса тухар-и мал енне?

Ĕненĕр çутçанталăк саккунне:
Çу вĕçленмесĕр пулмĕ кĕркунне.



# ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

## Пĕрремĕш картина

Вăрман хĕрринче, çурма уçланкă. Пĕр енче – хырсем, тепĕр енче – хурăнсем. Уçланкă улăхпа пĕрлешсе кайнă çĕрте тăрри хуçăлнă вĕрене – Киремет йывăççи курăнать. Аякрах мар çырма, ун хĕрринче ял. Çимĕк вăхăчĕ. Тавралăх хĕвел çутипе çăвăнать. Уçланкăна икшерĕн-виçшерĕн яш-кĕрĕм пуçтарăнать, хăйсем – анатри чăвашсен тумĕпе. Хурăнлăх айĕнче Лисукпа Сухви тăраççĕ. Инçех мар Услейпе Çăлпи алла-аллăн тытăнса тăни курăнать.

Лисук

Ав, кур-ха, кур эс – хыр çине таянчĕ
Анаткасри мăнкăмăллă мухтанчăк.

Сухви

Ăна вĕçкĕнленни те килĕшет –

Ахальтен мар çыравçă вăл, поэт!
Ах, куçĕсем епле тата Услейĕн:
Вăйран ярать пĕрре пăхса илсен.
Вăййа илем кӳмех çуратнă тейĕн
Ун пек йĕкĕтсене.

Лисук

Куçна илсем —
Мĕн пур вара унра?
Çитменнине,
Ăна çураçнă теççĕ Çăлпине.
Çăлпийĕнче те ним те çук, — шуранкă,
Тĕпсакайра ӳстернĕ курăк пек.
Учительница! Курăпăр-ха акă,
Мĕнле пурăннине упăшкипе.
Сухви, санран эп питĕ тĕлĕнетĕп:
Мĕнле йăла вăл? —
Каçаран пурне те.
Хăвна пăхмарĕ, эсĕ пур ăна
Саватăн халь те, уншăн пурăнан.

Сухви

Ан калаçсам кирлĕ мара, Лисук, —
Вĕсен çулне-йĕрне эп пӳлес çук.
Ма кураймастăн эс ăна, хĕр-тантăш,
Сана усал туман-çке вăл нихçан та.

Лисук

Анчах нихçан та ырă та туман.

Сухви

Çитет, Лисук, чечексенчен вăтан.

Çынсен шăпишĕн савăнма пĕлен çын
Ыттисенчен пĕр карт телейлĕрех.
Çапла калатчĕ чĕрĕ чух аннеçĕм.
Тен, самани халь кăшт тӳнтерлерех?..
Çак ырă йăлана та халăх манчĕ.

Л и с у к

Тепле, тепле...
Эп халиччен курманччĕ
Ютсен вĕри вучахĕ умĕнче
Çынсем чунĕсене ăшăтнине.
Е — юрату хĕрарăм чĕринче,
Е — курайманлăх ĕмĕр иртиччен.
Тете сăмахĕ ку, Сухви.
Эккей,
Ухмах çын мар вăл пирĕн Элексей.

Л и с у к п а С у х в и патне йĕкĕтсем пыраççĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш  й ĕ к ĕ т

Мĕн уйăраççĕ кăвакарчăнсем?
Е каччăсем çитмеççĕ-и сире?
Эпир ак — сирĕн савăш каччăрсем —
Савни тума начарах мар сĕре.

И к к ĕ м ĕ ш  й ĕ к ĕ т

Кирлех пулсан, Лисукăм, пĕлтерем:
Эп туй тума та хатĕр кĕçĕрех.

Л и с у к

Авланассу килет-им чăтма çук?
Сана кĕтсе пурнать курпун Паçук.

Пĕрремĕш йĕкĕт

Ах тур, чĕлхӳ ытла усал, пике, —
Качча каймасăр юлăн каплипе.

Иккĕмĕш йĕкĕт

Услейĕн кăмăлĕ — тулли пӳлме,
Анчах, ăнланăр, вăл сире пӳрмен.

Виççĕмĕш йĕкĕт

Юрри кăна-и? — Чунĕ те халь унăн
Çăлпишĕн çеç çунса тăрать вут хунăн.

Пĕрремĕш йĕкĕт

Лисук, ан кай текех эс юмăça —
Халь тин сан май çаврăнмасть Уçça.

Лисук

Мĕскер павратăн — эпĕ ун çинчен
Пĕрре выртса çурри те тĕлленмен.

Сухви

Чи çывăх тантăш тет хăйне тата!
Ай-яй, Лисук, пĕлмен те, тупата,
Эс Услее çаплах юратнине.
Епле чее!
Ак пĕлтĕмĕр тинех.

Лисук

Эс ху, Сухви, Услей çураçнине
Илтсен йĕмерĕн-и пĕр касхине?

Иккĕмĕш йĕкĕт

Уйăрмаллийĕ çук пулсан, хĕрсем,
Мĕн-ма тавлашмалла вара хĕрсех?

Услейпе Çăлпи хулари пек çавăтăнса ушкăн еннелле утаççĕ.

Сухви

Ах, чарăнăр, сассăмăрсем пит уçă.
Вăй картине, ав, йыхăрать вăйпуçĕ.

Услей
*(аякранах)*

Мĕнле пурнаççĕ ман ентешĕмсем,
Арпуçĕнчи маттур пăхаттирсем?
Уяв саламĕ пултăр пирĕнтен!
*(Алă парса пынă май.)*
Ку — ман савни, Çăлпи.
Пĕлетĕр, тен?
*(Сухвипе Лисук патне çитсен.)*
Паллаш, Çăлпи, кусем — вăй çеçкисем.
Эп пĕлтĕр аслă çимĕке килсен,
Çапла кăначчĕ — шурă лĕпĕшсем,
Халь пулнă тăнă ăшçунтармăшсем.
Ку, ак, Сухви, Укахăн кĕçĕн хĕрĕ,
Ку, ак, Лисук, хитре пăрчкан пек чĕрĕ.
Лисук, кама эс çунтаран, калаччĕ?
Сана савма пĕлен — телейлĕ каччă.

Лисук
*(шахвăртарах)*

Пире мухтан, сăмах ваклан, шӳтлен,
Анчах урăххине качча илен.

Пĕлтĕрхилле арпуççене савманшăн
Пĕри паян та макăрчĕ-ха саншăн...

С у х в и

Ах, çав Лисук...

Л и с у к

Мĕн пытаран вара –
Халь ĕнтĕ çук саркайăк йăвара.

У с л е й
*(Лисук пекех, шӳтлерех)*

Ак, Микулай тытса юратĕ те,
Эсир мана йăлт манса кайăр, тен?
Эй, çак пăлаенсем, саççим, кур-ха,
Ытла та ухута шӳт сăмаха.
Юрать-ха ăнланатпăр пĕр-пĕрне,
Апла пуçлам-ха вăйă юррине.

Вăййăн-вăййăн вăй тулли,
Тĕрлĕ чечек хир тулли,
Тĕрлĕ чечек – куç валли,
Пĕри анчах чун варли.

Вăйпуçĕ ушкăнран ушкăна çӳрет, У с л е й с е н еннелле сывхарать.

В ă й п у ç ĕ

Чим, тăхтăр-ха, вăй пуçлама ан васкăр,
Пĕччен юрлакана тытать, тет, кашкăр.
Салам, Услей!
Эс уява тухсан,

Вăй илемне яман эпир нихçан.
Манран пытарăн-и — пĕлетĕп эпĕ —
Çăлпи Васильевнăн сасси те çепĕç.

Пĕр ушкăн яш-кĕрĕмпе вăйăç килсе çитет.

Ак, килчĕ вăйăç, — йĕкĕтсем, сĕре
Ан сикĕр тӳмине пусмассерен.

Хĕрсем пĕр ушкăна пуçтарăнаççĕ, карталанса тăраççĕ. Кĕххĕм-кĕххĕм туса сассисене тĕрĕслеççĕ. Анатъенсен вăйă юррине юрлаççĕ. Вăйă-кулă хĕрсе пырать, ташă пуçланать. Çав вăхăтра Элекçей Сатуровпа Кĕверки Гаврилов унччен-рех çеç Услейпе Çăлпи тăнă вырăна çитсе чарăнаççĕ.

Кĕверки

Лекçей Степанч, шур пурçăн кĕпепе
Çиçсе тăран этем çав сăвăç мар-и?

Элекçей

Пăрах эс тĕллемешкĕн пӳрнепе.
Юрать-ха хăй çавăрăнса пăхмарĕ.
Вăй кирлĕ-ха çынна.
Хушпулăша
Çапах чеелĕх — çивĕч хĕçпăшал.
Кам чеерех — вăл çиелте, вăл паттăр,
Ухмах нихçан та хисепре пулман-тăр.
Политика вăл — çимĕк мар,
Енчен,
Эс кӳлĕнтĕн пулсассăн çак ĕçе,
Туртас пулать ăна мĕн виличчен.
Мĕнле калас, пĕр енлĕ ку вĕçев...

К ĕ в е р к и

Килĕшмелле сăмахăрпа.
Тата
Хăюлăх кирлĕ аслă чекиста.

Э л е к ç е й

Çапла. Совет влаçне хӳтĕлемешкĕн
Ăçтан пултартăр чăх чĕреллĕ мĕскĕн?!
Этемлĕхĕн тĕллевĕ – коммунизм,
Пĕр тăшмана эс тĕп тусан, пĕр пусăм
Çĕкленĕн çут Пуласлăх еннелле.
Çак лозунг пек сăмахăма сан, тусăм,
Ним шутламасăрах ĕненмелле.
Ахаль-им панă пистолет алла!
Мала, пĕртанлăх патнелле, мала!
Тăнла, вĕренекенĕм, Кĕверки,
Сăмахăма сана тӳрех калатăп, –
Эп лайăх шухăшланă сан пирки, –
Пуçу ĕçлет, хитре эс сăнупа та,
Кĕрӳ пулассине шансах тăратăп.

К ĕ в е р к и

Лекçей Степанч, эс вĕрентнисене
Картсах хуратăп пистолет çине.

Элекçейпе Кĕверки шăкăл-шăкăл калаçса вăйă карти еннелле утаççĕ. Вĕсене хирĕç вăйпуçĕ тухать.

В ă й п у ç ĕ

Салам, Лекçей!
Эпир кунта паян
Хăнасенчен нихçанхинчен пуян.



Ч-46613
Национальная библиотека
Чувашской Республики

Турри пире, чăнах та, хисеплет-тĕр —
Епле аса илсе килмешкĕн пĕлтĕр?
Тусу ăçтан? Пире те паллаштар:
Авланнă çын-и е чалтун хусах?
Çак аслă çимĕк кунĕ чăнласах
Чухăнланса юлман-и Шупашкар? —
Услей те килнĕ, ав, хисеп туса.

Э л е к ç е й

Салам, салам.

В ă й п у ç ĕ

Тăван ялти пек пулăр.

Э л е к ç е й

Эсир мана ан пăхăр, выльăр кулăр.
Кăшт сывласа илем-ха çул çинчен,
Пăхса тăрам сире чун каниччен.
Ак, чĕн Кĕверкине.
Чĕнех ятран.
Ман çамрăк тусăм маншăн та килентĕр.
Ут утланса кунта вăл аякран
Вăрман тăрри анчах курма килмен-тĕр.

П ĕ р р е м ĕ ш   й ĕ к ĕ т

«Вăрман хĕрри» курасшăн мар-и каччă?
Ун пеккине Карсун Ваççи ăстаччĕ.

И к к ĕ м ĕ ш   й ĕ к ĕ т

Хĕр суйлама килекене, ачсемĕр,
Курпун Паçук килĕшмелле пек...

Виççĕмĕш йĕкĕт

Чимĕр,
Крахъян шеп мар-и вĕçкĕн йĕкĕте?
*(Ахăлтатса кулаççĕ.)*

Кĕверки

Эс ун пекех ытла ан йĕкĕлте!

Вăйпуçĕ

Эй, йĕкĕтсем, кама çапла пайлатăр?
Хĕрсем юлмаççĕ тетĕр-и ялта!
Тĕркешӳпе вăййа ан пăсăр, атьăр
Юрлар пĕр çаврăм юррине тата.
*(Кĕверки енне çаврăнса)*
Тен, вирьялсем мĕнле ташланине
Кăтартĕ пирĕн аякри хăнамăр?

Кĕверки

Малтан кăтартăр ташласа хусамăр,
Вара хуçса пăхас «саккăрлине».

Анатьенсен ташшине ташлаççĕ. Такмакĕсене чылай чухне Лисук пуçласа пырать. Унтан турисен ташă кĕвви илтĕнсе каять. Кĕверки çăмăллăн сиксе тухать, хĕрсемпе, вĕсен шутĕнче Лисукпа та, черетлĕн-черетлĕн ташлать. Вăйă картинчисем кăмăллăн пăшăлтатса илеççĕ. Кĕвĕ вĕçленес умĕн вăйпуçĕ аллине çĕклет.

Вăйпуçĕ

Маттур, маттур!
Кун хыççăн кам хурлатăр

Туриенчи йĕвенсĕр джигита!
*(Кăшт тăхтасан.)*
Йĕкĕтсемпе хĕрсем, епле шутлатăр
Сăмах парсан хисеплĕ поэта?

П ĕ р р е м ĕ ш   й ĕ к ĕ т

Халь Услее итлемесессĕн, ўлĕм
Пире уяв туса та памĕ Пўлĕх.

И к к ĕ м ĕ ш   й ĕ к ĕ т

Итлес текеннисем татах та пур-тăр:
Куратăр-и, ăна Хырай тимлет!

В и ç ç ĕ м ĕ ш   й ĕ к ĕ т

Ялан телейлĕ пултăр, сывă пултăр.

П ĕ р р е м ĕ ш   й ĕ к ĕ т

Анатъенне мухтав кўрен поэт!

У с л е й
*(шўтлерех)*

Мĕн сăлтавпа мухтатăр? – Айтурах,
Укçам та çук илме пĕр кĕленче.
Ĕненĕр, юлташсем, хурланинчен
Мухтанине чăтма йывăртарах.

Т ă в а т т ă м ĕ ш   й ĕ к ĕ т

Услей, эс, чăн та, тивĕç мухтава –
Сăвву-юррушăн, туршăн та тавах.

Пĕрремĕш йĕкĕт

Акатуйсем çинчен çырни аванччĕ,
Çавна, Услей, эс каласа парсамччĕ.

Лисук

Сан пуçăнта та акатуй кăна
Аташнă ут кĕтӳ пек шуйхăшать.
Çук, юрату çинчен каламалла.

Элекçей

Çĕршыв çинчен, чăваш çинчен кала,
Вĕсем пит килмелле пек кăмăла.

Услей

Эй, Элекçей те килнĕ-çке.
Салам!

Элекçей

Салам, Услей!
*(Алă тытаççĕ.)*
Сана курма хавас.
Анчах епле чăрмантарма хăяс? —
Вула, Услей, — эп итлекен пулам.

Услей

Çак тĕнчере сăваплă итлекен,
Анчах та çылăхлă, тет, пуплекен.
Епле кăмăлăра тупса пĕтерĕп?
Ытлашшине илсе, çитменнине çитерĕп:
Юрать, тăванăмсем, сире савса
Пĕр-ик çавра парам-ха каласа.

## ЧӐВАШ ХАЛӐХНЕ

Ĕҫченлĕх, тирпейлĕх, сӑпайлӑх
Ҫак виҫĕ тĕп никĕс ҫинче
Хисеплĕн тӑрать манӑн халӑх
Ытти халӑхсен хушшинче.

Хӑй евĕр хитре тӑван енĕм,
Йӑмралӑхӑн сиплĕ шӑрши.
Пире несĕлсем парнеленĕ
Йӑва пек типтерлĕ ҫĕршыв.

Чӑвашӑм, сана кам хисеплĕ
Хӑвна хисепе хумасан?
Тӑван сӑмаху сан сипетлĕ,
Юрру ҫӑл юррийĕ пек сан.

Мĕн чухлĕ хӑватлӑ ҫĕн туртӑм,
Мĕн чухлĕ вӑй-хал халӑхра!
Чӑвашӑн пуласлӑхне куртӑм
Союзӑмӑрта — туслӑхра.

Сӑпайлӑх, тирпейлĕх, ĕҫченлĕх.
Тата мĕн сĕнес халӑха?
Тĕреклĕ ҫак виҫĕ кĕтеслĕх
Упратӑр талантлӑ йӑха!

Алӑ ҫупаҫҫĕ. Тепрер сӑвӑ калама ыйтаҫҫĕ. Кĕверки уйрӑмах тимлесе итлет. Услей хĕрсене куҫ хĕссе илет те юрату сӑвви калама пуҫлать. Халь ҫеҫ шухӑшласа тупса калани туйӑнсах тӑрать.

Уй тулли — кăвак чечек,
Пурте çеçкере.
Куç тулли хитре хĕрсем,
Хăшĕ хитререх?

Татăп тенĕччĕ пĕрне —
Татрăм тепĕрне.
Тен, суйларăм хамăннех —
Турă çырнине?

Хĕрлĕ пурçăн тутăрна
Çых, савни, хĕрле.
Тек утаймăп савăнса
Санпала пĕрле.

Манăп тенĕччĕ сана —
Манаймарăм, çук!
Аса илĕп эп сана
Ăшăм çуннă чух.

Лисук Услей çине çăтса ярасла пăхать, куçĕнчен куççуль пăчăртанса тухать. Сухви ăна аллинчен чăмăртаса систерет. Вăйă пынă вăхăтра майĕпен çанталăк улшăнать, хĕвеланăç енчен хура пĕлĕтсем тухаççĕ. Поэт çӳçне çил вĕçтерет. Тăрри хуçăк киремет йывăççине аçа çапать те, йĕкĕтсемпе хĕрсем çуйхăшса сапаланса пĕтеççĕ. Вĕрене туратти Çăлпи ури айнех ӳкет. Çумăр çапса çăвать. Услейпе Çăлпи сырма хĕрринчи йăмра айне чупса çитеççĕ. Услей костюмне хывса Çăлпи çине уртса ярать.

## Услей

Çанталăк суккăр тенĕ ĕлĕкех, —
Юрать-ха сан çине ӳкмерĕ йывăç,
Тем курса тăрăн...

Ç ă л п и

Мĕн эс? – эпĕ сывă.
Санпа чухне эп пирĕшти пекех:
Пире нимле усал та тĕкĕнеймĕ,
Утас çула турат тавраш пӳлеймĕ.
Мĕнпур ырри, çутти, мĕнпур телейĕм
Сан ятупа рифмăланать, Услейĕм.
Куратăн-и, каллех хитре çанталăк.
Илтетĕн-и, каллех юрлать саркайăк?
Анчах мĕн-ма йĕрет кăвак чечек?

*(Пĕшкĕнсе чечеке лăпкать.)*

У с л е й

Çураçнă хĕр йăлийĕ çавăн пек.

Ç ă л п и

Çав урăм-сурăм тĕксĕм пĕлĕтсем
Ăна кӳрентерсе хăварчĕç, тен?

У с л е й

Лăплан, Çăлпийĕм, тĕксĕмлĕх пĕтсен,
Тĕнче хăй тинкерет ун куçĕнчен.

Ç ă л п и

Услей, итле-ха, çав çынсем камсем,
Вăйăа кая юлса çитнĕскерсем?
Вĕсем... вĕсем ман кăмăла каймарĕç.

У с л е й

Ют каччăсем халь саншăн пĕрех мар-и?

Ç ă л п и

Çук, ан шӳтле, Услей, – пĕри сана
Вăй тăршшĕпех куç айĕнчен сăнарĕ.
Тепри те, ташлани, вылять кăна,
Чĕлхи япшар, анчах усал сăнарĕ.
Эс сăвă каласа памассерен
Юри çын курмалла вăл алă çупрĕ.
Ан çывăхлан вĕсемпеле сĕре,
Хăратăп эпĕ вĕсенчен.

У с л е й

Эй, тупрĕ
Калаçмалли çак ырă сехетре:
Хитре тĕнче вĕсемсĕрех хитре.
Çăлпи, эс астăватăн-и...

Ç ă л п и

Çук, çук –
Кирлех ку – эп хускатнă калаçу.
Камсем вĕсем, ăçтан, мĕскер тăвасшăн?
Хула çыннисемех-и, е ялтан?
Услейĕм, лăплантар мана, тархасшăн,
Ман пĕлмеллех, каласа пар йăлтах.

У с л е й

Сăлтавсăрах чĕвĕлтетен, Çăлпи,
*(Кăштах тăхтасан)*
Мĕн пĕлнине йăлтах калам эппин.
Пĕрремĕшĕ. Кĕверкине пĕлместĕп.
*(Шӳтлерех.)*
Ăна эп мар, пĕлместĕн, авă, эс те.

Ачи маттур пек туйăнчĕ мана —
Хаваслă, уçă кăмăллă...
кăшт каскăн.
Тата мĕн кирлĕ çамрăк каччăна
Ют ял хĕрĕсене ăнран ямашкăн.
Лексей текеннине вара пĕлетĕп.
Вăл кӳршĕ ял çынни.
Кунтан ик çухрăм
Анăçарах, чухлатăп кил тĕлне те.
Мĕн пĕлнине ак каласа та тухрăм.
Ăçта ĕçлет?
Шупашкарта пулас.
Эпир унпа шкулта пĕрле вĕреннĕ,
Туссем пулман, анчах, мĕнле калас,
Чухăнсене эпир ялан хĕрхеннĕ:
Шкулта чухне пĕр татăк çăкăра та
Унпа тăваттăм эпĕ çурмаран.
Активиста вăл çырăнчĕ кайран.
Эп, акă, кур — сан умăнта тăратăп.

## Ç ă л п и

Юрать, Услей, юрать. Тек ан кала —
Сан ун çинчен халь калаçас килмест.
Тен, тепĕр чух.
Каçар та, кампала
Мĕнле пулмаллине пĕлместĕн эс.
Е тус вăл, е тăшман? —
Чăваш пулсассăн,
Пурне те хунтăш вырăнне хуран,
Пурне те пĕр аршăнпала картасшăн.
Саманисем хальхаççăн, ху куран,
Пĕрре — ирхи пек лăпкă, çутă, ырă,
Тепре — аçа çапать тăр-кăнтăрлах.

Услей

Ăсчах пек ăслă ман Çăлпийĕм.
Турă
Пире пĕлсех-мĕн, тусăм, мăшăрлать.

Çăлпи

Ан кул-ха тулькăш эс: хĕрарăмсен
Ăспуçĕнчен малта — туйăмĕсем.

Услей

Аплах пулсан, çав туйăму ан чактăр...

Услей хăйĕн шўтлерех сăмахне малалла тăсасшăн, анчах Çăлпи ăна калама памасть, шĕвĕр пўрнине ун тути урлă хурать.

Çăлпи

Эс лайăх, лайăх, чунăмçăм. Анчах та
Çитменлĕхў те сан — лайăххинче:
Мĕнпур çут тĕнчене юратнинче,
Çынна пĕрре курсах ĕненнинче.
Калам-и малалла?
Йăлтах калам-и,
Хам ăшăмра мĕскер шутланине?

Услей

Сан сăмаху, Çăлпи, уяв саламĕ,
Кала, кала, чĕкеçĕм, чăннине.

Çăлпи

Эс икĕ тĕнчепе, Услей, пурнатăн:
Пĕри — поэзин çылăхсăр тĕнчи,

Унта кĕртместĕн эсĕ никама та.
Мана та ун алтарĕ умĕнчи
Çурта вырăнĕнче кăна тытатăн.
Паллах, унта сан – ирĕклĕх, йĕрке,
Хăв – тĕрĕслĕх хуçи те аслă Пӳлĕх –
Пĕр тăкăрлатнă çирĕп çул-йĕрпе
Кашнин валли тупатăн килĕшӳлĕх.
Шухăшласа кăларнă çăтмахра,
Пĕлетĕп, пурăнмашкăн çăмăлрах.
Тен, çавăнпа – кăшт йывăрлăх лекет те,
Поэзи çĕршывне тарса килетĕн?
Услейĕм, чунăм, ăнлансам мана:
Поэзисĕр пуçне пур чăнкă чăнлăх,
Пур сăлăп янă çирĕп самана,
Тӳрккеслĕх, кĕвĕçӳлĕх, курайманлăх
Вăл – çак çынсем хĕвĕшекен тĕнче.
Унта эпир санпа анчах-и!
Авă,
Çăтса ярас пек, авăр патĕнче
Тăраççĕ иккĕн, иккĕшĕ те савăк.
Мĕскер шутлаççĕ? Турă çех пĕлет,
Пĕлет те – хăйĕнпе хăй çех пуплет.

У с л е й
*(Ассăн сывласа илет те Çăлпие аллинчен тытса)*

Мĕскер вара эпир паян пĕрре те
Хавасла мар, çĕн мăшăрсем пек мар?
Сана пула политлăха кĕретĕп,
Кăнттамланать çемçе чĕлхе-çăвар.

Ç ă л п и

Çапла хушать-çке самани, Услей.

Кăштах пулин те асăрханмасассăн.
Мĕн курăпăр?

Услей

Пурне те халь манар.
Эп — ирĕк кайăкĕ!
Эй-эй!

*(Хăйне йӳле ярса, ик аллине тути тĕлĕнче варинкке пек тытса)*

Эй-эй!
Сăвăланса салантăр манăн сассăм
Çырма-çатраллă, улăхлă-çаранлă,
Пăлхарăн кăмăл-туйăмĕ пек анлă
Мĕнпур, мĕнпур Чăваш çĕршывĕпех!

Çăлпи

Çӳретĕр-иç, анчах та ахрăм пек
Калла килейтĕр çак уçланкăнах.

Услей

Паллах, çырлаçăм, сан патна кăна.

Услей, калаçăва хăй еккине куçарайнăшăн савăнса, Çăлпие ыталаса илет.

Çак Хырлăха эп питĕ кăмăллатăп:
Сĕм-кĕркунне те, çуйăмлă çулла та
Кирек аçта инçе кайсассăн та
Калла килетĕп чи малтан кунта.
Ахальтен мар, ахальтен мар апла-тăк
Çак кĕтесе куçланă несĕлсем.
Чăваш вăййи-кулли — чăн-чăн Эллада,

Куçна хупса тепре аса илсем:
Хĕрсен юррийĕ халĕ те анман-ха
Сап-сар çурта пек хыр тăррисенчен.
Тен, вĕсене асамлă каçсенче
Шур чечексем юрлаççĕ?

Ç ă л п и

Шухăшла-ха,
Тен, çăлтăрсем юрлаççĕ вĕсене,
Сухвипеле Лисук юррисене?

У с л е й

Çак вырăн питĕ тухатуллă теççĕ,
Ăна куç пăвнă теççĕ пĕр чӳклевçĕ, –
Ав çавăнта ларать аçа е тăвăл
Çапса антарнă кукăр вĕрене.
Пуриншĕн те явапллă пек пулса вăл
Çын çылăхне илет-мĕн хăй çине.
Чир-чĕр, усал-тĕселсене сирет, тет,
Этемлĕхрен сирет, тет, асапа...
Çапла çĕр çылăх пухăнса çитет те,
Ăна каллех хура аçа çапать.
Апла-и, апла мар-и – тĕлĕнетĕн:
Мĕн чухлĕ çынлăх çавă Киреметĕн!

*(Куларах-шӳтлерех.)*

Асту-ха-эс, Çăлпи, ак çак тĕлте
Пире çăлмарĕ-и вăл халĕ те?

Ç ă л п и
*(Услей сассине ӳкерсе)*

Ах, турăçăм, чăнах та çапла мар-и?
Тавах ăна – мана вилме памарĕ.

Анчах ман çылăх çук-çке, тупата,
Мĕн-ма усал çывхарнă ман пата?
Атя эпир те çак вĕренене
Кăшт хăварар чун канăçсăрлăхне:
Сапса парар çур ывăç вак укçа —
Ан çулăхтăр пире инкек-сăпса.

Услей

Этем хăй инкекне хăй тўсейменшĕн
Пит айăплă-шим кукăр вĕрене?
Çăлпийĕм, чим-ха, Киреметĕн мĕншĕн
Чăтас пулать тĕнче чĕмерине?
Кунçулăмăр çаврăмĕнче телей те,
Инкеклĕ кун та курмаллах пулсан,
Пурне те вăл пĕр виçепе килейтĕр,
Пĕртанлăх та пуçлантăр çакăнтан.
Мĕн пулĕ малашне этемлĕхе
Хай шăпине хăй йăтайми пулсассăн?!
Тавах, вăй пур-ха пирĕн халлĕхе
Кунçул кутамккине йăтса утмашкăн.

Çăлпи

Мĕнле кун пулчĕ, калашле, паян?
Пĕрре те уяври пек туйăнмарĕ.
Вырсарникун шухăшлани ялан
Тўрре килет тесе калаççĕ мар-и?..
Ав кăсăя анать çерем çине —
Апла каллех кĕт çумăра касçўлĕм.
Услейĕм, пăх-ха, кур-ха хĕрсене —
Çаруранах чупаççĕ ял енне.
Тата хăçан çапла эп çўрĕп ўлĕм,
Хывса йăтам-и эп те туфлине?
Анчах ял халăхĕ курсан мĕн калĕ?

«Ах, намăс пĕтнĕ çамрăксемшĕн халĕ:
Çураçнă хĕрĕн лармалла килте,
Вăл пур — çӳрет, ав, тейĕç кулете».

Услей

Каяр, Çăлпи, эпир те килелле,
Уяв вăл тепĕр çул та килмелле.
Кӳр пушмакна — халь йăлана пĕлмеççĕ,
Ак çаплалла, Çăлпиçĕм, алă вĕççĕн.
*(Услей Çăлпие алă çине илет.)*
Йăтса çитерĕп шур Шупашкара,
Ӳкермĕп нихăçан та, ан хăра.

Çумăр хыççăнхи хĕвел ăшшăн çутатать, телейлĕ мăшăра савса пăхать. Авăр енчен, хура мĕлкерен тухмасăр, Элекçейпе Кĕверки Услейсен вырăнне пырса тăраççĕ.

Кĕверки

Чее поэт: эпир кунта чухне
Вулать-и вăл крамола-săввине!

Элекçей

Анчах эпир мĕскер шутланине
Вăл чухламасть-çке.

Кĕверки

Тен, асăрханать?

Элекçей

Асăрханмасть.
Услей вăл — ярханах.
Мана халь урăххи кăсăклăрах:

Мĕскер çинчен пит тимлесех пуплерĕç?
Çак икĕ кăвакарчăн, ик ĕçтеш?
Пĕрне-пĕри хĕрӳн савма пĕлмерĕç,
Ачашшăн, тутлăн чуптумарĕç те...

Кĕверки

Лисукĕ те мĕн вăйă пĕтиччен
Куçне илме пĕлмерĕ ун çинчен.
Çавна, паллах, Çăлпийĕ асăрхарĕ,
Кайран çитет-ха çаврăнса хăр-харĕ.

Элекçей

Çук, кĕвĕçӳ те юрату пирки
Кунта сăмах пымарĕ, Кĕверки.
Эс сăнайман, мана курсан Çăлпийĕн,
Кушак йытта сасартăк курчĕ тейĕн,
Ялт турĕ шиклĕх çут куçĕсенче,
Ăна эп тытса илтĕм çийĕнчех.

Кĕверки

Эсир пĕлетĕр-им вара ăна?

Элекçей

Епле-ха пĕлмĕн чиперкке çынна!
Пĕр вунă çул калла Çăлпи кукашшĕ
Пачăшкăра ĕçленĕ. Ман атте
Ăна Çĕпĕрелле ăсатнă, тет.
Çавна, тен, астăвать вăл, мур илесшĕ?..

Кĕверки

Таврăнайман-и-ха çав чĕмере?

Э л е к ç е й

Халь ун яланлăх килĕ — тĕрмере.
...Ай, вăхăчĕ ун чух епле хитреччĕ!
Çĕн саманашăн харăс, кар тăрса
Активистсем килтен киле çÿретчĕç
Кулак йăхне тĕпрен тăпăлтарса.
Атте пекки ку таврара пулман-тăр:
Сăнпуçĕпе илемлĕччĕ, яштак,
Хăй, Ленин евĕр, селĕпчĕ кăштах,
Анчах та пухура — чăн-чăн оратор.
Юлташĕсем тата епле сатурччĕ, —
Пăхсассăн, çĕлĕк ÿкнĕ — кăрнатир!
Çав ушкăнра, эп астăватăп, пурччĕ
Архар Архентийĕ, Шăхач ачи,
Шел, апăршан кунçулĕ кĕсĕк килчĕ:
Арпуç чиркÿ чанне антарнă чух —
Те ÿсĕр пулнă ĕнтĕ? — Ÿкрĕ вилчĕ.
Çапла, çĕн пурнăç çухатусăр çук.
Тăприйĕ çăмăл пултăр.

К ĕ в е р к и

Сан аçун
Мухтавлă пурнăçĕ мĕнпе вĕçленнĕ?
Эп илтнĕ тăрăх, кулаксен кистенĕ
Ун кунçулне кĕскетнĕ...

Э л е к ç е й

Чăннине
Калас пулсан, аттемĕн палăкне
Ял-халăх ылтăнран лартмашкăн тивĕç.
Халь, акă, шутласассăн, камăн мĕн ĕç, —
Килрен киле укçа пухса, аран

Пĕр пĕчĕк чăмăркка хура чулран
Çур кĕлетке хăпартрĕç те — йăлт манчĕç.
Çапла вăл халăх асĕ, пархатарĕ —
Кама — хисеп, кама ылхан хатарĕ.
...Ун чух хĕл вăрăм килчĕ.
Çуркунне
Шыв-шур хускаличчен шыв арманне
Хута ямашкăн хатĕр тăмаллаччĕ,
Çу сĕрмеллеччĕ тĕнĕлне пăртак,
Картне куçармаллаччĕ йăпăртах.
Аттесĕр пуçсăр валака кам антăр,
Камах ăнлантăр халăх нушине!
Хальччен арман тавраш тытса курман та —
Пĕлсех пĕтерейме çав йĕркине:
Шыв кустăрми палт çаврăнса каять те
Лап лапчăтса хурать ман аттене.
Юлташĕ — эс шутла-ха — мĕн тăвать тен?
Кӳл пăркăчне кăшт хытарас чухне
Тĕп пыр енчи пăрне касса ярать, тет.
Çур кун унта вăл çухăрнă...

Кĕверки

Мĕн-ма,
Арман хуçин пулăшмалла пулман?
Мĕн-ма наган тытман — кутăнлашсан?

Элекçей

Пӳртне-çуртне торги туса сутсан,
Вăл тĕрмере нумай пурăнайман.
Ялта ăна Хвалля Хĕлипĕ тетчĕç.
Хĕлип, паллах, майне-шывне пĕлетчĕ
Маçтăрламашкăн ăпăр-тапăра...
Çапла, аттем ман халăхшăн çунсах

Пуҫне ҫухатрӗ.
Халь хӑйне вара
Чухӑнӗсем пыраҫҫӗ, ав, мансах.
Мӗн кирлӗ халӗ вилнӗ паттӑра?
Пире, юлташӑм, кирлӗ унӑн ячӗ,
Асилӳре — ҫӗн пурнӑҫӑн хӑвачӗ.

К ӗ в е р к и

Епле час манӑҫать вӑл ыр туни!
Епле вӑл пархатарсӑр ҫын тени!

Э л е к ҫ е й

Эй, Кӗверки, ҫак пурнӑҫа пӗлместӗн —
Хӑвна ыр тунине ак манӑн эс те.

К ӗ в е р к и

Лекҫей Степанович, мӗн калаҫан?
Тӗнче пӗтес пулсан та, нихӑҫан
Пӗрне-пӗри пӑрахмӑпӑр.
Ак, манӑн
*(комсомол билетне ҫӗклесе)*
Ятран тӑвап тупа.
Эпир санпа,
Ҫӗн пурнӑҫӑн идейине чунпа
Ӗненнӗ мар-и, ман пулас тӑванӑм?

Э л е к ҫ е й

Ах тур, чее эс, Кӗверки кӗрӳ,
Карьера текенни, ҫулу-йӗрӳ
Тип-тикӗс пулмалла сан каплалла,
Маччийӗ ҫӳллӗ пултӑр, тыт алла!
Тӑванӑм пулӑн-и е ҫук...

Анчах та,
Эс ман вӗренекенӗм – чи малтан.
Идейӑри тӑванлӑху ан чактӑр –
Ҫав хаклӑ малалла утас ҫулта.

К ӗ в е р к и

Тост ҫӗклеме те хатӗр пулӗ эс?
Аллӑмӑрта черкке кӑна ҫитмест.

Э л е к ҫ е й

Пӑхса илсем, ав, ҫавӑнта пур тӑвӑл
Хуҫса антарнӑ кукӑр вӗрене.
Атте ҫапла калатчӗ: Киремет вӑл,
Ҫын инкекне илет-мӗн хӑй ҫине.
Атя-ха, тусӑм, йӑлине тӑвар,
Унта пӗр пус пулсан та пӑрахар.
Саманана пӗлеймӗн, тем те пулӗ –
Нушамӑр юлтӑр ҫак Киремете.
Каяр, ӗҫтешӗм. Ҫӗнтерӳҫӗ ҫулӗ
Ҫитес ҫӗре пире ҫитеретех.
Умран ҫын пӑрӑнса тӑрсан – ҫул аслӑ,
Мала, юлташ, малта анчах Пуласлӑх.
Пӗр иртнӗ кун – ҫулса пӑрахнӑ улӑх –
Эпир кунта килейменпӗр те урӑх...

Э л е к ҫ е й п е  К ӗ в е р к и ял еннелле васкамасӑр утаҫҫӗ. Хурӑнсем ҫил вӗрнипе хашлатса сывласа илеҫҫӗ, вӗсем ҫинчен ҫумӑр пӗрчисем шӑпӑрах тӑкӑнаҫҫӗ. Кӗверки мӗлки Элекҫей ҫине ӳксе пырать. С у х в и п е  Л и с у к тухаҫҫӗ.

Л и с у к

Мӗскер калаҫрӗҫ ҫав тери хӗрсех
Е тыткӑнларӗҫ вӗсене хӗрсем?

Сухви

Сана кӗтсе илесшӗнччӗ вӗсем —
Шап-шур тумтирлӗ шур шупашкарсем.
Лисук, Лисук, телейлӗ пурпӗр эсӗ:
Епле хитре вăл сăн-сăпачӗпе!
Вӗреннӗ ҫын...

Лисук

Ăшчиккине пӗлмесӗр
Ăҫтан чухлан ҫынна мал шучӗпе!

Сухви

Вӗреннӗ ҫын, чӗлхи-ҫăварӗ ҫепӗҫ.
Пӗр саншăнах ташларӗ — куртăм эпӗ
Сана куҫ хӳрипе сăнанине.
Кама кайса хурас?
Асилеймерӗм.
Эс пур — Услей ҫинчен куҫна илмерӗн,
Хăвна мансах итлерӗн сăввине.

Лисук

Сухвиҫӗм, чунăм, ан хускат текех
Ахаль те йăшкакан чун-чӗрене.
Пӗлместӗн мар эс,
эп те, сан пекех,
Санран, тен, ҫирӗм хут хӗрӳллӗрех
Ҫунса каяссине пӗлмесӗрех
Ăна, ăна кăна юратнине.
Ăшчик хыпса ҫунать.
Ах, мӗн тăвам-ши,
Мӗскер туса, хӗр-тантăш, лăпланам-ши?.
Мăнастире каям-ши, пӗрех хут —

Чуна ан усаллаттăр çылăх-вут.
Ма тухрĕ-ши вăййа вăл, иçмасса!

Сухви

Хăвах кĕтеттĕн вĕт-ха тухасса.

Лисук

Услейĕн витĕрен куçĕсене
Епле илсе хурам чĕрем çинчен?
Е курайми пулам-и вĕсене,
Е хытăрах савам? Чун тухиччен!..
Сухви, эс лăпкăн юратма пĕлетĕн,
Санран ман ырă тĕслĕх илмелле те...
Çур телейпех эс пурăнма пĕлен,
Ман ăшăма вара вĕреçĕлен
Вĕçсе кĕрсе йăва та тунă пулĕ.

Сухви

Мĕн калаçатăн?!
*(Хĕрес хурса)*
Хаспати памилуй!
Пăрах, Лисукăм, çылăха кĕме,
Киремете çапла кӳрентерме.

Лисук
*(Сухвине ним чухлĕ те итлемесĕр)*

Вăл сăввине те ман ятпа вуларĕ,
Элле, Сухви, сисмерĕн эс çавна?

Сухви

Юрать-ха ун Çăлпийĕ ăнланмарĕ
Е курмăш пулчĕ-и мыскарана...

Л и с у к

Ăнланнă-и е ăнланман – мана
Майра хуйхи-суйхийĕ пĕрех мар-и!
Пĕр шутласан, ытла телейлисем –
Санрав та суккăр уй тăманисем.
Эп юмăç йăхĕнчен – курсах тăратăп:
Ăнсах пĕтмест пулас вĕсен кунçулĕ.
Хĕвел çине пăхса сăмах паратăп:
Текех Услейшĕн ӳкмĕ хĕр куççулĕ.

С у х в и

Атя, Лисукăм, уттарар киле,
Суран тенийĕ вăл пыра-киле,
Качча кайсассăн, виç кунтан иртет,
Пыл-çу уйăхĕпе вара пирчет.

Л и с у к
*(шӳтлерех)*

Чăнах-ши ку, Сухви? Апла пулсан
Эп хатĕр ыранах качча кайма.

С у х в и

Çапах, Лисукăм, тусăм, каласам:
Элле качча тухан çав такама?
Мĕн калаçатăп эпĕ, анăра,
Пиччӳ тупса парать пулсан, ара...

С у х в и п е Л и с у к васкамасăр утса каяççĕ. Çул кукринчен вĕсен патне Кĕверкипе Элексей тухаççĕ, ял еннелле пĕрле утаççĕ. Çурма уçланкă йăлтах пушанса юлать.

## Иккĕмĕш картина

Писательсен пухăвĕ. Тăхтав. Коридорта шав тăрать, нумайăшĕ пирус туртать. Шалта, пӳлĕмре, пысăк гербла трибуна, тенкелсем, хĕрлĕ пустав витнĕ сĕтел çинче графинпа шыв. Стена çинче Сталинăн пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе ӳкернĕ портречĕ. Уринче – хром атă, аллинче – сӳннĕ чĕлĕм. Коридорта шӳтлени, кулни илтĕнет. Унтах – Услей.

П ĕ р р е м ĕ ш   ç ы р а в ç ă

Сана авланнă терĕç те, Услей,
Чăнах пулсан, пиртен пĕр лав телей.

И к к ĕ м ĕ ш   ç ы р а в ç ă

Апла халь саншăн çакă çут тĕнче
Юратнă арăмун ытамĕнче?

В и ç ç ĕ м ĕ ш   ç ы р а в ç ă

Çамрăклăха пĕр пĕчĕк черккепех
Ĕçсе яма пулать-и тĕппипех?

Т ă в а т т ă м ĕ ш   ç ы р а в ç ă

Паян писательсемшĕн пысăк траур,-
Тимсĕрлĕхе пула, туссем, мĕн турăр?
Çухатрăмăр чи чаплă поэта –
Пуçа усса тăрар пĕр минута.

У с л е й

Хурçа ăна хĕрсен туптамалла, –
Тен, сирĕн те халех авланмалла?

Виççĕмĕш сыравçă

Калатăн та, Услей, эс сăмаха —
Ирĕклĕхрен кам кайтăр тамăка!

Услей

Çапла, тăванăмсем.
Паян сире,
Кăмăлăрсем пулсассăн, хваттере
Чĕнетĕп: килĕр, пырăр пурсăр та,
Эп авланнийĕ юлтăр асăрта.

Пĕрремĕш сыравçă

Чĕнес пулсан, ачсем, ма каяс мар?
Пĕрер черкке çăлтăрлине сыпар.

Сĕтел хушшине пырса ларнă Уркаш Алтынов, хăй умĕнчи графина кăранташпа чĕнкĕртеттерсе, тăхтав вĕçленнине пĕлтерет. Сĕтел хĕрринерех пуху секретарĕ вырнаçнă, варринче тата иккĕн лараççĕ: пĕри, типшĕмрех шăмшакли, Таниле Тынов, тепри, хĕсĕкрех куçли — Сахъя Ярмужевна. Залра, сулахай енче, Услей юлташĕсем, сылтăмра — Тынов майлăраххисем. Малти ретрисем — ватă сыравçăсем. Пуху пуçланиччен хи калаçусем.

Иккĕмĕш сыравçă

Тынов ялан вăл хывăх сăвăрать,
Сахъя вара çил кăларса тарать.

Услей

Ай, тĕрĕс те каларăн.
Чăвашра
Маттур çынсем пĕтмен-ха халлĕхе.

Анчах Тынов пирки кăшт йăнăшрах
Сан сăмаху. Хăлхаллă çĕлĕке
Вăл çавăрать политика тума —
Начар-им вырăнти çулпуç пулма?!

Варринчи ĕретрен

Пуху çине пуху! Роман сырма
Пĕр чĕптĕм вăхăт çуккă, тупата.

Тăваттăмĕш сыравçă

Роман çырма тен — гонорар çума.

Услей

Шўтле сăмах ан пуçлăр-ха татах,
Ку ыйтупа калаçмалли пайтах.

Алтынов

Шăпланăр, юлташсем.
Тĕп доклада
Сўтсе явар пит тĕплĕн, васкамасăр.
Кам калаçмашкăн çырăннă, тата
Кам вырăнтан кăшкăрашатчĕ пасăр,
Тархасшăн, уççăн, ирĕклĕн калаçăр,
Кăтартăр хăвăрăн активлăха.
Эпир, çыравçăсем, тўр сăмаха
Калатпăр тўррĕн: кас та тат пĕрре.
Сахъя Ярмужевна юлташ пире
Тĕрĕссипе хак патăр. Хамăр парти
Шанчăкĕнчен нихçан та тухас марччĕ.

Ватă çыравçă

Сăмах йĕрне тытма çамрăксене

Хам пуçласа парам-ха сăмахне.
Саманисем крутай халь, çавăнпа
Виçсе калаçăр, тытăр сăлăпа.
Тынов юлташ таклатçă пулнă май
Аван каларĕ, тĕслĕх те нумай...

Т ы н о в

Миçе хутчен каламалла сире:
Ман хушаматăм «Тынов» – илтрĕре?!

В а т ă  ç ы р а в ç ă

Ватăскере каçарăр, картине
Кĕртсен те çитĕ, шăллăм Таниле.
Тынов юлташ таклатçă пулнă май
Самай аван каларĕ хăйне май.
Тĕпрен илсен, Тыновăн шухăшне
Ырламалла пĕр сасăллă пулса,
Хутран-ситрен пиртен хăшне-хăшне
Критиклени те кайтăрччĕ усса.
Çитменлĕхсем çук мар – пĕтермелле.
Вунçиччĕмĕш съезд уçăлнă тĕле
Отчет çырма каласчĕ кашнинех.
Тĕнчи, чăнах, хальхаççăн лăпкă мар,
Эпир вара, пушшех те сых пулар.
Çулпуç ертсе пырать-тĕк партине,
Вăл йăнăшма пултараймасть нихçан.
Тăрсах хисеп тăвар апла пулсан
Ильич тусне – аттемĕр Сталина,
Мухтав та чыс, мухтав та чыс ăна!

Пурте тăраççĕ, портрет çине пăхса виçĕ хутчен «Мухтав та чыс» тесе кăшкăраççĕ. Сахъя Ярмужевна Тыновран темĕскер ыйтса пĕлнĕ хушăра вырăнта калаçнисем илтĕнеççĕ.

П ӗ р р е м ӗ ш  с а с ӑ

Тем çивӗч мар паян çак калаçу,
Унчченхи пек пӗр тавлашу та çук.

И к к ӗ м ӗ ш  с а с ӑ

Чӑнах та çав, пуху тавраш ӗ уссӑр,
Иртсе каять пулсан вӑл тавлашусӑр.

В и ç ç ӗ м ӗ ш  с а с ӑ

Услей сӑмах илмен-ха, ачсемри,
Ӑна та тӗртсе илчӗç, илтрӗр-и?

П ӗ р р е м ӗ ш  с а с ӑ

Вӑл парӑмра юлман-ха халиччен.

В и ç ç ӗ м ӗ ш  с а с ӑ

Ан шавлӑр, — ав, тӑрать Услей пичче.

Услей сулахай ӗретрен трибуна умне тухать, лӑпкӑн калаçма пуçлать.

У с л е й

Юлташӑмсем, малтанлӑха сире
Доклад ятне кӑштах асилтерем:
«Хальхи саманапа писательсем».
Тынов юлташ, шухӑшласа илсем:

Т ы н о в

Тынов юлташ, Тынов юлташ... — миçе
Каламалла сире Тынов тесе!

Услей

Тынă тени — свидетель вăл сутра,
Эпир халь сутра мар-çке — пухура.
*(Сулахайран йăх-йăх кулни илтĕнет.)*

Пĕрремĕш сасă

Каларăм вĕт, Услей хускалсанах
Пуçланĕ терĕм ахăрсамана.

Услей

Уçса парайрăр-ши докладăрта
Çак питĕ кирлĕ темăн шухăшне?
Тӳрех калас пулать, каçарăр та,
Юлташăн идеологи йăнăшне.

Сылтăмрисенчен пĕри

Епле хăять вăл парти çыннипе
Тӳрккессĕн калаçмашкăн çавăн пек!

Сулахайрисенчен пĕри

Тынов енчисенче — чĕн саламат —
Епле сăмах памаççĕ калама?!

Малти ĕретрен

Пуçларĕç çăвăр автансем — пире
Пăхса лармашкăн лайăх пурпĕрех.

Вата çыравçă

Ку пуху мар —
Çĕрпӳ пасарĕ, ахăр,
Мĕне сиссе çапла пит ахăратăр?

Сахъя Ярмужевна

Ан шавлăр, юлташсем.
Ман шутăмпа
Исков юлташ тĕп-тĕрĕс çул çинче:
Политика совет саманинче
Пĕрремĕш вырăнта.
Шăп çавăнпа
Çыравçăсен мĕнпур ĕçне-хĕлне,
Е, тĕрĕсрех, кашнийĕн хайлавне
Çавна тĕпе хурса хакламалла.
Анчах та докладра çак япала
Тем палăрсах каймарĕ пулмалла.

Услей

Тĕп-тĕрĕс сăмахсем, анчах мана
Ăнлантармашкăн кирлĕ мар ăна.
Хӳтĕлекенсĕр пурăннă хальччен эп,
Халь мĕн пĕлсе хунтăшсене эп чĕнĕп?
Поэт вăл, пĕлĕр, пăхăнманлăхра,
Çын кусĕнчен пăхсан – анра-сухра.

Варринчи ĕретрен
*(шăппăн)*

Талантлă та, хаюллă та, анчах
Услей ытла мăнкăмăллă ача.

Услей

Мĕскер итлерĕмĕр эпир паян?
Шухăшласассăн, тĕлĕнсе каян:
Çав Рсая, кулак писательне,
Тынов кăтартрĕ тĕслĕх вырăнне.
Халь пирĕн çавăн евĕр çырмалла-и,

Кистен ăçта тесе çухăрмалла-и?
Кулаксене хӳтĕлесе, тен, ода
Çан тавăрса çырас пулать поэтăн?..
Эп çавă çирĕм тăххăрмĕш çулта
Яла кайса кулаксене кăкланă,
Вĕсен йăхне, ачисене йăлтах
Çĕпĕрелле лав-лавĕпе ăсатнă.
Астăвăр-ха, Залыгин-Чĕрĕккут
Сителпеле Хутар çывăхĕнче
Пăлхав çĕкленĕччĕ пĕр виçĕ хут.
Ăна путарнă чух сăвăçсенчен
Кам пулнă, калăрсамăр, вăл енче?
Краснов пĕлет ăна: эпир унпа
Пăшал тытса кĕрешрĕмĕр унта.
Çапла, çапла. Эпир вутра чухне
«Чи чаплă сăвăç?» Кириле Рсай
Кулак çинчен поэмăсем çырса
Чапа кăларчĕ чăвашсен ятне.
Халь, ун çине ӳкес чухне чукмар,
Ăна хӳтĕлекен те, ав, çук мар.
Алтынов, тен, Рсайăн хĕреснашшĕ? —
Çунать унран хĕвел-поэт тăвасшăн.
Тынов юлташ епле мухтать тата —
Ăçта ун класс позицийĕ, ăçта?
Асилĕр-ха: çапла пĕррехинче,
Рсай сăвви тухсассăн, çийĕнчех
Калавин критиклерĕ те ăна,
«Палкавин» ят кăларчĕç çав кунах.
Телейлĕ çĕнĕ пурнăç тунă чух
Тăшманшăн каçару тавраш çук,
Çыравçăн пулмалла малти ретре,
Кашни сăмахĕ пултăр ун йĕтре.
Эпир çак саманан салтакĕсем

Тесе сăмах çапаççĕ хăшĕсем,
Ĕç-пуçĕпе епле-ши-ха хăйсем?
Тынов кунта Кетоккине мухтарĕ,
Анчах ăна политика енчен
Пит шанчăклă тесе камах шантарĕ?
Чăнах та, вăл Краснов вăхăтĕнче
Союз пуçлăхĕнчен часрах тухса
Тăван ялне калхус тума васкарĕ.
Мухтамалла пек уншăн Антруса...
Анчах паян вăл: «Калхуса кĕртсе
Мужиксене çаратрĕç, кĕлмĕç турĕç», —
Тесе кăшкăрашса çӳрет йĕрсе.
Калхус апла, Кетокки шучĕпе,
Хресченсене çаратмалли меслет?
Шухăшласа пăхсассăн тĕппипе,
Кетокки сăвăç кулак май ĕçлет.
Бухаринăн мĕн-ма савăнас мар? —
Ун Чăвашра та пур иккен тымар.
Çапла вара, Кетоккипе Расай —
Укçан ик енĕ, пăхăр çавăрса.

## В а р р и н ч и ĕ р е т р е н
### *(шухăшлăн)*

Чăнах, ĕçтешĕм, йăлт аптрамалла,
Саманине темле ăнланмалла:
Çапла пăхсассăн, тĕрĕс пек, анчах
Капла пăхсассăн — тĕрĕс мар пачах.

## С у л а х а й ĕ р е т р е н

Услей пĕрре те çаврăнса пăхмасть,
Тынов куна ахаллĕн хăвармасть.

Сылтăмри ĕретрен

Çак пухуран вăл – пуçсăр юланут.
Хăй кĕперне хăех вăл чĕртрĕ вут...

Сулахай ĕретрен

Услей епле хаюллă, çивĕч, паттăр,
Эпир кăна шыв сыпнă пек ларатпăр.

Тынов

Исков юлташ пĕтерчĕ сăмахне.
Тата кам калаçасшăн?

Услей

Чим-ха, эпĕ
Чаршав хупмарăм пуль те, ахăртнех?

Тынов

Пур япалан та пулмалла хисепĕ –
Сана каллех сăмах памастăп эпĕ.

Услей

Тăхта, тăхта! Хăв калашле эс, Тынов,
Хăçан пуху хуçиййĕ пулса тăнă?
Обком çынни çапла кĕнеç пулсан,
Вассал пулмалли-çех юлать-ши ман?

Тынов

Обком пĕлтерĕшне йышăнмасан,
Исков юлташ, ăçта çитсе эс анăн?

Услей

Ытарлă калаçатăн, хăратан, –

Ан ман, ку тӗлӗшпе эпир пӗр тан.
*(Йӗплесе.)*
Апла эс парти символӗ, Тынов, –
Ялан ун ячӗпе илен тына:
Эс пӗлтӗр обкомра культпроп каначчӗ
Пӳрне хуҫса шутлар-ха, халӗ эсӗ –
Художниксен хуҫи, преподаватель,
Пӗр сӑвӑ, пӗр калав пичетлемесӗр
Эс пултӑн тӑтӑн Союзри писатель.
Ҫитменнине, тӗпчев институтне
Ертсе пыратӑн имӗш... Хисепне
Чӑнах та, пӗтерейменӗн шутласа.
Ытла та юратан, Тынов, влаҫа.
Партбилета укҫа ҫапма паман,
Каплах пулсан, «Ӑҫта ҫитсе анан?»

Алтынов

Таҫта шала ан кӗрӗр, юлташсем.
Кашниййӗ хӑйӗн вырӑнне пӗлсе
Йӗркеллӗ калаҫар.

Услей

Ҫак саманан
Чи кирлӗ те, чи ҫивӗч ыйтуне
Эпир сӳтсе явма та пуҫламан -
Тынов, ав, пӗтересшӗн пухуне.

Сулахайри ӗретрен

Калаҫтарас, ма калаҫма чарас,
Ку ыйтупа пухӑнас ҫук час-час.

Услей

Калам апла эп чун ыратнине, –

Ах çав чарусăр вылянан чĕлхе! —
Пĕлетĕр пурте: наци ыйтуне
Йăлтах татса паман-ха халлĕхе.
Эпир çаплах-ха, унчченхи пекех,
Пĕр карт кайра тăратпăр çынсенчен,
Шавла тăран туйра айван пике
Ташланăн çаврăнатпăр халиччен.
Тынов кунта хăй шавлăн йĕркеленĕ
Тăкаклă экспедици сăнавне
Ертўçĕ евĕр, чăваша хĕрхеннĕн,
Çапла пĕлтерчĕ ларакансене:
Пайтерекре ик-виç çул хушшинчех
Вунçич процент ял-халăх çийĕнчех
Чат вырăсла перкелешме вĕреннĕ.
Тынов шухăшĕпе, капла часах
Чăваш тухса каять-мĕн вырăса.
Шухăшласа пăхар-ха эртелпе:
Эпир ак вырăсла калаçнипе
Вырăсланса кайман-çке!

Тўррине
Калас пулать-тĕнче культурине
Алла илмесĕр тĕнчепе пĕр тан
Пулаймăпăр эпир те нихăçан.
Апла-тăк, аслă вырăс чĕлхине
Чăваш аван пĕлсен, савăнмалла.

Сулахайри ĕретрен

Савăнасса савăнмалла, анчах
Çынсем манаççĕ чăвашла пачах.

Тынов

Куратăр-и: Исков Наркомпроспа
Ларать иккен пĕр урапа çинче.

Хураевĕ çакна тăвать ăспах:
Вăл Патăръел педтехникумĕнче
Чăваш литератури предметне те
Вĕрентнĕ вырăсла — пит кулăшла.
Студенчĕсем вара, Исков, мĕн тейĕн?
Пач калаçма пăрахнă вырăсла.

Сылтăмри ĕретрен

Хураев пеккисем ĕрчерĕç питĕ.
Илер-ха наркомюст Назарова,
Вăл вырăсла пĕлмен чăвашсемпе те
Пуçлать, тет, вырăсла «раскавора».

Сулахайри ĕретрен

Çĕмĕрлери райĕçтăвкомĕнче
Çапла тĕв тунă теççĕ: кам та кам
Е урамра, е ĕç вăхăтĕнче
Чăваш сăмахĕ кăларать пулсан,
Тӳлеттереççĕ штраф, пусса выртаççĕ,
Штраф укçине вара ĕçсе яраççĕ.

Варринчи ĕретрен

Хальхаççăн хăйчиккиллĕ Пăлхара
Каяс текеннисем те пур вара.

Услей

Инçе каять хăй еккипе лаша,
Кирлех-ши пушăпа хăвалани?
Хураев çаплалла аппаланни
Вырăссенчен пистерĕ чăваша.
Халь ак Тыновăн шухăшне илер,
Паллах, вăл хăй капашĕпе чипер.

Хураев шухăшне прахăçласа
Каять вăл тепĕр ен сулăнкине:
Вырăспала чăвашăн чĕлхине
Хуçа пек уйăрать тĕкме çапса.
Хирĕçтăру, пĕтен саккунĕсем
Пире лаша пек туртĕç тăвалла.
Пĕр пытармасăр каласан, вĕсем
Саманана та улăштармалла.
«Аталану — кĕрешӳре анчах», —
Çапла каланă ĕлĕкрен ăсчах.
Тынов, ав, сăтăрла теорипе
Классен çивĕчленен кĕрешӳне
Ултавлăн пытарасшăн пурпĕрех
Чăвашăн наци пĕрлĕхĕ хыçне.
Тынов, куратăр, националист,
Хураев — провокатор, шовинист.
Калам сăмахăма тĕвĕлесех:
Чăн-чăн тăшман хӳрешкисем вĕсем.
Туссемĕр, вырăс чĕлхипе кăна
Тухма пултарăпăр Европăна.

Сулахайри ĕретрен

Вырăссемпе арпашăнса кайсан,
Тăван чĕлхӳ, Услей, пĕтет-çке сан!

Услей

Апла-тăк халăх паянхи шайра
Ларса юлайтăр-и акатуйра?
Ăçтан ку сирĕн национализм сĕмĕ?
Эсир, мĕн, вуламан-и Сталина? —
Коммунизма майпен çывхарнăçемĕн
Юлать çĕршывăн пĕр чĕлхе кăна.

*(Залран, пур енчен те)*
Çулпуçăмăр çапла калать пулсан,
Сăмахусем, Исков, тĕп-тĕрĕс сан.

Алтынов

Исков вĕçлерĕ сăмахне тинех...

Васков
*(вырăнтанах)*

Çавах вăл хускатмарĕ тĕприне.
Пĕр-ик сăмах хушма парсамăр ирĕк.
Эпир — коммунистсем, апла-тăк пирĕн
Каламалла мĕскер шутланине
«Манифестри» пек сĕмсĕр, уççăн, тӳррĕн.
Чăваш ăслăлăхне, культурине
Вырăссенни шайне çитерсенех
Уйрăлмалла... сасартăк... вĕсенчен.
Ма тетĕр-и? Уйрăлмасан, енчен,
Чăваш çухатĕ хăйевĕрлĕхне,
Сăн-сăпатне, илемлĕ чĕлхине.

Услей

Ку — пиччӳне сутни пулать, ан ман —
Чăваш пит пархатарсăрах пулман.

Васков

Апла пĕтер-им пуçĕпех, йăлтах?..

Вырăнтан пĕри

Канаш памашкăн, тусăм, çăмăл та —
Ĕçне тума вара, ай, йывăр, тет.

Т е п р и

Нумай калаçрăмăр паян, çитет.

А л т ы н о в

Тăклатчике парар та тĕп сăмах,
Вĕçлентĕр çавăнпа халап-юмах.

Т ы н о в
*(танлăн, мăнаçлăн ура çине тăрать)*

Пуху йĕркисене эп пăхăнса
Пĕр-ик сăмах калам апла пулсан.
Исков юлташ паян хайне кунта
Чăн-чăн марксист пек кăтартма хăтланчĕ
Паллах, сăмах çапма ун пур хăвачĕ.
Çапах та хак параççĕ поэта
Вăл мĕн çырма пултарнине кура.
Кам астумасть пуль, туршăн тупата,
Исковăн «Пăлхарне»
                              Çак пухура
Сире асилтерем-ха эп ăна, –
Ан васкăр, юлташсем, – кĕскен кăна.
Исков вĕрентнĕ тăрăх, чăвашсен
Чăваш юнне тасан упрас тесен,
Вырăссене качча тухмалла мар,
Майрасене качча илмелле мар.
Мĕскер ку, юлташсем, национализм?
Е, тĕрĕсрех, чăн чăвашла расизм?
Исков – совет çынни, çав хушăрах
Вăл Гитлертан чылай хăрушăрах!
Шутламалли çук мар, туссем, кунта:
Совет писателĕн ятне-сумне
Исков тивĕçтерет-и паянтан?

Çак сĕнӳпе тухап пуху умне.

Услей

Хăрушă çын эс, Тынов! Санпала
Çĕрле хурах пусмашкăн каймалла.

Алтынов
*(графина кăранташĕпе чĕнкĕртеттерсе)*

Таçта шала кĕрсе ан кайăр, çитĕ.
Шавлас та тавлашас килсессĕн питĕ,
Исков юлташ, — лармастăп эп суйса, —
*(йĕкĕлтесе)*
Ыран çутăлсанах кил — Союза.
*(Официаллă сасăпа)*
Шăпланăр — халь ВКПб Тĕпкомĕн
Контроль уполномоченнăй этемĕ
Сахъя Ярмужевна сăмах илет.
Вара вĕçлетпĕр пухăва, çитет.

Сахъя Ярмужевна

Пĕтĕмĕшпе Тынов юлташ доклачĕ,
Чăнах та, çыхăнман саманапа.
Юрать-ха чĕрĕлĕх вутне кăшт пачĕ
Исков писатель тĕрĕс сăмахпа.
Анчах ыйтас килет:
ма хутшăнмарĕç,
Доклад сӳтсе явмашкăн ыттисем?
Е вĕсене пĕрре те кирлĕ мар-и
Кунта хускатнă çивĕч ыйтусем?
Эсир, тен, айккинче тăрса юласшăн
Çĕршывăн чаплă ĕçĕ-хĕлĕнчен?!
Тен, парти принципне çумри юлташшăн

Пачах шута илесшĕн мар?!

Енчен

Писатель тĕрĕс мар çулпа кайсассăн,
Кулак йăхне герой тăвать пулсассăн,
Ятран калас ăна, ятран, тӳрех!
ВКПбăн пĕр секретарĕ — Гусев*,
Шкирятов та, унтан кăшт иртерех,
Ним пытармасăр, марксистла, яр-уççăн
Çапла каланине асилтерем:
«Юратнă партие сыхлас тесессĕн,
Ăна çирĕплетсе пырас тесессĕн,
Пиртен кашни доносчик пулмалла,
Пĕрне-пĕри пĕр шиксĕр сутмалла!
Аçу-и вăл, савни-и —
пурпĕрех,
Ертӳçĕ парти пирĕншĕн — пĕрре!
Пĕлетпĕр, тĕнчери лару-тăру халь
Çивĕчленсех пырать кунран куна.
Шалти сăтăрçăсем те пирĕн пур-ха,
Вĕсем те пĕрлешесшĕн... ушкăна».
Çапла, туссемĕр, хăвăрах куратăр,
Класс кĕрешĕвĕ вăйлансах пырать.
Мĕн каласси —
çак пĕчĕк пухура та
Вăл палăрчĕ.
Малтанлăха — юрать.
Эп парти ячĕпе чĕнсе калатăп:
Тăшманшăн пултăр коммунист чукмар.
Тĕлĕнмелле, халь пирĕн обкомра та

* ЦККан чи авторитетлă секретарĕсенчен пĕри. Ун сăмахĕ: «Каждый член партии должен доносить. Если мы от чего-либо страдаем, то это не от доносительства, а от недоносительства».

Бухаринсем те троцкистсем çук мар.
Çулпуçăмăр чĕнсе каланине
Ан манăр, вăрттăн «на ЧеКу» пулар,
Юн сăхнă революци ялавне
Нихçан та варламашкăн парар мар.

Çыравçăсем пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ, залра шăпах. Алтынов пуху пĕтни çинчен пĕлтерет, зал майĕпен пушанса юлать. Услей, хăй никамран та шикленменнине кăтартса, юлашкинчен васкамасăр тухать. Ăна Сахъя Ярмужевна чĕнсе илет. Тыновпа Алтынов коридора тухаççĕ.

Сахъя Ярмужевна

Исков юлташ, эсир чи пултаруллă,
Талантлă сăвăçне пĕлетĕп эп.
Анчах пĕлменччĕ питĕ те хăюллă
Политик иккенне.

Услей

Хам пĕлнĕ пек,
Ăнланнă пек сӳлештерме юрать-тĕр?
Эсир, Сахъя Ярмужевна, вара
Пире юлашкинчен йăлт тĕлĕнтертĕр...

Сахъя Ярмужевна

Ан васкăр, чимĕр, ку калаçăва
Каярахпа сӳлмешкĕн хăварар.

Услей

Каçарăр та, сăмахăма çавах
Куçран калатăп эпĕ, вăрттăн мар...

Сахъя Ярмужевна

Ăна та илтнĕ.
Калăрсам, тархасшăн,
Эп хам та тӳрĕ çын, апла тӳрех
Сире халь акă мĕн сĕнсе пăхасшăн:
Сăмахăра тата та тĕплĕрех
Çырса параймăр-и?

Услей

Ăнланаймарăм,
Протоколра та пур-çке вăл, ара?!

Сахъя Ярмужевна

Протокола начар çыраççĕ мар-и? —
Çурри ытла çырмасăр хăвараç.
Тынов çинчен нумай çырсан, аванччĕ,
Куçкĕретех вăл вырăнта марри.
Сире те хавармарĕ — ярлăк пачĕ,
Хăрушă ярлăк-çке!
Ăнлантăр-и?

Услей

Сахъя Ярмужевна, сире ăнлантăм.
Тыновăн, чăн та йăнăшсем нумай,
Хăшне вăл, питĕ лайăх ăнлансан та,
Тӳрлетеймест хăй кутăн пулнă май.
Анчах чăваш культуришĕн, чăвашшăн
Хăй пĕлнĕ пек вăл тăрăшать, ĕçлет,
Чăвашсене чăн-чăн чăваш тăвасшăн
Ним шиксĕр çапăçать вăл вилесле.
Пĕр çавăншăн ăна эп каçаратăп.

С а х ъ я  Я р м у ж е в н а
*(хăй тĕллĕн)*

Сире пĕтермелле-мĕн пурсăра та...
*(Сасăпа)*
Апла, ярлăкăра та йышăнатăр?

У с л е й

Хĕрсе кайсассăн, тем те калĕ çын,
Ара, калас килсессĕн – калаçин!
Эп – коммунист, анчах çынна сутса
ВКПб ретне çирĕплетмешкĕн
Хал çитерейменĕп эпĕ çавă мĕскĕн
Шкирятов пек.

С а х ъ я  Я р м у ж е в н а

Анчах сире тытса
Парас текеннисем кунта та пурччĕ.
Леш списокра та ятăр чи малтаччĕ.
Эсир тата нумай пулмасть ялта
Хĕрӳллĕ сăвăсем вуланă терĕç....
Поэтсемпе аптрамалла йăлтах –
Парсассăн ирĕк, тĕнчене пĕтерĕç.

У с л е й

Йĕрлетĕр?
Ĕçĕр кайĕ харама –
Сăлтавĕ çук ман пурпĕр хăрама.
Эсир çав органпа ĕçленине
Çынсем пĕлмеççĕ тетĕр-и элле?
*(Хăй тĕллĕн)*
Кама ĕненмелле халь?

Сахъя Ярмужевна

Партине,
Чекистсене, мана ĕненмелле.

Услей

Эп Ленин партине чунтан шанатăп,
Анчах пĕр çын, пĕр орган — парти мар.
Ак, Тыновах илер-ха: вăл мана та,
Сире те...
*(Çак вăхăтра Тыновпа Алтынов кĕреççĕ)*
«ят» хумашкăн хирĕç мар.
Мĕн тăвăн, çавăн пек ун ĕç меслечĕ.

Алтынов
*(Сахъяна пăхăнса-мĕскĕнленсе пăхса)*

Эпир сире илме тесе кĕрсеччĕ.

Тынов

Анчах кунта юлташăм ман çинчен
Сăвăласа çăхав калать иккен.

Услей

Тынов, сана пасар çынни тесеччĕ,
Ку — йăнăш, эс — тĕрме çынни иккен.
Тепре курса калаçиччен, сыв пулăр.

Услей тухса каять, ун хыççăнах Алтынов васкаса тухать.

Сахъя Ярмужевна

Çылăхĕсем çук мар, паллах, Исковăн.
Анчах талантлă, нимĕн те тăваймăн.

Тынов

Мĕн талантли! Ун шухăшĕ пĕр енлĕ,
Ку – партишĕн вара раснах сиенлĕ.

Сахъя Ярмужевна
*(шахвăртарах)*

Тынов юлташ, шухăшласа пăхсан,
Вăл сирĕншĕн сиенлĕ чи малтан.
Мĕн калăр хирĕç?

Тынов

Ун енне кайсан,
Исковăн йăнăшĕ куçкĕретех.

Сахъя Ярмужевна

Эсир пит тавçăруллăскер, Тынов,
Ăнлантăмăр пĕрне-пĕри тинех.

Сахъя Ярмужевнăпа Тынов татах тем пăшăлтатаççĕ.
Чӳрече çинчен хĕвел шевли тарать.

## Виççĕмĕш картина

Услей хваттерĕ, пĕчĕкçеç пӳлĕм. Таса, тирпейлĕ.
Сĕтел çинче чĕнтĕрлĕ çитти. Кăкшăмра – чечек. Çăлпи чӳрече енне пăха-пăха илет. Услее кĕтет. Хăй тĕллĕн калаçать.

Çăлпи

Услей пекки Шупашкарта пĕрре:
Пӳ-сийĕ йăрăс, хӳхĕм сăн-сăпачĕ.
Манран телейлĕ çын çук тĕнчере,

Тавах турра – çут çăлтăр татса пачĕ.
Чечекĕмсем, сире пăхса калатăп:
Ăна юратнă пек эп никама та
Ниçта та, нихăçан та юратман.
Вăл – ман, ĕмĕрлĕхех вăл ман.
*(Вăйă юррине аса илсе юрлать.)*

«Атьăр, хĕрсем, утар-и,
Вăй юррине юрлар-и?
Çимĕк иртсе кайиччен
Савăнайса юлар-и?»

Савсан – илемсĕр япала та çук-тăр:
Епле хитре паян хĕвел анни!
Анчах ыран каллех вăл çуттăн тухтăр,
Лăпкатăр ăшшăн савнине савни.

«Ик шур тутăр пĕр вĕçрен,
Хачă касса уйăрчĕ.
Эп савнипе туслăччĕ,
Çич ют килсе уйăрчĕ».

Ай, çав хĕрсем! Хĕр пĕрчисем темерĕн, –
Епле вĕсем – мĕн вăйă пĕтиччен
Куçĕсене Услей çинчен илмерĕç ...
Ӳссе çитсен кам пулĕ вĕсенчен?

Лисукĕ – каснă-лартнă вутăш-кайăк,
Ял хĕрĕ пек те мар хăй – çăмăлттай.
Шухăшĕнчен ялан чĕлхи малта,
Савни тесен, таçта çити те кайĕ.

Пĕр шутласан, хăрамалла унран.
Сухви сăпайлăрах пек Лисукран.
Анчах Сухви те...

Чим-ха, чим, ара,
Эп кĕвĕçме пуçларăм-и вара?
*(Чӳрече еннелле куç ывăтать, унталла ыткăнать.)*

Килет ман кăйкăрăм, çунатăм ман,
Чечек илме те ман валли манман.

Услей кĕрет те тӳрех Çăлпие пилĕкĕнчен ыталаса илет. Çăлпи ăна мăйĕнчен уртăнать. Вăрах чуптăваççĕ.

Сана кĕтсе паян ăнран тухаттăм,
Тем шухăш та капланчĕ пуçăмра.

Услей

Пуху пĕтсессĕн, эпĕ туххăмрах
Эс юратан «çăлпи чечек» туянтăм.
Шампань эрех те лавккара халь янтă
Пĕрне ак килтĕм çавăтса хампах.
*(Кĕленчине сĕтел çине кăларса лартать.)*

Часах ĕçтешĕмсем килсе çитеççĕ.
Йăла тытса тăвар-и пĕчĕкçеççĕ
Хитре кăна уяв?

Çăлпи

Уяв тума
Эп хирĕç мар, анчах сĕтел çине
Мĕн лартăпăр наччас ĕçме-çиме?

Услей
*(Кĕсйинчен шăккалат кăларса)*

Кăмăл-турам – пĕр турам,
Мĕн пуррипе сăй тăвам.

Ç ă л п и

Епле сана юратмăн, кăмăлламăн!
Паллах, аван – туссем сума суни.
Анчах тӳрех калам-и?
Халĕ манăн
Санпа кăна пулас килет, савни...

У с л е й

Савни кăна-и? –
Савнă упăшка!

Ç ă л п и

Ну, çитĕ, упăшкаçăм, тупăшма.

Чуптăваççĕ. Çав вăхăтра тăруках Услей юлташĕсем кĕрсе тăраççĕ. Çăлпипе Услей чуптунă çĕртен уйрăлса та ĕлкĕреймеççĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш   ю л т а ш ĕ

Каларăм вĕт сире эп, Услейсем
Пире мансах чуппа тăваç тесе.

И к к ĕ м ĕ ш   ю л т а ш ĕ

Кунта тĕлĕнмелли нимех те çук,
Эп хам та çапларахчĕ çамрăк чух:
Ниçта хума пĕлмесĕр, арăма
Туйран çавăтса тухрăм ... чуптума

В и ç ç ĕ м ĕ ш   ю л т а ш ĕ

Кăшт тăхтăр-ха, туссемĕр, мухтанма,
Çĕн çынсене çаплах вăтантарма.

Услей пичче, Çăлпи инке, сире
Телейлĕ пурăнма телей сунатпăр.

И к к ĕ м ĕ ш   ю л т а ш ĕ

Вара пĕр тăхтамасăр, кĕçĕрех
Йĕкĕрешсем сире заказ паратпăр.

П ĕ р р е м ĕ ш   ю л т а ш ĕ

Ачи-пăчийĕ пултăр сак тулли.
Ача тутарайман çын — ял кулли.

В и ç ç ĕ м ĕ ш   ю л т а ш ĕ

Ăçтан тупать Куçма?
Каллех, ав, ӳсĕр.

Услей хăнисене сĕтел хушшине ларма сĕнет, шампанскине гусарла уçать. Черккисене çĕклеççĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш   ю л т а ш ĕ

Мĕнле эрех ку?
Йӳçĕ, йӳçĕ, йӳçĕ!

И к к ĕ м ĕ ш   ю л т а ш ĕ

Пĕрремĕш черккене тутлатмаллах,
Сăмахăма калам-и сăвăлла?

Йӳçĕ, йӳçĕ! Тутлатма,
Çăлпи, эсĕ чуппа пар.
Упăшкун тути çине
Хĕрлĕ пичет çапса яр!

Услей

Çын умĕнче, тата...
тăр-кăнтăрлах?
Ытла сăпайсăр-çке ку — вырăсла!
Туссем, ĕçер-ха лăпкăн, хамăрлах.

*(Шалтти ĕçеççĕ.)*

Пĕрремĕш юлташĕ

Эсир чуптунине эпир пĕлетпĕр.
Тултар, Куçма, хăватлăраххине —
Паян çĕн мăшăршăн шалтти ĕçетпĕр,
Пĕр турă çех пĕлет ыранхине.
Май пур чухне ĕçсе-çисе юлар,
Туй юррине тайла-тайла юрлар.

*(Пурте юрлаççĕ.)*

Куккукĕсем чăпар, йăви мамăк,
Мĕншĕн куккук тесе, ай, калас мар.
Кăмăлăрсем анлă Атăл майлă,
Мĕншĕн тăван тесе, ай, калас мар.

Тепрер черкке тултарса ĕçеççĕ. Чăнкки тунă вăхăтра алăкран хыттăн шаккани илтĕнет.

Услей

Черккисене тултартăмăр ĕçме-тĕр:
Туссемшĕн алăк уçă — кĕрĕр, иртĕр.

Иккĕн кĕрсе тăраççĕ, иккĕшĕ те сулахай аллисене кĕсъене чикнĕ. Вăрăм кăсăруклă карттуспа, пĕр пек тумпа. Пĕри, çӳллĕрехи, малалла иртет, тепри, пĕчĕкрехи, алăк патĕнче юлать.

Ç ӳ л л ĕ р е х х и

Каварçăсем яланхиллех пĕрле
Пуçтарăнса лараç иккен çĕрле.
Хăйсем ĕçеç, çапах та пурте урă...
*(Кĕсйинчен хут тaтки кăларса)*
НКВД. Исков гражданина
Арĕслемешкĕн ордер пур ак — курăр.

У с л е й
*(Хăйне хăй лăпкăн тытса)*

Мĕн сăлтавпа, мĕн-ма? — пĕлер ăна.

Ç ӳ л л ĕ р е х х и

Ним пĕлмене персе ан тăр тата!
Пĕрре пăхсах эс халăх тăшманне
Пĕлме пулать. Ан сăвăр вăхăта,
Пуçтарăн, ил мĕскер илмеллине.
*(Алăк патĕнчи юлташне)*
Эс, Сидоров, çаксен фамилине,
Ăçта пурăннине, ĕçленине
Çырса хурах пăратукул çине.
Йĕрки çапла, ман обыск тумалла,
Оружий пур-и çумăнта?

У с л е й

Нихçан та,
Оружисĕр эп çӳремен.

Ç ӳ л л ĕ р е х х и
*(Хăраса, куçне чарса пăхать.)*

Кала,
Ăна ăçта эс пытарса упратăн?

Услей

Ма пытарас, кунтах-çке ман оружи –
Таçта çити перет çинçе перо.

Çӳллӗреххи

Кӑраштанин, ан шӳтлӗр, – пулӗ хушӗ,
Оружий пулмасан – допро, допро.
*(Ӗç сӗтелӗн сунтӑхне тустарать.)*
Алçырусем. Пире шӑпах çак кирлӗ.
Кун кӗнеки! Интимлекент темерӗн,
Анчах та каллекрафи урлӑ-пирлӗ,
Юрать-ха, крамӑтнӑй çынсем пур пирӗн,
Йӑлт разопратся тӑвӗç-ха вӗсем.
Ытла та тайлӑк-тайлӑк пуквисем!
*(Хӑшпӗр хутсене урайне пӑрахать.)*

Çӑлпи
*(тӑна кӗрсе)*

Услей, Услей, мӗн тунӑ эс, кала,
Таса пулсан, мӗн-ма иртӗнтеретӗн
Çак усала?
*(Энкэвэдешник еннелле çаврӑнса.)*
Мӗнле саккунпала
Пире эс ухтаратӑн, çӗмӗретӗн?!
*(Çыравçӑсем еннелле пӑхса)*
Эсир тата мӗскер пӑхса тӑратӑр,
Ма çак çынна сысналанма паратӑр!

Çӳллӗреххи

Эс осторошнӑрах калаç, майра,
Чӗлхӳ малта та сан, ӑсу кайра.

*(Çăлпин арчи-комочĕ патне пырса)*

Хĕрарăм япали, ку – кирлĕ мар,
Ак çак кĕнекине вара пăхар.
Мĕнле сăмах ку? Калле... «Каллевалл㻹,
Чăвашларан куçарнă: «каллĕ-валлĕ».
Ытла хитре ун хуплашки – илес.

*(Алăк патĕнчи юлташне)*

Иван, мĕскер туса тăратăн эс?
Пăратукул çине пустар та ал㠹
Марш хăвала эс вĕсене кунтан,
Часах тĕл пулĕç, пит тунсăхламалăх
Вĕсен юлмарĕ вăхăт паянтан,
Атту тăраççĕ тапăрти пек...

П ĕ р р е м ĕ ш ç ы р а в ç ă

Эсĕ,
Жандармран та тăхăр хут тӳрккес!
Тĕрĕссине, çыннисене пĕлмесĕр
Епле кӳрентерме хăятăн эс!

Çамрăк çыравçă энкэвэдешник еннелле туртăнать, анчах алăк патĕнчи милиционер туххăмрах ун аллисене пăрса илет.

П ĕ ч ĕ к р е х х и

Эс, çамрăк çыннăм, ан çухат пуçна,
Мĕн-ма кăткăслататăн пурнăçна.

Ç ӳ л л ĕ р е х х и

Васков? Васков. Пĕлетĕп эп сана та,
Тахçантанпах выхăдкуна сăнатăп
Совет милицине не оскорблять,

Пит ан васка, сана та тухӗ ят.
Вӗҫтер килне эп ирӗк панӑ чух.

П ӗ ч ӗ к р е х х и

Васка, Васков, тух хӑвӑртрах, тух, тух!
*(Васкова тӗртсе кӑларса ярать те ыттисем еннелле ҫаврӑнса)*

Сире тата мӗн кирлӗ? Пулӑштух?
*(Вӗсене те хӑваласа кӑларса ярать. Услей ҫине пӑхса)*
Пӗр кунлӑха каймаҫҫӗ тӗрмене —
Пуҫтарӑн, ил хӑвна мӗн кирлине.

У с л е й

Ман айӑп ҫук, ку — йӑнӑш. Ыранах
Эп тухӑп ирӗке. Ҫӑлпи, лӑплан.
Совет йӗрки-саккунӗ, курӑн ак,
Хӑй салтакне хӑтарӗ тамӑкран.
Ыйтатӑп: кашкӑр чунлӑ ҫынсене
Нихҫан та ан кӑтарт эс куҫҫульне.

Ҫ ӑ л п и хутаҫ хатӗрлет, У с л е е пырса парать.

Ҫ ӑ л п и

Тата мӗскер хурас кунта? Чӑх ашӗ,
Ҫӑкӑрпала тӑвар, пӗр кӗмӗл кашӑк...

У с л е й

Ан йӗр, Ҫӑлпи... Ну, юрӗ, ыранччен,
Ҫӑлпи-чечек шанса ӗлкӗриччен.

Энкевэдешниксем Услее илсе тухса каяҫҫӗ.

* * *

Услее тытса кайни виҫ эрне те ҫитнӗ ӗнтӗ. Ҫ ӑ л п и ҫав-ҫавах тӑнкарса илеймест. Уншӑн тӗнче ишӗлсе аннӑ пекех.

## Ҫ ӑ л п и

Тен, тӗлӗк ку? Анчах пӗр тӗлӗке
Кашни каҫах курма пулмасть-ӗҫке.
Тен, вӑхӑт виҫине ҫухатрӑм эпӗ?
Апла мӗн-ма чечекӗмсем тип-типӗ?
Пӗр ҫывӑрса кайсассӑн, пӗрех хут
Вӑранас марччӗ манӑн ӗмӗрне те.
Каллех ҫак чӑнлӑх, ҫӑтлӑх тамӑк, вут,
Каллех пулса иртни тухать ӗретӗн.
Мӗскершӗн хуҫмалла мана асат?
Кам умӗнче мӗнле эп ҫылӑх турӑм?
Сана курма пӑрахрӑмӑр, эй, турӑ,
Тен, ҫавӑншӑн тӳсетпӗр хӗн-асап?..
Ҫемье мӗнне пӗлмесӗр тӑлӑх арӑм
Пулса эп юлтӑм ҫамрӑклах, ирех.
Виҫ уйӑх иртрӗ ӗнтӗ — тупаймарӑм,
Е ҫӗпӗре ӑсатрӗҫ-ши тӳрех?
Ӑҫта ҫӳретӗн-ши, Услей, мӑнтарӑн,
Пуҫ янӑскер, хисепсӗр ҫын пулса?
Мӗнле асӑрхануллӑ пулаймарӑн?
Тен, айӑпу та кӑшт пурах пуль ҫав...
Совет саккунӗ ахалех, сӑлтавсӑр
Айӑпласа хупмасть тесе ҫынна
Ялан ҫыраҫҫӗ «Правдӑра» та.
                                        Паҫӑр,
Радиопа каланӑччӗ ҫавнах.
Шухӑшласан, ӗненмелле, пӗрех
Ҫакна нихҫан та ӗненмест чӗре.

Ах, мĕн сӳпĕлтететĕп, — çын илтсен,
Хама та тытса кайĕç ак ирччен.

Çак самантра алăка шаккани илтĕнет, Çăлпи шартах сикет.

Епле-ха тупрăм ухмахла йăла:
Ма пĕччен чух саспа калаçмалла.
Каллех НКВД. Пĕрех хутне
Ал пусас мар-ши çав шуйттан хутне...

Çăлпи алăк уçать. Л и с у к кĕрет. Вăл майралла кĕпепе, çӳçне те майралла кастарнă.

Лисук?.. Мĕнле майпа, кам хушнипе?..
Ялтан ирех епле çитме пултартăр?
Куçу вылять сан — япăх хыпарпа-тăр?
Килнех пулсан, иртех...

Л и с у к

Çапла ирпе
Чăрмантарса çӳренĕшĕн каçарăр.
Çăлпи Васильевна, ан пăшăрханăр,
Усал ĕçпе килмерĕм эп кунта —
Хыпар-хăнар нумай ку яхăнта:
Услей пичче тĕрмерине чухлатăп.

Ç ă л п и

Яла та çитрĕ-им усал хыпар?

Л и с у к

Çăлпи Васильевна, эп ялта мар,
Эп хулара, Шупашкарта, пурнатăп.

Ç ă л п и

Епле апла?

Л и с у к

Йĕркепĕрĕн пурне те,
Пĕр пытармасăр хам шăпам пирки те,
Кĕскен кăна эп каласа парам.

Ç ă л п и

Кала, Лисук, эп итлесе ларам.
Анчах малтан ма килнине пĕлтер эс.

Л и с у к

Паллах, паллах. Сăмахăр питĕ тĕрĕс.
Çынсем çак хуп арча пек хулара:
Тулта — нумай, килте — пĕччен вара.
Пĕр-пĕринчен, ай тур, хăраççĕ пурте.
Чуна уçса ăшпиллĕн калаçма
Пĕр çын та çук.
Тăшманĕсем те пур, тен...
Ялтах аванччĕ.
Тус-юлташ пулма
Эсир пултараймастăр ĕнтĕ, çук.

Ç ă л п и

Мĕн-ма çаплах калатăн эс, Лисук?

Л и с у к

Мĕн-ма тесессĕн эпĕ Услее
Халичченех ухмах пек юрататăп,
Куçа хупсан та эп ăна куратăп.

Каçарăр та, эсир ман телее
Илсе вĕçтертĕр.

Ç ă л п и

Чим, Лисук, тăхта-ха,
Унпа эс хăвăр юрату çинчен
Калаçнă-и ĕретлĕн халиччен?
Хăй юрататчĕ-и сана тата хăть?

Л и с у к

Çук, калаçман. Анчах та вăл мана
Савса пăхатчĕ, сиснĕ эп ăна.
Эсир, паллах, хăюллă — майрасем, —
Те йăхăр çавăн пек, те йăлăрсем? —
Епле хĕлхемлĕ юратни çинчен
Каччăсем мар — эсир малтан калатăр.
Чăваш каччи, чăнах та, тăр-ухмах-тăр:
Йăлт ĕненет — хăй улталаниччен.

Ç ă л п и

Эс Услее чунтан юратнине
Пĕрре курсах чухларăм ун чухне.
Анчах эс халь хускатнă калаçу
Этепсĕр — ăнланатăн-и, Лисук?
Ахаль те юнăхан суранăма
Эс килтĕн-им паян тăвар сапма.

Л и с у к

Каçарăр, хăвăр ыйтнипе каларăм.
Анчах эп юрату ыйтма килмен.
Ан хăрăр — эпĕ мăшăрлă хĕрарăм,
Килтен пирĕштисем те сивĕнмен.

Çав вăйăра пĕр вĕçкĕн качча пурччĕ
Астурăр-и? Вăл манăн мăшăр пулчĕ.
Ăçта вăл тетĕр-и ку вăхăтра?
Ĕçлет тухмасăр НКВДра.
*(Çăлпи аптраса ўкет, тем калама пăхать.)*
Ан тĕлĕнĕр, ан хăрăр-ха, тархасшăн.
Услей тĕрмерине унран эп пĕлтĕм,
Вара çав самантран ăна çăласшăн
Пите кĕççе çĕлерĕм те ак килтĕм...

Ç ă л п и

Ĕненмелле-ши ман сана, Лисук?
Йĕпрен çĕлем çиппийĕ юлас çук.
*(Хăй ăшĕнче)*
Тен, чăн та, чăн та, манăн телее,
Эс юратни хăтарĕ Услее?..
*(Сасăпа)*
Лисук, кала-ха упăшку сана
Савать-и, юрататъ-и-ха тата?
*(Хăй ăшĕнче)*
Кун пек чиперккене, хитре сăна
Такам та савĕ, туршăн, тупата.

Л и с у к

Савать мана вăл, туршăн та, савать,
Ĕçне вара манран ытла савать.
Анчах вăл эп хăйне савманнине те
Ытла аван туять, пĕлет пуль тетĕп.
Вăл мур çине-ха: пĕринче хамах
Ăна эп Услее савни çинчен
Кала та пар – анра-сухра, ухмах!
Кам туртнă чĕлхерен пакăлтинчен.

Ç ă л п и

Апла пулсан епле хăйса эс ыйтăн
Услей хутне кĕме упăшкунтан?
Лисук, Лисук, мĕскер эс туса хутăн?
Вăл кĕвĕçсе тăшман тăвать унтан.
Ахаль те чул пек йывăр ун шăпи,
Эс пур — тата йывăрлатан.

Л и с у к

Çăлпи,
Мана эс ирĕк пар çапла чĕнме,
Пĕле тăркач çавна — хута кĕме —
Çурма Тăхтаманран эп ыйтăп-и?
Çук, ыйтас çук нихçан та, виличчен.
Ман упăшкан начальникĕ — пичче,
Сатуров Элекçей.
Вăл Услейпе
Пĕр вăхăтра вĕреннĕ, пĕр шкулта.
Вăл тӳрĕ кăмăллă, пĕлетĕп эп,
Вăл ман пекех... эп ун пекех йăлтах.

Ç ă л п и

Çын çеç пĕлмест, пĕр уссăр виç эрне
Йĕре-йĕре эп Услее шырарăм,
Тĕрмесенче те ыйтрăм — тупаймарăм,
Çухатрăм пĕтĕмпех çулне-йĕрне.
Вара, каçартăр, сутсăр-мĕнсĕрех
Ăсатнă пулĕ терĕм Çĕпĕре.
Апла Шупашкартах вăл, тĕрмерех?

Л и с у к

Эпир алла усса ларни ахаль

Çынна сутни пек шутланмасть-и халь?
Мĕн те пулсан тăвас пулать халех,
Илтетĕн-и, Çăлпи? – Халех, халех!

Ç ă л п и

Анчах мĕн тăвăпăр эпир санпа,
Кала, Лисук?

Л и с у к

Мĕн тумалла? Пĕлместĕп.

Ç ă л п и

Мĕн тумалла – пĕлместĕн акă эс те,
Тен, пиччӳне систерĕн çавăнпа?

Л и с у к

Çапла, пиччесĕр ĕç тухмасть.
Ăна эп,
Йăлтах каласа парăп тĕрĕсне.
Пĕлетĕп эп, Услейĕн çуккă айăп, –
Пичче хăй пăхса тухĕ ун ĕçне.
Каям-ха, сывă пул, Çăлпи.
Ыран
Ĕç хыççăн кĕрсе тухăп, кĕт мана.
Пичче те килчĕ пулĕ службăран.
Васкас пулать, васкас.
Васкамана
Таптать теетчĕç ахăрсамана.

Ç ă л п и
*(шăппăн)*

Тур пулăштăр ыр ĕçӳнте сана.

Л и с у к тухса каять. Алăка уçсанах пусма карлăкĕ хыçнелле вăрăм кăсăруклă карттус тăхăннă çын вĕлтлетет.
Ç ă л п и, Лисук килсе кĕнĕ чухнехи пекех, тĕлĕнсе пăхса юлать.

Кам пултăн эсĕ: е тăшман, е хунтăш?
Е пулăн маншăн вăл та, ку та хутăш?..

Пÿлĕмре майĕпен тĕттĕмленсе пырать, чÿрече çинче çеç шанчăк çути мĕлтлетет. Пуçа ыраттарса, шыв тумлать.

## Тăваттăмĕш картина

Пĕчĕкçеç пÿлĕм. Кĕрсенех, сылтăмра, ялтилле тăрăхла сак. Çÿллĕ, ансăр чÿрече. Пÿлĕмне кура мар пысăк сĕтел. Сĕтел хушшинче следователь формипе Кĕверки ларать. Пуçĕ тăрринче Сталин портречĕ, сак тĕлĕнче — хĕç пек çинçе питлĕ Дзержинский сăнÿкерчĕкĕ.

К ĕ в е р к и

Пурне те пурпĕрех йышăнтаратпăр.
Ав, ватă большевик текеннисем
Епле тытатчĕç хăйсене пит паттăр —
Патша тĕрмийĕ терĕç пуль вĕсем?..
*(Стенине шаккаса)*
Епле вăл çирĕп, хулăн — пĕр лексен,
Кунтан чупса тухаймăн ĕрĕхсе.
Совет тĕрми — советăн çыннисемшĕн,
Хе-хе, çавна ăнланаймаççĕ темшĕн.
Пĕлес пулать хальхаççăн ĕçлеме:
Малтан кăшт ал хурсассăн, хăратсассăн,
Кайран пĕр канихвет пама пулсассăн,

Пĕрне-пĕри сутаççĕ хăйсемех.
Ку — ман открыти пултăр, унăн ячĕ —
«Пушăпала пĕремĕк ĕç меслечĕ»
Çак сак çине кашни кунах лартсан,
Хаюллă çын та кайĕ йӳтесе.

*(Хĕç решеткеллĕ чӳрече енне пăхса)*

Чӳречерен кăшт Атăл кăтартсан,
Сутать тусне унта тухас тесе.
Апла, юлташлăх вăл — кĕрекере?
Юлташлăх, туслăх çук вăл тĕрмере.
Петров тенин те тусĕсем мĕн чулччĕ
Хăй секретарь пулса ĕçленĕ чух.
Ăçта вĕсем? Пĕччен, пĕччен вăл юлчĕ —
Ак хăйĕн те сутман юлташĕ çук.

*(Тăрса каллĕ-маллĕ утса çӳрет, аллисене сăтăрать.)*

Писательсем те çынсемех иккен:
Хăйсем çыраççĕ паттăрсем çинчен,
Кунта лекеççĕ те, ай, амикке,
Хăравçăлăх анчах куçĕсенче.
Çын вăл çынах: кĕтӳçĕ е поэт —
Кашнин, мĕн тăвăн, пурăнас килет.
Халь çакă ушкăна калăпласа,
Нихçанхинчен чипер сăлтавласа
Çĕлем çиппе çĕлес, ĕç пĕтерес.
Гаврилов Георги!
                    Ун хыççăн эс,
Иккĕленместĕп: пулăн капитан,
Шалу та ӳсĕ, чысĕ те аван.
Тĕрĕссипе, хам ĕçĕмре ӳсмешкĕн
Ман пурте пур: ăстăнăм мăй таран,
Атте-аннем ман чухăн пулнă, мĕскĕн,
Ку — чи кирлĕ вара анкетăра.

Совет саманинче çак индульгенци
Хальччен çула уçса пыраканниччĕ...
Ан тив, Исковĕ – ушкăн утаманĕ –
Ан парăнтăр. Халь ĕнтĕ ниепле те
Вĕçерĕнеймĕ халăхсен тăшманĕ.
Çăлпиййĕ хуçăлать – ăна пĕлетĕп.

*(Алăка уçса, çирĕп сасăпа.)*

Ăçта эс, Иванов?

Çитет канса,
Халех хĕреслĕ путвала анса
Вăрат та илсе кил çав Искова.
Сехет те иртрĕ – пĕлмелле хăвах.

Милиционер-надзиратель тепĕртакран Искова пӳлĕме тĕртсе кĕртет. Услей сăн-пичĕ хуралса ларнă, туртăнса начарланнă. Пичĕ-куçĕ аманман-кăвакарман, тумтирĕ вараланман, тирпейлĕ, анчах хăй ура çинче аран-аран тăрать. Тыткаланинче – пăхăнманлăх куçкĕрет. Надзиратель чыс парса тухса каять.

## К ĕ в е р к и

*(Услей енне васкамасăр çаврăнса)*

Унччен чĕнместĕр теттĕн допроса,
Халь ак эпир, çавна шута хурса,
Кунне виçшер те тăватшар чĕнетпĕр –
Çапла çын кăмăлне тупатпăр эпĕр.
Анчах эс ниепле те халлĕхе
Манпа тупасшăн мар-ха пĕр чĕлхе.
Сан яланах пĕр юрă: «Çук та çук»,
Çука çапса çу кăлармашкăн çук.
Мĕскер шутларăн хальхинче, кала
Прозăпа мар пулсассăн – сăвăлла!
*(Лĕхлетсе кулать.)*

Услей

Каланă эпĕ каламаллине.
Совет влаçне, Совет саманине
Хăртса нихçан та хирĕç каламан,
Нимле тăшманлă ушкăн та туман.

Кĕверки

Троцкистсемпе ăçтан лекен тăван?

Услей

Троцкистсемпе пулман эп пĕр кавăрлă,
Ăна эсир шухăшласа кăларнă.

Кĕверки

Апла пулсан юлташусем мĕн-ма
Çакна çирĕплетеç хăв умăнтах?

Услей

Вĕсен çук совеçне те сут тума
Чĕнмен пулас эсир мана кунта.
Сире валли те Чăнлăх сучĕ пулĕ –
Ахаль ӳкмест нихçан та çын куççулĕ.

Кĕверки

Çитет кутăнлашма. Паян сана
Тĕпчетĕп юлашки.
Йышăнмасан,
Шыва кĕме яратăп леш чана.
Тĕлĕнмелле?! Пуçу ĕçлет-и сан?
Мĕн ыйтнине йăлтах çырса парсан,
Текех асаплантармĕç, чĕрĕ пулăн.

Ытах вара мана ăнланмасан,
Çав шăрăшлă шывра яланлăх юлăн.

Услей

Эй, шăмачук! Тăмпуçупа шутла:
Мана эс, йĕксĕк, вилĕмрен ытла
Параймăн наказани.

Кĕверки

Çук, айван,
Асап вăл вилĕмрен хăрушăрах.
*(Кăшкăрса)*
Ăçта эс, Иванов! Илсе каях,
Тĕне кĕртсе кăлар ăна паян.
Чим, Иванов, тăхта-ха, эп ăна
Пĕр ыр хыпар калам юлашкинчен.
Ну эгоист эс — хăвăншăн кăна
Пурнатăн мар-и?
Арăму çинчен
Ним чухлĕ те, Исков, шухăшламастăн.
Ăна ... санран йывăртарах, калас-тăк.
Анчах мĕн тăвăн? — Ушкăнăр пĕрре,
Паян пĕрремĕш кун вăл тĕрмере.

Услей пĕр вăхăт тĕлĕнсе тăп чарăнса тăрать, вара сасартăк Кĕверки çине сиксе ӳкет. Анчах надзиратель ăна хыçалтан тытса ĕлкĕрет. Услее иккĕн тан ураран ӳкериччен, тăнсăр пуличчен хĕнеççĕ.

Юрать.
Питрен-куçран лектерес мар.
Тăна кĕмесĕрех чана ан яр.

Курас килмест поэт таврашсене,
Вӗлермелле пурне те вӗсене.

Надзиратель Искова сӗтӗрсе тухать. Кӗверки, хӑйне ним пулман пек лӑпкӑн тытса, сӗтелӗ хушшине кӗрсе ларать, пирус тивертсе ярать.

Туятӑп, хуҫӑлчӗ Исков тинех –
Ҫапла, ҫапла... Этем вӑл этемех.
Пӗлменччӗ халиччен эп: паттӑра та
Пӗр сӑмахпах авмашкӑн пултаратӑп.
Ахальтен мар чӗрнепеле меслет
Тупса пӗри шӑрка вӗлернӗ, тет.

Коридорта утнӑ сасӑ илтӗнет. Алӑка шаккамасӑрах Элекҫей кӗрет.

К ӗ в е р к и

Ай, ҫылӑхсӑр иккен эс, тин кӑна
Асилнӗччӗ ыр сӑмахпа сана.
Ӗнертенпе курманччӗ – килӗрех,
Ман тӗп начальник, ҫывӑх хурӑнташ.

Э л е к ҫ е й

Килте – пиччӳ эп. Службӑра вара
Хӑть те хӑҫан та – «капитан юлташ».

К ӗ в е р к и

Каҫарӑр.

Э л е к ҫ е й

Юрӗ-ҫке, ара. Ҫул май

Пĕр пĕчĕкçеççĕ пĕлтерӳ тăвам:
Ыран лару пулассине калам —
Вĕçне çитереймен ĕçсем нумай
Хальхаççăн пирĕн чаплă отделта.
Пуçтарăн — сан тӳпӳ те пур унта.

Кĕверки

Ăнланаймарăм. Кам пирки калатăр?
Сăлтавсăр тăсниех хальччен пулман-тăр...

Элекçей

Хăшне-пĕрне çич уйăх та тăсатпăр,
Оперативлăх çук, пĕлни çитмест.
Паллах, ĕçе пăхмасăр, кăпăр-капăр
Хупса хуни ниме те пĕлтермест.
Мĕнле пулсан та пуçарулăх, тимлĕх
Хальхи саманара пире пит кирлĕ.

*(Кăшт тăхтасан)*

Итле-ха, çав Исков поэт ĕçне
Майпен вĕçлерĕн-и эс?

Кĕверки

Ун вĕçне
Паян-ыран тума кансĕртерех.

Элекçей

Епле вара? Унта йăлтах-çке паллă:
Национализм йĕркипе тӳрех
Айăпласа статья парас та аллă
Саккăрмĕшпе, пĕрремĕш пайĕпе, —
Вара уттартăр Çĕпĕр çулĕпе.

Кěверки

Татах статья хушма пулать унта:
Ун чух вěсем мěн тунă ушкăнпа?..

Элекçей

Писательсем мěн туччăр — ěçнě пулě,
Туйне вěçленě, тен, Исков эрттелě
Ěç хыççăн яланхи пек — стаканпа.

Кěверки

Çук, вăл çех мар,
Ку — троцкистланнă ушкăн.

Элекçей

Ну, Кěверки?! Нимрен нимěр тумашкăн
Ăçтан пуçу çитет сан, тамаша?
Вăт тавçăр çакăн хыççăн каламашкăн
Тин çеç çул курнă çамрăк чăваша
Хěвел ансассăн ăс кěрет тесе!
*(Чăнласах кулать, кăштах тăрсан)*
Чăнах калатăн-и е шўтлесе?

Кěверки

Унта пулнисенчен Исков кăна
Пруть йышăнмасăр тытăнса тăрать.
Ăна та йышăнтарăпăр, ăна
Юлашкинчен чана яма юрать.

Элекçей
*(айккине пăрăнать, хăй ăшěнче)*

Ку çын чăнах та çўç касас чухне

Ним шикленсе тăмасăр пуç касать.
*(Сасăпа)*
Хура вăрман тесе, эс ун чухлех
Ан кас-ха йывăç шутсăр васкаса.

К ĕ в е р к и

Эп вĕсене пĕрре те хĕнемен,
Йăлтах каласа пачĕç — хăйсемех.
Апла доказано çав преступлени*,
Тата мĕн кирлĕ урăхран пире!
Исковăн арăмĕ те тĕрмере,
Унпа та эпĕ йĕркеллех пупленĕ.

Э л е к ç е й

Ăна та арестленĕ-и?!

Э л е к ç е й ĕ н пит-куç нервисем турткаланса илеççĕ, анчах тĕлĕнни-тарăхнине палăртмасть.

*(Хăй тĕллĕн)*

Ку çын,
Кăшт чармасан, ытла инçе каять.
Юрать-ха, халлĕхе эп хам хуçи.
*(Сасăпа)*
Каю шăтать уя — юлсан кая:
Исков ĕçне хам вĕçлĕп.
Сан валли
Ман урăх ĕç пур — хăвăрт тумалли.

К ĕ в е р к и, чĕнмесĕр, умĕнчи хулăн папкăна Элекçее илсе парать. Иккĕшĕ те алăк еннелле утаççĕ.

---

* Вышинский вĕрентĕвĕ тăрăх, «признание обвиняемым предъявленной ему вины есть доказательство его вины».

Э л е к ç е й

*(çул май)*

Килйыш мĕнле тăрать?

К ĕ в е р к и

Ытлаванах.

Э л е к ç е й

Салам çитер Лисук йăмăкăма.

Алăка хупсан, Сталин портречĕ хускалса илет. Тепĕртакранах Кĕверки каялла таврăнать. Хай тĕллĕн тарăхса та кӳренсе калаçать.

К ĕ в е р к и

Ĕç-пуç пĕрле те пирĕн, çул расна:
Ай-яй чее Лексей Степанч, сысна –
Çан таварса ĕçлекеннийĕ – эпĕ,
Ăна вара, ак, чапĕ те хисепĕ.
Мĕне сиссе? – Ялан ура хурать,
Е эп карьера тăвасран хăрать?
Ухмах йăла пурах пуль çав чăвашăн:
Шеллетĕн, хисеплетĕн тăванна...
Тĕрĕссипе, мĕнле тăван вăл маншăн,
Юнпа тăван лекмест пулсан мана!
Хăйех каларĕ нумаях пулмасть
Ĕçре тăван-пĕтенлĕх çук тесе.
Ăстăнлă пуç çине телей çумасть
Ялан çапла ларсассăн кĕлесе.
Постой, постой – кунта крамола çук-и?..
Шухăшласа пăхар-ха лайăхрах.

Услей Исков хутне кӗрсе, Лисукӗ
Манпа тавлашрӗ иртнӗ уйӑхра,
Халь пиччӗшӗ ӑна хӳтте илесшӗн...
Кӗтсе пӑхар, мӗнпе вӗҫленӗ ку.
Шухӑшланишӗн мар — тӳлеҫҫӗ ӗҫшӗн,
Кӗт, Кӗверки, тыт сыхӑ хӑвна ху.
Тӑшман тени пур пирӗн хушӑра та,
Апла пулсан халь эп ӑна шыратӑп.
«Мала, юлташ, малта анчах Пуласлӑх!
Умран ҫын пӑрӑнса тӑрсан — ҫул аслӑ».
Тӗп-тӗрӗс сӑмахсем, пичче, тавах.
Каям — паян курманччӗ Сутова.

Кӗверки пӳлӗмӗнчен тухать те коридорпа ҫӑмӑллӑн утса каять. Элекҫей пӳлӗмӗ патне ҫитсен, тӑп чарӑнса тӑрать, анчах тем шухӑшласа илнӗ хыҫҫӑн утӑмне хӑвӑртлатать.

Пай пуҫлӑхӗн пӳлӗмӗ. Хура сӑранпа витнӗ сӗтел хушшинче Элекҫей ларать. Вӑл надзиратель-милиционера шӑнкӑравпа чӗнсе илет.

Надзиратель

Лекҫей Степанч, эсир ҫак вӑхӑта
Камерӑран Исков гражданина
Илсе килме каланӑччӗ. Тата
Чей ыйтнӑччӗ.

Элекҫей

Илсе кӗрех ӑна.

Надзиратель Услее ҫавӑтса кӗрет те каялла тухать. Услей куҫӗсем курайманлӑхпа тулнӑ. Хӑй шӑнса кӑвакарнӑ, ҫӳҫӗ йӗпе, типсе ӗлкӗреймен. Элекҫей Услее ура ҫитейми шӑршлӑ чана ярса асаплантарнине пӗрре пӑхсах ӑнланать, аванмарланса каять.

Услей... Андреич, ларăр кунтарах.
Эсир пирус туртмастăрччĕ пулас?
Туртас килсен, тархасшăн, туртăрах.
*(Пирус сĕнет.)*

Эп сирĕн ĕçĕре, мĕнле калас,
Хисеплĕ «Тройкăна»* тăратиччен
Хамах пăхса тухас-ха терĕм тĕплĕн.
*(Надзиратель чей илсе кĕрет.)*

Юри хатĕрлеттертĕм вĕри чей —
Ĕçер-ха сивĕнсе ĕлкĕриччен.

Услей

Ытла та кивĕ-çке сан ĕç меслечĕ,
Пирус та чей... — патша чухнехиех.
Санран, Лекçей, çын пулĕ-ха тесеччĕ, —
Çук, эс асапçă пултăн, ахăртнех:
Куçу та, ав, тĕрме чӳречиех.

Элекçей

Çынна пĕр аршăнпа виçме кирлех-ши.
Сире Гаврилов çав чана янишĕн
Эп каçару ыйтатăп.
Халь вара
Куçар пăркаланмасăр ĕç çине.
Сире мĕскершĕн айăпланине
Пĕлмешкĕн тивĕç ĕнтĕ хăвăрах.
Пĕрремĕшĕ: национализм.
Акă,

* Çак ыйтăва судсăр татса паракан орган. Унта обкомăн пĕрремĕш секретарĕ, прокурор тата НКВД начальникĕ пулнă. Чăвашра: С.П. Петров, И.С. Элифанов, Розанов.

Кунтах мӗн пичетленнӗ сăввăрсем,
Ăна никам та пытараймӗ ахăр.

Услей

Анчах вӗсем вунçиччӗ е вунсаккăр
Тултарайман чухне çырнăскерсем.

Элекçей

Çапах та хăвăр аллăрпах-çке çырнă!
Апла-тăк явапне хăвăрăнах
Тытас пулать.
Мӗн тăвăн, çакă пурнăç
Тӳлеттерет пире йӗп таранах.
Ку юрӗ-ха. Çав наци ыйтуне
Социализм тунă вăхăтра
Татса пама май çуккă тенине
Мӗнле ăнланмалла? Ак хаçатра
Сан шухăшна пит вирлӗн критиклеççӗ.
Ну, калăпăр, Лехсэ поэт суеçӗ –
Пуху протоколне ăçта хуран?

Услей

Мана ăнланайман çав пухура.

Элекçей

Ăнлантарса çырни те пур кунта.
Тынов, Лехсэ пек, пулмӗ тунката,
Çапла, вăл ăслăрах та чеерех,
Çапах та вăл та ӗнтӗ тӗрмере.

Услей

Епле апла?

Э л е к ç е й

Пурин те сирĕн, тусăм,
Пĕр айăп – н-а-ц-и-о-н-а-л-и-з-м.
Эсир писательсен пухăвĕнче
Ăна критиклемен-и çав енчен!
Ирĕклĕхпех-и е ирĕксĕртен
Эсир Тыновпала, тен, иксĕр те
Пайталлăн çăмăллатрăр следствие.
Çавна ăнлантăр-и халь, икĕ паттăр?

У с л е й

Элле çынна пĕр çавăншăн хупатăр?
*(Кăштах шухăшласа ларсан.)*
Тынов хăй шухăшне хăех калать,
Пуху протоколне эп мар хайланă.

Э л е к ç е й
*(хăй ăшĕнче)*

Ача пек айванскер иккен поэт,
Таса чуна шеллессĕм те килет:
Пурне те хўтĕлет, хăйне вара
Сутмашкăн илсе тухнă пасара.
*(Сасăпа)*
Халь – иккĕмĕш.
                    Ăна та эпĕ тĕплĕн
Мĕнпур енчен тишкертĕм темелле.
Ку япала вăл, туршăн та, элеклĕ,
Анчах ăна та тĕрĕслемелле.
Пĕр пĕрчĕ çўп те, хут татки те çук
Çав ушкăн пуррине çирĕплетме.
Эсир ак Чĕмпĕрте вĕреннĕ чух
Теори шайĕнче ăспуç илме

Троцкистсемпе туслашнă, тет Тынов
Хăй çырнинче. Тĕрĕслеттертĕм – çук!

У с л е й

Хĕненине, тен, чăтайман Тынов?

Э л е к ç е й

Ăна вăл çырнă ирĕкре чухнех.

У с л е й

Сăлтавĕ пулнă пулĕ тем чухлех...

Э л е к ç е й

Хăтармалла сире ку инкекрен,
Анчах чăрмавĕ пур-çке çул çинче:
Юлташусем, ав, пĕр-пĕрин çинчен
Мĕскер кăна çырса элеклемен!
Эсир ертўçĕ çавă ушкăнра.
Ку статьяпа пăхаççĕ «вышкăран»*.
Кам айăплă?
Совет саккунĕ тетĕн?
Е ирĕке саван юлташусем?

У с л е й

Эп айăпсăр – çавна кăна пĕлетĕп,
Туссем...
Сутма пултарĕç-и туссем?

Э л е к ç е й

Сире эп калăттăм та пĕр сăмах,

* Персе вĕлермелли статьяна çапла калаççĕ.

Тем шухăшĕ килмерĕ асăма...
Ку иккĕмĕш пайне мĕнле пулсан та
Пĕтерĕп эп. Ентеш пулнишĕн мар,
Шкулта чухне хута кĕнишĕн мар –
Ăна эп ырăпа çех асăнатăп –
Тĕрĕслĕхпе этеплĕх наччасрах
Çĕнтерессишĕн пирĕн пурнăçра.
Асапçă терĕн эс мана.
Йăлтах эп –
Тĕрĕслĕхпе саккунлăхăн салтакĕ.

Услей

Çаплах пулсан аванччĕ те, анчах та
Кунта варланĕ çылăхсăр ача та.

Алăка шаккаççĕ. Унта – милиционер-надзиратель.

Надзиратель

Лексей Степанч, эсир çак вăхăта
Камерăран Тынов гражданина
Илсе килме каланăччĕ. Тата
Чей ыйтнăччĕ.

Элекçей
*(Тынова илсе кĕме юранине пĕлтерсе пуçне сĕлтет те малалла калаçать)*

Мĕнле калас... Тĕнче вăл – кĕнчеле:
Кунта та пурăнаççĕ – кам мĕнле...

Услей

Эп арăм шăпине пĕлес...

Элекçей

Кунта
Йăнăшпала вăл лекнĕ — сирĕн мăшăр.
Паянлăха çитет.
*(Допрос протоколне Услее парса)*
Малтан паллашăр,
Ал пусăр тĕрĕсех пулсан унта.

Милицонер-надзиратель Тынова илсе кĕрет те Услее илсе кайма тăрать. Çак вăхăтра Тыновпа Услей куçа-куçăнах тĕл пулаççĕ.

Тынов

Исков юлташ?.. Каçар та, палламан.

Услей

Тĕрме ак танлаштарчĕ те пире.

Тынов

Чĕлхӳ епле кунта та мăкалман?
Сана ăсатнă терĕç Çĕпĕре.

Услей

Сана кĕтетĕп — кайăпăр пĕрле.

Милиционер-надзиратель Услее илсе тухса каять. Тынов — Элекçей пӳлĕмĕнче.

Элекçей

Вырнаçăр. Сирĕн хушаматăр, ятăр?

Т ы н о в

Мĕскер йĕкĕлтесе ыйтса тăратăр!

Э л е к ç е й

Йĕрки çапла, пĕлместĕр мар ăна.

Т ы н о в

Эп обкомра ĕçленĕ чух мана
Иртеттĕр мар-и пуç тайса кăна.

Э л е к ç е й

Тынов, эсир кая юлса пурнатăр
Шăп икĕ уйăх.
*(Элекçей çырса пыма хатĕрленет.)*
Ятăр, хушаматăр?

Т ы н о в

Тынов Данилий Сидорович теççĕ,
Çуралнă çулăм – тăхăрçĕр вунвиççĕ,
Шупашкартан, рабочи çемйинчен,
Ĕçленĕ культпропра – арестличчен,
Вунтăхăр çул тăратăп партире.

Э л е к ç е й

Халь ĕнтĕ сирĕн «тăнă» темелле.

Т ы н о в

Мана списать тумашкăн иртерех.

Э л е к ç е й

Кĕрсе ан кайăр урăх еннелле.
Эсир хальччен свидетельте çӳрерĕр,

Кашнин ҫинчен мĕн те пулсан пĕлтертĕр,
Ăна шута илетпĕр — вĕсенче
Тĕрĕс марри те пур, пур тĕрĕсси те.
Пурна-киле хăшпĕр самантсенче
«Хама айăплама та вăхăт ҫитĕ»,
Тесе шухăшламан-и эсĕр, Тынов?

Т ы н о в

Шухăшламан. Мĕн хушнине эп тунă.

Э л е к ҫ е й

Исков хваттерĕнче ҫав каҫхине
Кавар тума пуҫтарăнассине
Эсир кунта пит вăхăтлă пĕлтертĕр,
Анчах сире хурлантарма лекет-тĕр:
Ҫирĕпленмерĕ — сăмаху чуман,
Нимле тăшманлă ушкăн та пулман.
Шутлатăп та, эсир, тен, следствие
Юри суя йĕрпе яма шак хунă?
Тен, хăвăн пĕтĕм айăпусене
Чееленсе ҫапла сиресшĕн пулнă?
Пĕле-тăркач мĕскер пулассине
Элек ҫырма епле ҫĕкленчĕ аллăр?

Т ы н о в

Пĕтермелле чухне тăшмансене
Мĕнле меслет те юрăхлă, ку паллă.

Э л е к ҫ е й

Эсир те ак — националист, тăшман,
Ҫак шухăш йĕрĕпе каяс пулсан,

Сиртен тăвас та троцкистла пĕр ушкăн,
Саккунпалах парар пурне те «вышка»?

Т ы н о в

Ман айăп çук. Анчах та ыттисем
Туятăп — речĕпех айăплисем.

Э л е к ç е й

Макиавелли шухăшĕн йĕрки.
Халь çак ыйту çине хурав парсамăр:
Кунта эсир çĕр çичĕ çын пирки
Çырса пани пур. Калăр-ха, хусамăр
Е кам та хушнипе, хăратнипе
Çав ĕçсене çĕлерĕр «шур çиппе»?

Т ы н о в

Эп Сталин партийĕн тасалăхне
Исков пеккисенчен те ун чухне
Куç шăрçине сыхланă пек сыхланă,
Кам мĕн шутланине йăлтах каланă.
Юратнă-савнă парти умĕнче
Ку пирĕн парăм вăл — мĕн виличчен.

Э л е к ç е й
*(хăй тĕллĕн)*

Килĕшмелле те пек-и сирĕнпе?..
*(Çирĕп сасăпа)*

Пăркаланса çитет! Кам хушнипе
Исковăн ушкăнне калăпласа
Кунта çитертĕр?
Парăр каласа.

Тынов пуҫне усать, чĕнмесĕр тăрать. Элекҫей, кăштах вăхăт иртсен, сĕтел хĕррине кăранташĕпе шаккать, тимлĕ милиционер йăпăртах кĕрсе тăрать, Элекҫей милиционер енне ҫаврăнса:

Манпа пуплесшĕн мар, вăл вăй виҫесшĕн
Сирĕнпеле.
Мĕнех! Кĕрешнĕ хыҫҫăн
Эсир, Тынов, чанран, тен, чей ĕҫесшĕн?
Илсе каях — вара калаҫĕ уҫҫăн.

Милиционер Тынова кăнттаммăн тĕртсе илсе тухать. Алăк леш енчен Тынов сасси илтĕнет.

Сан правă ҫуккă хĕнеме ҫынна!

Милиционер

Текех ҫын мар эс.
Эс — тăшман кăна!
*(Сассем майĕпен ҫухалаҫҫĕ.)*

Элекҫей
*(хăй тĕллĕн)*

Вăтам ĕмĕрсенчи меслет, паллах,
Анчах ку уншăн кирлĕ япала.
Тынов, Тынов, епле майпа-ха тынă
Аван коммунистран пулса эс тăнă?..

Алăка шаккаҫҫĕ.

Надзиратель

Лекҫей Степанч, Тынов тени каллех

Илсе килме ыйтать кунта халех.
Йăлтах калатăп тет хăй, тилмĕрет,
Иккен, патак вăл хăйĕннех илет*.

Э л е к ç е й

Мĕнех вара, ыйтсан — илсе килех.

Надзиратель-милиционер Тынова пӳлĕме тĕртсе кĕртет.

Н а д з и р а т е л ь

Сире шыва кĕртсе ĕлкĕреймен,
Апла, тен, тасалса та çитеймен?

Т ы н о в

Калас пулсан, калатăп хăвăра çех,
Салтак халех тасалтăр пӳлĕмрен.

Э л е к ç е й

Ун пек чухне свидетель хăвараççĕ,
Çавна ан манăр, Тынов, ӳлĕмрен.
*(Элекçей çырса пыма хатĕрленет.)*
Итлетĕп, калăр хăвăртрах, калас-тăк.

Т ы н о в

Салтак тухса каймасăр каламастăп.

Э л е к ç е й
*(çирĕп сасăпа)*

---

* 1937 çулта ЦК ятарлă инструкци кăларнă, унпа килĕшӳллĕн халăх тăшманĕсене хĕнеме, асаплантарма юранă.

Сержант юлташ, сӗтӗрсе кай ӑна,
Тек ан минреттӗр каюкка мана!

Тынов
*(Хӑй тӗллӗн.)*

Мӗн килӗ те мӗн пулӗ манпала?
Сахъя Ярмужевна мана, паллах,
Каҫармӗ нихӑҫан та. Ну мӗнех!
Тен, вӑл та килсе курӗ тӗрмене...

Элексей

Хӑвна кам лартнине ан ман тата,
Вара, Тынов, пӑрах сехӗрленме.

Тынов

Политикӑ тӗлӗшӗнчен кӑштах
Шанчӑксӑрсен йышне шута илме
Мана Сахъя Ярмужевна* хушсаччӗ.
Эп тунӑ списокра ҫӗр ҫын ытлаччӗ.
Кам пӗлнӗ вӑл ҫумри юлташсене
НКВДа тытса парассине.
Исков пӗрлешӳне тытса пама
Мана ӑс пачӗ ҫав хӗрарӑмах.

Элексей

Ҫырма ӑста эс. Халӗ хут ҫине
Ҫырса пӑрах хӑв каланисене.

Тынов аллине ручка тытать те сӗтел хушшине пырса ларать. Стена ҫине курпунне кӑларса ҫырса ларакан Тынов мӗлки ҫеҫ ӳкет.

* Сахъянова М.М. хушнипе 1937 ҫулта кӑна Чӑвашра 2900 ҫынна тӗрмене хуптарнӑ, 455 ҫынна персе вӗлерттернӗ.

## Пиллĕкмĕш картина

Ирхине. Элекçей Сатуров хăйĕн ĕç пӳлĕмне уçса кĕрет, сĕтел хушшине ларать. Васкамасăр пирус тивертсе ярать те сĕтел сунтăхĕнчен ĕç хучĕсене кăларать. Анчах пĕр хут тĕрки – «Исков ĕçĕ» – çук.

Элекçей
*(хăй тĕллĕн)*

Ак çакăнтахчĕ-çке.
Эй, ăспуçу!
Ăçта хума пултарнă эп ăна?
Шкапа хуман пуль те?.. Кунта та çук...
Кăшт та шанас килмест çав ачана.

Элекçей пӳлĕмĕнчен тухать. Коридорпа çăмăллăн утса пыракан Кĕверкине тĕл пулать.

Кĕверки

Аван-и?
Мĕнле ирттертĕн ырă вăхăтна?

Элекçей

Салам, салам!
Итле-ха, Кĕверки,
Ĕнер эп хăварман-и сан патна
Сăран папкăпала пĕр хут тĕрки?
Шырарăм – тупаймарăм.

Кĕверки

Ир-ирех
Сутов чĕнтернĕччĕ çав ĕçпеле...

Э л е к ç е й

Сутов? Мĕнле ĕçпе? Кала тӳрех.

К ĕ в е р к и

Пĕлместĕн-им вара эс – ирпеле
Тынов çакăнса вилнĕ.

Э л е к ç е й

Таниле?
Епле? Пĕрре те хăй ирĕкĕпе
Тытса çакăнмалли çын марччĕ-çке!

К ĕ в е р к и

Пĕлместĕп çавă...
Завещани пек
Темскер çырса хăварнă, тет, кĕскен.
Ăна Сутов халь вуласа ларатчĕ,
«Исковăн ĕçĕ» те, кажись, унтахчĕ.

Э л е к ç е й

Мĕнле вăл хăйнă сунтăха кĕме!

К ĕ в е р к и

Мана хушсаччĕ вăл ăна илме.
Итлесшĕн марччĕ эп – вăл пит хартарĕ,
Сутов, – мĕн тăвăн, – парти секретарĕ.

Э л е к ç е й

Элле Сутов хушсан пусса сикетĕн,
Е, тĕрĕсрех, пусатăн тăванна?!

К ĕ в е р к и

*(Калаçăва урăх еннелле куçарса.)*

Паян бюро пулать.
Унта сире
Пыма каланăччĕ пулас вунна...

Элексей Кĕверки сăмахне итлесе пĕтермесĕрех коридорпа малалла утса каять.

*(Мăкăртатса, йĕкĕлтесе.)*
Эс паянтан начальник мар, «пичче»,
Ухмах, çавна туймарăн халиччен.

Элекçей Сутов пӳлĕмне шаккамасăрах кĕрет. Лешĕ, сĕтел хушшинче темле хутсем пăхкаласа лараканскер, пуçне ялтах çĕклет.

С у т о в

Хăв килтĕн, пит аван.
Лар çавăнта.

Э л е к ç е й

Итле-ха, эп ларма килмен кунта.
Сутов юлташ, хăçантанпа çапла
Чекист чыс-хисепне шута илмесĕр
Ман пӳлĕмре хуçаланатăн эсĕ?!
Ăнлантарма ыйтатăп — явапла!

С у т о в

Эп калăп-ха.
Анчах мĕнле пулсан та
Явап тытас пулать, Сатуров, сан та:

Паян вун сехетре бюро пухатпăр,
Унта сан ыйтуна пăхса тухатпăр.
Чухлатăн пулĕ тетĕп, сăлтавне?

Элекçей

Мĕнле ыйту тата? Кам çăхавне
Чавса кăлартăн?

Сутов

Халăх тăшманне,
Исковпала ун ирсĕр ушкăнне,
Тивĕçлипе статья парас чухне,
Эс вĕсене питех те хӳтĕлетĕн.
Тен, эсĕ хăв та?..

Элекçей

Мĕн сӳпĕлтететĕн!
Шел, дуэле пĕтернĕ ахалех,
Сана унта чĕнеттĕм эп халех.

Сутов

Ан курнăçлан, Сатуров, пустуя —
Патриотизму сан йăлтах суя.
Дуэль йăли-йĕрки пулсассăн та,
Ма сан çĕнтермелле раснах унта!

Пĕрин хыççăн тепри парти бюровĕн членĕсем пуçтарăнаççĕ. Вĕсен хушшинче — чекист тумне тăхăннă хура мăйăхлă çын, хĕрлĕ çӳçлĕ те сар-тутлă, сурчăкне сирпĕтсе калаçакан сотрудник, ватă та мар, çамрăк та мар çын, çӳçне хыртарнă кĕске мăйлă арçын. Вĕсем сĕтел хушшине вырнаçса ларнă хушăра Сутовпа Элекçей хĕрсех тавлашаççĕ.

Э л е к ç е й

Ухмах çынпа чыспа хисеп çинчен
Калаçманни аван – калаçиччен.

С у т о в

Çапла вăл – мăйкăч хĕсĕнсе çитсен!
Пĕр енĕ уйăх санăн, тепĕр енĕ...

Э л е к ç е й

Апла эс тахçанах мана йĕрленĕ?!
Анчах асту, ĕçтешĕм, манăн та
Каламалли сахалах мар кунта.
*(Элекçей алăк енчи сĕтел пуçне пырса ларать.)*
Пур компромат.
Мĕнех, эп хатĕр, пуçлăр.

С у т о в

Юлташ Сатуров, эсĕ ăслă-пуçлă –
Ма хирĕçес?
Пупле тӳр кăмăлтан.
*(Кирлĕ хучĕсене ал айне майлаштарса хунă май)*
Бюро пуçланчĕ тейĕпĕр.
Малтан
Сире кĕскен кăна паллаштарасшăн
Çак икĕ çырупа.
Вара, тархасшăн,
Унта çырнисене хурса тĕпе
Решени йышăнар тĕрĕссипе.

Х ĕ р л ĕ ç ӳ ç л и

Мĕнле çыру? Вула, партсекретарь,

Вула та — ыйтăва татса парар.

Сутов

Эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, ирхине
Тынов çакăнса вилнĕ.
Сăмах май —
Чекистсене вăл пулăшнă нумай:
Тăшмансене те икĕ питсене
Чылай кăларчĕ тăрă шыв çине.
«Мана, — сырать вăл хăй çырăвĕнче, —
Пĕрремĕш тĕлпулу вăхăтĕнчех
Сатуров хĕнесе пĕтерчĕ хытă,
Алла та хучĕ алăк хушшине, —
Эп чăтаймарăм, вăл мĕн хушнине
Йăлтах, йăлтах ун хыççăн çырса пытăм
Анчах Сахъя Ярмужевна мана
Чăвашăн чи хастар, чи пултарулла,
Хутла пĕлен хисеплĕ те ятуллă
Çыннисене сутма ГПУна
Нимле тĕллев-задани те паман.
Çакна пĕлтермесен сире паян,
Вилсен те чунăм канлĕ пулмĕ ман».

Сутов вулама чарăнать те бюро членĕсем
çине ыйтуллăн, хăйне кирлĕ сăмах кĕтсе пăхать.
Шĕвĕр пўрнине çĕклесе:

Куратăр-и, партийцă-юлташсем,
Ăçта илсе каяççĕ çул-йĕрсем!

Хура мăйăхли

Мĕнех вара, чылай чухне вĕсем
Çапла та çавăраççĕ май килсен:

Кунта йӑлт йышӑнаҫҫӗ, ал пусаҫҫӗ,
Судра вара – шарттик! – йӑлтах тунаҫҫӗ.

Кӗске мӑйли

Чухлатпӑр-ҫке вӗсен йӑлисене.

Сутов

Ҫук, ӑнланмарӑр – пӑхӑр тарӑнрах,
Тӗллет Сатуров парти чӗрине.
Ма тетӗр-и? Пӗлетӗр хӑвӑрах –
Сахъя Ярмужевна – Тӗпком ҫынни.
Апла пулсан ӑна айӑплани –
Юратнӑ Тӗпкома варалани!

Элексҫей

Ай, ӑслӑ та Сутов юлташ, ай, ӑслӑ:
Чӑн-чӑн политик, парти ертӳҫи!
Хӑв пуҫупах шутларӑн-и?
Е аслӑ
Юлташусем ҫапла вӗрентрӗҫ-и?

Хӗрлӗ ҫӳҫли

Йӗкӗлтешсе лармашкӑн пӗрехмай
Хӑв ӑҫтине йӑлтах манса ан кай.

Элексҫей
*(Хӗрлӗ ҫӳҫлин сӑмахне хӑлхана чикмесӗр)*

Ытлашшипех ан кай-ха йӳтесе –
Ку хут Тыновӑн ҫырӑвӗ тесе
Хӑвах каларӑн-иҫ. Ҫитменнине,
Эп ирттерен допрос протоколне

Хăех ал пуснă вăл — эс аташтарнă.

С у т о в

Анчах ăна эс каласа çыртарнă,
Хĕне-хĕне пурне те йышăнтарнă.

Э л е к ç е й

Пуш параппан çапатăн, секретарь,
Пуш сăмахпа çавăрттаран тусан.

С у т о в

Пушах-ши параппан? Кирлех пулсан,
Ăна апла тĕрĕслесе пăхар,
Вара тек иккĕленмĕç хăшĕсем.
*(Сĕтел çинчен тепĕр çыру илет те ăна Элекçее кăтартса)*
Палларăн-и çакна эс?
Юлташсем,
Ку вăл Сатуров çырăвĕ.
Ăна
Сатуров адрĕсленĕ Сталина.
Тынов допросĕнчи протоколпа
Кунта çырни ытла та тĕл килет.

Х у р а м ă й ă х л и

Вуласа пар, ара, хăшпĕр тĕле,
Ăна, тен, çырнă тÿрĕ кăмăлпах...

С у т о в

Мĕнех, вулар.
«Хисеплĕ аслă Сталин,

Каçарăр чăрмантарнăшăн.
Çапах
Ку çырăва çырмастăп ытахаллĕн —
Пĕр шухăш пуç çинче тахçантанпах.
Эп — коммунист-чекист, çавăнпала
Ман тивĕçĕм: Сире каламаллах
Чăваш Çĕрне Çĕршыв Тĕпкомĕнчен
Пĕр сăтăрçă — пĕр мур — килни çинчен...»

Элекçей

Мĕнле майпа вăл лекнĕ сан патна?!
...Гаврилов Кĕверки...

Сутов

Çапла, ăна,
Гаврилов юлташа, тав тумалла:
Вăл сыхă тăнă.
Çакă çырăва,
Е, тĕрĕсрех, çак ирсĕр çăхава
Эс хушнипе, юлташ Сатуров, унăн
Тĕпком çуртне çитермелле-мĕн пулнă.
Маттур Гаврилов, шанчăклă, чее.
Гавриловсем халь кирлĕ партие.

Хура майăхли

Кала, Сатуров, мĕншĕн каламастăн,
Чăнах та эсĕ çырнă-и ăна?

Элекçей

Эп çырнă, эп.
Шухăшласа пăхас-тăк,
Эп Гитлера çырман-çке — Сталина!

## Хĕрлĕ çӳçли

Вула, ара, вула, партсекретарь,
Вула та — ыйтăва татса парар.

## Сутов

*(Çырăва малалла вулать.)*

«...Сăмахăм ман Мускав, Тĕпком элчелĕ
Сахъя Ярмужевна Авкус çинчен.
Вăл чăвашсен чи аслă, чи илемлĕ,
Чи пултаруллă ывăлĕсенчен
Нумайăшне тăшман туса пĕтерчĕ
Куçкĕретех ним айăпсăр çĕртен.
Кăçал вăл ултçĕр çитмĕле çитерчĕ
Персе вĕлернисен шутне.
                    Çӳлтен
Çапла тума ăна такам хушман-и?..
Ку — геноцид.
                    Тĕпком элчелĕ, тен,
Хăй — сăтăрçă, хăй — халăхăн тăшманĕ?
Çавна тĕрĕслесе пĕлме Сиртен
Пĕр-пĕр комисси пуçтарма ыйтасшăн.
Ку «хăйшĕн тăрăшать» тесе, тархасшăн,
Ан шутлăрах,
                    Эп — шанчăклă партиец.
Сахъя Ярмужевна йышши çынсем,
Тĕпком ячĕпеле çын вĕлерме сĕнсен,
Мĕн калĕ халăх, чекистсем мĕн тейĕç!
Капла эпир çынсен ĕненĕвне,
Ăна анчах-и!
                    Хамăр партие
Пуçĕпелех пĕтерĕпĕр, йăлтах,
Kаларĕ тесе калăр — виç çултах...»

*(Сутов вулама чарӑнать те тӳрех хӑй сӑмахне пуҫлать.)*

Кирлех-ши вуламашкӑн малалла?
Ĕҫтеш тĕллевĕ паллӑ каплипе те:
Вӑл сӑтӑрҫӑсене – Петровпала
Иванова – хӳтте илесшĕн питĕ.
Ҫитменнине, ал майӑн Тĕпкома
Сӑлтавсӑр хӑтланать айӑплама!

Хура майӑхли

Хаюллӑ ҫырнӑ!..

Кĕске майли

Ҫаплалла та – темшĕн
Шанмасть вӑл Тĕпкома.
Ак ҫак вара
Чи хӑрушши чекист текен этемшĕн.

Хĕрлĕ ҫӳҫли

Ӑҫтан-ха шантӑр!
Шутлӑр хӑвӑрах,
Вӑл хӳтĕлет пулсассӑн Искова та.

Элекҫей

Шӑл сурчӑкна туту ҫинчен – ыйтатӑп.

Хĕрлĕ ҫӳҫли
*(Тути айккисене ывӑҫĕпе васкаса шӑлса илет.)*

Шӑлсах тӑратӑп-ҫке.

Сутов

Сăмахăма эп
Пуçланăччĕ Исков ĕç-пуçĕнчен.
Анчах Гаврилов ăнлантарнинчен
Çĕнни тупса кунта мĕнех калайăп.

Кĕске мăйли

Ан тив, хăй ăнлантартăр — чĕнтерес.

Сутов сĕтел айккинчи кнопкине пусать — Гаврилов йăпăртах çитсе тăрать.

Гаврилов

Пурне те сывлăх пултăр!
Ман килес.

Сутов

Каласа пар, юлташ Гаврилов, эс
Исков ĕçне мĕскершĕн вĕçлеймерĕн?
Е юриех, хăвах вĕçлес темерĕн?

Гаврилов

Çапла, ку тĕрĕс.
Вĕçлеймен ăна эп.
Анчах кунта пĕрре те çук ман айăп:
Сатуров, ман начальникĕм, ăна —
«Сан опыт çуккă», — терĕ те мана —
Тăпăлтарсах пек илчĕ хăй алне.

Сутов

Эс сăлтавне кала, тĕп сăлтавне.

Элексей

Мĕн-ма тертлентеретĕн ачана?
Хамах ăнлантарса парам тавне...

Сутов

Сăмах илме черет çитмен-ха сан.
*(Гаврилов енне пуçне сĕлтсе)*
Кĕскен кала.

Гаврилов

Кĕскен калас пулсан,
Исков ушкăнĕнчи çынсем чăнах
Троцкизм майлине сăлтавласаччĕ.
Исковсăр пуçсăр ыттисем ăна
Хăйсен ирĕкĕпех йăлт йышăнсаччĕ.
Анчах Лексей Степаныч çак ĕçе
Пĕтерчĕ хучĕ туххăмрах, кĕçех.
Эсир манран тĕп сăлтавне ыйтатăр,
Ăна ăнлантарма та кирлĕ мар-тăр:
Пĕр енчисем вĕсем.
Çитменнине,
Юлташлă, питĕ туслă иккенне
Хам курнă çимĕкре, тӳрех калатăп.
Кирлех пулсан ...
*(Элексей енне çаврăнса)*
Пĕлесчĕ совĕçе —
Çав ирсĕр Искова çăлас ĕçе
Эс явăçтарнă манăн арăма та.

Элексей

Ну йĕксĕк те иккен эс...

Г а в р и л о в

Пытараймӑн,
Хам йӗрлесе ӳкертӗм Лисука.

Х у р а   м ӑ й ӑ х л и

Тӑхта, Гаврилов, эсӗ ...
эсӗ... камӑн –
Сатуровӑн кӗрӳшӗ марччи-ха?

С у т о в

Ҫапли – ҫаплах.
Анчах та вӑл текех
Пуласшӑн мар тӑванлӑ унпала
Ҫак шухӑш чӑннине пӗлтерекен
Хут пур Гавриловран.

К ӗ с к е   м ӑ й л и

Ак япала...

Х ӗ р л ӗ   ҫ ӳ ҫ л и

Чӑн-чӑн чекист! Чӑн-чӑн большевикла!

Э л е к ҫ е й

Ну, йӗрӗнчӗк, ну, йӗксӗк, ну, иуда,
Пурна киле пурне те эсӗ сутӑн.
Ылхан сана, ылхан!

С у т о в

*(Элекҫей каланине итлемесӗр, Гаврилова)*

Сана тавах –
Халь эсӗ кирлӗ мар, каях, тархасшӑн.

Гаврилов тухса каять, пĕр вăхăт чĕнмесĕр лараççĕ.

Вăт, юлташсем, çак пысăк ыйтăва
Сӳтсе явар.
Халь кам мĕскер каласшăн
Хушса е çĕнĕ шухăш – калăр уççăн,
Сăмах-юмах ан юлтăр пирĕн хыççăн.

Х ĕ р л ĕ   ç ӳ ç л и

Кунта йăлт паллă, çитĕ, секретарь,
Халь ĕнтĕ ыйтăва татса парар.

Х у р а   м ă й ă х л и

Епле каплах! Сатурова хăйне
Сăмах памастпăр...

С у т о в

Ун хутне кĕме
Эс паçăрах шыран майне-шывне.
Хе-хе!
Эсир, чăнах та, туссемех.
Ма парас мар!
Паратпăр – хӳтĕлентĕр,
Анчах тӳрре тухма кунта хĕнрех-тĕр...

Э л е к ç е й
*(Вырăнтан, лăпкăн та çирĕппĕн)*

Тӳрре тухмашкăн – манăн айăп çук,
Çапах кунпа пĕтмен-ха калаçу.
(*Ура çине тăрать*)
Кĕскен эп калăп.
Тĕрĕслĕх сăмахĕ

Кĕске пулать.
Йĕркепĕрĕн пырам.
*(Пӳрнисене хуçлатса.)*
Пĕрремĕшĕ — Тынов пирки.
Чăнах-и,
Хăех ал хунă хăй çине?
Ара,
Е перĕнсе, е çакăнса вилме
Арпаттăрлăх, чыс кирлĕ этеме.
Тыновăн вăл та, ку та çук — пулман.
Хăй виличчен вăл пĕтĕм тĕнчене
Сутса хăварнă пулĕччĕ.
Ку — ман,
Тĕпленнĕ шухăш тĕв тăвичченех.
Иккĕленмешкĕн кирлĕ мар —
Ăна çакса вĕлернĕ.
Хускатсассăн, ку ĕç,
Чăнах калатăп, кайĕ тарăна.
Сутов, кунта та хутшăнман-и ху эс?
Пулăшаканĕ кам?
Ăна та тупĕç.

Х ĕ р л ĕ  ç ӳ ç л и

Сутов çинчен çапла шухăшлама
Ăна тытман никам та аллинчен!

Э л е к ç е й

Каллех, каллех ыйтма тивет, мĕнма
Шăлмастăн сурчăкна туту çинчен.

Х ĕ р л ĕ  ç ӳ ç л и

Шăлсах тăратăп-çке енчен енне.

С у т о в
*(Юлташне сив куçпа пăхса.)*

Мĕскер эс çавăран ун арманне!
Кайран калаç — кирлех пулсассăн питĕ.

Э л е к ç е й

Хăш чух пулать вăл —
ăс çитменнипе те
Каварçăсем сутаççĕ пĕр-пĕрне...
Исков пирки калам халь ик сăмах.
Çапла, Исковăн айăпĕ пурах:
Хăйне тĕпленĕ национализма
Вăл хăй те йышăнать сăмахсăрах.
Мĕн сăлтавпа Гаврилов «шур çиппе»
Унта троцкизм хушнă саплăк пек?
Пĕр шутласассăн, юлташсемĕр, эпĕр
Чекист тесе кама çитĕнтеретпĕр!
Хăрушă выçă Левиафана[*]...
Фальсификацишĕн, Сутов, сана
Розановпа пĕрлех явап тыттарĕç[**] —
Çакна Гаврилова та астутар эс.
Сахъя çинчен калам юлашкинчен.
Чакассăм çук калла хам çырнинчен:
Сахъя — чăвашăн чи хăруш тăшманĕ.
Кала, Сутов, ăна эс пулăшман-и

[*] Левиафан — Библирен: хăрушă тискер кайăк. Вăл хăйĕн çурисене те, ашшĕ-амăшне те çăтнă имĕш.

[**] Чăваш НКВД историйĕнче уголовнăй ĕçсене ытлашшипех фальсификациленĕшĕн айăплани чăнах та сахал мар пулнă. Çавăншăн, сăмахран, Розанов хыççăн Шитова (Сутов) та персе пăрахнă.

Хура та юнлă ĕç тума куллен?
Паян та эс вăл хушнипе ĕçлен.

С у т о в, пуçран çапнă пек, пĕр вăхăт нимĕн те чĕнмест. Ыттисем те ĕнени-ĕненми шăпах лараççĕ. Тепĕртакран шăплăх тупсăмне ăнкарса илет те ларăва малалла ертсе пырать.

С у т о в

Сатурова итлерĕмĕр. Анчах
Тӳрре тухмалăх ним те калаймарĕ:
Апла – эпир каланисем чăнах.
Ун пек пулсан, малтанлăха ăна
Тĕп-тĕрĕс, партилле хак парар мар-и?
Е малалла калаçăва тăсар...

Х ĕ р л ĕ   ç ӳ ç л и

Çитет. Кунта йăлт паллă, секретарь.

С у т о в

Апла-тăк сасăлар – кам хăш енне.
Чекист пулсан та халăх тăшманне
Пĕле тăркач хăй хӳттине илнишĕн,
ВКПб çул-йĕрĕпе пачах
Килĕшменнишĕн, Тĕпкома çырнишĕн
Сатуров Алексей Степаныча
Кам кăларас тет парти ретĕнчен
Ал çĕклеме ыйтатăп ... харăсах.
Хăюллăнрах, ан тăрăр хăраса.

Сасăлаççĕ. Халиччен чĕнмесĕр ларнă ватă та мар, çамрăк та мар арçын аллине çĕкленĕ хыççăн хура мăйăхли те, куçне Сатуровран тартса, юлашкинчен аллине çĕклет.

Э л е к ç е й

Сутăнчăксен çĕршывĕ!
Сирĕнпе
Пĕр кĕтӳре текех çӳремĕп эп.
Халех!
Халех çыратăп рапорт. Акă,
Кунтах çăра уççийĕ, ăпăр-тапăр:
Удостоверени, пропуск, пистолет,
Анчах тĕрĕслĕхе...

Элекçее каласа пĕтерме памаççĕ: пистолетне кăларса хунă вăхăтра ăна Сутов систерсе хунă икĕ сотрудник кĕтмен çĕртен кĕрсе аллисенчен пăрса илеççĕ. Ăнсăртран пистолет курокĕ вĕçерĕнсе каять, пуля Сталин портретне лекет. Элекçее илсе тухса каяççĕ.

С у т о в

Çапла вăл, тĕрĕслĕх хăех килет.

Пурте шыв сыпнă пек, нимĕн чĕнеймесĕр Сталин портретне пăхса тăраççĕ.

Кун хыççăн ĕнтĕ Элекçей Сатуров,
Чăнах та, пирĕнпе ĕçлеймĕ урăх.

Сутов сĕтел хушшинчен тухать. Алăк патне ӳкнĕ пĕртен-пĕр çавра шевле çине атă кĕлли лекет.

## Улттӑмӗш картина

Пысӑках мар хваттер. Кӗтесре – тимӗр кравать. Чӳречесене тӗрӗллӗ чӗнтӗрпе карнӑ. Стена ҫинче сӑран карттуслӑ арҫын – Кӗверки ашшӗн сӑнӳкерчӗкӗ. Урай варринче упа тирӗ. Алӑк патӗнче хуҫланса выртан хром атӑ, айккинче – пуртинке. Кӗверки чӑлха вӗҫҫӗн, каяллamалалла ҫӳрет, Лисук ларать.

К ӗ в е р к и

Ӑнлан, Лисук, – ӗҫри секретсене
Пире ниҫта та калама хушман.

Л и с у к

Мана та шанмасассӑн, малашне
Мӗнле санпа пурӑнмалла тет ман?

К ӗ в е р к и

Ӑнлан, Лисук...

Л и с у к

Апла эп хам пыратӑп
Пиччем ҫинчен тӗрӗссине пӗлме.
Тем тӗв тӑватӑн, темӗн пытаратӑн,
Ҫӳретӗн – ҫапнӑ тейӗн кӗлеме.

К ӗ в е р к и

Тӗрӗссипе калас пулсан – ӗненмӗн,
Тем шухӑшлӑн тата эс ман пирки...

Л и с у к

Мӗн?
Айӑпу ҫук мар пуль те тӳреммӗн?
Мӗн-ма чӗнместӗн эсӗ, Кӗверки?

Е кайрăн-и сăмах илме кивçен?

Кĕверки

Итле апла, ытах пĕлес килсен.
Анчах, Лисук, «ни-ни» эс никама та,
Хăвна юратнипе анчах калатăп.
Лекçей Степаныча эс пĕлекен,
Эс хапăлланă Исковах пĕтерчĕ.
Элекçее, — пĕлетне? — сăвăç терчĕ
Ялан çĕр çывăрма паман иккен, —
... Исков ĕçне вĕçленĕ пулнă ĕнтĕ,
Вăл пур ăна — тепре пăхса тухать,
Йышăнăвне йăлтах улăштарать:
Ун арăмне те, юлташĕсене те
Явап тыттарасран вăл хăтарать.
Исков кăтартнă тăрăх, допросра
Вĕсем кăçал пĕрле ирттернĕ çимĕк,
Политика çинчен калаçнă имĕш...
Тем, ун пекки юлман-çке ман асра?
Паллах ăна эп хытă хӳтĕлерĕм,
Тахçан вăл активист та пулнă терĕм.
Начальникĕ эп мар-çке — çӳлтисем,
Итлеççĕ-им ман сăмаха вĕсем.
Мĕн туса хучĕ Элекçей Степаныч, —
Халь хамăн чунăмра та çĕтрĕ канăç.
Питех шала кĕрсе кайсассăн ку ĕç,
Каярахпа хама та хупса хурĕç...

Лисук

Сана та мĕскершĕн хупмалла?

Кĕверки

Епле мĕскершĕн? Эпĕ унпала

Пĕрле ĕҫленĕ, пулнă тăванла!
Пĕлместĕп халь мĕнле ҫăлăнмалла...
Ăнмасть ман пурнăҫ.
Ҫуклăхра эп ӳсрĕм
Паян куна ҫитмешкĕн тем те тӳсрĕм;
Сивви, ҫын мăшкăлĕ, выҫҫи...
Халь тин ак пулса ҫитрĕм те эп ҫын
Йăлтах-йăлтах ман ҫухатас пулать.
Хам айăппа пулсан, атя, юрать,
Ҫук, ҫыншăн-ҫке чăтатăп мăшкăла,
Тăван-пĕтеншĕн ĕнтĕ хăшкăлап.

## Лисук

Эс хăвăншăн ан лар-ха хăраса,
Раскал виҫмешкĕн тытнă тараса.

## Кĕверки

Хальхи шайри ĕҫ вырăнне илмешкĕн
Ытла нумай тӳленĕ-ҫке, Лисук!
... Ун чух шкул кĕнеки тупса илмешкĕн
Ниҫтан-ниҫтан пĕр пус тупма та ҫук.
Ял тăрăх лавпала Махмут ҫӳретчĕ,
Шав пуҫтаратчĕ шăмă, ҫĕтĕк, тир.
Виҫ пус укҫашăн, шутласа илсемччĕ,
Мĕн чул асап тӳсместĕмĕр эпир.
Тирне ăҫтан-ха тупнă тейĕн эсĕ?
Ял йытăсăр нихҫан та пурăнман.
Ах ачапча темерĕн! — Шик пĕлмесĕр,
Мĕн чухлĕ эпĕ вĕсене тытман!
Пĕррехинче ҫапла персе антартăм
Хуҫисĕр сулланса ҫӳрен йытта.
Тирне сӳсе пĕтертĕм те кăшт лартăм:
Асав шăлне епле катас тата?

Хирме пуçларăм çĕçĕпе... Тăрук,
Харлатрĕ-илчĕ йытă, айтуру!
Чут йăванса каяттăм месерле.
Эп сăвă та вуланă питĕ селĕм!
Ун хыççăн, – тем амакĕ!? – пултăм селĕп.
Ытла айван-çке пулнă, шухăшлас-тăк,
Халь, ак, ĕçре мĕскер кăна курмастăн!

Л и с у к

Йĕрĕнмелле хăрушă япала!
Ун пеккисем çинчен тек ан кала.

К ĕ в е р к и

Паян ирпе Сутов тĕл пулчĕ те
Мана Элекçейпе тăванлă, тет.
Эп ăнлантартăм, питĕ инçетрен
Тăванлă терĕм – мăшăрăм енчен.
Тем шухăш тытнă ĕнтĕ, путсĕрскер.

Л и с у к

Епле?
Вăл санăн юлташуччĕ-çке!

К ĕ в е р к и

Пирĕнни пек ĕçре юлташлăх çук.
Политика таврашĕнче унта
Хуçа та тарçă – армути те çу.
Эп çăлăнса тухсассăн çакăнтан,
Сан пиччӳне, Лисук, çăлатăпах.
Итле, чĕкеçĕм, пуçăма тăпах
Пĕр шухăш çапрĕ.
Те каламалла?..

Лисук

Çапрех пулсан, ара, кала, кала.

Кĕверки

Ман санпала, Лисук, юрим пекки
Вăхăтлăха кăна уйрăлмалла...

Лисук
*(Куçĕсене чарса пĕрахса, тĕлĕнсе.)*

Мĕн аташатăн эсĕ, Кĕверки!
Хĕвел çапмарĕ пулĕ те сана?
Е йăнăш илтрĕм-и, эп сăмахна?

Кĕверки

Лисукăм, чунăмçăм, чĕкеçĕм манăн,
Хăвна юратнине пĕлместĕн мар эс.
Асту-ха, пĕлтĕрсем Иван Путманăн
Ачи-пăчисене те хăвармарĕç...
Ку вăхăтлăх анчах, пĕр çур çулччен,
Çак самана кăштах лăпланиччен.

Лисук
*(Хăй ăшĕнче.)*

Çăлпи те авă хут уйăрттарса
Уйрăлнипе çеç юлчĕ çăлăнса.
*(Кĕверкине куç айĕн сăнаса.)*

Ытлаванах çынни çак, пĕр тесен,
Анчах мĕн-ма ăна юратаймастăп?
Вăл çеç-и-ха? –
Ăна эп халиччен
Пĕрле выртса-тăрса хăнăхаймастăп!
*(Сасăпа)*

Пĕлетĕп, эс мана чăнах саватăн.
Хăв шутлани хăвна çеç мар, мана та
Çăлса хăвармалли меслет пулсан,
Мĕн-ма санпа килĕшес мар-ха ман.
Çитменнине, вăхăтлăха кăна.

Кĕверки

Паллах, паллах, — вăхăтлăха кăна.
Хăв вĕренсе пĕтериччен çех, тепĕр
Çур çуллăха вырнаç общагăна.

Лисук

Çук, Кĕверки, кунта эп юлăп, эпĕ!
Тăрук калаçмалли пулсассăн пирĕн,
Ман патăма хутран-ситрен эс çӳрĕн.
Сана ĕçрен те парĕç пĕр кĕтес.

Кĕверки

М-мда... Тен, тĕрĕс те калатăн эс...

Кĕверки Лисук патне çывхарать, ăна çурăмĕнчен ыталать.
Чуптума тăрсан, Лисук упăшкин аллисене сирет те апат хатĕрлеме тытăнать.

Лисук

Çăлăнассишĕн ку саманара
Кашни мĕнле пĕлет, тӳлет çав майлă.
Çапах, мĕн чухлĕ, Кĕверки, санра
Хăравçăлăх, чеелĕх, тасамарлăх!

Лисук тирĕк-чашăкне пăрахать те пӳртрен чупса тухса каять.
Урай варринче Кĕверки пĕчченех тăрса юлать.

## САМАНАПА ПОЭТ КАЛАÇĂВĚ

П о э т

Мĕнле пулсан та сав мана,
Юрат мана тесе пăшăлтатса
Çÿрет çумрах мухтавлăн Самана.
Çут тĕнчене, виçесĕр Вăхăта
Кунсем çине виçсе тата-тата
Этемсене вăл вăрттăн валеçет.
Тата мăн чухлĕ юлнă? — Кам пĕлет...
Хăлха янрать-и? — Сас çухалнăçемĕн
Поэт тытса илесшĕн Шухăша:
Мĕскер вăл Самана?
Мĕн-ма пĕр çемĕ
Пулса янăраймасть вăл, шуйхашать?
Е вăл патшалăх, влаç, лару-тăру,
Е тĕрĕслĕх, суялăх, тавăру?
Е вăл мĕн пуррине çăтасшăн сăхă
Хура матери-пăнчă евĕр вăхăт?..

С а м а н а

Кунта, чăнах та, вырăнĕ хитре,
Чечек те, ав, хитре сăмах каласшăн...
Илем тенийĕ сăвăçшăн — кĕтрет,
Анчах та шухăш кирлĕрех ăсчахшăн.
Кунта эс килнĕ йывăр сехетре
Манран тарса, мана манса каясшăн.
Поэт вăл ĕмĕрлĕх ача иккен —
Епле ăнланаймастăн халиччен:
Эс пурăннă чухне эп пур çĕрте те
Сан чĕрÿнте тĕвĕленсе çÿретĕп.

П о э т

Сан витĕмӳ, чăнах та, сăхă питĕ:
Сас-чĕвĕ витĕр, çивĕч сисĕм витĕр
Шухăшсене куллен сăрхăнтарни —
Сан кустăрму çине шыв антарни.
Ан пăшăрхан, шикле чурусене
Çухатасран — вĕсем яланлăх санăн.
Ахаль-им этемсен çамки çине
Нуша кĕлемине çапса эс янă?

С а м а н а

Этемлĕх — манăн аттепе анне,
Мана тахçан вĕсем çуратнă мар-и?
Тĕнче тытма тесе килекене
Алран тыттартăр килĕшӳ чукмарĕ.
Кăмăлăра кура — ман кучченеç:
Эсир йĕркеллĕ, эпĕ те йĕркеллĕ,
Теветкелле пулсан — эп теветкеллĕ,
Ку манăн тĕрĕслĕхĕм — унчченех.

П о э т

Сана çынсем çуратнă, тĕрĕс ĕнтĕ,
Анчах эс вĕсенчен чылай çӳле
Ют вăй пулса, хуçа пулса çĕклентĕн.
Кучченеçĕ — шăпа.

С а м а н а

Ан ӳпкеле
Эп урăхла пулма пултарайманшăн.
Мĕнле шутларăр — пултăм çавăн пек.
Анчах ӳссе çитĕннĕскершĕн, маншăн,

Ачалăхра тăрса юлни — инкек.
Курмастăн-им — тĕнче ман алăра,
Халь эпĕ патшаран та аслăрах.

П о э т

Хăй ашшĕ-амăшне тăмха çапса,
Чура туса хуран кĕрнеклĕ ывăл
Ытла та пархатарсăр.
Кĕл сапса
Чӳк чӳклесессĕн те юлаймăн сывă:
Пил вырăнне açу-аннӳ сана
Ылхан сăмахĕ ярĕ, Самана.

С а м а н а

Хăй тăхăмне усал сунни кам пултăр?
Паянлăха сирте те çынлăх пур-тăр.
Ăнланаймарăн эс мана, поэт:
Этемлĕх, ватăлса-йăшса çитсессĕн,
Пур чĕрĕ япала пекех — вилет.
Пĕлместĕн мар эс: çăкăр — хире хирĕç,
Сăваплă ĕç ан кайтăр харама:
Çынна пăхса вĕлерессси — ман тивĕç,
Татас пулать хисеплĕ парăма.
Ахаль-им çын мана пăхса ӳстерчĕ,
Патшалăх вырнаçтарчĕ никĕсе.
Янычарсен çарне те çитĕнтерчĕ,
Çулпуç вара хăй тупăнчĕ кĕçех.
Куçа чиксе шăтарасран сыхларĕç
Хăрушсăрлăхăн сыхă çыннисем,
Пичет çапса хытарчĕç, саккунларĕç
Йăли-йĕркисене çитĕннĕçем.
Мĕнле-ха? — пĕр патшалăхра ик шухăш?

Куҫа алчăратан ҫăлтăрсенчен
Пĕр пысăк уйăх тумалла та шухă
Ĕмĕтсене тытас картасенче...
Вара майпен ҫĕклерĕҫ ҫирĕп, хăтлă
Чĕкеҫ йăви пек, шур тăмран тĕрме.
Ăна халь тин Галилейран хăватлă
Этем те пултараймĕ тӳнтерме.

П о э т

Ҫапла, этемлĕх тивĕҫ патака:
Пирĕшти мар, ӳстерчĕ аҫтаха.

С а м а н а

Вулкан ҫинчи пек пурăнăҫ кĕрлевĕ.
Тур сиртĕр те – эп ҫав тирансене,
Йытта, кăшланă шăмă панă евĕр,
Килес ăрун усал чĕлхи ҫине
Паратăп ывăтса...



# ИККĔМĔШ ПАЙĔ

## Пĕрремĕш картина

Хĕлле. Сивĕ. Çил-тăман çавăрттарать. Ытти пуç янă çынсем пекех начар тумланнă икĕ çын турат иртет. Пĕри, хĕрарăмĕ, тутăрне карчăк пек çавăрса çыхнă, арçынĕ — саплăклă çĕлĕкпе. Вĕсем çамрăксем пулнине сасăран çеç пĕлме пулать. Пурттисене чăнкки-чанкки тутарнă май пикенсех тем калаçаççĕ, пĕр-пĕрин çинчен куçĕсĕне илмеççĕ. Аякра мар вăрман касакансен мĕлкисем курăнкалаççĕ.

Н у с я

Ăшчик çунса тухать.  
Ыран пире  
Илсе каяççĕ урăх лагере*.  
Юратăвăм, савниçĕм, чунăм Сантăр,

---

*1946-1947 çулчен арçынсемпе хĕрарăмсем пĕр лагерьтех ларнă.

Унта епле пурнас-ха манăн сансăр?..
Çак пурнăçра пĕртен-пĕр савнăç пурччĕ
Чуна хĕвел пек ăшăтаканни —
Мĕн тăвăн-ха? — усал ăна та курчĕ,
Туртса илесшĕн вăл сана, савни.
Эп кĕçĕр, Сантăр, чĕптĕм куç хупман,
Самант шутла-шутла ире эп кĕтрĕм:
Сана каламалли мĕн чулччĕ ман!
Ак куртăм та, калас сăмахăм çĕтрĕ.

Васков

Лăплан, тархасшăн, чунăмçăм, савниçĕм,
Ма ун пекех татăлмалла ытла?
Срук пĕтиччен нумай та мар, шутла:
Тăват çул çурă манăн, санăн — виççĕ,
Кĕтсе илетпĕр ирĕке пĕрех,
Вара — яланлăх, ĕмĕрлĕх пĕрле.

Нуся

Теме шанса пурăнмалла...
Ах, Сантăр,
Ман тантăша, ав, ирĕке тухсан та,
Каллех сĕтĕрсе килчĕç каялла,
Халь самани те кайнă кутăнла.

Васков

Сăмах-юмах кăна ку — ан ĕнен.

Нуся

Çук, çук — ăна хам куртăм эп ĕнер,
Ун пеккисем халь зонăра чылайăн.

Васков

Хăрушă юмахсен те вĕçĕ лайăх:
Ан пăшăрхан эс, пулĕ йĕркеллех,
Ара, тĕрĕслĕхе ĕненмеллех.

Нуся

Ах, найкăшрăм пулсассăн —
каçарсам.
Анчах ыран каяççĕ куçарса...
Эп тамăкра та пĕлĕп савăнма —
Санран кăна ан уйăрччăр мана.
Кунта та эпĕ, çакă кӳлеме,
Сана курасшăн васкаса килетĕп.
Ĕненĕн-и, салху тĕлĕкĕме
Эс килмесен — çĕрле тăрса йĕретĕп.

Васков

Эс ман туйăмсенех калатăн, Нуся.

Нуся

Ан кул-ха эс манран, тăр-ухмахран,
Хам мĕн шутланине калам-ха уççăн.
Пире, иксĕмĕре те, сăмахран,
Çак лагере тытса яман пулсассăн,
Сана эп тĕл пулмастăм,
эс — мана,
Шăпа-и ку?
Е ăнсăртлăх кăна?
*(Йĕрет.)*
Ан ман мана, савниçĕм.

В а с к о в

*(Пурттине пăрахать те Нусьăна хулпуççинчен ыталать.)*

Нуся, Нуся,
Чĕр тамăкри хĕвеллĕ варкăш уçăм,
Шăмшакăм витĕр симĕс-симĕс курăк
Шăтса тухсан та манмăп эп сана.
Мĕн виличчен те никама та урăх
Эп савас çук.

Н у с я

Эй, Турăçăм, мана
Сăвăсенче саван вунçиччĕре
Телейсĕр хăварманшăн, тав сана.

В а с к о в

Епле хитре эс, Нуся!
Тĕнчере
Санран хитри пулман пуль халиччен.

Н у с я

Эс ун пекех...

В а с к о в

Чăнах та, чăннинчен
Иртсе-куçса эп каламастăп-çке.

Н у с я

Эс ху та, Сантăр, пит илемлĕскер...

Васковпа Нуся чуптăваççĕ. Пиçиххийĕ хушшине пуртă хĕстернĕ пуç янă хĕрарăм вĕсен умĕнчен иртсе пырать.

Х ĕ р а р ă м

Ма илтĕнмест теп çамрăксен сасси,
Вĕсем, ав, чуптăваç иккен, саççим...

Нуся вăтанса пуçне пĕкет. Хĕрарăм, хашлатса-хашлатса сывласа, хăй тĕллĕн калаçса малалла утать.

Эй, юрату, эс, авă, еплерех:
Сив тамăкра тата хĕрӳллĕрех!..
*(Хĕрпе каччă еннелле çаврăнса.)*
Нумай ан тăрăр, вăрçĕç ак каллех.

В а с к о в

Ăнлантăмăр, инке, эпир халех.

Хĕрарăм куçран çухалать. Каччăпа хĕр пĕр-пĕринчен ниепле те уйрăлаймаççĕ.

Н у с я

Каям эп, Сантăр.
                    Этаппа ыран
Хускалмасассăн çак тĕлех килетĕп,
Эс кĕт мана.

В а с к о в

                    Илсе кайсан вара
Хыпар кĕтетĕп.
                    Ырă çул сĕнетĕп.

Н у с я

Сыв пул, савниçĕм.
                    Тĕл пулаймасан,

Манра Чăвашăн адресĕ пур сан —
Унта пыратăп, турă пулăшсан.

Васков

Пулăшатех, савниçĕм, курăн акă.

Нуся

Юратăвăм, пĕр саншăн пурăнатăп.

Васков

Куçа хупсан, куç хупанки çинче
Сана эп усрăп...

Васковăн юлашки самахĕсене вăрман шавĕ хуплать. Каччă савнă хĕрне мĕн курăнми пуличченех пăхса юлать. Кăштахран тепĕр еннелле утса каять, касса янă йывăçсем çинче чикарккă туртса ларакан юлташĕсем патне пырать, унти калаçăва тăнлать.

Солдатов

Халь Чăвашра шыв-шур.
Тĕлĕнмелле,
Кунта вара хуçаланать хĕлле.
Татах туртса сурать шăмшакăм ман,
Хăçан лăпланĕ çакă çил-тăман!

Услей

Хӳреленет, ав, çулăм, явăнать,
Апла майпен çанталăк лăпланать.

Бригадир

Ку — юлашки тăхтав.

Паян каллех
Тултараймастпăр палăртнă плана –
Тăраниччен çимелĕх ĕçлейместĕр.

Услей

Ун пысăкăш плана ăçтан çын тӳстĕр!

Бригадир

Ара, эсир планпа пурнас тесе
Çĕн пурăнăç тумарăр-и, çынсем?
Планпах туса пĕтертĕр лагерьсем*,
Планпах ларатăр, ак, авторĕсем.

Солдатов

Ма кураймастăн эс пире, Илле?
Пире анчах-и – тĕнчене çилленнĕ.

Бригадир

Шăплан, Солдатов!
Санăн – пĕр тĕллев:
Гимнпала тăрса ĕçлемелле.
Ахаль-им ĕç прави çĕнсе эс илнĕ –
Халь ак ĕçлесшĕн мар,
тĕлĕнмелле!
Çапла, чухăнпала интеллигент
Çăвар çапма кăна пĕлеç иккен.
Ма кураймастăн тетĕн?
Ман сире

---

* Вăрçă умĕн НКВД ретĕнче 500 пин çын тăнă, план тăрăх пуç янисен йышĕ 40-43 мăльюна çитмелле пулнă.

Кала-ха, мĕншĕн савмалла сĕре?
Ун чух пире кулак шутне кĕртсе
Кунта пуҫ янăшăн, тен, савмалла?
Е арăмпа ачамсене йĕртсе
Ҫӳренĕшĕн пырса тав тумалла?
Алла ҫурла тытма вĕренеймесĕр
Ҫын шучĕпе пуясшăн пултăр эсĕр.
Анчах ăнлан: ҫерҫипеле хресчен
Нихҫан та пĕтмĕҫ аслă Ҫĕр ҫинче.

Солдатов

Эпир мĕскер!
Приказ вăл приказах –
Ăна салтакăн пурнăҫламаллах.

Бригадир

Приказ, приказ...
Е эсĕ чăнласах,
Ҫӳлтен хушсан, переттĕн аҫуна?

Солдатов

Пăхăнмалла пурин те саккуна.

Бригадир

Кала-ха тӳррĕн, активист иптеш,
Миҫе ҫынна персе вĕлернĕ эс?

Солдатов

Ҫук, йăнăшан, хисеплĕ бригадир,
Кулаксене пĕтернĕ чух эпир
Совет йĕрки-саккунĕнчен иртмен.

Б р и г а д и р

Ун саккунне саккунпала виçмен...
Сана ăс кĕрес çук.
Тăр, тăм-писмен!
Кас вăрманна халь кунĕ-кунĕпе
Хăв юратан Совет саккунĕпе.

С о л д а т о в

Халь эс асли кунта.
Апла – сан право...

Б р и г а д и р

Солдатов-активист, питех ан савăн –
Сан вăхăту тек килмĕ çĕр çине,
Текех асап кӳреймĕн çынсене!
*(Ыттисен енне çаврăнса)*
Эсир тата мĕне шанса пурнатăр?
Е калаçсах срук иртессе шанатăр?

В а с к о в

Ялан эс хăратан ĕçлессипе –
Ĕçлетпĕр вĕт ялан вăй çитнипе!
Ан тив, кунне çич шпаллăх çеç касар,
Пĕрех мала кайни-çке, калла мар.
Пĕр утăм чухлĕ хывнă чукăн çул
Пĕр утăм чухлĕ çеç пире çывхарттăр
Пуласлăх еннелле.
Вара кунçул
Пĕр уссăрах иртмест –çавна пĕлсе тăр!
Çапла, Илле пичче, коммунистсем
Кунта та коммунизм тăваç вĕсем.

Бригадир

Ку чукăн çул ăçта илсе каять —
Пĕлетĕн-и çавна эс?
Такая*.
Çавăрăнса тухать те шурлăха
Илсе кĕрет вăл.
Ёнтĕ шутлăр-ха,
Çапла тăваç-и коммунизма!
Айван-çке эс, Васков!
Çитмест сăмах
Сана кӳрентерме, айăплама.
Кам çавăрса пĕтернĕ сан пуçна,
Кам чаппанпа хупланă сан куçна?
Виç çул ларатăн — виçĕ çулĕпех
Пуплетĕн эс Демьян** такмакĕпе.

Васков

Илле пичче, пит тимлĕн итлесем:
Сана эп пĕлтерем-ха чăвашсен
Чӳк тунă чухнехи пĕр йăлине.
Арман пĕви пĕвеленĕ чухне,
Вăл çирĕп тăтăр çăвĕпех тесе
Пăрахнă, тет, çынсем ун никĕсне
Ялти чипер, илемлĕ пикене.
Вара, ĕненĕр-и, çут пĕвисем
Чăнах та çирĕп тăнă тет вĕсен.

Бригадир

Татах та пур-и сирĕн, чăвашсен,

* Пуç янисем тунă чугун çул ячĕ.
** Демьян Бедный — пролетари поэчĕ.

Мухтанмалли ку евӗр йӑласем?

Услей

Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ? Халь ҫӗршывӗпех
Ҫак йӑлана тытаҫҫӗ пирӗн пек.

Бригадир

Эсир халь социализм никӗсне
Ҫирӗплетме выртса юласшӑн, ахӑр.
Пӗр вунӑ ҫул вӑрман кассассӑн акӑ
Тупайӗҫ-ши шӑммӑр-шаккӑрсене!

Васков

Вут-тимӗр мар-ҫке коммунист чӗри,
Ҫунсан-ҫунсан, ҫурта пек, вӑл сӳнет-тӗр.
Эпир вилсен те — пӗтӗм тӗнчери
Ӗҫхалӑхӗн телейӗшӗн вилетпӗр.

Солдатов

Ӗҫхалӑхӗн телейӗшӗн, такамшӑн?
Ҫитет!
Халь эп пурнатӑп хамшӑн.

Бригадир

Ак тамаша!
Солдатов та вӑранчӗ.
Анчах пулни-иртни сан пит пӑтранчӑк...
*(Васков енне ҫаврӑнса)*

Васков, Васков, ухмах-ҫке эс ытла та,
Ҫапах сана эп, туршӑн, кӑмӑллатӑп.
Аллу та халлӗхе вараланман.

Сан пеккисем, Васков, çак саманан
Пиçсе ĕлкĕреймен çимĕçĕсем —
Мĕн пулĕччĕ пиçсе ĕлкĕрейсен?!
Сире кунта, Колымана, пухса,
Ай, вырăнлă, ай, тĕрĕс тунă Сталин:
Хупман пулсан çӳреттĕр пулĕ халĕ
Ши шăхăрса!
Ялта хурах пусса.

В а с к о в

Çук, бригадир, хурах пусмастăм эпĕ,
Пулсан — пулаттăм комсомол поэчĕ.

Мала, комсомоли,
Çулсем тăвалла.
Ытах тăвалла-тăк,
Çине тăмалла.
Мала, комсомоли,
Çулсем такăр мар.
Ытах такăр мар-тăк,
Тавай такăрлар!

Ку — ман программа пулнă.
Халĕ те
Мана çак шухăш питĕ илĕртет.

У с л е й

Сăвву ытлаванах, кĕске пулсан та,
Малашлăху ху аллунта — çыр, Сантăр.

В а с к о в

Илле пичче мана çветтуй та терĕ,
Çук, çветтуй мар эп — тӳррĕнех пĕлтерĕп:

*(Услей çине пăхса)*

Эп айăплă пĕр сăвăç умĕнче —
Каçарăн-и мана, Услей пичче?

Бригадир

Апла пылчăкпала варланнă эс те!

Васков

Çапла шутламалла-ши, е
...пĕлместĕп.
...Ун чух эп темĕн те чăтса ирттертĕм:
Çывăрттармасăр муритленине,
Вилес патне çити хĕненине...
Виçесĕр пулĕ теттĕм шарăм-тертĕм.
Анчах та чăтаймарăм — шăхчана
Асапçă таптасассăн атăпа,
Ал пусрăм та хамра çук айăпа
Эп йышăнтăм.
Вăл çеç пулсан тарамччĕ
Çынна эп сутрăм вĕт çав перопа!
Юрать-ха тӳр тумашкăн тур вăй пачĕ:
Сутра эп йышăнмарăм вĕсене,
Çав çеç лăплантарать халь чĕрене.

Бригадир

Апла сана хăтарчĕ тетĕн суд?

Васков

Çук, суд пирки ун пек калассăм çук.
Чим, йĕркипе калам-ха.
Çав чула

Илсе хурса çăмăллатам чуна...

Услей

Тек ан хускат ун пек япалана –
Сана каçарнă эпĕ, айвана.

Услей айккинелле пăрăнса утать.

Васков

Ялан çапла, итлесшĕн мар мана,
Ма пĕрех хут аçа çапмасть мана!

Бригадир

Эс айăплă, паллах, пĕлен хăвах.
Анчах тĕнчи пин хут айăплăрах.
Ăнланаймастăп эп чăвашсене:
Хăйсем ахаль те йышлă мар, çапах
Пĕрне-пĕри сутаççĕ шаршанпах!

Солдатов

Эпир те, вырăссем, чăвашсенчен
Кая юлмастпăр ку тĕлĕшĕнчен.

Бригадир

Эпир нумайййăн çĕр çинче –
çавна пĕл.

Услей
*(Солдатова тарăхса-йĕкĕлтесе)*

Ара, эс вырăс марччĕ-çке – ирçе!

Кунта та тем пайтти курасшăн, çекĕл,
Ят-сумлă вырăс ят-шывне илсе!

Вăрмантан чан çапни илтĕнсе каять. Пуртă-пăчкă сасси пур енчен те лăпланать.

Солдатов
*(Калаçăва хăвăрт урăх енне тартса)*

Тата пĕр кун аран-аран тамалчĕ,
Чи кĕтнĕ вăхăт çитрĕ – каç апачĕ.

Бригадир

Паян нумай калаçрăм, айтурах.
Анчах кунти сăмах-юмах çинчен
Хуçа патне «йĕпе йĕкел» çитсен,
Мĕн пуласса пĕлетĕр хăвăрах:
Сутăнчăксемшĕн йывăр манăн аллăм.
Хуралçă-йытăсем вĕреççĕ, авă, –
Лешсем килеç-тĕр, тăрăр хăвăртрах.

Пакурĕсене, пуртти-пăчкисене йăтса пĕр çĕре пуçтарăнаççĕ. Кĕрĕк тăхăннă, винтовкисене хатĕр тытнă конвоирсем вĕсене пĕр колоннăна тăратса прачак çине илсе тухççĕ. Бригадир тепĕр сукмакпа утса каять.

Васков

Ăнланаймастăп эпĕ халиччен –
Мĕне курса-тăр çак Илле пичче
Чĕр тамăкра ĕçлет-ха пирĕнпе?
Вăл ирĕкре-çке хăй – пĕлтĕртенпех!

Солдатов

Кулак вăл — кулаках.
Кунта та, ав,
Пĕрре те тутарасшăн мар тăхтав.
Ĕçлеттерсех мĕн чул çынна вăл кăнтрĕ,
Çапла пире те вĕлересшĕн, контра!

Услей

Тăхта вăрçма, пире вăл, ахăртне,
Пай çурă илтересшĕн çăкăрне?
Çиен лаша вилмен тет...

Солдатов

Вăл халь те кураймасть Совет влаçне.

Услей

Ларса тухсан...
Тем юлнă-ха асне.

Васков

Илле пичче умри Малашлăха
Чăнах та ĕненмест.
Çак лагерьсем,
Тен, кирлĕ те пире вăхăтлăха?
Кунта утăмсерен айăплисем,
Коммунистла шухăшлайманнисем.

Солдатов

Айăпсăрри кунта, паллах, эс çех.
Çапла шутлатăн мар-и, чĕмере!

Васков

Ма эпĕ çех?
Чăваш пек кĕвĕçсе
Лартни те пулнă пуль пинрен пĕрре.

Солдатов

Эс айăплă, тăванăм.
Ма тесен
Совет влаçне çирĕплетес тесе
Пĕр пĕрчĕ шăрпăк та чĕртсе курман эс,
Такмак çырса чап илнĕ çын.

Васков

Ку – ман ĕç.
Ун чух ача эп пулнă, тунката!

Солдатов

Эс айăплă пĕрех.
Анчах та эпĕ
Мĕн чухлĕ усă тунă Совета!
Ăçта ун тавĕ халь, ăçта хисепĕ?!

Васков

Апла эс тавшăн пурăннă? Ак, халь

*(Солдатов кăкăрĕ çинчи, сăрăпа çырнă номере кăтартса)*

Сана çактарнă номерлĕ медаль.

Солдатов

Эс ырра мар йĕкĕлтешетĕн-ха...

Услей

Шăпрах, ачсемĕр, — ав килет «тиха»*.

1-мĕш конвоир

Эй, варринче!
Мĕскер пакăлтататăр —
Кун каçипе пĕтмен-им вăй-хăватăр!

2-мĕш конвоир

Е вăрттăн йĕркелесшĕн-и кавар
Кут тивертсе тармашкăн Мускава?
Пĕр утăм айккине пуссассăнах
Перетĕп ĕнерхи пек шап кăна!

Услей

Ĕнер вĕсем вăйран кайса йăванчĕç
Çул айккине — эсир персе вĕлертĕр.

2-мĕш конвоир

Хăшпĕрисем ытла та хăюлланчĕç.

1-мĕш конвоир

Е пирĕн пăшалсем пемеççĕ тетĕр?

Тимĕр хапха умне çитсе чарăнаççĕ. Зона. Хапха тăррине пысăк саспаллисемпе «Добро пожаловать» тесе çырнă. Инçех мар вышка мĕлкисем. Лагере пурне те ухтарса кĕртеççĕ. Услейсен баракне тата тăвată çын — ĕнер персе вĕлернисен вырăнне — хушса параççĕ.

---

* Салтак çулне çитнĕ вăйпитти конвоирсене, хуралçăсене тиха тенĕ.

Надзирательсенчен пĕри

Ĕнер персе вĕлернĕ таркăнсен
Вырăнĕсем халь пушă — пырăр, иртĕр.
Вырнаçăр хăвăр пĕлнĕ пек.
Вĕсен
Кашăкĕсем те пур, тирĕкĕсем те.

Надзирательсем тухса каяççĕ. Баракра пуç янă çынсем харпăр хăй ĕçĕпе аппаланаççĕ: кам йывăç чăматанне ухтарать, кам кутамккинче темĕн шырать. Çĕнĕрен килнисем те вырнаçса пĕтеççĕ. Васков кĕтесри нар çинче вăрттăн-хĕрттĕн пытанса сăвă çырать. Солдатов аллăран иртнĕ хресчен сăн-питлĕ арçын патне пырать, унпа çăвар вылятарах калаçма пуçлать.

Солдатов

Кунта лараççĕ «аллă саккăрсем»*,
Анчах ăнланаймастăп тăрăшсан та:
Эс пирĕн ушкăна мĕнле çаклантăн?
Ăçтан эс, кам пулатăн, хăш ялсем —
Çавна пире пурне те пĕлтерсем.

Йăван

Эп паллашма хавас-ха сирĕнпе,
Çапах, малтан кала, ху кам пулатăн?

Кĕтесрен пĕри

Хăюллăскер.
Апла эс пирĕн пек
Нумай ларнискерех пулас-ха, ватă?

---

* 58-мĕш статья — политика тĕлĕшĕнчен айăпламалли статья.

Т е п р и

Сархайнă хут пекех, саççим, сăн-пичĕ...

Й ă в а н

Чаххуткăпа чирлетĕп эпĕ питĕ.

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Йĕрки çапла: паллашнă чух малтан
Ятне-шывне каламалла хăнан.

Й ă в а н

Аванччĕ те хăна кăна пулсан...
Мана Йăван мучи тесе ятлаççĕ.
Мĕн айăппа?
Ыр çыннăм, хăвăн сан
Çын вĕлерен статйи тесе калаççĕ.

С о л д а т о в

Каларăм-иç, кунта ларакансем —
Политиксем, апла коммунистсем.

Й ă в а н

Апла пулсассăн, эпĕ те политик:
Трацкис тесе хуптарчĕçĕ мана.
Хуть чĕптĕм чухлĕ айăпăм пулинччĕ —
Ăсатрĕç пурпĕрех Колымана.
Эп çавăн пек шутлатăп — ĕçлеме,
Çын кирлĕ те — хупаççĕ тĕрмене.

В а р р и н ч и р е т р е н

Мĕн тунă эс вара çав троцкистра?

Й ӑ в а н

Хутла пӗлейменни пӗтерчӗ мар-и —
Пӗр кивӗ хаҫатран латакайрах,
Этемӗн патретне ытараймасӑр,
Касса кӑлартӑм та стена ҫине
Чи-чи хисеплӗ тур кӗтессине,
Сурчӑкпала эп ҫыпӑҫтартӑм ӑссӑр.
Учитель, манӑн кӳршӗ, мур илесшӗ,
Кӑвапинчен хура ҫӗлен кӗресшӗ,
Ҫырса пӗлтернӗ ун ҫинчен влаҫа.
Трацкис патречӗ пулнӑ тет-и ҫав...
Ҫавӑнтанпа хутла пӗлекене
Эп кураймастӑп. Мӗн ӗлӗкренех
Мӗнпур инкек-синкек — хут пӗлнинче:
Ҫӑхав ҫыраҫҫӗ пӗр-пӗрин ҫинчен.

С о л д а т о в

Хутла пӗлен-и, ҫук-и — тӑшмана
Сӑнран пӑхсах пӗлес сан, тӑмана.

Солдатов утмӑлсенчен иртнӗ, кӑвакарнӑ ҫӳҫлӗ, патвар та лӑпкӑ ҫын патне пырать.

Эс кам тата? ҫак ҫӗтӗк сӑхманпа
Килме шутланӑскер Колымана?

Ю в е н а л

Эп — пачӑшкӑ. Апла ҫак сӑмахпа
Йӑлтах каларӑм хам ҫинчен сана.

С о л д а т о в

Ӑнланмалла пек. Опиум народа.

Эп, коммунист, пуппа пĕрле ларатăп, —
Ну, самана!

Ювенал

Эй, ҫылăхлă этем,
Усал чĕлхӳшĕн тур каҫартăр ĕнтĕ.

Пуҫ янисенчен пĕри

Турри вăл, кĕлтусан, каҫарĕ, тен,
Анчах каҫармĕ влаҫ ӳксе вилсен те.

Солдатов

Пачăшкăпа йăлт паллă.

Тĕреклĕ ҫанҫурăмлă вăтам пӳллĕ ҫын патне пырать.

Сан черет:
Ăҫтан эс, кам пулан, тата ытти те.

Петро

Санран НКВД шăрши кĕрет,
Тахҫан унта эс ĕҫлемен-и?

Солдатов

Ҫитĕ,
Калан пулсан кала — ҫынсем итлеҫҫĕ.
Пĕлетĕн-и эс — ют мăнастире
Хăйсен уставĕ-йĕркипе килмеҫҫĕ, —
Тăванăм, пăхăнас пулать пире.

Петро

Эп ырă чух тасал-ха ман умран,

Куçна-пуçна вут тивĕ ăнсăртран.

С о л д а т о в

Эй, юлташсем, тăна илесшĕн мар —
Унран, тен, «качака ури» тăвар?

Петро Солдатова кĕскен те хăвăрттăн кăкăртан çапать те ураран ӳкерет. Васков васкаса анать, ун хыççăн тата икĕ çын Солдатов патне пĕшкĕнеççĕ. Ăна, йăтса, хăма кравачĕ çине илсе вырттараççĕ.

П е т р о

Каçарăр, юлташсем, кăшт хĕрӳлентĕм.
Куçа кĕрет те, явăл, чăтаймарăм.
Лере, ГПУра, тĕпчекенсем те
Паян кунччен умрах тăраççĕ мар-и...
Тем кăмăла каймарĕ вăл мана.
Паллашăпăр, эп летчикчĕ авал.
Мĕнле калаç-ха? С корабля на бал:
Испани вăрçинчен — Колымана.
Петро тесе чĕнеç, ялти пек — Петĕр.
*(Никам та хирĕç чĕнмест.)*
Юлташăмсем, ара, мĕн-ма чĕнместĕр?

В а с к о в
*(кăшт тăхтасан)*

Уркăсем мар эпир кунта — пĕлесчĕ,
Пĕрне-пĕри, вăрçсан та, хĕнеместчĕç.

П е т р о

Каçарăр — айăплă.

Солдатов

Эп каҫармастӑп.

Петро

Каҫармасан, мӗн тӑвӑн?
Макӑрмастӑп.

Краҫҫын лампине вӗрсе сӳнтереҫҫӗ. Пурте ҫывӑрма выртаҫҫӗ. Васков анчах, ҫӳлти нар ҫинче выртаканскер, пӗчӗк чӳречерен ӳкекен уйӑх ҫутипе сӑвӑ ҫырать. Тепӗртакран вӑл та ҫывӑрса каять. Ҫӗр варринче тапӑлтатнӑ сасӑ илтӗнет, хӑрӑлтатни, тӗлӗкре калаҫни пӗтет. Васков кравачӗ патӗнчен пӗр мӗлке уйрӑлать те тепӗр енне вӗлтлетсе иртет... Ҫын пичӗ палӑри-палӑрми сӗмлӗхре «подъем» кӑшкӑрни янраса каять. Пурте хӑпӑл-хапӑл тумланаҫҫӗ, кашӑк-тирӗкӗсене йӑтса, апат кайса илеҫҫӗ. Васков ҫех ҫаплах мелсӗр выртать.

Услей

Мӗскер эс, Сантӑр, апата тӑмастӑн?
Ҫӗрле ытлашшипех те лартӑн мар-и?..

Солдатов

Миҫе хутчен сана айӑпламарӗҫ,
Эс ҫав-ҫавах такмак ҫырма прахмастӑн.

Васков патне пырса ӑна уринчен сӗтӗрет, часах вӑл вилӗ пулнине туйса илет.

Ачсемӗр, вилнӗ мар-и вӑл?! Часрах,
Часрах чӗнсе килес хуралҫӑна.

Пурте, ҫиме пӑрахсах, Васков патне васкаса пыраҫҫӗ. Йӑван та аллинчи кашӑкне пӑрахмасӑр унталла утать.

Услей

Чирленине те астумасп ăна, —
Епле апла, сасартăк, пĕр каçрах!

Солдатов

Чим, юлташсем, — ăна пăвса вĕлернĕ!
Ак, çумĕнчех кантраллă пиçиххи.
Эй, летчик, эс ăçта унта кĕлернĕ?
Кам пиçиххийĕ?
Лекрĕн те хайхи.

Солдатов, унпа пĕрле тата виçĕ-тăватă çын Петро çинелле чышкисене чăмăртаса кĕреççĕ.

Вĕсенчен пĕри

Йĕрки çапла —
Эс ман шăла катсан,
Ман санăнне катас пулать, ан ман!

Тепри

Кашнийĕн хăйĕн хакĕ: вилĕме
Пĕр вилĕм çех пултарĕ тӳлеме.

Петро
*(Лăпкăн.)*

Çын вĕлерменччĕ эпĕ ĕмĕрне,
Тӳлемеллех пулсан вара, мĕнех,
Хама вĕлериччен сиртен пĕрне
Пăвса прахатăпах!
Леш тĕнчене
Ма парăмлă каяс ман... Ну, çывхар!

Малта пыраканни тăруках каялла чакать. Ыттисем те тăпах чарăнаççĕ.

Услей

Тӳлевĕн вĕçĕ çук.
Шăпрах! Лăпланăр!
Пирвай чăн-чăн айăплине тупар.

Петро
*(Солдатов çине пӳрнипе кăтартса)*

Çак йĕксĕк ĕçĕ ку!
Çынсем, ăнланăр,
Ĕнер каçхишĕн тавăрас шутпа
Вăл усă курнă ман япалапа.
О, çынçиен! Сана эп çĕр çинче
Хампа пĕрле уттармăп пит инçе!

Шăв-шав çине надзиратель кĕрет.

Надзиратель

Шăпланăр, тăшмансем!
Мĕн кăшкăратăр?!
Тумланăр та пĕр харăс марш ĕçе!
Ав, хапхаран тухаççĕ кӳршĕрсем,
Эсир вара çаплах ухмах сутатăр!

Хускалмасăр выртакан Васков çине пăхса илет те йăлтах ăнланать.

Юрим пекки тăвать-и, е чăнах?
Ытла чарусăрччĕ ачи.
Каллех

Вăл пăснă режима. Апла ăна
Каллех сив карцера сĕтĕрмелле.

Солдатов

Анчах вăл вилнĕ-çке...

Надзиратель

Шăп çавăнпа
Явап тыттараймастпăр та ăна.
Такмак çырнишĕн вăл миçе хутчен
Патак çимен пуль, каскăн, халиччен.
Калав çырмашкăн ирĕк пурччĕ унăн —
Вăл пур, ав, сăвăсем те çырнă пулнă.
Хăй айăплă.

Солдатов
*(Петро çине кăтартса)*

Çук, айăпли ак çакă.
Ун пиçиххийĕ.

Петро

Çакна туян-ха, пакăç!

Петро Солдатова тапса ӳкерет. Тата икĕ надзиратель кĕреççĕ.

Вĕсенчен пĕри

Епле ĕçе каяс килмест вĕсен!

Малтанхи надзиратель

Кунта вĕçне тухаймăн.
Пĕр тесен,

Хупар-ха иккĕшне те карцера,
Начальство киличчен кăшт канччăрах!

Надзирательсем Петропа Солдатова илсе тухса каяççĕ. Ыттисем чĕмсĕррĕн, васкамасăр тумланса, яланхи вырăна, вăрман каснă çĕре, конвойпа çитеççĕ. Унта вĕсене, амаланса пыран кăвайт умĕнче, бригадир кĕтсе тăрать.

Б р и г а д и р

Мĕн пулĕ сирĕнпе кăнтăрларан? —
Утатăр, услапсем, аран-аран.
*(Хирĕç никам та пĕр сăмах чĕнмест.)*
Çĕн кайăксем те пур. Кăрнатирсем!
Мĕнле чĕнеççĕ? Хушаматăрсем?

Й ă в а н

Мана Йăван тееççĕ, Иванов.
Тракцис тесе хуптарчĕç вун çула.
Кунта эп хут пĕлменнине пула...

Б р и г а д и р

Нумай пакăлтатсассăн — ывăнан,
Çитет. Ыттийĕ кирлĕ мар мана.

Ю в е н а л

Эп — Ювенал.

Т е п р и

Çтаппан эп.

В и ç ç ĕ м ĕ ш

Эп — Крле.

Б р и г а д и р

Çак тумтирпе килеç-и вăрмана?
Кунта фуфайкăпа алса кирлех.
Эс кам тата?

К р л е
*(Юлташĕшĕн хуравлать.)*

Чĕлхесĕр янавар.

Б р и г а д и р
*(Тĕлĕнсе)*

Ку тĕнчере тĕлĕнмелли çук мар.
Ăçта паян карма çăвар Солдатов?
Тем, çамрăк сăвăçа та эп курмастăп...

Йывăç шаршанĕсем еннелле утаççĕ. Бригадирпа юнашар утаканĕ ăна пулни-иртни çинчен каласа парать. Часах ĕç пуçланать, пăчкă-пуртă сасси янăраса каять. Кăвайт умне винтовкисене çурăм хыçне çакнă икĕ конвоир çеç юлаççĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш   к о н в о и р

Паян ĕнерхинчен те сивĕ теççĕ,
Епле шăнмаç лешсем çав тумтирпе.

И к к ĕ м ĕ ш   к о н в о и р

Каларăн та!
Вĕсем ялан ĕçлеççĕ,
Вăл физкультура тунă пек ирпе.
*(Лĕхлетсе кулать.)*
Унта халь килнисем те пур пулас —
Пĕрин шапки ытла та çăмламас.

Пĕрремĕш конвоир

Теприн тата атти ытла аван —
Хальччен ăна епле вăл çухатман?

Иккĕмĕш конвоир

Килĕштерсе ĕçленине мĕн çиттĕр!
Сана атти, мана шапки пит шеп-тĕр.

Пĕрремĕш конвоир

Ылмаштарма, паллах, ман темĕн çуккă,
Анчах тупма пулать кăштах махорка.
*(Кăшт тăхтасан.)*
Илтмен-и эсĕ — тепĕр эрнере
Тата пин çурă хӳтерсе килеççĕ.

Иккĕмĕш конвоир

Аван хыпар.
Апла пулсан пире
Тата пăртак шалу хушса тӳлеççĕ.

Пĕрремĕш конвоир

Чылайăш аллă саккăрмĕшĕсем, тет.
Кала-ха, эпĕ ăнланмастăп ним те:
Ма нумайланчĕç тăшмансем хальхаççăн?

Иккĕмĕш конвоир

Нумай пĕлсен, сана та пĕççĕн-каççăн
Тытса пăрахĕç пăралук çине.
Асту эс, тытнă пултăр чĕлхӳне —
Кил кунтарах.
*(Хăлхаран пăшăлтатса калать.)*

Сана анчах калатăп,
Ни-ни вара, ниçта та, никама та. ...
Нимĕçсемпе пуçласшăн, тет-и, вăрçă?...
Шăп çавăнпа троцкист, шпион, каварçă
Е тĕрлĕрен Исков йышшисене
Илсе тухма шутланă айккине.

П ĕ р р е м ĕ ш   к о н в о и р

Вăрçи-харçи тухас пулсан, пире те
Илсе кайма пултарĕç туххăмрах.

И к к ĕ м ĕ ш   к о н в о и р

Унта эп, тусăм, кайăттăм хамах —
Ак çак хăлха илтмест-çке ман пĕрре те,
Çул иртнĕçем пуçларĕ йӳтеме.

П ĕ р р е м ĕ ш   к о н в о и р

Ман хамăн та пуç çаврăнать темме.
Хăш еннелле пăшал пемеллине
Ылмаштарса ярсан — пĕтрĕмĕрех —
Йĕркеллĕн те вĕçлеймĕн ĕмĕре.

И к к ĕ м ĕ ш   к о н в о и р

Пуç çаврăнать вăл, тусăм, мухмăр чух.
Сана çав вăрçăран хăтарас çук.

П ĕ р р е м ĕ ш   к о н в о и р

Ман ăш та ыратать — пĕлетĕн ху.
Ме, турт, юлташăм, леш махорка ку.

*(Чикаркă чĕркеççĕ.)*

Иккӗмӗш конвоир

Пуҫу чӑнах та ӗҫлемест пуль сан:
Пире вӑрҫа илсе каяс пулсан,
Ҫак ҫынсенчен кам сыхлӗ ҫӗршыва?
Вӗсем кунта фронт уҫӗҫ нимӗҫ майлӑ.

Пӗрремӗш конвоир

Чӑнах та ӑслӑ ҫав эс — ыйтӑва
Ҫарпуҫӗ пек татса та патӑн. Вӑйлӑ!

Вутпуҫҫи илсе чикаркка тивертеҫҫӗ. Иккӗшӗ те, калаҫупа кӑмӑллӑскерсем, паклаттарса туртаҫҫӗ. Вӑрман касакансем шавлани ҫывхарать — вӗсем вут патне ӑшӑнма тухаҫҫӗ.

Сехет те ӗҫлеймерӗҫ — ӗнтӗркерӗҫ,
Хӑйсем ҫинче, хэ-хэ, сӑхман та кӗрӗк.

Иккӗмӗш конвоир

Ӗҫлес-тӑвас тесе ҫунмаҫҫӗ пӗртте,
Вӗсемшӗн мӗн?
Вӗсемшӗн вӑхӑт ирттӗр!

Пуҫ янисем ҫитеҫҫӗ, кӑвайт йӗри-тавра кӗпӗрленсе тӑраҫҫӗ, анчах пурин валли те вырӑн ҫитмест.

Пӗрремӗш конвоир

Эй, бригадир, ӑҫтаваскать ку халӑх?
Кӑштах ӗҫлемеллеччӗ ӑшӑнмалӑх.

Бригадир

Тарӑхтаран, Валем Васильч, кӗрлен:

Çак çĕтĕк тумтирпе çак сивĕре
Тăрса ĕçле-ха пирĕнпе пĕрле!
А ну-ка, сик, Васильч, айккинерех!

Конвоирсем çул еннелле тăрса утаççĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш   к о н в о и р

Илле паян кăра-çке самаях,
Каласчĕ те ăна ман пĕр сăмах...

И к к ĕ м ĕ ш   к о н в о и р

Ăсу пулсассăн, ан çыхлан унпа,
Вăл «вольнăй» халĕ, тайгари упа.
Хăвах пĕлен, устав йĕркипеле
Лармашкăн юрамасть вĕсемпеле.
*(Сассем çухалаççĕ.)*

У с л е й

Солдатова ман ĕненес килмест,
Мĕн калăр та,
ку – летчик ĕçĕ мар.

П ĕ р и

Тӳрех татса пама – курман-çке эс.

Т е п р и

Солдатов-и? –
Хуратăп пуçăма:
Вăл вĕлерме пултарайман ăна –
Вĕсем килĕштеретчĕç аванах.

Услей

Ёнер кăна тавлашрĕç сарлакан...

Ювенал

Пĕр çылăхлă тееççĕ вăрлакан,
Çĕр те пĕр çылăхлă — çухатакан.

Бригадир

Ăçта сăлтавĕ ун? — пĕлес малтан,
Çăмха сӳтме пуçлаççĕ çавăнтан.
Кампа харкашнă, вĕчĕ тытнă, мĕншĕн? —
Пĕрерĕн шĕкĕлчер-ха кашнинех.
Тен, шухăшсем пĕр капаша килменшĕн
Сиртен пĕри вĕлернĕ мĕскĕне?

Йăван

Влаç татса парĕ ку ĕçе.

Эпир

Йĕркисене пĕлместпĕр, бригадир.

Бригадир

Пĕрремĕш кун-и эсĕ тĕрмере!
Е юриех перетĕн пĕлмене?
Тĕрĕслĕхе кĕтетĕн влаçсенчен,
Ухмах пулакан марччĕ-çке хресчен.

Ювенал

Анваскăр суд тума.

Васкан лаша,
Турта хуçма ăста, теç, авалтан.

Услей

Ӑнах та, тӗплӗн шухӑшлар малтан;
Ахаллӗн тӳрлетеймӗн йӑнӑша.

Ювенал

Ҫак тӗнчере сахал-им хура хуйӑх!
Эсир тата хушасшӑн тепӗр ҫылӑх
Ахаль те ҫылӑхлӑ чунӑрсене.
Каларӗ тесе калӑр,
аслӑ турӑ
Хурахсене, ҫын вӗлерекенсене,
Тӑмха ҫапсах ылхан паллийӗ хурӗ.
Эсир те, эп те турӑ аллинче:
Енчен те ӳкӗнсе ун умӗнче
Хӑй айӑпне йышӑнмасан вара
Ҫын ӗмӗр-ӗмӗр ҫунӗ тамӑкра.

Йӑван

Турра пӑрахнӑ ӗненме хальхаҫҫӑн,
Пупӗсене те тӗрмене хупаҫҫӗ.
*(Хӑй тӗллӗн)*
Тем курса тӑрӑн путсӗр сӑмахушӑн.
*(Ҫӑварӗ ҫине хӑвӑрттӑн хӗрес хурать.)*

Ювенал

Турри сире вӑл тавӑрать-ха уншӑн.

Бригадир

«За упокой» пуҫларӑн-и эс кӗлӗ?
Калаҫрӑмӑр — паянлӑха ҫитет!
Анчах кунпа ӗҫ вӗҫленмен-ха, пӗлӗр.
Усал ӗҫне усал анчах витет.

Ю в е н а л

Çук, бригадир, ку шухăш тĕрĕс мар:
Чулпа çапакана эс çăкăр пар.
Усал ĕç усалах çуратнă ĕмĕр.
Тен, çавăнпа та хытнă чĕресемĕр...

Б р и г а д и р

Ачи айванччĕ те, анчах тасаччĕ,
Ытла шанатчĕ хăйĕн пӳлĕхне.
Шел, çакă саманан икпитлĕхне
Пĕлмесĕрех леш тĕнчене ăсанчĕ.
Ак халь те хăлхарах такмак янравĕ...
*(Услей енне çаврăнса)*
Ăçта ун сăввисем?
Услей, санра-и?

У с л е й

Кутамккине, ун вырăнĕсене
Ухтарнă чух пуçтарчĕç вĕсене.
Илсе ĕлкĕреймерĕмĕр.

Б р и г а д и р

Апла
Пĕр сăвăça çухатрăр пулмалла.

У с л е й

Солдатовра пĕр-икĕ сăвă пур тет.

Б р и г а д и р

Мĕнле ăнланмалла-ха? –
Пурте, пурте,

Эсир унта аллăсаккăрмĕшсем,
Çак саманан тĕп ашшĕ-амăшсем,
Анчах пичĕкери йĕкехӳре пек
Çиетĕр пĕр-пĕрне. Тĕлĕнмелле!
Халичченех пуçа ватса çӳреп эп:
Элле çапла тĕнчемĕр сӳнмелле?!

Йытăсем вĕрни илтĕнет. Конвоирсем çывхараççĕ.

Иккĕмĕш конвоир

А ну-ка, марш!
Çитет рехетленсе,
Е каçченех ларасшăн хĕртĕнсе!

Пурте тăрса утаççĕ. Илле юлашкинчен тăрать, конвоира çиллĕн пăхса илет.

Эп ним те каламарăм-çке, Илле...
Табак туртмашкăн юл пирĕнпеле.

Бригадир

Хăйсен еккипеле, ертсе пымасăр,
Ĕçлеççĕ тетĕн-и эс вĕсене?

Иккĕмĕш конвоир

Ытла кăра сăмахланишĕн паçăр
Каçар мана эс, тулăксăрскерне.

Бригадир

Сассу каварлă тухрĕ темĕнле,
Е вăрттăн шухăш тытрăн-и элле?

Асту, мана ура хурсан пĕр те пĕр,
Пĕлместĕн мар мана —
йăхна пĕтерĕп.

П ĕ р р е м ĕ ш   к о н в о и р

Мĕн калаçан, Илле?
Тур сиртĕр, эпĕр
Сан майлă пулнă яланах, пĕлетĕн.

Б р и г а д и р

Пĕлсе пĕтер сире, конвойсене.
*(Хăй тĕллĕн)*
Персе пăрахĕç ак май килсенех.

Çавранса пăхмасăр майĕпен утса каять.

П ĕ р р е м ĕ ш   к о н в о и р

Ха, хăратать тата «Илле-элле!»
Ак, тытмалла та...
хыççăн пемелле.

И к к ĕ м ĕ ш   к о н в о и р

Чĕрре кĕретĕн эсĕ тем тума —
Илтсессĕн ак кумать пакартуна.

П ĕ р р е м ĕ ш   к о н в о и р

Çӳрет сĕтĕренсе — хăй ирĕкре.
Мĕн-ма каймалла мар хальччен килне,
Хăй калашле, шур Ярославльне.

И к к ӗ м ӗ ш   к о н в о и р

Калла кам йышӑнтӑр кулаксене!
Кунтах тытса яраҫҫӗ вӗсене.

П ӗ р р е м ӗ ш   к о н в о и р

Таванӗсем те ҫукка тет-и унӑн?

И к к ӗ м ӗ ш   к о н в о и р

Ҫапла илтсеччӗ.
Вилнӗ, тет-и, пурте,
Анчах та ун ачи-пӑчи те пулнӑ.

П ӗ р р е м ӗ ш   к о н в о и р

Кунта халь унӑн чун варлийӗ, тет,
Хӑйпе пӗрле ларни-ши лагерьте?..

И к к ӗ м ӗ ш   к о н в о и р

Хӗрарӑмсӑр ҫак пурнӑҫ пурнӑҫ-и?!.

П ӗ р р е м ӗ ш   к о н в о и р

Хӗрарӑмсӑр пурӑнаймасть арҫын.

Ҫунакан вут умӗнче икӗ конвоир ҫаплипех табак туртса ларӗҫҫӗ. Вӗсен калаҫӑвне майӗпен-майӗпен пуртӑ-пӑчкӑ сасси хупласа илет.

## Иккĕмĕш картина

Çав баракрах. Хăшĕ тумтир типĕтет, хăшĕ çывăрать. Йăван-тракцис ўсĕрет, ун кўршисем чикаркка мăкăрлантараççĕ. Кĕтесре краççин лампи мĕлтлетет. Мăрьере çил улать, Услей шухăша путнă.

Услей

Хĕвеланăç енне шăвакан пĕлĕтсем,
Ыталам та сире пĕр юхам.
Хамăр ял патнелле тĕрĕс-тĕкĕл çитсен,
Картаран уртăнса эп юлам...
Чим, калаçатăп мар-и сăвăлла?
Вăранчĕ чул çинче туптаннă чунăм.
Мана тытмашкăн урлă-пирлĕ хунă
Пăралука сире-сире мала
Вĕçеççĕ ĕмĕтсем Арпуç таран.
Апла умра ман пĕр тĕллев, пĕр шухăш:
Çитмен пурнăçăма йўнеçтерсе кăшт
Сыхлас сывлăхăма.
Малашлăхран
Тухса кĕтсе илет мана тăван.
Перо тытмашкăн ирĕк çук. Мĕнех?
Сăвва асра тытмашкăн пур-ха пуçăм.
... Çапла, тен, йĕркере тытать çарпуçĕ
Çапăçăва кĕрес салтаксене –
Мухтав та чыс çĕмрен-састашсене!
Каплах пурнас пулсассăн, ўлĕмрен
Ăçтан чакмасăр тăтăр чун хевтийĕ?
Ку тĕнче мар – сар сăвăлăх тĕнчийĕ
Мана çăлса хăварĕ вилĕмрен.
Хăрушă шутлама: тăватă çул

Вăранайми пĕр тĕлĕк евĕр иртрĕ,
Катса калмасть пуль тенĕччĕ кунçул,
Калать иккен — Христус çулне ак çитрĕм.
Ăçта ман тăван ял, шур Шупашкар?
Мĕскер çыраççĕ сăвăçсем хальхаççăн?
Ман ятăма вĕсем асăнма мар, —
Тен, уççăн каламашкăн та хăраççĕ...
Эп таврăнăп!
Çурма фарисейсем
Манпа каллех туссем пек ыталанĕç.
Çук, çук!
Ман сăввăмсем çинче вĕсем
Юман хĕрес çинчи пек пăталанĕç.
.... Çĕр кăвапийĕ пирĕн — Чăваш çĕрĕ,
Пĕр татăк пĕлĕтне парне парсам.
Халь çăварни эрни. Унта яш-кĕрĕм
Чупать пуль катаччи çил кăларса.
Унта Çăлпи.
Мĕн пулчĕ те мĕн килчĕ?
Çырмастăн эсĕ, ĕнтĕ тем шутлас.
Е çын çинче ят-шывăм тутăх илчĕ,
Е çил çинче çухалчĕ манăн сас.
Каллех пĕрле пулассине шанма
Ытла та йывăр.
Саламне илмесĕр
Çак сивĕре пулать-и ăшăнма?
Мĕнле çанталăк ку? — анра-сухра!
Пĕрре йăшма пĕлмерĕ эрнипе те.
Çанталăкне çеç мар, саманине те,
Çыннисене те ăнланма çукрах:
Камсем çумра?
Е телейсĕрскерсем,
Е ирĕксĕр çынвĕлерекенсем?

Пуç янисенчен пĕри

Услей, мĕскершĕн эс ĕнертенпе
Шап хупăнтăн, ав, çав юман арча пек?
Сăмахламастăн кăшт та пирĕнпе,
Пусса пырать-им, каттăрăшнăй чапĕ?

Тепри

Тен, эс ăсрах çырма шутларăн сăвă?
Пĕлеттĕмччĕ эп пĕр çынна...

Услей

Мĕн тăвăн,
Нимле те урăхла май çук пулсан.
Ак çак сăвва итлес килет-и сан?

Услей çурма сасăпа сăвă калама пуçлать. Ун йĕри-тавра пуç янисем пуçтарăнса лараççĕ. Унтах пачăшкă. Йăван çеç хăй вырăнĕнче ӳсĕрсе выртать.

Саккăрла явăнса,
çаврăнан самана,
Унчченхи çул çинче,
кăларать-ши мана?
Шурă-шурă кĕртсем,
вилнĕ шурă хурсем,
Сăввăма кĕреймен
шурă шухăмсем...

Пуç янисенчен пĕри
*(Шухăшлăн)*

«Унчченхи çул çине кăларать-ши мана...»

Ассан-ассан — тăман та чарăнать:
Каларĕ тесе калăр — самана
Каллех хăй тăнăçне ак çаврăнать.

Т е п р и

Эй, Аслă Тĕрĕслĕх, часрах килсем,
Тавах турра апла мана манманшăн.

В и ç ç ĕ м ĕ ш

Эп тĕрĕсмарлăх аллинчен вилсен,
Çав тĕрĕслĕх мĕне пĕлтерĕ маншăн!

Т ă в а т т ă м ĕ ш

Мана та вăл хам сывă чух çеç кирлĕ.
Вилсен — тăшмансене хам парăма
Епле парса эп татăп?
Авă, чирлĕ
Тракцисăн кунĕ вĕçленсе пырать,
Тăшманĕ — ун арăмĕпе ларать.

Ю в е н а л

О, тавăру тени!
Эсрел çăтасшĕ,
Хăçан тухатăр ун вĕçне-хĕрне?
Усал юна çырлахтарасшăн, влаçшăн
Миçе çул тавăратăр пĕр-пĕрне?!
Çак самана та тавăру вăйии вăл —
Хĕп-хĕрлĕ революци тунă чух
Пуçларăр та — халь ĕнтĕ вĕçĕ çук.
Çылăхăрсем, çынсем, тăхлан пек йывăр,
Епле йăтса çӳретĕр вĕсене?

Мĕн тумалла?
Тен, çылăхăрсене
Таса чунпа курма вĕренмелле,
Вара хăватлă турă умĕнче
Чĕркуçленсе ларса — ÿкĕнмелле.
Эй, Аслă Турă, пĕр санра —
Пуласлăх,
Сан ырă кăмăлу тĕнче пек аслă:
Каçарăн, пуççапсан, пуçтахсене,
Каçарччăр тăшмансем те пĕр-пĕрне.
Христос каланă: «Ăруран ăру,
Çын чĕринче юлсассăн тавăру,
Этемлĕх Çĕр çинчен çухалĕ», — тенĕ.
Тÿлевсĕр каçару!
Ак мĕн йÿтемĕ
Çăлса хăварĕ пирĕн пурнăçа,
Каллех тавăрса парĕ канăçа.
Ав, вĕçленсе пырать Йăванăн кунĕ,
Анчах мĕскершĕн лăпкă мар ун чунĕ,
Асапланать те канăçсăрланать?
Вăл çылăхне каçарттарма хăрать.

П у ç   я н и с е н ч е н   п ĕ р и

Ăçтан пĕлен, тен, çылăхсăр Йăван?

Ю в е н а л

Çак тĕнчере ун пек этем пулман.
Эпир ăна пĕлместпĕр пулĕ...
Тен,
Вилме патне çитсен анчах этем
Леш тĕнчене чунпа каçса килет,
Вара — çылăхсене туйса илет.

Алăк уçăлать те, малтан, путек пек, сивĕ йăваланса кĕрет, унтан Солдатов кĕрсе тăрать. Калаçу сасартăк чарăнать. Пурте ун еннелле çаврăнаççĕ.

С о л д а т о в

Салам! Ыр вăхăт пултăр пурсăра та.

П у ç я н и с е н ч е н п ĕ р и

Солдатов! Юлташсем, кама куратăп!

Т е п р и

Эп ун чухнех каларăм вĕт сире
«Салтак ачин» телейĕ пур тесе.

С о л д а т о в

Кӳрентеретĕр, туршăн та, туссем –
Эсир, мĕн, иккĕлентĕр-им сĕре?

В и ç ç ĕ м ĕ ш

Шарттик! Вăт ăнăçу-тăк ăнăçу:
Кунтан та тухрăн çĕнтерсе хăватлăн.

С о л д а т о в

Леш ман çине питех те тăчĕ, падлă.
Хăйнех тиенчĕ тепĕр вунă çул.

Табак хутаççи кăларать. Чикаркка чĕркесе, мăнаçлăн туртса ярать.

У с л е й

Унта хырăнтараççĕ-им, Солдатов? –
Сăну-питӳ ытла та яп-яка.

Пурте Солдатов çине чăрр! пăхса илеççĕ.

П ĕ р и
*(йĕкĕлтерех)*

Махоркkă та сан урăхрах, Солдатов –
Тухса çӳрерĕн пулĕ аякка?

С о л д а т о в

Мĕскер эсир – эп ларнă карцертах,
Махоркkă та тăваттăмĕш сортах.

Т е п р и

Çĕн саплăк лартнă йĕм çине Солдатов –
Кам пачĕ саплăкне, йĕпне-çипне?
Халь карцерта параç-им вĕсене?

С о л д а т о в

Мĕскер эсир – пĕлтĕрхиех ку саплăк.
Е тухăмрах эп тухрăм шанчăкран?
Куратăр вĕт, шăпам ахаль асаплă,
Эсир татах куласшăн, ав, манран.

У с л е й
*(Çирĕп сасăпа)*

Çак баракра пĕри стукач пулсан,
Солдатов, эсĕ пулăн, астусам.

Й ă в а н
*(аран-аран сасăпа)*

Сутăнчăка пехилĕм манăн – вилĕм.

Ю в е н а л

Калаç, Йăван, калаç.
Анчах та ӳлĕм
Текех эс ан хускат çав сăмаха.
Суранлă, хаярланнă халăха
Усал-тĕсел ахаль те çулăхать.

Хыттăн шаккаççĕ. Надзиратель шăнкăр-шанкăр тутарать те алăка яри уçса ярать.

Н а д з и р а т е л ь

Çитет пакăлтатса.
Выртмашкăн вăхăт.
Мĕскер хытса тăратăр?!
Ну-ка хăвăрт
Кашни хăй вырăнне!
*(Тухса кайнă май, мăкăртатса)*
Тата вун çул
Хушса парсан та ывăнмаççĕ пуль
Çăвар çапмашкăн интеллигентсем.
Мĕн тăвăн — ĕçĕ çавăн пек вĕсен.

Çутă майĕпен сӳнсе пырать. Пĕр пĕчĕк лаптăк çутăра пачăшкă чĕркуçленсе тăни курăнать. Лаптăк çутă хушăран Услей çине ӳксе илет. Ювенал пăшăлтатса каçхи кĕлĕ тăвать, анчах ун сасси пĕтĕм барака илтĕнет.

Ю в е н а л

Тĕнче тытса тăран Аттемĕр Турă!
Умри шанчăкăма çухатасран,
Пуçа асла хурса мăнланасран,
Кирлĕ мара тытса калаçасран,

Юлхавлă путсăр шухăш пусасран
Сыхла мана ялан, эй Аслă Турă!
Хăв чуруна, телейсĕр ывăлна,
Йăвашлăх пар, пар тӳсĕмлĕх — чăтма.
Хам çылăхăмсене курса-тăма
Пар вăй-хăват, пар ырă кăмăлна.
Куллен-кунхи хĕрхӳ хирĕçӳрен
Пăр айккине, ху пек таса çĕре.
Каçпа выртсассăн — лăпкă çывăрма
Пар канлĕхне, ыр тĕлĕкне мана.
Ирпе тăрсассăн — сывлăхлă пулма
Пар ĕненӳ чĕрем тулли мана.
Эй, Патша Турă, ĕмĕр-ĕмĕрех
Мухтавлă эсĕ пĕтĕм тĕнчере.
Аминь.

Йăван сăхсăхса илни курăнать.

### Услей
*(хăй тĕллĕн)*

Пĕршайлăх, тăнăçлăх ыйтать çын чунĕ.
Пĕр юрăхсăр сăмах та çук.
Çынна
Усал сунни те çук.
Епле хальччен эп
Шухăшласа тăна илмен ăна!
Ман кĕлĕ —
Сăвă сывă пултăрах!
Вăл ман пурнăçăма тытса тăрать:
Пар канлĕх, Сăввăм, лăпкăн çывăрма,
Пар канлĕх — ырă тĕлĕксем курма.

Услей краççын лампине вĕрсе сӳнтерет. Шăплăх.

## Виççĕмĕш картина

1941 çул. Çулла. Лашмансем йывăç сыпăлаççĕ, турат иртеççĕ. Прачак леш енче кайăксем кĕскен-кĕскен юрлани илтĕнет. Пуç тăрринче çăхан кранклатса иртет.

Й ă в а н

Кша, кша! Мĕн явăнатăн, мур илесшĕ!
Е пуç çине инкек илсе килесшĕн?!

П у ç я н и с е н ч е н п ĕ р и

Кунтан инкеклĕ япала пур-ши вăл —
Епле чăтса ирттерĕ-ши çĕршывăм...

Ю в е н а л

Вунçиччĕ, çирĕм тăххăр, вăтăр çиччĕ...
Кусать кăна ку Хĕрлĕ Кустăрма.
Пĕрне тăна илсе ĕлкĕрейменччĕ,
Тепри килсе те тухрĕ ак ума.
Кăшт сывласа илмелĕх, кăшт канмалăх
Турри мĕн-ма памарĕ вăхăтне?
Каллех тĕнче вăрçи — хăрушă Молох —
Каллех ыйтать юнланнă апатне.

У с л е й

Тин çеç-ха фашистла Германипе
Пурнаттăмăр аван, килĕшӳре.
Конвоирсем те, ав, пĕлтĕртенпех
Фашист теме пăрахнăччĕ пире.

П у ç я н и с е н ч е н т е п р и

Епле сасартăк, вăрттăн! Çынла мар —

Вăт вĕсене эс ĕненсе ал пар...

Б р и г а д и р

Кая юлмастпăр-ха пĕр-пĕринчен:
Вĕсем — унтан, эпир, ав, ку енчен
Çĕрсем тытса илетпĕр ютсенчен...

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Епле чее пулсан та — пурпĕрех
Çĕлен-калтасене çĕнетпĕрех.

Т ă в а т т ă м ĕ ш ĕ

Çĕнме çĕнетпĕр-ха...
Анчах та, ав,
Çут çăлтăрне хуплантă тет Мускав.

П ĕ р р е м ĕ ш

Эп тухăттăм вăрçа пĕрех хутчен
Кунта çапла ларса irттеричен.

У с л е й

Паллах, паллах, фронтра пуç хунă çыннăн
Ят-шывĕ юлĕ ял çинче таса...

Т е п р и

Эпир вара... эпир мĕльюн-мĕльюнăн
Кунта çӳретпĕр уссăр ĕç туса.

В и ç ç ĕ м ĕ ш

Социализма пĕтмешкĕн парас марччĕ,
Çавна хӳтĕлесе хăвармалла.

Б р и г а д и р

Ухмах! Сан Çĕршывна сыхламалла.

В и ç ç ĕ м ĕ ш

Пĕлес килсен: Çĕршыв вăл — Сталин, парти.

Б р и г а д и р

Чура талайĕ! Чĕн саламата
Чуптăвакан нумай ку яхăнта.

С о л д а т о в
*(Виççĕмĕш пуç янă çын енне пăхса.)*

Çак лагерь йĕркине эс хӳтĕлетĕн,
Хăй пăркăчне хытартăр тетĕн влаç.
Пире вара...

П ĕ р р е м ĕ ш

Картран тухса пуплетĕн,
Сăмах вăл çерçи мар — виççе калаç.

Б р и г а д и р

Солдатов улшăнсах пырать хальхаççăн,
Куратăр-и, хăй ăсĕпе пурнасшăн.
Анчах тĕнче кĕмест пĕр хăлаçа:
Санра халь курайманлăх калаçать.

Ю в е н а л

Мускав!
Мускав ан парăнтăр тесе
Чĕркуçленсе кĕлтăвăр, тăвансем:

Паян вăл парăнсан, — илтетĕр-и, —
Ыран пире пересçĕ шакăрин.

У с л е й

Кам шухăшланă, кам ăна ăнланнă!
Ав, мĕн тума пире пĕрле пуçтарнă.

Инçех мар конвоирсем кăшкăрашни илтĕнет. Хĕрарăмсен колонни прачакпа анаталла утать, лашмансем патнелле çывхарать. Вăрман касакан арçынсем ĕçлеме пăрахаççĕ те çĕтĕк-çатăк тумланнă хĕрарăмсен вăрăм колоннине ирттерсе яраççĕ.

Х ĕ р а р ă м с е н   к о л о н н и н ч е н

Эй, йĕкĕтсем, салам сире пиртен!
Мĕнле пурăнкалатăр, савнисем?

Л а ш м а н с е н ч е н   п ĕ р и

Салам, салам!
Эсир, чиперккесем,
Пире манман-и хăвăр лагерьте?

Х ĕ р а р ă м с е н   к о л о н н и н ч е н

Эпир манман, эсир те ан мансамăр.

Х ĕ р а ч а   с а с с и

Эсир çак лагерьтен вĕт?
Каласамăр:
Пĕр çамрăк çук-и сирĕн хушăрта?
Ун номерĕ — тăватçĕр çирĕм çиччĕ.
Улт уйăх каялла кунта ĕçлетчĕ,

Вăл Атăл тăрăхри Шупашкартан.
Поэт вăл, ман савни.
*(Никам та чĕнмест.)*
Юлташ, калаччĕ...

У с л е й

Пĕлеттĕм эп ăна. Аван ачаччĕ.

С о л д а т о в

Анчах ăна февраль уйăхĕнчех...

У с л е й

Мĕнле калар... Магадана куçарчĕç,
Хыпарлаймарĕ-ха халиччченех...

Х ĕ р а ч а   с а с с и

Эп – Нуся, икçĕр пĕрмĕш лагерь...

2-м ĕ ш   к о н в о и р

Магадана унта эсир те лекĕр.
Пăхмашкăн сăнăр çуккă, кĕтĕр-кетĕр,
Çапах савни тесе сӳпĕлтететĕр.
Йыт амисем, а ну-ка хăвăрт, хăвăрт!
Чĕлхе хыçмашкăн, кур-ха, тупнă вăхăт.

1-м ĕ ш   к о н в о и р

Хĕрарăмлăх темерĕн, тĕрмере те
Выçлăхсене арçын тавраш кирлĕ.
Пĕр пилĕк çул ĕçлеттерсессĕн вирлĕ,
Ятна та манса кайăн, тĕрлеме те.

2-мĕш конвоир

Юхха хĕрарăмсем. Вăт кайрĕ халăх.

*(Хĕрарăмсен колонни иртсе пĕтет.)*

Колоннăран

Эй, чăтăмлăх çитерĕр, йĕкĕтсем —
Часах улшăнмалла, тет, ку çанталăк.

3-мĕш конвоир

Улшăнмалла, тет... «тăрă».
Лар кĕтсе:
Çанталăк улшăнать, тĕнче пĕтсен.

Колонна хыçĕнче пыракан конвоирсем те çил-тăман çаврăмĕнче часах курăнми пулаççĕ.

Услей

Эй, мĕскĕнсем, пăр çапнă чечексем,
Çулла та çĕкленеймĕç — пĕр ÿксен.

Лашмансем ĕçлеме пуçлаççĕ. Пуртă-пăчкă сасси, йывăç шатăртатса ÿкет. Сасартăк аякран Пĕри вăйсăррăн ахлатни, йынăшни илтĕнсе каять.

Пĕри

Чим, йынăшать такам, —
Тен, йывăç çапрĕ?

Услей

Ахальтен мар ирпе çăхан кранклатрĕ.

Пурте ахлатнă сасă еннелле утаççĕ. Йывăç айĕнче — Йăван.

Услей

Йăван пичче, епле астăваймарăн?..

Пĕри

Кăштах чăтсам, Йăван, — çиччас, çиччас...

Кӳсек касса, икĕ енчен йывăçа ĕхлетсе çĕклеççĕ, Йăвана айккине: курăк çине сĕтĕрсе кăлараççĕ. Йăван аран-аран калаçать.

Йăван

Урасенче вăй çуккă, шурлăх тарăн —
Тарса ĕлкĕреймерĕм, мĕн тăвас...

Бригадир

Аманнă курăнать пилĕкренех.
Ун пек чухне çынсем сехетренех
Ăн çухататчĕç. Ĕнтĕ халиччен,
Нумай эп курнă йывăç çапнине.

Пуç янисенчен пĕри

Иртет ку, ан хăра, Йăван пичче.

Йăван

Едрионо... шуйттан амаккине...

Ювенал

Шуйттансене ан асăн халь, Йăван,
Турра кĕлту. Тен, вилĕмрен хăтарĕ.

Й ӑ в а н

Ҫук, хӑтӑлаймӑп ӗнтӗ эп унран,
Туятӑп, вӑл кунтах... ак, вилӗм тарӗ...
*(Йӑван ахлатать, асапланать.)*

Ю в е н а л

Эс темӗскер каласшӑн пек, Йӑван,
Кала, вара кӑшт каҫӑхса каян.

Й ӑ в а н

Пурне те чӗнӗр.
Турӑ умӗнче
Ҫылӑхӑма каҫарттарам пӗрре.
Мӗнле ят-шывӑм юлӗ ҫын ҫинче? –
Халь ӗнтӗ, тӑвансемӗр, пурпӗрех...
*(Пачӑшкӑ ун ҫине хӗрес хурать.)*
Эс, пачӑшкӑ, кӗлту-ха маншӑн та.
Ҫав каҫхине ҫав ҫамрӑк поэта
Пӑвса вӗлерекен никам та мар –
Эп пултӑм, эпӗ...
Турӑҫӑм, каҫар...

С о л д а т о в

Вӑл аташать. Куҫне те, ав, уҫмарӗ.

Й ӑ в а н

Сире...
Сире ҫӑласшӑн пултӑм мар-и...
Эсир выртсассӑн, уйӑх ҫутинче
Вӑл темӗн ҫырчӗ вӑрттӑн темӗнччен.

Эпир унта калаçнисем çинчен
Çăхав çырать тесе начальствăна...
Кам пĕлнĕ сăвă çырнине ăна!
Эй, турăçăм, эй, турă, каçарсам,
Леш тĕнчере канăçлăхна парсам...

Йăван хăй çине хĕрес хума аллине çĕклесшĕн пулать, анчах пултараймасть. Йывăррăн сывласа илет те лăштах пулать. Ювенал ун куçĕсене хупать.

Ювенал

Ăçта çаплах васкарăн эс, Йăван?
Рая е тамăка — пĕлме паман.

Пĕри

Васков секречĕ тупăнчĕ те, авă...

Солдатов

Шухăшлама пĕлместĕн еплешке!
Эп ĕненместĕп Тракциса.
Ăçтан вăл —
Чахуткăпа ĕшеннĕ чирлешке —
Çĕнме пултартăр вăйпитти çынна?
Кам пиçиххийĕ — шута ил çавна.

Бригадир

Тӳрре тухма ан тăрăш урăхран,
Итле, Солдатов, çак пăтăрмахра
Петро айăплă мар тесе çыратпăр,
Вара тирпейлĕн пурте ал пусатпăр.
Кунта мĕн курнине, мĕн илтнине
Çирĕплетсе эс уйрăммăн çыратăн.

Солдатов

Мĕскершĕн манăн тет?

Бригадир

Сана тинех
Ăнлантармашкăн кирлĕ мар. Апла-тăк
Паян тăвас пулать мĕн хушнине.

Услей

Çырлахтарать сăмахăр кашнинех.

Бригадир шалти кĕсйинчен хутпа кăранташ кăларать те Услее парать. Услей алхапăл хут çырса хатĕрлет. Пурте пĕрин хыççăн тепри алă пусаççĕ.

Петро вăл кӳршĕри бригадăра,
Кайса калас пулать.
Ан тив, çӳретĕр,
Çӳремесен ĕç вырăнта тăрать.

Бригадир

Хушма çулне илсе пăрахтăр Петĕр.

Лашмансем тӳнтернĕ йывăççем патнелле икшерĕн-виçшерĕн саланса пĕтеççĕ. Вăрман кашлавĕ витĕр йывăç ахлатса ӳкни илтĕнет.

## Тăваттăмĕш картина

Зонăра. Çурса купаланă вутă шаршанĕ патĕнче Услейпе Петĕр тĕл пулаççĕ. Вĕсем ĕç хыççăн хăйсен баракне ăшăтма тесе вут çурма тухнă. Васкамасăр, ĕçленĕ хушăра унта та кунта пăхкаласа, асăрхануллă калаçу пырать.

Услей

Ыран пире каллех арпаштараççĕ,
Карт арпаштарнă пек.

Петро

Пĕле тăра
Вĕсем пире ухмах шайне картаççĕ,
Хăйсем — ăславçă... — çав тарăхтарать.

Услей

Йĕркеллĕн паллашма ĕлкĕрейместпĕр.

Петро

Çӳретпĕр кĕтӳри пек тĕпĕр-тĕпĕр.
Каплах пулсассăн, акă, курăн-ха,
Çĕршывĕпе тухатпăр сурăха.

Услей

Мана тата ак мĕн тĕлĕнтерет:
Кунта, çак тĕпĕр-тепĕр кĕтӳре,
Кашни пурнать хăй хырăмĕшĕн çех —
Капла, чăнах, пĕтетпĕр вĕт кĕçех.

Петро

Лешсен политики ăнланмалла:

Уйăрмалла та – хуçаланмалла.
Юлташлансассăн, ушкăнсем туса,
Бунт çĕклесрен е тарасран хараççĕ.

Услей

Çапла, çапла, – эп хам та сăнаса:
Пире вĕсем юри çапăçтараççĕ.

Петро

Халь ирĕкре те пурнăçĕ çавах –
Наччас тытса илеç калаçăва.
Утăмсерен сутăнчăкпа суеçĕ
Пĕр пĕчĕк влаçшăн пĕр-пĕрне çиеççĕ.

Услей

Каçар та, татрăм сăмахна санне –
Петро, Петро, сана мĕскершĕн хупнă?
Мĕнле сăлтавласа мĕн айăп тупнă,
Хăв летчик теттĕн...

Петро

Халăх тăшманне
Шыраман мар çарта та, хăв пĕлетĕн.
Курăсăрин, ав, Тухачевскине те
Персе вĕлермелле тесе ал пуснă
Мухтавлă Блюхер.
Эпĕ пулнă туслă,
Çитменнине, тăванлă Мишăпа.
Çапла пӳклевлĕ тухрĕ ман шăпа...

*(Пĕр вăхăт тăхтасан.)*

Эс ху вара националист пулас,
Писательсем ялан çавсем пулаç.

Услей

Çав статьяпа тесессĕн тĕрĕсрех, тен?
Анчах эп патриот, пĕлес килет-тĕк.
Каяс тесе штрафной батальона
Çич хут та çыртăм эпĕ Сталина –
Хуравĕ çук.
Тен, çырăвăм çитмест?
Тен, пытарас? Мĕнле шутлатăн эс?

Петро

Эп хам та çырнăччĕ Калинина
Çич хут анчах-и – çирĕм çичĕ хут!
Ӗнер анчах илсе яваплӑ хут:
Фронта ямас ку статьяпа мана.

Петро хаш сывласа ярать, аллине Услей хулпуççийĕ çине хурать те:

Эй, ирĕклĕх!
Каллех ман çĕкленесчĕ,
Виçесĕр, вĕççĕр янкăр тӳпене.
Тепре кăна, тепре туйса илесчĕ
Чун савнă ирĕке ...
Ак ӳпĕнет
Ман кайăк-самолет кĕрле-кĕрле,
Тĕнче те ӳпĕнет унпа пĕрле...
Эй, ирĕклĕх!

Услей

Анчах, анчах кунта
Эпир ытла та вăйсăр, тупата:
Пĕле тăркач эс айăпсăррине

Васковшăн хушса панă вун çулне
Ма чакармарĕç?

Петро

Алă пуснипех
Тӳрре тухма меслет пулсан тӳрех,
Ыран кунта пĕр çын та юлмĕ терĕç.

*(Чышкисене чăмăртаса.)*

О, тĕрĕсмарлăх, çынçиен хатерĕ,
Алла кĕрсен – чăмăртаса вĕлерĕп...
Мĕнле пулсан та, вăй-хăват пур чух
Çак шăршлă лагерьте çĕрессĕм çук.

Услей

Эп хам та, Петĕр,
срук вĕçне тухаймăп –
Ӳпке чирне пит нумаях чăтаймăп...

Петро

Ун чух паллашнă майĕн пĕлтĕр
Сана, Услей, пĕрре пăхсах эп пĕлтĕм:
Эс тӳрĕ чунлă туйăнтăн мана,
Паян та пит шанас килет сана.

Услей

Эс хăюлли мана савăнтаратчĕ.
Арпаттăрлăх тени кăштах маначчĕ...

Петĕр Услей патнерех пырса тăрать. Хăлхинчен пăшăлтатса тем калать.

Петро

...Вара... тӳрех фронта.
                    Вăрçи пĕтсен,
Тӳрре кăларĕç тăхăмсем пире.
Унтан таврăнмасан та пурпĕрех —
Çĕршывăмшăн кĕрешнĕ ма тесен.

Услей

Эп тахçанах шутланă ун çинчен,
Сан пек юлташ çуккийĕ аптрататчĕ...

Петро

Мĕн чул нумайййăн, çавăн чул аванччĕ:
Пĕри пралук касать леш пуçĕнче,
Теприйĕ çутă сӳнтерет, вара
Эп «тăмана» антарăп вышкăран,
Эс паллă парса тăрăн çакăнтан.

Услей

Ман тахçанхи тăвата пĕлĕш пур,
Тăваттăш те пит шанчăклă, маттур.

Петро

Пĕрех хам тĕрĕслетĕп вĕсене —
Кунта, пĕлтер эс, килччĕр виçмине.
Хатĕрленес пулать шăв-шавсăр, тĕплĕн.
Анчах та васкарах — кунсем хисеплĕ.
Е ирĕклĕх, е вилĕм!
                    Урăхран
Суйламалли çул-йĕр пире паман.

У с л е й

Е ирĕклĕх, е вилĕм!
Çак мăшкăла чăтса пурăниччен
Пралук çинче вилем пĕрех хутчен.

*(Иккĕшĕ те пĕрле.)*

Е ирĕклĕх, е вилĕм!

Пĕр-пĕрин аллисене чăмăртаççĕ, хăйсен куçĕсем çунса тăраççĕ. Кĕтесрен пĕр мĕлке кăштах курăнать те йăпшăнса-шăвăнса çухалать. Услейпе Петро, пĕрер çĕклем вутă йăтса, харпăр хăй еннелле утаççĕ. Çутă сӳннĕ вăхăтра Солдатов çĕлĕкĕ, хăрах хăлхи çӳлелле сулăннăскер, курăнса каять. Каç. Тĕттĕм. Çăлтăр çути çеç вутă шаршанĕ патне пухăннă çынсене уйăрса илме май парать. Унта 5-мĕш çын хашкаса çитет.

П е т р о

Мĕскер, кала часрах.

5-м ĕ ш т а р к ă н

Кĕрсех эп пĕлтĕм:
Вăл карцерта ларать, тет, ĕнертен.

П е т р о

Мĕн сăлтавпа? Ку кирлĕ, кирлĕ питĕ —
Хăрарĕ, тен? Юри çакланчĕ, тен?

Т е п ĕ р т а р к ă н ĕ

Услей шанăçлăхран тухманччĕ те...

5-м ĕ ш т а р к ă н

Юри пулма пултараймасть.

Унтан:
«Çулпуçăмăр менелникне тумашкăн
Е, тěрěсрех, сценарине çырмашкăн
Кам пултарать сиртен?» — тесе ыйтсан,
Услей: «Гюго» — тесе каланă, тет.
Лешсем вара хе-хе!
Çав Гюгона
Ширанă, тет, лагерěпех...
*(Пурте аллисемпе çăварне хупласа кулаççě.)*

П е т р о

Çитет.
Хăтланчăшě Услейěн — ку чăнах.
Анчах епле явапсăр шўт, Услейěм!
Çак вăхăтра çапла шўтлемелле-и...

2-м ě ш т а р к ă н

Мěн тăвăпăр вара халь?

3-м ě ш т а р к ă н

Ман шутпа,
Тупа тусан, калла чакмалла мар.

4-м ě ш т а р к ă н

Эп килěшетěп сан шухăшупа,
Планне анчах кăштах улăштарар.

П е т р о

Эс çакăнта, Услей вырăнěнче,
КП енчи çутта сўнтериччен
Тим тимлесе тăратăн сыхăра:
Хăрушлăх-мěн пулсассăн — шăхăран.

Çав вăхăтра сан Энтрипе пĕрле
Пралуксене татса ĕлкĕрмелле.
Эп вышка çинчине, ан иккĕленĕр,
Илетĕп хам çине.
                    Халь хатĕрленĕр —
Пуç сивĕтсе хытарăр кăмăла:
Е ирĕклĕх, е вилĕм — малалла!
Тур пулăштăр.

Вутă шаршанĕ çумĕпе Петропа ун юлташĕсем пĕрин хыççăн тепри йăпшăнса саланаççĕ. Пĕр таркăнĕ çеç сыхăра юлать. Шăп. Хушăран çех вăрман енчен ӳхĕ ахлатни илтĕнет. Тепĕртакран çутă сӳнет. Вышка çинчен часовой кĕмсĕр-кемсĕр ӳкет. Сасартăк тепĕр вышкăри часовой пăшал персе ярать, йытăсем талпăнса вĕрни тавралăха хупласа илет. Надзирательсем, хуралçăсем унталла-кунталла чупкалама пуçлаççĕ. Сирена, пистолетран пени, кăшкăрашни — пĕтĕмпех хутăшса каять. Тепĕр кĕтесри прожектор çутине шăв-шав еннелле яраççĕ. Унта çынсем чупни, кĕрмешни курăнать. Пĕр таркăнĕ çĕрте мелсĕр выртать.

Х у р а л ç ă с е н ч е н  п ĕ р и

Кунта вĕсем, кунта! Тинех тараймĕç!
Пĕри ак вилнĕ ĕнтĕ — тек тăраймĕ.

2-м ĕ ш  х у р а л ç ă

Лешне тытар, лешне!
                    Васкар часрах,
Парăнмасассăн пит — персе пăрах.

Петĕре хăваласа тытаççĕ, ушкăнпа хĕнеме пуçлаççĕ. Вăл хӳтĕленет, хуралçăсене çапа-çапа ывăтать. Пĕр надзирателĕ пистолет туртса кăларать те ăна пеме меллĕ вăхăт шырать.

Аслă надзиратель

Ан перĕр тенĕ! Ку вăл ман приказ:
Мĕнле пулсан та чĕрĕлле тытас!

3-мĕш хуралçă

Епле вара?!
Вăл шăл çапса катать те,
Ман вĕлерме те юрамасть ăна!

Петро

Ах сволочьсем, ах иновашуматте!..

Петĕре аран-аран ураран ÿкереççĕ, хĕнеççĕ, аллисене хыçалтан пăрса тытса, ура çине тапса тăратаççĕ.

Надзиратель

Епле усал — матне те асăнать.

Петро

Палач! Хама мĕн кĕтнине пĕлетĕп —
Пĕр япалашăн çеç эп ÿкĕнетĕп:
Эрешмене вĕлернĕ пек, малтан —
Сана, палач, вĕлермеллеччĕ ман —
Вара каçатчĕ йывăр çылăх та.

Надзиратель

Ман çылăхăм каçать ку яхăнта.

Тата виçĕ таркăнне тытса килеççĕ. Тумтирĕсене йытă тулласа пĕтерни паллах.

А с л ӑ   н а д з и р а т е л ь

Тӑратӑр ҫавӑнта, стена ҫумне,
Ан васкӑр суд тума — начальство килтӗр.
Эпир ахаль шалу илменнине
Ленид Андрейч хӑй куртӑр та хӑй пӗлтӗр.

Петӗрпе юлташӗсем хӑйсем хушшинче ҫурма сасӑпа калаҫма пуҫлаҫҫӗ.

Т а р к ӑ н с е н ч е н   п ӗ р и

Вӑт, юлташсем, ӑҫта ҫитерчӗ ирӗк...

Т а р к ӑ н с е н ч е н   т е п р и

Ҫапла тӑрлавсӑр иртрӗ манӑн ӗмӗр...

П е т р о

Никам та иккӗ пурӑнман. Туссемӗр,
Ан ӳкӗнӗр, салтак пек тӑрӑр ҫирӗп.

3-м ӗ ш   т а р к ӑ н

Мӗн хак вӑл пурнӑҫ? — икӗ тенкӗ, виҫҫӗ?..

2-м ӗ ш   т а р к ӑ н

Халь вӑрҫӑра та мӗльюншар вилеҫҫӗ.

1-м ӗ ш   т а р к ӑ н

Пӗрле вилмешкӗн ҫӑмӑлрах, туссем.

Н а д з и р а т е л ь

Апла пӗлетӗр хӑвӑр пӗтессе?

Молчать! Молчать! Çитет сӳпĕлтетсе,
Ха! Калаçса юласшăн виличчен.

А с л ă   н а д з и р а т е л ь

Калаçчăрах. Вилес чухне çынсен
Пур ыйтуне те тивĕçтермелле.

2-м ĕ ш   т а р к ă н
*(хăйсем хушшинче)*

Пит тĕплĕн хатĕрленнĕччĕ. Епле,
Епле лекме пултартăмăр?

1-м ĕ ш   т а р к ă н

Мана
Канăçсăрлать пĕр шухăш тахçанах:
Услей... Услей сутмарĕ-ши пире?
Эпир мĕн-ма кунта та, вăл – лере!

Н а д з и р а т е л ь

Мĕнле Услей?
Е сирĕн каварта
Урăххисем те пулнă-и тата?

1-м ĕ ш   т а р к ă н

Пулмасăр! – пулнă. Сирĕн çыннăр пулнă!
Пĕлместпĕр тетĕр пулĕ: виçĕ кунлăх
Ăна юри хуптарнă та эсир,
Ĕç пĕтерсен, кăларăр тепĕр ир.

А с л ă   н а д з и р а т е л ь

Тен, эсĕр ун хушаматне калатăр?

Лагерь пуçлăхĕ, унпа пĕрле тата ик-виçĕ çын çитсе тăраççĕ.

Ленид Андрейч, кунта — тăвата «паттăр»,
Пĕри — лере, вĕлернĕ тарнă чух.

Лагерь пуçлăхĕ

Ура çине çĕкле те халь пурне те,
Ав, çавăнтаваскавлăн илсе тух.
Эп вĕсене тармашкăн вĕрентетĕп!
Йĕрке туса паратăп вĕсене.
Халех стена çумне таркăнсене!

Аслă надзиратель тата хăшпĕр хуралçăсем бараксем еннелле чупса каяççĕ. Пухăнмалли сигнал — сирена — хăлхана çурасла янăраса каять.

Надзиратель
*(Лагерь пуçлăхĕ çывăхнех пырса.)*

Тата тепри те пулнă, тет, вĕсен,
Услей ятли.

Лагерь пуçлăхĕ

Вăл ăçтине пĕлсен,
Мĕн-ма илсе килмен ăна кунта?

Надзиратель

Ленид Андрейч, кунтах вăл, карцерта.

Лагерь пуçлăхĕ

Кам хупнă карцера çав таркăна?
Стена çумне, стена çумне ăна!

Надзиратель карцер еннеллеваскать. Бараксем енчен ушкăнăн-ушкăнăн пуç янисене илсе килеççĕ, вĕсене пĕр ĕрете тăратаççĕ. Халĕ ĕнтĕ пĕр енче пуç янисем, тепĕр енче — таркăнсем. Вĕсен хушшинче винтовкисене хатĕр тытнă хĕрлĕ пакунлă пилĕк салтак команда парасса кĕтсе тăраççĕ. Лагерь пуçлăхĕ мала тухса тăрать.

Сире кунта мĕскершĕн пухнине,
Ăнлантăр пулĕ тетĕп. Кам та кам,
Хăйса тарма хăтланĕ çакăнтан,
Виле шăпийĕ кĕтĕ вĕсене.
Сăмахăм ман кĕске те, ĕç — таса:
Косоев, пурнăçла халь приказа.

Хуралçă-салтаксем винтовкисене çĕклеççĕ. Çав вăхăтра надзиратель Услее илсе килни курăнать.

Чим, тепĕрне илсе килеççĕ, ав,

Салтаксем винтовкисене антараççĕ.

Пĕрлех тăратăр — пултăр пĕр чăрмав.

Н а д з и р а т е л ь

Исков Услей тени ку, — çавă ĕнтĕ,
Пире Гюго шыраттараканни.

Л а г е р ь п у ç л ă х ĕ

Çакскер-и ку — пиртен кулаканни?
Пĕр ăстрăм хам та култăм, вăт поэт те.
Кала, хăçан эс лекнĕ карцера?

У с л е й

Виçĕмкунах, пĕлетĕр хăвăрах.

Лагерь пуçлăхĕ

Апла, Исков, эс вĕсемпе пĕрле,
Тарса ĕлкĕреймерĕн темелле.
Тен, вĕсемпе пĕр каварта эс пулнă?

Надзиратель

Таркăнĕсем хăйсем каларĕç: пулнă.

Услей

Çав карцера лекмен пулсан, паллах,
Вĕсемпеле пĕрлех ман тăмалла.

Аслă надзиратель

Халь сан, Исков, ӳксе пуççапмалла
Ăнсăртлăха — сана çав хăтарать.

Услей

Ман пурнăç та ăнсăртлăхран тăрать.
Кун йĕркипе пĕр вилĕм çеç килет.

Лагерь пуçлăхĕ

Мĕнле ăнсăртлăхпа?! Сана, поэт,
Çак ĕç-пуçра тӳрре кăлараканĕ —
Чи тĕрĕс, чи аван Совет саккунĕ.
Тав ту, пуççап ăна. Çапла вара
Айăплаймастпăр тытайман вăрра.

Таркăнсенчен пĕри

Эй, еплешке! Епле хутне кĕреççĕ,
Иккен: пĕрне-пĕри аван пĕлеççĕ!

П е т ĕ р

Эй, сутăнчăк Исков!
Ку меслетпе
Миçе çынна эс сутрăн? Теçетке?

2-м ĕ ш т а р к ă н

Çынсем, астăвăр провокатора,
Ак çак вăл – сирĕн умăрта тăрать.

У с л е й
*(Пĕр вăхăт аптраса тăнă хыççăн)*

Мĕскер эсир, туссем, мĕн калаçатăр?
Сутман эп никама та, нихăçан та.
Пĕр пус çухатасран эп хăраман –
Мĕн хаклăш, калăр, çакă пурнăç ман?
Илетĕр-и хăвăрпала мана –
Пĕр айăпсăр, пĕр çылăхсăр çынна?

Услей стена çумне пырса тăрать. Лагерь начальникĕ енне çаврăнса:

Халех перес пулсан, мана та перĕр,
Ман юнăмпа та çăвăнса пĕвенĕр!

Петро Услей патне уксахласа пырать, ăна хăй çумне чăмăртать.

П е т ĕ р
*(Куççулĕ витĕр)*

Каçар, Услей, каçар пире, тархасшăн,
Тархасшăн – каçарма пултарайсассăн.

Хĕрлĕ пакунлисем винтовкисене çĕклеççĕ. Пенĕ саманта тытса илсе, Петро Услей умне тухса тăрать. Пурте ӳкеççĕ, Услей çеç ура çинче юлать.

Услей

Туссемĕр, ан хăварăр хăвăртан!
*(Салтаксен енне тилмĕрсе пăхса.)*
Тархасшăн, перĕр, перĕр хăвăтрах?!

Услей чĕркуçленсе ларать. Персе вĕлернĕ юлташĕсем хушшинче упаленсе çӳрет, каллех тархаслать.

Тархасшăн, перĕр, перĕр хăвăртрах?!

Лагерь пуçлăхĕ

Ку ухмахне ан перĕр.
Вилнинчен,
Сутăнчăкра çын евĕр çӳреме
Чылай йывăртарах.
Исков унччен,
Ялан пиртен пăхатчĕ шăл йĕрме,
Халь ак эпир кулатпăр Гюгоран.
*(Надзирательсемпе хуралçăсен енне çаврăнса)*
Салатăр çынсене!
*(Вилесем çине пăхса)*
Кусем вара
Çапла ик-виçĕ талăк выртчăрах.

Кăшкăрашса команда параççĕ, каллех йытăсем талпăнса вĕрни илтĕнет. Юнлă стена умĕнче тăватă виле выртса юлать.

## Пиллӗкмӗш картина

Лагерь больници. Йывӑҫ нарсем ҫинче йӗркипех чирлӗ ҫынсем. Вӗсенчен пӗри – Услей. Санитар – пуҫ янисенченех – палатӑна кӗрет.

Санитар

Паян сире хӑй тӗрӗслет – хуҫа,
Тирпейлӗрех калаҫӑр, астуса.
Унпа пӗрле пӗр ҫӗнӗ врач пыратчӗ,
Тин килнӗскер тет.

Пӗри

Унчченхи пекех,
Ытла хӑрушӑ пулмасан юратчӗ...

Санитар

Фронтра та пулнӑ теҫҫӗ –
уксахлать.

Тепри

Уксах арҫын ялан усал пулать.

Санитар

Ку – арҫын мар, хӗрарӑм, сарпике,
Картинка! Каснӑ-лартнӑ Мона Лиза.

Санитар унтан-кунтан шӑлса-тирпейлесе илет те кӑмака умӗнче ларакан кӗл витрине илсе тухса каять.

Виҫҫӗмӗшӗ

Ун хитринчен вара пире мӗн усӑ?

Е чĕрĕлнĕ, е чĕрĕлмен — пĕрех
Çырса хурать те — кăларать пире.

Больница коменданчĕ аслă лейтенант, хĕрарăм врач, фельдшер тата санитар хăйсен хушшинче калаçкаласа кĕреççĕ.

Б о л ь н и ц а   к о м е н д а н ч ĕ

Çурри ытла — юри тăвакансем.

Ф е л ь д ш е р

Вăхăтпала сывалмалла кусен,
Вăрман касма та юрăхлă.

Т у х т ă р

Малтан — тĕрĕслесе пăхас.

Фонендоскопне хăлха çине хурса, нар çинче ларакан чирлĕ çын патне пырать. Фельдшер, чирлисен карточкисене тытса, çырса пыма хатĕрленет.

Ку — çичçĕр çиччĕ,
Партасов теç.
Кунта вăл сахалтан
Çулталăкне икшер те лекекенччĕ,
Кăçал — пĕрремĕш хут...

Т у х т ă р

Чирне кала.

Ф е л ь д ш е р

Асапланать вăл пыршă тухнипе.

Чирлĕ çын

Çапла, тĕп-тĕрĕс.
Йывăр йăтнипе...

Больница коменданчĕ

Ялан кунта выртать пулсан капла,
Пит тĕплĕн тĕрĕслес ку кахала.

Тухтăр

Çырас ăна çăмăлтарах ĕçе
Кунтан тухсан вырнаçтарас тесе.

Больница коменданчĕ

Манса ан кайăр, врач юлташ, кунта
Çăмăлтарах ĕç вырăнĕ çукрах.
Вăрман нуши. Çитменнине тата,
Ĕçлекенсем те паян кун чухрах.

Тухтăр

Ăна тăхтавсăр операци кирлĕ,
Хатĕрлесе çитерĕр виçмине.

Врач тепĕр чирлĕ çын патне пырать.
Ку – палламалла мар начарланса кайнă, куçне
уçаймасăр выртакан Услей.

Фельдшер

Ку пинмĕш номер темĕнпе те чирлĕ,
Хăтăлаймасть пуль вĕсенчен тинех:
Ӳт хушаймасть, чĕри те чаплах мар,
Чи хăрушши вара – ӳпки начар.

Т у х т ă р

Çынна вилмесĕрех ма пытарас?
Пирвай çăлмашкăн хăтланса пăхас.

Врач Услейĕн юн таппине тĕрĕслет, фонендоскопа ун чĕрине итлесе пăхать.

Мĕнлеччĕ-ха ку номер хушамачĕ?

Ф е л ь д ш е р

Исков пуласчĕ ахăр.
Ашшĕ ячĕ?
Григорий пулмалла. Тен, Андриан?..
Пăхса илетĕп-ха ăна ыран.

Врач фельдшер каласа пĕтериччененех сăнран улшăнать. Чирлĕ çын çине тĕлĕнсе пăхса илет те пĕр самант аптраса тăрать, алли лăштах усăнать. Анчах хăйне хăвăрт алла илет, çапах та ăна фельдшерпа комендант асăрхаççĕ.

Б о л ь н и ц а к о м е н д а н ч ĕ

Элисавет Степановна, мĕн пулчĕ?
Сасартăках йăлт улшăнтăр сăнран.
Чим, пулăшам-ха, пуç çаврăннăран
Кунтах, кабинетрах, эмел те пурччĕ.

Т у х т ă р

Çук, ан чăрманăр ытлашши, тавах,
Иртсе пĕтмен пуль, ахăртнех, контузи.

Ф е л ь д ш е р

Çапла, суран вăл хăйĕннех тăвать:

Контузи хыççăн вилчĕ кумăн тусĕ...

Т у х т ă р

Эпир пурнасшăн-ха... мĕн виличчен.

*(Хăй тĕллĕн)*

Çапла вĕт, тĕрĕс вĕт... Услей пичче?

*(Фельдшера)*

Эуфиллин хушса парас ăна,
Норсульфазолпала стрептомицин.
Ленд-лиз* çине куçарăр паянах —
Вăрман касма çын кирлĕ, сывă çын.
Ну юрĕ, çитĕ.

Ку палатăра

Сывалнисем çукрах паянлăха.

Б о л ь н и ц а   к о м е н д а н ч ĕ

Ак çак тĕреклĕ, тухтăр, пăхăр-ха:
Ура çинче ытлаванах тăрать.

Т у х т ă р

Çак имшерккен чирне кура-тăра,
Ăçтан вăрман касма хăвалăн-ха.
Мĕн чухлĕ усă патăр чирлĕскер?
Патшалăха ĕç çынĕ кирлĕ-çке.

*(Пуçтарăнса тухса каяççĕ.)*

Ч и р л и с е н ч е н   п ĕ р и

Мана кăлармаллаччĕ паянах —

---

* Пĕрлешӳллĕ Штатсем парса тăнă пулăшу: апат-çимĕç, тумтир тата ыт.

Рехмет илемлĕ мона Лизăна.

Тепри

Хитре, чăнах та, нимĕн те калаймăн,
Кама савăнтарать-ши?
Ĕнтĕ камăн...

Виççĕмĕшĕ

Вилме выртсан та, — эй, арçын чĕри! —
Яш-кĕрĕм чухнехи пекех вĕри.

Тăваттăмĕшĕ

Фронтра та пулнă — тӳснĕ курăнать,
Апла çын хуйхине те ăнланать.

Пиллĕкмĕшĕ

Хăюллă та вĕсем, фронтовиксем.

Виççĕмĕшĕ

Пулаç вĕт тĕрмере те ыр çынсем.

Тăваттăмĕшĕ

Вăл пирĕшти пек пирĕншĕн.

Чирлисенчен пĕри

Чăнах,
Кашнин хутне кĕме тупать сăмах.

Тепри

Сăмах çеç мар.

Ав, Услее чĕртмешкĕн
Мĕнле кăна эмел пама хушмарĕ.

П и л л ĕ к м ĕ ш ĕ

Услей тесен чун ыратать — ай, мĕскĕн!
Срук тухасси те нумаях юлмарĕ —
Вăл пур — вилет, ав...

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Нимĕн те тăваймăн,
Пўрмен куна атма ярса тытаймăн.
Ан манăр тулькĕш, ачасем: Услейĕн
Çăм свитерне илетĕп эп.

И к к ĕ м ĕ ш ĕ

Мана —
Пуртенккипе махорка хутаççийĕ.

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Вилсен — чăлхи те кирлĕ мар ăна.

Т ă в а т т ă м ĕ ш ĕ

Пĕлме те çук: тен, çăлĕ çĕнĕ тухтăр?..

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Халь тин...
Халь тин тепле çав,
шанчăк çук-тăр...

*Палата çумĕнчех — тухтăр пўлĕмĕ. Алăкĕ çине «Дежурный врач» тесе çырнă. Унта шурă халат тăхăннă Лисук пĕчченех ларать. Хăй тĕллĕн калаçать.*

## Л и с у к

Шăпа, шăпа...
Ăçта тĕл пулмалла тӳр килчĕ —
Çак йĕплĕ пăралук уçланкинче!
Ун чух... Ун чух çеçкелĕх уçланкиччĕ,
Услей вара... Услей чи-чи хитриччĕ...
Кама куратăп халĕ?!
Эй, тĕнче,
Мĕн чухлĕ тĕрĕсмарлăх çĕр çинче!
*(Кăшт тăхтасан.)*

Услей çавах: тути, çамки, сăн-пичĕ.
Элле вăл турăш маншăн халĕ те?
Каллех курас килет ăна ман питĕ,
Каллех кĕрсе вырнаçрĕ ĕмĕте,
Чăн — юратмашкăн çитмĕ ĕмĕр те.
Текех кураймăп тенĕччĕ ăна эп,
Лăплантăм ĕнтĕ тенĕччĕ тинех,
Эй, турăçăм, мана ан ту эс айăп —
Хăвах пăрахрăн çулăм кĕлтине
Ахаль те çунакан чĕрем çине.
Эп вăрçăра та санпалах çӳрерĕм:
Пĕтев пек пулчĕ, ахăр, сан яту —
Мана вăл вилĕмрен çăлса çӳрерĕ.
Сана халь çăлтăр манăн юрату,
Вăл пултăр саншăн сиплĕ тухату.
Хăй шăпинчен тарса ӳкен çын пур-шим?
Ак эпĕ ĕнтĕ çирĕм саккăрта,
Çапах самантлăх та ăнмарĕ пурнăç...
Те тав тăвас халь çакă ăнсăрта?
Те ылханас — килменшĕн вăхăтра?
Ӳпке чир-чĕрĕшĕн аван теетчĕç
Асаннесем юпах тиха çуне,

Тата шаршан куракёпе сиплетчёç,
Вăл вырнаçуллă пек эмел çумне...
Йӳтенĕ çын пек ĕнтĕ пĕр-пĕччен
Мĕн калаçса ларап-ха темĕнччен –
Мĕн те пулсан тăвас пулать халех.
Сана ман, савнă çыннăм, чĕртмеллех.

Лисук пальтине уртса ярать те хыпаланса тухса каять. Лаптăк çутă палатăна куçса пынăçем сӳнет, ун вырăнне Услей пуç вĕçĕнче пĕр чакса – пĕр вăйланса мĕлтлетен çурта çеç юлать. Услей сасси шухăшлăн-тунсăхлăн янăрать.

Услей

Тен, эпĕ пурăнмастăп тĕнчере?
Ман вырăна тахшин пурнать, тен?
Манăн
Сăн-питĕмпе, ман шухăшсемсĕрех?
Кĕр-пасара укçасăр-мĕнсĕр кайнăн...
Вĕçевĕ пур пек – кайăкĕ хăй çук,
Çапла-шим ӳт-пӳрен чун кайнă чух?..
Эп – çулçӳрен анчах.
Çак çĕр çинче иртен-çӳрен.
Çил евĕр ăраскалсăр.
Ют пурнăç хапхине уçма хăймасăр
Тăп чарăнтăм. Çукпа Пур хушшинче:
Çул суйласси манран килмест текех,
Çул хăй суйлать мана халь – суйлинех.
Хĕвелĕн пĕчĕк ванчăкĕ пек шанчăк
Сӳнсе çухалчĕ тĕттĕм уçлăхра.
Халь тин нимех те кирлĕ мар.
Аванччĕ,
Шартах вăранмасассăн урăхран:

Кăмрăкланать сап-сар çурта çиппи,
Инкекĕм, эс те çунса кай эппин.
Умра каллех пралук. Унта – те нота,
Те кăсăя çинсе саспа юрлать?
Тур çывăрнă чухне вăрахăн, вărттăн,
Халь-халь талас нервăсене туртать:
Те туйăм уйрăлать шухăшăмран?
Те шухăш уйрăлать сив туйăмран?..
Арпашрĕ пĕтĕмпех, канăçсăрланчĕ,
Çуралсанах арпашăннă черет.
Аюк! Япаласен чикки çухалчĕ,
Тĕнче çут плазма шайĕнче чĕтрет...
Анне!
Чĕлхе çинчи чи малтанхи сăмах
Юлашкинчен килет-шим асăма?
Ейӳ?!
Куç виçейми кăвак тӳпе те
Шуса анать унта талккăшĕпех.
Чим, тăвансем, эп шыва май ишетĕп,
Персе антарнă шурă шухăш пек.
Куçа уçса пăхам-и? Катара
Хура çăварлă авăр – айтурах!

Услей хăраса куçне уçать, тахçан илтнĕ сасса илтесшĕн тимлет.

Чирлисенчен пĕри

Тĕлĕкĕнче нушаланать пуль тахăш.
Е атăшать-и пирĕн доходяга?

Тепри

Эрне эс çывăртăн, Услей, эрне,
Каян пуль тенĕччĕ леш тĕнчене.

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Вĕçне çитмен пулсассăн ĕмĕрне,
Курса пĕтереймен пуль инкекне.
Турру пурах сан, хăвăн пек калас-тăк,
Чĕркуçленсе кĕлту халь ир те, каç та,
Шур пирĕшти пек мона Лизăна –
Çав çăлчĕ ĕнтĕ вилĕмрен сана.

Т ă в а т т ă м ĕ ш ĕ

Тепри пулсан – пĕрех вилет тесе,
Алне сулать те пĕтерет ĕçе.

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Пулаç вĕт ыр çынсем, амиткеле.

И к к ĕ м ĕ ш ĕ

Шăпрах, ачсемĕр, – ун утти, килет.

Тухтăр кĕрет. Пуçне сĕлтсе илет те тӳрех Услей патне пырать.

Т у х т ă р

Ну, мĕнлерех кунта вăл?

У с л е й

Ахалех
Мана чĕртесшĕн тăрăшатăр, тухтăр.
Çак чир-чĕре чăтма ăçтан вăй тухтăр?
Çитет асапланса,
хальи – вилмелле.

Пĕри

Мĕн калаçан, Услей?
Тата çур çул,
Сан чăтмалли. Вара ... киле каятăн.

Виççĕмĕшĕ

Эс, йĕкĕтлерĕм, пархатарлă пул:
Эпир сана чĕртесшĕн — эсĕ пур —
Ачаш хĕрарăм пек йăлăнтаратăн.

Тухтăр

Чи йывăр вăхăт иртрĕ.
Малалла,
Ура çине тăма пуçламалла.
Халь сирĕншĕн чи сиплĕхлĕ эмел —
Пурнас килнийĕ.
Кăмăл çĕклеме
Чӳречерен, ав, кармашать çур кунĕ:
Йĕрки çапла ун — чĕрĕлĕх саккунĕн.

Услей
*(Хăй тĕллĕн)*

Нивушлĕ вăл?
Сасси те, сăнĕ те
Шăп каснă-лартнă унăнни пекех...
Вăй çуккипе, тен, аташатăп?
Тен,
Куратăп паçăр талнă тĕлĕке?
Арпуçĕнчи хăюллă пăрчăкан
Епле килме пултарнă çакăнта?
Çулсем арпашнă çип пек, тупата.
*(Сасăпа.)*

Рехмет, рехмет! Мана ыр сунакан.

Май уйăхĕ. Больница чӳречинчен симĕсленме пуçланă пĕчĕк хурăнлăх курăнать. Услей, палатăра лараканскер, тухтăр килнине чӳречерен курать те юлташĕсене систерсе тăмасăрах коридора тухать. «Дежурный врач» тесе çырнă пӳлĕме хăюсăррăн шаккать.

У с л е й

Кĕме юрать-и? Ырă кун сире!
Каçарăр чăрмантарнăшăн...

Л и с у к

Услей?!.
Эс кĕрессе эп пĕлнĕ. Кунсерен,
Сана кĕтетĕп эпĕ вилесле.
Пĕрне-пĕри пĕле тăркач пурнатпăр,
Çапах та тĕл пулса калаçаймастпăр.
Эс сывални, пĕлетĕн-и, Услей,
Тавах турра! – мĕн пысăкăш телей!

У с л е й

Тавах сана. Эп çавăншăн килсеччĕ:
Вилнĕскере чĕртнишĕн тав тума.
Тата... ыйтса пĕлмеллисем те пурччĕ...

Л и с у к
*(салхуланса)*

Кирлехчĕ-ши халь уншăн чăрманма?
Эс, мĕн, ара, ура çинче тăратăн?
Лар кунтарах, çывăхарах.

Услей

Пире,
Начальство умĕнче, хăв ăнланатăн,
Ларса тăма питех хăнăхтарман.

Лисук

Ав мĕншĕн ютшăнатăн эс манран.
Ман упăшкамçăм опер пулнăран,
Элле эсир мана та кураймастăр,
Паян кунччен ним чухлĕ те шанмастăр.
Вăл лайăх çын, ыр кăмăллă.
Ара,
Çитменнине, вăл пулнă вăрçăра.

Услей

Çапла. Унта кам пулнă — пурте лайăх,
Эпир вара... эпир — ылханлă кайăк...
...Эп астăватăп-ха ун меслетне —
Сан упăшкусăр пуçсăр кам ăслайĕ,
Шухăшласа тупать ун пеккине! —
Шăршланнă шывлă тулли мар чана,
Яра-яра илетчĕ вăл чуна.
Вăрçа кайма ăс çитнĕ çав панккавăн —
Таçта карьера пăсăлнă апла ун.
Çапла, — ун вырăнĕ кунта,
Тата
Ăçта вăл усă куртăр опытпа?

Лисук

Эс манăн йывăр пурнăça, Услей,
Ним чухлĕ те пĕлместĕн.

Халь итле,
Кăшт каласа паратăп хам çинчен.
Епле аса илем унчченхине?
Сана хупсассăн тепĕр çулхинех
Эп уйрăлнă панккав Кĕверкинчен.
Терĕссипе – вăл уйăрнă мана,
Кайран кăна ăнлантăм эп çавна.

Услей

Ăнать сана, Лисук, – ку упăшку та,
НКВД çынни...

Лисук

Мĕн тăвăн, кутăн,
Кайса пырать пулсассăн пурнăçу.

Услей

Каçар – пуçартăм йăнăш калаçу...

Лисук

Сана эп ăнланатăп: лагерьте,
Виçеççĕ вĕсене пĕр виçепе,
Анчах Иван Иванович пĕртте,
Çавсем пек чурăс мар.

Услей

Ку хисепе,
Вăл тивĕçнĕ пулсан хăй ĕçĕпе,
Мухтав та чыс ăна ...
Лисук, итле-ха,
Çав Элекçей пиччӳн шăпи мĕнле халь?

Лисук

Илтмен-им эс вара? Ман пиччене
Писательсен ĕçне вĕçличчченех
Ним айăпсăр çĕртен ĕçрен хăтарчĕç.
Пĕр каварта тесе сирĕнпеле
Васкавлăн парти ретĕнчен кăларчĕç...
Сăлтавĕ, ахăртнех, урăххинче:
Сахъя Ярмужевнăн хура ĕçне
Тăр шыв çине кăларнă, тет, пичче.
...Халь тин тупса пĕтер элек вĕçне.

Услей

Тур кăмăллă этемччĕ Элекçей.
Ăçта хальхаççăн вăл, хăш лагерьте?

Лисук

Пĕлместпĕр çав.
Анне вилет йĕрсе.
«Без права переписки» терĕç те,
Шыва чул прахнă пек пачах çухалчĕ.
Таçта та шыраттартăм — çуккă ячĕ.
Персе вĕлернĕ пуль...
Ах, мĕскĕн, мĕскĕн.

Услей

Ак, эпĕ те «без права переписки»,
Анчах та, хăв куратăн, чĕрĕ эп.
Тен, чĕрĕ Элекçей те пирĕн пек...

Лисук

Институтра вĕреннĕ чух мана,
Кăштах вĕт кăлармарĕç тăшмана!

Çăхав та килнĕччĕ пĕр-ик хутчен —
Çав Кĕверки пуль теп паян кунччен...
Юрать вăрçи пуçланчĕ...
Çав хăтарчĕ:
Вĕренĕве ик çул катертрĕç те
Ăсатрĕç санчаçа — малти рете.

Услей

Маттур эс: тухтăра тухма пултарнă...

Лисук

Фронтран çул май киле кĕрсе тухсаччĕ.
Куç умĕнчех-ха çĕтĕк çурт-йĕрсем.
Сӳре тăватчĕç, сухапуç туртатчĕç
Утсем пек кӳлĕнсе хитре хĕрсем.
Аçу-аннӳ сывахчĕ-ха, çӳретчĕç
Кил-çурт таврашĕнче кăштăртатса.
Шупашкара кĕрсе тухас килетчĕ —
Çул вăрăмми тăрать вĕт хăратса,
Тата... çӳрес килмерĕ çул татса.
*(Услей канăçсăрланнине сиссе.)*
Çăлпи çинчен пĕлместĕп нимĕнех те,
Килте сăмах хускатрăмăр пулин те.
Пурнать пуль-ха пĕр майлă.
Хулара
Епле пулсан та пурнăç çăмăлрах.

Услей

Ялта, килте тесеччĕ эп ăна...
Чĕлхӳ çинче калайманни тем юлчĕ —
Кала, Лисукăм, ан шелле мана.
Чĕрем теме сисет. Пĕчченçĕ çулçă

Сив çил çинче чĕтренĕ пек чĕтрет.
Элле мана каллех усал кĕтет?

Л и с у к
*(хăй тĕллĕн)*

Çăлпи пирки...
Çăлпи пирки, паллах,
Хăçан та тĕрĕсне каламаллах.
Анчах халь мар, юлашкинчен, кайран,
Ахаль те ун чĕри тулли суран.
*(Сасăпа)*

Хĕрарăмра сăмах тăрать-и? Ĕнтĕ,
Сахал-им вăхăт иртрĕ унтанпа!
Пулма пултарнă кăшт улшăнусем те —
Тĕнче пĕрре те — уйрăмшар шăпа.

У с л е й

Çапла.
Шăпи, мĕнле пулсан та, хăвăн:
Курмаллине курас пулать — мĕн тăвăн.

Л и с у к

Ан пăшăрхан, йăлт пулĕ йĕркеллех —
Асаплă куншăн савнăç килмеллех.
Тата пĕр уйăх çурă юлчĕ санăн,
Пулни-иртнисене кăштах ак манăн
Тăван килте...

У с л е й

Мĕскер кĕтет мана?
Ирĕклĕхрен хăратăп эп, чăнах.
Кунта, ку тамăкри хуран айне

Кăвайт хурса тăран шуйттансене
Чунпа туйса, куçпа курса тăратăп,
Анчах Шупашкарти иудăсем,
Гавриловсем, Сидоровсем камсем?
Пĕлме май çук...
Тен, çавсене кура та
Хăратăп эпĕ «çут малашлăхран»?
...Çутах пулсан вăл çакă тамăкран...
Ăçта уççи-хуппи тĕнчен хальхаççăн?
Ĕçтеш таврашĕ те, мана курсассăн,
«Унта вăл пулнă, тĕрмере» тесе,
Ялан хыçран кăтартĕ тĕллесе.

Л и с у к

Пăшăрханатăн эсĕ кăлăхах...

У с л е й

Пĕлетĕп эпĕ хамăр халăха:
Типшар çитсен е çумăр çумасассăн,
Кам айăплă, кам çылăхлă? – кала? –
Çав венчете тăманнисем, паллах.
Апла пулсан мĕн шутласа тăрас –
Халех тытас та пĕвене прахас!
Çапла, хăрушлăх ирĕкре те пур-мĕн,
Çăтмах тени мана унта та пўрмĕ.

Коридорта ура сасси илтĕнсе каять. Лисук васкаса тонометрне вырнаçтарать те Услей хулне манжетпа чĕркеме пуçлать.

Л и с у к
*(Ĕçлĕ те çирĕп сасăпа.)*

Ўпке – йĕркеллĕ, унччен пек мар халь,

*(Фельдшер кӗрет.)*

Юн таппине тӗрӗслесе пӑхар-ха.

Услей

Тӗрӗслесен те, ыратсах тӑрать ҫав...

Фельдшер

Элисавет Степановна, здӑрасчӗ,
Ялан ӗҫре эсир, ялан, пӗрре те,
Пӗрре те шеллеместӗр хӑвӑра.

Лисук

Паян тӑвас ӗҫе пӗле тӑратӑн,
Кала-ха, ырана кам хӑварать?

Фельдшер ширма хыҫӗнче темӗн илем пекки тӑвать те тухса кайма хатӗрленет.

Фельдшер

Элисавет Степановна, сире
Мансах эп кайнӑ калама —
ирех,
Начальник чӗннӗччӗ. Мӗн ыйтупа?
Ҫав ыйтупах пуль, ахӑр, ҫавӑнпах.

Лисук

Эс ирӗклӗ. Каях хӑв ҫулупа.

Фельдшер йӑпшӑнса тухса каять.

Услей

Ӑна кунта Кӗве тесе чӗнеҫҫӗ:

Хăй шăлсăр, пурпĕр çынсене касать.

Л и с у к

Стукач вăл чăвашла мĕнле куçать?

У с л е й

Ун пеккисем пирте пулман та теççĕ,
Апла-тăк çав сăмахĕ те пулман.

Л и с у к

Халь чылаях вĕсем, асту, сыхлан.

У с л е й

Хăвна асăрхаттармаллаччĕ ман...

Л и с у к

Эп ытлашши те тăрăшап тесе,
Кĕве каланă ĕнтĕ хуçана,
Леш хыпарланă, ав, упăшкана.
Тен, уншăн хуптĕрлесшĕн кĕтесе?
Эй, шăмачук, эй, сăхă ăçтиçук...

У с л е й

Мĕнле асăрханусăр эс, Лисук?
Хăвна çапла пĕтермелле-и маншăн —
Тахçан палланă чирлешке тăшманшăн?!

Л и с у к

Чирлисене сыватасси вăл — ман ĕç,
Апла, шикленмелли кунта, ăнлан эс,

Нимех те çук.
Ман упăшкам аван çын —
Мĕн-ма пулас ман саншăн палламанçă?
Ăна каланă эпĕ сан çинчен,
Сана эп çамрăк чух, тахçан, унччен,
Нарспи аппа пек юратни çинчен.
Хальччен çак сăмаха эп калама та
Çын урлă та пулсан хăйман, хăйман.
Услей, Услей, мĕскер тăвас-ха ман?
Сана паян та вилесле саватăп.

У с л е й
*(тĕлĕнсе)*

Мана?
Ак çакăн пекскерне?
Мана?
Шутла-ха — халăх тăшманне?
Лисук, мĕн калаçатăн эс, Лисук?
Кирлехчĕ-ши ку йывăр калаçу...

Л и с у к

Пĕлетĕп: вырăнсăр ман çулсенче
Хĕрўллĕн калаçма савни çинчен.
Каçар, Услей, — ухмахсене вăрçмаççĕ,
Анчах хăçан калам чун панчине?
Çынна ăна виçсе пăхса савмаççĕ,
Мĕнле калас? — Саваççĕ савнине,
Ăнлантăн-и, эп мĕн калассине?

У с л е й

Çемьеллĕ-çке эпир санпа, Лисук:
Сан упăшку, ман арăм темелле...

Лисук

Анчах та чĕрене хушмашкăн çук.
Епле-ши пурăнса ирттермелле?
Ман упăшкам хамран чылай çул аслă,
Паллашнăччĕ унпа эп вăрçăра,
Нушийĕ пĕрлештерчĕ пуль, ара...
Килĕшмелле арçын вăл – ырă, ăслă,
Пĕрле чухне ача пек вăл хавaслă...
Чим, чим! Шеллетĕп мар-и эп ăна?
Каллех, каллех курман пулсан сана,
Пурнаттăмччĕ этем пек лăпланса.

Услей

Ан ӳкĕнсем ытлах, ан татăлсам.
Сана эп хам та пит килĕштереттĕм:
Уйри кăвак çеçке пек куçусем
Кама кăна асаплантарĕç теттĕм –
Пĕлменччĕ маншăн çуннине вĕсем,
Халь тин тавраймăн çав çухатăва.

Коридортан, аякран, ура сасси çывхарать. Услей ура çине тăрать.

Ура сасси...
Пуриншĕн те тавах.
Сыватнăшăн та, уçă калаçушăн.
Каям.
Сана сăмах ан лектĕр маншăн.

Лисук

Тăхта, Услей...
Ыран эс ман пата,

Килетĕн-и, ик-виçĕ минута?
Паян статистик вырăнĕ пушанчĕ,
Унта сана вырнаçтарма пур шанчăк.
Начар ĕç мар. Çитменнине тата,
Çитсе пырать хисеплĕ вăхăт та...

Услей

Сыв пул, Лисук, ман шурă пирĕшти,
Аннӳ каларăш, ырă килĕшпи.

Услей тухса каять. Йĕри-таврара çутă сӳнсе пырать, шухăша кайнă Лисук тĕлĕнче пĕр вăхăт чаранса тăрать.

Лисук

Пĕр ыр сăмах — пĕр уйрăм çепĕç кĕвĕ,
Рехмет, ыр сăмахушăн, ман Услей.
*(Кăшт тăхтасан.)*
Парашюта уçмасăр аннă евĕр,
Ална тытни те сан — çӳçенмелле.

## Улттăмĕш картина

Услей хура вăрман сукмакĕпе чечеклĕ уçланкăна тухать. Вăл, лагерьтен тин çеç тухнăскер, ирĕк сывлăшĕпе антăхса сывлать. Аллинче ун — хăй ăсталанă йывăç чăматан. Çĕр йăтса тунă сăртлă вырăнта узкоколейка курăнать. Услей вагонетка иртсе каясса кĕтет. Тăтăшах хăй килнĕ сукмак еннелле пăхать. Тўнсе кайнă йывăç çине ларать те хĕвĕнчен тетрадь туртса кăларать, тем çырать, ўпре-пăвансенчен хўтĕленет. Кăштах тăрсан, мĕн çырнине çурма сасăпа вулать.

### Услей

Хăрушă тĕлĕке татса вăраннăн,
Сасартăк тухнăн çутă чăнлăха,
Шарт сикрĕм эпĕ çак хура вăрманăн
Ёлккенлĕхне курсассăн тăруках.
Элле унччен те кайăксем юрланă
Мухта-мухта эп пурăннă куна?
Мĕнле курман эп халиччен, сăрланă
Ўкерчĕк пек çавра уçланкăна?
Пин сасă вăрманта. Вĕçсе хăпартăр
Тата пĕр сасă — юрă пуласси!
Мана ятарласа савăнтарма-тăр
Кĕрлет, янрать хаваслăх пăласси.
Калас текен сăмахăм пур-ха манăн,
Итлекенсем те пулĕç кăмăлтан.
Вăрантăм, тăвансем, — хура вăрманăн
Юрри пулса юлам-и паянтан...

Услей çĕлĕк пек çавракa пĕлĕтсене сăнать. Тўпере ярăнакан кайăка асăрхать.

Ирĕк кайăкĕ — икĕ хăлаçлă хăлат
Çил касса ярăнать тўпере.

Тепĕр хут вутланса кĕтĕр-и вăй-хăват
Хăлатла çĕкленмешкĕн тепре!
Пĕлĕтсем, шухăш пек шăвакан пĕлĕтсем,
Ыталам та сире пĕр юхам.
Хамăр ял патнелле тĕрĕс, сыввăн çитсен,
Картаран уртăнса эп юлам...

Услей пĕр вăхăт шухăша кайса тăрать. Систермесĕр Лисук çитет. Вăл хром атăпа, сăрă плащпа. Услей куçне хыçалтан ик аллипе хуплать.

Лисук?!
Лисукăм, савнă пирĕштиçĕм,
Чăнах, сисмен те эсĕ килнине.

Аллисене вĕçертмесĕр пичĕпе сĕртĕнет, хăй енне çаврăнса тăратать.

Чуптăвăттăм аллусене пĕр вĕçĕм,
Ыталăттăм мĕнпур çут тĕнчене.

Л и с у к

Салам, Услей, Салам!
Анчах та манăн,
Каçар та, темшĕн савăнас килмест.
Çук, апла мар!
Çук, апла мар, тăванăм, —
Савăнмалла! Халь ирĕкре-çке эс.
Тĕрĕссипе, чунра мĕн пуррине
Пĕр сăмахпа калаймăн — пулинех!
Халь саншăн ирĕк çывăх — тăванран,
Анчах вăл уйăрать сана манран.

Мĕн калаçатăп?
Эй ухмах хĕрарăм, —
Каçар, — мĕскер шутланине каларăм.

Услей

Кала, Лисукăм.
Тĕрĕс юп-сăмах
Патша вырăнĕнчен те хаклăрах.
Çак уйăх çурă хушшинче эп хам та
Юпле çырми пек уйрăлтăм икке:
Ăсăмпала йăлтах тăван ялта та,
Туйăмпала сан патăнта иккен.
Эс тухрăн та, сарă хĕвелĕм,
Хитре вутлă çаврăм,
Мĕн чухлĕ çут çăлтăр
Сӳнсе ӳкрĕç-ши харăсах?
Ют çын пĕтевне савнă евĕр
Сана эпĕ саврăм,
Çунса каясран та,
Тăмарăм питех хăраса.
Телей е инкек умăмра? —
Ик пусăм, пĕр пуçăм.
Ейӳ янă туйăм умра та,
Хыçра — сĕм-вăрман.
Мана хавшатса хăварасшăн
Эс килтĕн-ши, тусăм,
Е çамрăклăха ахрăм пек
Каялла тавăрма?..
Усал ересрен урамра
Катăркас ӳстереççĕ,
Анчах утас çулăм мĕн-ма
Уйрăлайрĕ икке?

Хăшне ман суйлас? —
Ăна юмăçсем те пĕлмеççĕ,
Маттур ăсчахсем те
Канаш параймаççĕ иккен.

Лисук

Ыранхине пĕлме паман халех,
Ан хуйхăр, пурнăç кăтартать хăех.

Услей

Сăнанă-и? —
Сĕм-тĕттĕм каçсенче,
Тата та çутăрах çап-çутă çăлтăр.
Çак тĕнчере чăнах та турă пур-тăр:
Асаплă та асатлă кунсенче,
Эс маншăн çавă çутă çăлтăр пултăн.

Лисук

Хура каçсем килмен пулсан вара
Курмастăнччĕ ман евĕр çăлтăра...

Услей

Çук, çук!
Сана эп уншăн мар саватăп,
Хăв калашле, саваççĕ — савнине.
Вун çул хушши упраннă вăй-хăватăм,
Сана савмашкăн юлнă пулинех, —
Лисукăм, юрататăп эп сана.

Лисук

Татах кала мана çав сăмахна.

Услей
*(пăшăлтатса)*

Лисукăм, юрататăп эп сана.

Вăраххăн чуптăваççĕ. Пĕрне-пĕри куçран пăхса калаçаççĕ.

Лисук

Ман ĕмĕрлĕх çуралнă юрату,
Ман ĕмĕрлĕх çуралнă ырату!
Сана пĕрремĕш хут курсан кунта,
Мĕнпур тĕллевĕм — тепĕр çич кунтан,
Сана ура çине тăратассиччĕ...

Услей

Ма çич кунтан?

Лисук

Телейлĕ шут вăл «çиччĕ».
Вара сана эп çамрăк чух епле
Юратнине каласа парăп теттĕм.
Анчах хăвна та, теттĕм, хисепле:
Çавна кала та шăпăрт пул ... çитет те.
Камах шутланă, тепĕр хут та эпĕ
Хыпса илме пултарнине кĕлте пек?!

Услей

Эп хам та шутламан-кĕтмен:
Шăпах
Çапла килсе тухассине шăпа.

Лисук

Услей, асил-ха çимĕк вăййине...

Эс ун чухне шап-шурӑ кӗпепеччӗ.
Мӗн чухлӗ каччӑ та мӗн чул пикеччӗ,
Юрлатчӗҫ савӑк вӑйӑ юррине.
Эпир вара хӗр-тантӑш Сухвипе
Куҫа илме пӗлмен поэт ҫинчен...
Ах, ҫамрӑклӑхӑм!
Ҫӗмӗрт ҫеҫкипе
Вӗҫсе те пӗтрӗн тул ҫутӑличчен.

Услей
*(шӳтлерех)*

Хӗр чух вӑл хӗрӗх тус, ку ӗнтӗ паллӑ...

Лисук

Ҫапах та каччӑн нумайрах — ҫӗр аллӑ.
Ҫук, ҫук, Услей, — эп сана ҫеҫ юратнӑ,
Пӗр саншӑн кулянса сӑна хуратнӑ,
Анчах ҫавна эп калама хӑйман.
Эс авлансан, мӗн тумаллаччӗ ман? —
Выртса йӗрсен тӑраниччен пӗрре,
Качча эп тухрӑм ҫавӑ путсӗре.
Вара пӑтранчӗ-кайрӗ манӑн пурнӑҫ!
Ӑҫта тӳр ҫул, ӑҫта хӑрушӑ пӑрнӑҫ,
Ҫапать сулӑнкӑна кӗтмен ҫӗртен...

Услей

Каллех ман айӑп ... айӑпсӑр ҫӗртен.

Лисук

Тур сиртӗрех!
Сана айӑпламастӑп,

Шăпа тени карт пăрахса килмест-çке.
Пĕрех телейлĕ эпĕ.
Шухăшлас-тăк,
Самантлăха телей те телеех-çке!

Услей

Телейлĕ-ши?..

Лисук

Санпа уйрăличчен.
Турат çинчи илемлĕ вĕçен кайăк
Вĕлт вĕçнĕ пек, часах ак вĕçĕн-кайăн,
Эп юлăп тăр-пĕччен...
Пĕччен, пĕччен.
Мана санпа чухне кăна хаваслă.
Асилӳре эп пурнăп эс кайсан,
Куçа хупса тĕтре карсассăн, сан
Кăвакаран кăтрусене ачашлăп...
Кунта та килĕп-и, тен, хушăран,
Ларса та йĕрĕп ăшăм çуннăран.

Лисук Услей кăтрисене ачашлать, куçĕнче — куççуль. Хăй çаплах калаçать.

Хăва çыраншăн та, çыран — хăвашăн...
Хăвасăр çырсене шыв вашкăртать.
Чăнах, чăнах — хăратăп эпĕ саншăн:
Кĕтсех тăр майракаллă ăншăрта.
Мĕскер кĕтет сана Шупашкарта?
Кунта — куç умĕнче, мĕнле пулсан та...
Услей, Услей, тархасласа ыйтатăп,
Ютсем çинче асăрхануллă пул.

Саманисем хăрушă чух унта та,
Хĕве сив чул чиксе тăраççĕ пуль.

Услей

Çапла, çын чунĕ — япала хальхаççăн,
Кăтартсанах туртса илме пăхаççĕ.

Лисук

Ун чух сана допрос тăваканни —
Çав Кĕверки Гаврилов текенни
Халь пысăк вырăнта.
Пĕлетĕн ĕнтĕ,
Вăл манăн пиччене сутаканни те.

Услей

Апла, Иуда, майĕ килсенех,
Сутса та янă Вĕрентекенне.
Эй, Элекçей!
Хăвах ӳстертĕн мар-и
Этем сăн-питлĕ çав аçтахана.

Лисук

Çапах пиччеçĕм ман чунне сутмарĕ,
Хăй сăмахне калатчĕ куçранах.

Услей

Çапла вăл — кашкăрсен кĕтĕвĕнче
Сан сăрă кашкăр пулмалла.

Лисук

Енчен,
Этем пулсан, сана çисе яраççĕ.

Услей

Çӳлтен вара вĕс вĕслетсе тăраççĕ...
Пĕлетĕп эпĕ çав кашкăрсене:
Малтан вĕсем пăлан пăрушсене
Каварлашса хăваласа тытаççĕ.
Кайран вара, аш уйăрнă чухне,
Пĕрне-пĕри турта-турта çураççĕ,
Ку вăйă — Хуçана ал май...

Лисук

Ан кай, Услей, Шупашкара ан кай, —
Унта — тăшманусем, хăвах пĕлетĕн.
Çак ахăрсамана лăпланиччен, тен,
Пĕр-пĕр ĕçе кунтах вырнаçмалла,
Пĕр тĕттĕм кĕтесе, пĕр-пĕр яла?

Услей

Эп ун çинчен те, тусăм, шухăшланă,
Анчах унта, чун савнă Чăвашра,
Пĕр татăк ытарми çĕршывăм манăн,
Анне чĕлхи — чăваш чĕлхи ăшра...
Ăнланăн-и, ĕненĕн-и, Лисук? —
Поэзисĕр халь маншăн пурнăç çук.

Лисук

Эп тăрăшатăп ăнланма сана,
Ытах ăнланмасан — чунпа эп сисĕп...

Услей

Лисук, Лисукăм, манăн пирĕштиçĕм,
Саватăп эп сана, сана кăна!

Анчах та çакă аслă çĕр çинче
Ман пур татса та татайми пĕр парăм:
Таса куççуль пек совĕçĕм çинче
Эп тăлăха хăварнă арăм ... арăм.

Пĕр вăхăт чĕнмесĕр тăраççĕ. Кашни хăйне май шухăшлать.

Л и с у к
*(хăй тĕллĕн)*

Калас-и, калас мар-и?
Каласан,
Амантăп тĕрĕс сăмахпах ăна.
Услей, Услейĕм, халь каламасан,
Татах та йывăр килмĕ-ши сана?
Ӳкĕнмелле ан пултăрччĕ.
Çынсен
Çулне те пӳлес марччĕ...
Ку хыпар
Ах, ырă мар!
Унти ĕç-пуç çинчен
Хуть кам пĕлтертĕр — тулькĕш эпĕ мар.

У с л е й
*(хăй тĕллĕн)*

Тĕлĕнмелле çак пурнăç, тупата:
Унччен кунта самант тăрас килместчĕ,
Халь ак, Лисук, сана тĕл пултăм та,
Каяс килмест.
Эй, çут тĕнче рехечĕ!
Ялан çапла, —
Киле каяс чухне
Хура вăрман çырлийĕ тем чухлех...

Вагонетка шакăлтаттарса çывхарать. Лисукпа Услей ун сассине илтмеççĕ.

С а с ă

Унтан тухсан, ĕçмесĕрех çын ÿсĕр.
*(Хыттăн.)*
Пыратăр-и, пымастăр-и çак эсĕр?!

Услей чăматанне васкаса йăтать. Лисук аллине чăмăртать. Ыталаса чуптăвать те вагонетка енне чупать. Çавăнтах каялла çаврăнса килет.

У с л е й

Хыпар-хăнар илес пулсан манран,
Пĕр тăхтамасăр лар та кил...
Каçар...

Л и с у к

Паллах, паллах...
Кала кăна мана,
Вĕçеймесен — упаленсе çитетĕп.
Ниме те пăхмăп эпĕ —
сырăвна
Ире саркайăк кĕтнĕ евĕр кĕтĕп.
Ара, пурнăçăмра-ĕмĕрĕмре,
Телей тенийĕ килмеллех пĕрре...

Услей вагонеткăна хăваласа çитсе ларать. Лисук, уйрăлу тунсăхне туйса ĕлкĕрейменскер, тăна кĕрет, вагонетка хыççăн чупать. Юлашкинчен чарăнса тăрать те питне тутăрĕпе хупласа йĕрсе ярать.

## САМАНА МОНОЛОГĔ

Çапла, эп вĕçсĕр улшăну,
Эп тĕлпулу, эп уйрăлу,
Эп иксĕлӳ, эп хутшăну,
Эп вилĕм, эпĕ çуралу.
Мĕн чухлĕ илнĕ, çавăн чул
Хурса паратăп çынсене:
Пĕр чун кайсассăн, тепĕр чун
Килмен-им çутă тĕнчене
Шайлаштару саккунĕпе
Сап-сар çунатлă лĕпĕш пек?!
Эп ютшăну, эп савăшу,
Эп курайманлăх, юрату,
Эп пăхăнманлăх, ырату,
Эп килĕшӳлĕх, арпашу.
Ăсчах та, ахăр, çавăнпах
Тытаймĕ ман вĕçев çулне.
Эп салатса паран шăпа
Лармасть яр-уçă карт çине:
Хăй кунçулне пĕлсен этем,
Ыран тĕнче те пĕтĕ, тен...
Тĕлĕнмелле çак çынсенчен:
Хайсем вилме çуралнине
Ăнланаймаççĕ халиччен.
Ялт! турĕ çăлтăр, пуç çине
Ӳкерчĕ хăйĕн мĕлкине.
Анчах мĕн тăвăн? — çăлтăра,
Пĕр майлă çавăран тĕнче.
Пĕр майлă çех шутлаттарать:
Ĕнер — паян, паян — ыран,
Çапах та каялла пыран.
Çын тупсăмне тупас килет,

Пĕлен пулсан, кала, поэт:
Этем хăйне мĕн тивĕçпе
Телей курма çуралнă тет?
Хăех кăларнă йĕркепе
Çав çутă лаптăкĕ – кĕтрет –
Яланлăх килессе кĕтет
Яланлăх япала пур пек.
Мĕн-ма шырамалла телей? –
Инкек çукки хăех телей.
Çук, çырлахмасть унпа этем –
Ăна инкексĕр пит кичем.
Пуласлăха шыра-шыра
Каллех синкерлĕх тăллине
Лексе шараçланать вара,
Вара... курать курмаллине.
Эй, ăсларан ăслай çынсем,
Кăштах шухăшласа илсен,
Сиксе çӳремĕш инкекрен
Хăтăлнине те сирĕн, тен,
Телей тесе шутламалла,
Унтан... лăпах пурăнмалла?
Мĕн тăвăн? Пурнăç – шыравра,
Шыравĕ – пурăнăç тавра.
Мĕн-ма çакна пĕле тăркач
Халь хамăн та ăшчик вăркать?..



# ВИҪҪЁМЁШ ПАЙЁ

## Пӗрремӗш картина

Утă уйăхӗн пуҫламăшӗ. Шупашкар. Атăл курăнать. Урам ик айккипе те пыл сапакан ҫавра питлӗ ҫăкасем. Услей унччен хăй пурăннă ҫурт патнелле ҫитсе пырать. Вăл – ҫара пуҫ, сухалне кастарнă. Уринче – кирза атă, аллинче – хăй ăсталанă йывăҫ чăматан. Урампа тăвалла шукăль тумланнă виҫӗ-тăватă ҫын шавласа утать. Вӗсем шурă плащ тăхăннă пӗр вӗҫкӗнрех ҫын тавра чупкалаҫҫӗ.

П ӗ р и

Ёҫмешкӗн ҫылăх мар паян, ҫавна пӗл –
Кашни ҫулах тухмасть хитре роман.

Т е п р и

Мӗскер вăл Иванов! Мӗскер вăл Ҫеҫпӗл?!
Вӗсем сан чӗрӗкне те ҫырайман.

Виççĕмĕшĕ

Паян сана çитекенни кам пултăр?
Паян эс Чăвашра — чи çутă çăлтăр!

Пĕрремĕшĕ

Атя апла, илер çăлтăрлине,
*(«Вино» магазин енне пуçне сĕлтсе)*
Вĕсем те пĕлччĕр эсĕ чаплине.

Назух

Роман вăл, тусăм, ахаль сăвă-им? —
Сире ресторана илсе кĕретĕп.

Услей Назуха палласа илет те, чăматанне лартса, урамăн тепĕр енне васкаса утать.

Услей
*(Урам урлă каçнă май)*

Назух-и тетĕп, Назух мар-и тетĕп.
Эсех иккен, аташăм.
Сывă-и?

Назух

Тем, паллаймарăм эп сана, ыр çыннăм,
Тен, хамăр ялсемех?

Услей

Ку — эп, Услей.
Астурăн-и? Сана ялан ыр суннă
Исков Услей поэт.

Услей Назуха ыталаса илме хатĕрленет. Кайран, тем аса илсе, аллине çеç тăсать.

Н а з у х

Услей?
Исков?.. Епле çул-йĕрпеле кунта эс?
*(Назух аллине каялла илет.)*
Çук, кунта мар, каçар та, кунта мар —
Юлташăмсем те тĕрĕс мар ăнланĕç...
Урам вăл пин-пин куçлă, хăв куран,
Пыр Союза, хам пӳлĕмех, ыран.
Юрать вара, тепре тĕл пуличчен!

У с л е й
*(Хăй тĕллĕн.)*

Назух... Назух чапне çухатиччен,
Чысне çухатĕ.

Назух йӳле янă плащне вĕлкĕштерсе малалла утса каять, ун хыççăн — юлташĕсем. Тăкăрлăка, çурт хыçне çитсен, чарăнса тăраççĕ. Услей урам урлă васкамасăр каялла каçать.

П ĕ р и

Пĕрремĕш хут куратăп Искова, —
Ав, мĕнлескер вăл!

Т е п р и
*(Назуха)*

Хăвăрт, васкавар,
Унран эс уйрăлса пит тĕрĕс турăн.

Виççĕмĕшĕ

Саманисем епле!

Иккĕмĕшĕ

Сыхлать, тет, турă,
Асăрханса пурăнакана.

Назух

Персе вĕлернĕ тетчĕç-çке ăна...

Виççĕмĕшĕ

Эй шăтăк пуç, эй тăнсăр тăмана,
Мансах эп кайнă:
*(Сехечĕ çине пăхса)*
ултăра мана,
Киле çитме каланăччĕ-çке арăм —
Вăрçтарас мар ялан.

Иккĕмĕшĕ

Юрать, каларăн —
Ман хамăн та паян улт сехете
Тĕл пулăва каяс пулать.
Ай, хĕрĕ!
Эсир курас пулсан,
тем шухăш кĕрĕ.

Пĕрремĕшĕ

Каçарăпăр ку каскăн йĕкĕте.
Анчах та пирĕн пек эрех ĕçмесĕр,
Епле аван поэт пуласшăн эсĕ?

Назух

Эп чи малтан сире ак мĕн каласшăн:
Поэт тенин хăюллă пулмалла,
Эсир вара – хăравçăсем – тарасшăн.

Иккĕмĕшĕ

Эп... ун.цăн мар,
Ман, чăн та, каймалла.

Пĕрремĕшĕ

Ĕçме пĕлместĕр янтă эрехе.
Ну, кайăрах – мана нумай лекет.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш çыравçă урампа малалла утса каяççĕ. Назухпа пĕрремĕш çыравçă «Волга» ресторан еннелле çул тытаççĕ. Услей, чăматанне йăтса, хуллен аналалла, Атăл еннелле, утать.

Услей
*(хăй тĕллĕн)*

Чăваш талайĕ!
Вăрттăн та хăравçă.
Хăравçă кĕвĕç чунлă, шеремет.
Чим, ан васка айăплама – çыравçăн,
Манпа пĕр хăрамасăр çӳреме
Нимех те улшăнман-çке тĕнчере!
Кунсем расна та самани – пĕрре.
Йăлт хăратса пĕтернĕ халăха,
Элле ку сулчăлăх яланлăхах?
Кунта та лагерьти пек кайнă пурнăç:
Ни калаçма çынпа, ни курнăçма...
Тăхта-тăхта!

Вăл хăй те ларса курнă,
Шур Шупашкарăн тĕрминче ун чух,
Анчах... мĕнле-ха хăтăлнă Назух?
Унта пĕрре лексессĕн, нихăçан
Статьясăр каялла тухни пулман...
Тавах турра — эп хам çынна сутман,
Илсе çитертĕм чунăма тасан.

Услей пĕр йывăç çурт патне çитсе чарăнать, пусмапа улăхать.

Чим, çакăччĕ пулас хваттерĕм ман.
Тур пулăштăр.
*(Алăка шаккать.)*
Кĕме юрать-и?

Услее хирĕç хура çӳçлĕ, пысăк куçлă 8—9 çулхи хĕрача тухать. Ăна курсан, Услей тĕлĕнсе, ним тума аптраса тăрать.

Х ĕ р а ч а

Да. Кого вам надо?

У с л е й

Килĕрте тата
Кам пур? Аçу-аннӳ ăçта?

Х ĕ р а ч а

Не понимаю по-чувашски я.

У с л е й

Скажи мне, где родители твои?

Х ё р а ч а

Отец из школы не пришел еще,
Вот-вот должна подъехать моя мама,
Она пошла за братиком в детсадик.

У с л е й

А братика как звать-то твоего?

Х ё р а ч а

Сашулей.
Сашей, Ивановым Сашей,
Ему еще четыре года только.
Меня звать Таней, Ивановой Таней.

У с л е й

А по отцу?

Х ё р а ч а

Васильевна, конечно.

У с л е й

А брат тогда твой – будущий Суворов?

Х ё р а ч а

С чего бы это?

У с л е й

Ведь его зовут
Как и Суворова – Александр Васильевич.

Х ё р а ч а

Да нет, он – Нилович, наш Саша.

Услей

А как же так?

Хĕрача

А просто, очень просто:
Отец погиб мой в первый день войны.
*(Стена çинчи хуршăкри сăнӳкерчĕксене кăтартса)*
А это мой второй отец — учитель.

Услей çемьепе ӳкерттернĕ сăнӳкерчĕкре галстуклă арçын çумне таяннă, аллине ача тытнă Çăлпие курать те йăлтах ăнланса илет. Пĕр вăхăт чĕнмесĕр тăрать.

Хĕрача

С чего вы сразу замолчали, дядя?

Услей сылтăм аллипе чĕрине чăмăртаса тытать, сулахайипе хĕрачана пуçĕнчен шăлать.

Вам плохо?
Может, принести воды?

Услей

Спасибо, доченька, — уже прошло.
Ты знаешь? — я очень-очень сильный:
Я сделаю с сегодняшнего дня
Так, чтобы никогда не ныло сердце.

Хĕрача

Вы в сердце были ранены в войну?
Мой папа так же, может быть, погиб...

Услей

Возможно, дочка.
Раненные в сердце
Обычно долго не живут на свете.
Пойду я — слишком долго не идут,
Уж поздно.
Завтра, может быть, приду.

**Услей йывӑҫ ҫӑматанне уҫса унтан кӗмӗл кашӑк кӑларать те хӗрачана тыттарать.**

Услей

Тебе на память это от поэта,
Храни ее и будешь ты хранима.

Хӗрача

Тяжелая такая эта ложка.

Услей

Ӑна аннӳ пилленӗччӗ мана —
Ҫак пурнӑҫа тытан талисмана.

Хӗрача

Что вы сказали? Что за талисман?
Пожалуйста, прошу, переведите,
Не уходите, стойте, подождите.

Услей

Прощай.
*(Хӑй тӗллӗн)*
Придти и вовремя уйти —
Большое это, доченька, искусство.

Услей, иртен-ҫӳрекенсене асӑрхамасӑр, Атӑл хӗрринелле утать. Инҫех те мар пристань курӑнать, аякра – мари вӑрманӗ. Шурӑ карлӑксенчен иртсе ҫыран хӗрне анать, шыв хӗрринче выртакан йывӑҫ муклашки ҫине пырса ларать.

...Хумсем,
Кунҫулсӑр тухнӑ-сарӑлнӑ хумсем,
Е сирӗн те пулать инкек-синкек?
Хаш, хаш, сывлатӑр хуйхӑллӑ ҫын пек.
Хаярччӗ-ҫке эсир, паян ак – кунӗ.
Е парӑнтарчӗ-и совет саккунӗ?
Пӗр хумӗ теприне, ав, ӳкерет,
Мана каллех шала илсе кӗрет...

Пӗр вӑхӑт чӗнмесӗр ларать.

Лисук, Лисук...
Ҫакна иккен, мӑнтарӑн,
Калас, калас тесе те калаймарӑн.
Суя сӑпайлӑх е чӑн-чӑн тасалӑх? –
Иксӗмӗре пӗр пек асапланмалӑх.
Ыратуран, вӗри юратуран
Хӑв хисепне эс хутӑн ҫӳлерех:
Хӑй куҫӗпе хӑй куртӑр та
кайран,
Мана ан ӳпкелетӗр терӗнех...
Ҫӑлпи...
Ҫӑлпи ҫемьеллӗ пулнине,
Мӗн-ма эс пӗлтермерӗн ун чухне? –
Ҫӑмӑлтарах пулатчӗ чӗрене.
Чӑтма та пурӑнма хистенӗ шанчӑк
Паян вутри ялав пек таткаланчӗ.
Кама чӗнес хампа?

Ăçта каяс?
Хум шавĕпе хупланĕ манăн сас.
Ват евĕр йӳçĕ чăнлăх вырăнне
Эллеултавлă шанчăк лайăхрах?
Çук, çук!
Эп халĕ лагерь пурнăçне,
Илемлететĕп ахăр...
Тур çырлах!

Çăлпи çыран хĕррине васкаса чупса анать те Услей патне çитеспе тăп чарăнать. Шухăша путнă Услей хум шавĕпе хăй патне хыçалтан çын çывхарнине сисмест.

Ç ă л п и
*(хăй тĕллĕн)*

Эй, турăçăм, вăл пултăрах...
*(Сасăпа)*
Услей,
Эсех-и ку?

У с л е й
*(Çăлпи енне çаврăнса, лăпкăн)*

Эпех, Çăлпийĕм, эп —
Тĕнче хурне тӳссе çӳрекенскер.

Ç ă л п и

Хавас эп саншăн: сывлăхпа, чипер...
Аван-и?
*(Пырса ал парать.)*

У с л е й

Тем калас — хăв курнă пек.

Услей Çăлпи аллине чылайччен вĕçертмест. Çăлпи Услей кăкăрĕ çине ўкет те чунĕ кўтсе килнипе ĕсĕклесе йĕрет.

Лăплан, Çăлпийĕм,
акă, эпĕ.
Çак мар-и чи кирли?

Ç ă л п и

Çапла, ку — тĕрĕс.

У с л е й

Эс ху тата мĕнле пурăнкаларăн?
Сана та çăмăлах пулман, мăнтарăн,
Ман хыççăн тем те куртăн пуль тўссе...

Ç ă л п и

Тархасшăн, анваскат.
Эс килессе,
Чун сисрĕ пулĕ çав ку яхăнта —
Ларма-тăма пĕлмерĕм вырăнта.
Танюшăра «Исков» тесе йĕрленĕ
Сан кĕмĕл кашăкна курсассăнах
Чĕре тапма пăрахрĕ пулĕ терĕм.
Ав, халь те тĕс кĕмерĕ çут сăна.
Танюша — сан хĕрў, ăнлантăн ахăр.

У с л е й

Ăнлантăм эп пурне те, пĕтĕмпех...

Ç ă л п и

Ун куçĕсем те санăнни пек чакăр,

Сăнран та каснă-лартнă сан пекех.
Сана аса илсе мĕн чул йĕмен-ши
Каç-каç ăна чĕркем çине илсен...

Услей

Каçар мана эс, амăш, халиччен
Вăл çĕр çинче пурăннине пĕлменшĕн.

Çăлпи

Танюша — пирĕн юрату тивлечĕ, —
Тавах турра...

Услей

Мана иртнипеле
Çыхăнтаран пĕртен-пĕрех тĕпренчĕк.
Шăпи анчах ан тухтăрччĕ пўкле.

Çăлпи

Çапла, çапла, — тур сиртĕрччĕ унтан.
*(Кăштах чĕнмесĕр ларнă хыççăн)*
Эп айăплă, Услей, сан умăнта:
Ăнланăн-ши, каçарăн-ши мана?
Сана кĕтсе илменшĕн... илейменшĕн?
Пĕрех хутчен ун чух мана та мĕншĕн
Тытса ямарĕç-ши Колымана —
Йăлт урăхла тухатчĕ самана.

Услей

Çăлпи, ан касăл — эсĕ тĕрĕс тунă,
Тепре качча тухса ... ватăличчен.
Ăçтан пĕлен?

Мана каллех пĕр вунă,
Вунпилĕк çул лартма пултарнă, тен...

Ç ă л п и

Çук, çук!
Эп каласа пĕтерейменрĕм:
Таçта та шыраттартăм — пĕлейменрĕм
Эс ăçтине, эс чĕрĕ пулнине.
Тăвата çул калла анчах хут илтĕм
«Без права переписки» тенине.
Персе вĕлернĕ хыççăн çаплалла
Çырса яраççĕ имĕш...
Хыççăнах,
Пичетлĕ хут та пачĕç ман алла:
«Тарма пикеннĕ пилĕк-улт çынна,
Суд тунă та персе вĕлернĕ».
Эсĕ, Услейĕм,
эсĕ вĕсенчен пĕри —
Документне упратăп-ха юри.

У с л е й

Апла мана пытарнă тахçанах?!
Кам питваскать?
Пĕлесчĕ ман ăна.

Ç ă л п и

Танюшăна «тăшман чĕппи» тесе,
Ан мăшкăллаччĕр-йĕкĕлтеччĕр терĕм:
Хушамата унччен хине илсе,
«Ун ашшĕ вăрçăра пуç хунă» терĕм.
Каçар мана...

Услей

Çук, çук – эс тĕрĕс тунă,
Тавах çăлма пĕлнишĕн ачана.

Çăлпи

Çитменнине, Услейĕм, чунĕ унăн
Санни пекех черченкĕскер, чăнах.
Анчах... анчах, Услей, пĕлесчĕ сан,
Ун чух мана, эп тĕрмерен тухсан,
Текех шкул çывăхне те пыртармарĕç.
Çапла, çĕн хушамат та пулăшмарĕ.

Услей

Сана мĕскершĕн хупмаллаччĕ, мĕншĕн?.

Çăлпи

Сан «ĕçўпе», Услей, сан сăввусемшĕн.
Юрать, Сатуров пулчĕ, çав хăтарчĕ.
Малтан ăна эп путсĕр çын тесеччĕ.
Ăçта вăл халь?
Епле шăпийĕ-карчĕ?

Услей

Персе вĕлернĕ тенине илтсеччĕ...
Шел, тухаймарĕ усала çĕнсе.

Çăлпипе Услей калаçнă вăхăтра аллине кĕнеке тытнă, кĕпе çухине костюмран кăларнă çамрăк çын хум çапса кăларнă çывăхри пĕрене çине пырса ларать. Кĕнеке вулам пекки тăвать.

Çăлпи

Милицире те пулнă-мĕн çынсем.

Çамрăк çын пуçне ялтах çĕклесе пăхать те каллех кĕнеки çине пĕшкĕнет.

Лисукĕ те Сатуровсен маттурччĕ,
Хăюллăччĕ, ялти хĕр пек те марччĕ.
Пĕлетĕн-и, çав вутăш пек Лисук,
Мĕн чул куççуль тăкмарĕ-ши ун чух!
Саватчĕ вăл сана.

Услей

Савать, пĕлетĕп.

Çăлпи

Эп паçăр калаймарăм ниепле те
Сана кăна, Услей, юратнине...
Анчах халь ман — çемье.
Çитменнине,
Лару-тăру та лăпланман йăлтах.
Савватий килнĕччĕ.
Ăна та, авă,
Тепре тытса ăсатрĕç йăпăртах.
Вăт çаплалла калас текен калавăм.
Каçар мана, ан ÿпкеле...

Услей

Мĕскер эс?
Сана ÿпкелеме ман ирĕк çук.
Саманине кура тăватăн тĕрĕс,
Малашĕ пултăр, ăнтăр пурнăçу.

Çăлпи

Мана ăнланнăшăн рехмет сана —
Ÿссе çитерехпе Танюшăна

Эс чĕрĕ иккенне хамах пĕлтерĕп,
Вăл халь те кăшт чухларĕ пуль-ха терĕм.

Услей

Ман айăппа текех, Çăлпийĕм, шан —
Куну, çулу синкерлĕ пулмĕ сан.
Телей ванчăкĕнчен — эп ăнланатăп —
Пуçтарайман хитре шăпа никам та.
Çапах та пур ман татăклă ыйту:
Çăлпиçĕм, эсĕ ман тĕпренчĕке,
Тархасшăн, çынсенчен айван ан ту —
Чăваш чĕлхи вăл — ман тăван чĕлхе,
Ăна Танюшăна вĕрентмеллех.
Епле-ха унсăр?..

Çăлпи

Эс, Услей, каллех,
Калатăн хăвăнне унчченхиллех.
Пĕр çавăншăн асап курмарăн мар-и?
Шăп çавăншăн кунçулăмăр ăнмарĕ.

Услей

Анне чĕлхипеле кăшт калаçсан
Ăшчик канать, пылпа кулачă çинĕн.

Çăлпи

Анчах, шутла-ха, Канашран тухсан
Каллех эс выçă. Малашне мĕн çийĕн?

Услей

Тăван чĕлхе мана сӳнме памарĕ
Хăрушă шартлама сивĕсенче.

Таса чĕлхемĕр – чĕрĕлĕх тымарĕ –
Юн таппилле тапать сăввăмсенче.
Хĕлхем чĕлхем ыран пĕтет тесен,
Паян вилетĕп эпĕ, ĕненсем.
Хăй ашшĕ чĕлхине, Çăлпи,
ăнлан эс –
Танюша пĕлмесен – пире ылханĕç.

Ç ă л п и

Лăплан, Услейĕм.
Пурте пулĕ лайăх.
Анчах халь ун çинчен калаçмалла-и?..

У с л е й

Тата мĕн юлчĕ-ши калаçмалли...
Çăлпи, унта ман сыхланса юлман-и
Костюм тавраш, çулла тăхăнмалли?
Капла ытла начар çипуçăм манăн
«Çĕвет» çине тухма.

Ç ă л п и

Паллах, паллах,
Мĕн-ма аса илмен ăна хамах.
Костюмĕ те, шлепки те вĕр-çĕнех,
Илсе килсе парам-и вĕсене?

У с л е й

Эс киличчен пирус туртса илем эп.

Ç ă л п и

Каçар, Услей, сана хампа илеймĕп,

Эс ăнланатăн мĕншĕнне. Киле
Чупса кайса килетĕп эп халех.

Çăлпи васкаса утса каять, çаврăнса пăхать. Услей, кĕсйинчен махорка енчĕкĕ кăларса, васкамасăр чикаркка чĕркет, туртса ярать.

У с л е й
*(хăй тĕллĕн)*

Мĕн тупнине çухатасран хăрать.
Эп — ытлашши. Текех иккĕленместĕп.
Саманине кура шăпи кăра:
Тĕрĕссипе, телейсĕр эп те, эс те.
Çăлпи, Çăлпи, Çăлпи!
Пĕр çаврăм юррăм,
Юрларăм та — пĕтертĕм юрласа.
Кашнин — хăйне: мана — поэзи-туррăм,
Сана ак — тӳсĕм кӳлнĕ тур лаша.
Мĕнпур пулни-иртни юхан шывла
Хăй çыранне питех те килĕшӳллĕ:
Ниçта та йăнăш çук пек. Кимĕ çулĕ
Тăхлан пек йывăр юхăм май шăвать.
Асра тытса синкерлĕх хăватне
Çăлпи те, ав, йĕркеллĕ пурнăç тунă.
Мухтамалла анчах — хушаматне
Улăштарса-туса качча та тухнă.
Танюшăна çăлма та ăс çитернĕ:
«Мана вăрçа илсе кайса вĕлернĕ...»
Пурне те тĕрĕс тунă вăл, эппин,
Çакна ăнлантăм ăсăмпа эп тин.
Çапах та мĕншĕн чунăм ыратать,
Иккĕленӳллĕ туйăм вăратать?
Ăçта сăлтавĕ ун?

Ăçта явапĕ?
Чун тĕпĕнче ахах шыратăп эпĕ.
Çăлпи, эс ăслă, ăслă — сăмаху...
Çук, ăспа мар, чунпа юратмалла,
Лисук пек — ухмахла, йăлт манмалла!
...Анчах, Çăлпи, сан айăпу-ши ку?..

Кĕнеке вулакан çамрăк патне тепĕр каччă, МГБ сотрудникĕ, пырса тăрать. Вĕсен калаçăвĕ Услее илтĕнмест.

М Г Б  с о т р у д н и к ĕ

Çатма çинчи пек çак Шупашкарта —
Йĕп çухатсан та тупăн, ахăртнех.
Парас пулать леш поэтне пăртак,
Çур литрлăх хотя бы, сых ятне.

Ш у р  ç у х а л л ă  к а ч ч ă

Аван ĕçлет вăл халлĕхе, аван,
Ӳсĕртерех пулсан та — аптраман.

Услей патнелле утаççĕ. Шухăша путнă Услей хăй патне икĕ çын пырса тăнине асăрхамасть те.

Сăмси патне çитсен те хăнк тумарĕ —
Курмасть-и?
Хăлхаран витĕрех мар-и?

М Г Б  с о т р у д н и к ĕ
*(çирĕп сасăпа)*

Кăтарт документна!
Ăçтан эс, кам эс?

Услей
*(мăкăртатса)*

Кунта та ирсĕрсем памаççĕ канăç.
*(Хăюллăн)*
Эсир камсем вара тĕрĕслеме?

Шур çухаллă каччă

Епле вĕреннĕ вăл хирĕçлеме!

Услей

А-а, эс-и ку?
Паçăртанпах ларатăн,
Виле кĕтен çăхан пек сăнаса.
Пуçтарăнатăр майĕпен...
Куратăн,
Нихçанхинчен те чĕрĕ эп, усал.

МГБ сотрудникĕ
*(хĕрлĕ кĕнекине кăтартса)*

Ак çак документа эс курнă ахăр?

Услей

Курса, курса.
Ман документăм акă –
Саккунлă йĕркепе эп ирĕкре.

МГБ сотрудникĕ
*(Услей документне алла илсе)*

Саккунлă тетĕн?.. Ак, çӳлерехре
Штамп кирлĕ хулана килни çинчен.
Ку – нарушени.

Услей

Эп килнĕренпе
Мĕнпурĕ те ик-виç сехет иртмен.

МГБ сотрудникĕ

Постой, постой!
Кунта сан пирĕнпе
Çапла тăма та право çук иккен:
«Запрещено в столице проживать!»
Как будто эс ăна пĕлмен пулать.

Шур çухаллă каччă

Йăт ещĕкне! Халь пирĕнпе пыратăн.

МГБ сотрудникĕ

Тухса кайма вуник сехет паратăп.

Услей хула еннелле пăха-пăха илет, Çăлпие чăтăмсăррăн кĕтет.

Шур çухаллă каччă

Ут хăвăртрах!
Поэт, епле айван эс —
Ямаççĕ сан патна текех ăна.

МГБ сотрудникĕ

Унта полковник Кĕверки Иваныч
Ытарайми кĕтсе ларать сана.

Виçĕ çын çыран çине улăхса пыраççĕ. Услей — варринче. Тĕл пулакан çынсем вĕсенчен пăрăнса иртеççĕ.

## Иккĕмĕш картина

Вăрман хĕрри, уçланкă. Инçех мар хуçăлса-чĕрмеленсе пĕтнĕ кукăр-макăр вĕрене – Киремет йывăççи – каркаланса ларать. Уçланкă улăхпа, хирпе пĕрлешсе каять. Çырма авкаланса юхать, аякра йăмраллă ял курăнать. Хĕвел тухман-ха. Услей, пăрçа хуралçи, кивĕ кĕрĕк уртса янăскер, васкамасăр утса уçланкăна тухать.

Услей

Салам сана, пĕр татăк çăкăр пек
Пĕр лаптăк тутлă-тутлă тăван çĕрĕм.
Тӳрре килет-шим тӳрĕ мар çул-йĕрĕм
Сăвап Кĕнекинче каланипе? –
Каллех кунта эп.
Тав турра мана,
Илсе килнишĕн çакă вырăна.
Йĕрес килет – çемçетрĕм чунăма:
Чалăштарах карттуслă сар хырсем те,
Шап-шур тăла чăлхаллă хурăнсем те
Чечексене хăймаççĕ таптама.
Çынра çук çынлăх пур иккен вĕсен,
Çакна курмаççĕ-шим çынçиенсем?
Нимех те улшăнман.
Апла пулсан,
Çул шутламашкăн çăмăл та, ансат та:
Пурнăçăмри асаплă та асатлă
Пĕр теçетке çула илсе прахсан,
Кайман та тейĕн эпĕ çакăнтан,
Мухтавăм та виçеллĕ, хампа тан...
Ун чух та аслă çимĕкчĕ. Епле
Çавăрăнатчĕ чĕрĕлнĕ Эллада!
Несĕлсене асра тытса калатăп:

Тĕнче, чăвашăн юррине итле,
Этемлĕх таврăнать çамрăклăхне
Ун кĕввипе вăййа тухас чухне.
Сар савăнăç çул иртнĕçем сӳнсе
Пулать-шим тунсăх тĕссĕр тутăр евĕр?
Унччен янрань савăнăçлă кĕвĕ
Ура айнех, ак, ӳкрĕ сĕвĕнсе.
Ах, Вăхăт! Вăхăт хăйĕннех ĕçлет,
Калла каймашкăн ĕнтĕ çук меслет...

Çывăхрах турат çатлатса хуçăлни илтĕнсе каять. Услей пуçне çĕклесе пăхать те вăтам çулхи хĕрарăмпа 8-9 çулхи арçын ачана курать. Вĕсем — çапă, хăрăк турат пуçтарма килнĕ Сухвипе ывăлĕ.

С у х в и

Çын пур иккен кунта.
Эпир курман та...

У с л е й

Ан хăрăр, эпĕ ку.

С у х в и

Услей пичче?
Сывах-и?
Пăраçник пуçланиччен
Кăшт çапă пуçтарасшăн хыпалантăм.
Ытти чух вăхăт çук — ĕçлемелле!
Куç курмиччен, чун тухиччен ĕçлемелле!

У с л е й

Ку йĕкĕтлер мĕн ятлăччĕ-ха тата?

А р ç ы н   а ч а

Энтюк.

С у х в и

Энтюк.
Мĕнле пулсассăн та
Пĕччен пулмашкăн шиклĕ вăрманта.

У с л е й

Хуçалăха пĕр пулăш ачаран.

С у х в и

Ачи маттур вăл манăн.
Ашшĕ унăн —
Мĕн тăвăн — килеймерĕ вăрçăран.

У с л е й

Телей тени пĕрре те — эпĕр вуннăн...

С у х в и

Вăрçи пĕтсен те ĕнтĕ халăха
Кăшт сывламалăх çăмăллăх пулмарĕ.
Ĕçлетпĕр кунĕн-çĕрĕн кăлăхах —
Ĕçкунь пуçне кĕрепенкке памарĕç.
Çур пăт вирпе чуна ăçтан усран?!
Пайтти пулса пĕтмерĕ калхусран.

У с л е й

Вăрман хăлхаллă, йывăç евитлет:
Çак сăмахна текех, Сухви, итле,
Ниçта та, никама та ан кала.

Сухви

Каламасан — епле-ха чăтмалла!
Çак хăрăк туратсемшĕн те, тытсан,
Ним шелсĕр штраф тӳлеттереç пулсан...

Услей

Чăтас пулать, Сухви.
Ĕмĕрлĕхех
Хĕвел тухмасăр тăмĕ çакăн пек.

Сухви

Услей пичче, тем сывă мар пек эсĕ,
Çавна калас тесеттĕм курсанах.

Услей

Çук, аванах туятăп.
*(Шӳтлерех)*
Уйăх тĕсĕ
Ӳксе шуратрĕ пуль хура сăна.

Сухви

Мĕн калăн? — шуратать пуль шухăш та...

Арçын ача

Атя, анне, атя киле каятпăр.

Сухви

Каятпăр, ывăлăм. Тата кăштах,
Çуршар çĕклем пухатпăр та каятпăр.
Сыв пулăр халлĕхе, Услей пичче.
Каяр кунтан хĕвел хăпариччен.

Сухвипе ывăлĕ çĕклемĕсене йăтса малалла утаççĕ. Утнă май чарăна-чарăна тем калаçаççĕ. Услей вырăнĕнчех ларса юлать, васкамасăр чикаркка чĕркет.

Арçын ача

Анне, эс мĕншĕн унпала калаçрăн?

Сухви

Çынпа епле калаçмăн-ха, ачам.

Арçын ача

Вăл тĕрмере те пулнă...

Сухви

Ах, анчах!
Çын сăмахне ĕненме çук хальхаççăн,
Те тĕрĕс вăл, те тĕрĕс мар пачах...

Арçын ача

Эпир унран хăратпăр пурпĕрех.

Сухви

Ара, усал туман-çке вăл пире?!

Арçын ача

Ялан хирте çӳрет, килне каймасть —
Кăштах пăрçа та вăрлама памасть.

Сухви

Пăрçа хуралласси — ун ĕçĕ-çке!
Ахаль — çынни вăл питĕ ырăскер.

А р ç ы н а ч а

Вăл ман атте пек ма вăрçа кайман?
Çӳренĕ тĕрмере, таçта тарса.

С у х в и

Ай-юй, ачам, ку кам сăмахĕ сан?
Никутник, хăлхуна татап пăрса.

Сухви ывăлĕн хăлхине пăрам тесе аллине тăсать, лешĕ тарса ĕлкĕрет.

Каланă пул халех!

А р ç ы н а ч а

Пире ăна
Каланăччĕ учитель.
Петĕр Яккăльч,
Хăрах ураллăскер.

С у х в и

Ах, яккăльч-маккăльч!
Шăпи ахаль те йывăр, тупата,
Вăл, намăссăр, элек сарать тата.
*(Ывăлне хăтăрса.)*

Тепре кăна илтем, тепре кăна —
Пăрса tatatăп çивĕч хăлхуна!
Услей пиччӳ поэт вăл. Ӳлĕмрен
Хăв пуçупа шухăшлама вĕрен.

Сухвипе ывăлĕ вăрмана кĕрсе çухалаççĕ. Услей чикаркка мăкăрлантарса ларать.

## Услей

Ара, ун чух хам мар-и йĕркелерĕм
Çĕр çывăрмасăр хамăр калхуса?
Çынна чухăнлăхран хăтарăп терĕм,
Ял-халăх пултăр терĕм хăй хуçа.
Элле Кетокки тĕрĕсех калать
Калхус çынна çаратмалли тесе?
Эп пур — туй-çуллă сăвăсем хайланă
Такмак виçипеле кĕвĕлесе...
Апла эп тунă крепостное право?
Чура, чăн-чăн чура Сухви те, авă.
Епле тасаччĕ вăл, епле хитреччĕ!
Ытла та кăмăла çĕклентеретчĕ...
Услей, Услей...
Тен, йăнăшатăн эс?
Çитет, тек ун çинчен пуплес килмест.

Услей кĕрĕкне хул хушшине хĕстерет те Киремет йывăççи еннелле утать.

Ха, ютшăннă иккен эп çынсенчен,
Пĕччен пулас килет.
Çын куçĕнчен
Аяккарах...
Тĕнче лăпланиччен.

Киремет йывăççи патĕнче пĕр хĕрарăм пĕшкĕне-пĕшкĕне илни курăнать.

Чăнах та çав, чăваш ытла ĕçчен:
Кăвак çутпа тăрать те мĕн каçчен
Кану мĕнне пĕлмесĕр ĕç ĕçлет,
Çаплах, сисмесĕр, кунçулне вĕçлет.

Ку çын та вăрттăн пуçтарать-мĕн çапă,
Турат хуçмашкăн вăйĕ çук ав, — ларчĕ.
Тен, пулăшас?
Чим-чим!
        Пулмари çакă
Хыçал касри Шӳпке, тухатмăш-карчăк?
Вăй патăр, кинеми!

Карчăк Услее асăрхамасть, илтмест. Мăкăртатса, чӳк чĕлхипе хăй сăмахне малалла тăсать.

**К а р ч ă к**

Çав Петĕр Яккăльчăн чирĕсене,
Чун кирĕкне те çылăхĕсене
Эй, ырă Киремет, ил ху çине.
Эс — манăн хунтăшăм, çăлсам ăна,
Пар çăмăллăх, пар чĕптĕм канăçна.
Эс ан шиклен — паян та аслă çимĕк,
Яланхиллех хура аçа çапса,
Каллех чĕреслетсе ăш çумăр çăвĕ,
Сана каллех хăварĕ тасатса.
Эй, аслă Киремет, сана пиртен,
Ак, тутлă кучченеç,
                хитре парне.

Карчăк юсманĕпе пĕрле йывăç кутне çăмарта хурать, аялти тураттинчен чечеклĕ тутăр çыхса ярать.

Сан аслă кăмăлна тивĕçтерме
Ак ăшă юн шăрши...

Хăяккăн выртакан, урисене тăллană, çунаттисене çыхнă автана кукăр çĕçĕпе пусма тăрать.

Услей

Илтмерӗн, тен?
Вӑй патӑр терӗм эпӗ, асанне.

Карчӑк

Кам пулчӗ ку? Тьфу, тьфу!
Енчен енне,
Вӗрсе сурсан Кепе каҫараканччӗ.

*(Вӗрсе сурать.)*

Чӳк, чӳк!
Ӑна, автан юнне,
Килте кӑларайсан та юраканччӗ.

Тухатмӑш-карчӑк автанне хул хушшине хӗстерет те Киремет йывӑҫҫи тавра пӗрре хӗвеле май, тепре хӗвеле хирӗҫле ҫаврӑнать, вӗрӳ-суру чӗлхипе тем мӑкӑртатать. Хӑй пекех кукӑр алтуйипе темле паллӑсем туса, ял еннелле сулӑнать.

Эй, аслӑ Киремет, каҫар мана,
Эс айӑп ту йӑла пӑсакана.

Услей чикарккине тирпейлӗн, ывӑҫӗ ҫинче сӳнтерет. Киремет йывӑҫҫи патне ҫывӑхарах пырать.

Услей

Ҫапла, ҫынсем, ҫапла пурнатпӑр эпӗр:
Юхан-шӑтансене, чир-чӗрсене,
Йӑла тытса юнпа, чунпа сиплетпӗр —
Вӑл каҫарать. Вӑл — ырӑ Киремет,
Этемлӗх ҫылӑхне хӑйне илет.
Анчах пӗлетӗр-и эсир, ҫынсем? —

Унра çĕр çылăх пухăнса çитсен,
Хура аçа çапать ăна.
Ак эпĕ
Пĕр тапхăр çакăнта пулман чухне,
Çимĕксерен аçа çапнин хисепĕ
Пинрен те иртнĕ пулĕ, ахăртнех:
Пин кукăрлă вăл халь, армак-чармак,
Асат хуçса пĕтернĕ карчăк пек.
Пĕччен Пуласлăх — çутă коммунизм —
Эс мар-и пирĕн аслă Киремет? —
Çынсем хаваслăн тунă йăнăш пусăм,
Аçа чул евĕр сан çине ӳкет.
Эс пĕчĕк çулпуççен çылăхĕсемшĕн,
Явап тытсах сисмесĕр пĕчĕклентĕн.
Шанас-и ман, шанассăм килмесен те,
Ăна тепре çĕкленессе çынсемшĕн.
Эй, Киремет-идея, сан çине,
Мĕн чухлĕ çакнă пуш сăмах-парне!
Йĕркесĕр ирĕкре те, тĕрмере те,
Янрать вăл халь мухтав юрри пулса,
Янрать, янрать ыраттарса пуçа.
Асав шăлĕсене ĕрет-ĕретĕн,
Кăларнă Кремль.
Киремет енне
Çулпуç çĕкленĕ хăрăк аллине.
Ăçта эсир Пуласлăх ачисем —
Киремете пама тивĕçнисем?
Хăшне сиртен çĕрле тыта-тыта
Пăрахрĕçĕ вута.
Хăшсем тата
Ялав тытса хăйсен ирĕкĕпех
Пуçхĕрлĕн чăмрĕç камикадзе пек.
Элле Киремете татах юн кирлĕ?

Пăла тулли пĕвеннĕ шыв юхать,
Куç тытайми тем пысăкăш хĕп-хĕрлĕ
Чӳклевçĕ хĕвелне йăтса тухать...
Ăçта эсир халхавлă вăхăтра,
Пуласлăха ĕненнĕ ĕçтешсем?
Е сапалатăр вăй-хăватăра
Çаплах пĕр-пĕринпе тӳпелешсе?
Тынов, Алтынов, Кириле Расай,
Ах, ылтăн пуç Васков, эсир ун чух
Мана Киремете тытса парса
Малашлăхшăн тумарăр-и учӳк?!
Шутларăр пулĕ, чынлă тетесем,
Истори çакăнпа пĕтет тесе,
Çук, чарăнмарĕ вăхăт.
Шалкăм çумăр
Çӳп-çап антарнă пек çӳлти касран
Пире пĕрлех юхтарчĕ урăм-сурăм.
Тӳре тытса тухаймăн чăнлăхран:
Эп хам та çветтуй мар.
Анчах та хамăн
Çылăхсене Киремете сунман,
Ик ĕмĕр пурăнас тесе такамăн
Юнĕпеле аллăмсене çуман.
Хăçантанпа! Таçта, таçта çитсен те
Хам хĕресе хамах йăтса çӳрерĕм.
Тен, çавăнпа эп ывăнтăм, ĕшентĕм? —
Урасене туртать ав тăван çĕрĕм.
Чи! чилетет саркайăк — ишĕлет,
Асаилӳ купи. Тĕл-тĕл кĕсенлĕ,
Хура та таса мар ал йĕррисемлĕ
Пĕр катрамкки ура айнех ӳкет.
Сахъя Ярмужевна!
Эсрелĕн хĕрĕ,

Ăçтан вĕçсе эс антăн Чăваша?!!
Шаман шалкăмĕпе эс кунĕн-çĕрĕн
Мĕн сыхласа çӳрен, мĕн шыраса?
Чап кирлĕ-и сана е пысăк влаç-и?
Ухват ура, лаша сăн-питлĕскер,
Эс, ăшă юн ĕçме вĕреннĕскер,
Паян та юншăн юнăхатăн, выçă.
Пуласлăхсăр, Çĕршывсăр, ĕненӳсĕр
Пурнатăн, савăнатăн çĕр çинче
Ăш сĕткенне ĕмсе кӳпшенĕ пӳсĕр
Çӳренĕ пек ача пыршисенче.
Чи! чилетет саркайăк –
сăрт калать,
Ак тепĕр катрамкки:
те чул, те пылчăк.
Кам пулчĕ ку «юлташ» тени, кам пулчĕ?
Умра тăван чăваш –
тăван палач
Гаврилов Кĕверки тăра парать.
Чăтăмсăррисене чăмлать ие,
Кĕвĕçекенсене кĕве çиет...
Чăваш, чăваш!
Элле çак çĕр çинчен
Пăчланăн-пĕтĕн хăвна ху çисех?!
Мĕн ыйтăн катăкрах тарçăсенчен,
Çынçиенсем пулсассăн хуçисем...
О Тавăру, Тасалăх!
Çитĕ вăхăт,
Вăл килетех – хаяр та тӳрĕ сут –
Пире персе, пăвса пăрахнă сăхă,
Чĕтре алпа пăваймăр тепĕр хут.
Е ун чухне те, сут тума тăрсассăн,
Тӳрре тухмашкăн тупăр-и хурав?!

Кар! тăрăр та кар! кăшкăрăр пĕр саслăн:
«Эпир, эпир саманине кура
Кĕрешнĕ мар-и сирĕншĕн, çап-çутă
Пуласлăхшăн мĕнпур вăй пĕтиччен?..»
Тен, бронза кĕлеткен те куçĕнчен
Суя куççулĕ тухĕ – сарă тутăх.
Палач пулнишĕнех, сисетĕп эп,
Ун чух, тен, ыйтăр пенси, чап, хисеп.
Поэт, поэт!
Синкер влаç умĕнче
Гном евĕр эсĕ: вăйсăр, пĕчĕкçеççĕ.
Сăмах чĕнме-и?
Ав, хыр тăрринче
Аманнă выльăх ўкессе кĕтеççĕ
Хура пĕлис сăхманлă çăхансем.
Кша-кша, кша-кша, виле çиекенсем!

Услей хĕвĕнчен кăранташпа хут туртса кăларать те васкамасăр сăвă çырма пуçлать, ăна саспа вулать.

Пăлхар вăхăтĕнчи çут çăлтăрсемĕр,
Сире пухса ыйтам-и пĕр сăмах?
Мĕскершĕн чăнлăх кĕçĕн виçĕ ĕмĕр,
Ултав вара виç ĕмĕр аслăрах?
Тĕнче яланлăх.
Улшăну та уншăн
Хăйне тытса тăмалăх мелĕ çех.
Тĕрĕслĕхе самантлăх влаçшăн, мулшăн
Сутса яракансем те çавсемех.

Çырма чарăнать те пĕр вăхăт шухăшлăн ларать. Вара каллех хăй калаçăвне тăсать.

Пурне те ăнланатăп халь.
Пĕрех
Улăштараймăп пурнăçа, мĕн тăвăн...
Хам вăйсăрришĕн халсăр ăшчикре
Йăсăрланать шалтан тивертнĕ ăвă.
Кунçул лавне тапса туртни кăштах
Хавшатрĕ чĕрене, хевте пĕтет.
Мĕне сиссе? —
шур ут пек шухăш та
Пĕр çаврăм пурнăçа пĕтĕмлетет.
Виçесĕр, шутсăр, вĕçсĕр вăхăта,
Çеккунт çине талт-талт тапан чĕре
Уксах сехет пек.
Вăтăр çиччĕре,
Элле юлатăп эп яланлăхах?
Турат çине — те юлашки сăмах,
Те манăн чун? —
пĕр кайăк вĕçсе ларчĕ...
Чим, тайăлать тĕнче.
Ах, ӳкес марччĕ.
Хальччен пуçтарăннă кунсем-çулсем
Качи-мăчи чулсем пек тăкăнаççĕ.
Мĕскер ку?
Шурă шупăрлă çынсем
Хура çăварлă авăра анаççĕ...
Аюк!
Çак симĕс курăк тунинчен
Тытса юласчĕ...

Услей, аллипе сывлăшран тытас пек, пĕр еннелле тайăлать, майĕпен тĕшĕрĕлсе анать. Кăштах вăхăт иртсен, Киремет йывăççи патне каллех Сухвипе унăн ывăлĕ Энтюк çаврăнса тухаççĕ.

Сухви
*(хӑй тӗллӗн)*

Ҫук, ырра мар ку — ҫаплипех выртать.
*(Услее.)*

Выртса канма шутларӑн-им, пичче?
Пуҫелӗкне хурам-и? —
ҫӗр туртать,
Ҫитменнине, ак Киремет панче...

Энтюк

Анне, анне, чирленӗ вӑл.

Сухви

Эй, турӑ,
Сӑн-пичӗ те ун пурӑ пек шап-шурӑ.
*(Услей умне кукленсе ларать.)*
Энтюк, ачам, чуп хӑвӑртрах яла,
Лаша кӳлсе вӑшт ҫаврӑн каялла.
Тӑхта, ҫул май килне кӗрсе кала.

Энтюк

Ҫиччас, анне.

Сухви

Энтюк, ан тӑр ахаль...

Ача ял еннелле чупса каять, Сухви
Услее кӗрӗкӗ ҫине сӗтӗрсе вырттарать, ниҫта кайса кӗме
пӗлмесӗр ӑшталанать.

Тути ҫине пӗр кашӑк шывччӗ халь.

Сухви упаленсе икĕ ывăҫĕпе те сывлăм пуҫтарать. Услее сыптарать, ун тăнлавне йĕпетет. Услей майĕпен тăна кĕрет, куҫне уҫать. Тем каласшăн асапланать.

Сив уйăх шывĕнчен усси пурах:
Чĕлхи ҫине чĕм килчĕ — тав турра.
Кала, Услей пичче, эс тем каласшăн...

У с л е й
*(вăйсăррăн)*

Сухви... Эсех-и ку?
Сухви, тархасшăн,
Ҫырса пĕлтер ăна. Ун адресне
Эс тупăн сăвăсен кĕнекинче.

С у х в и

Кама пĕлтермелле, Услей пичче?
Калаймăн-и ятне, хушаматне.

У с л е й

Лисук ун ячĕ...
Сывпуллашнă чух,
Эп пĕлтермешкĕн пулнăччĕ ăна...
Сухви, тĕнче сӳнет.
Сыв пул, Лисук...

С у х в и

Эс аташатăн халь, кĕрсем тăна.

У с л е й

Мана... мана анне ҫумне пытарăр,
Леш тĕнчере выртам хăть хӳтлĕхре...

Услей пуҫне лӑнках ярать. Сухви ним тӑвайман енне каллех сывлӑм пуҫтарма тытӑнать. Анчах ку ӗҫ пӗтӗмпех усӑсӑр пулнине ӑнланса илет те ӗсӗклесе йӗрсе ярать. Паҫӑрхи пӗчӗк кайӑк ҫаплипех васкаса чилетет.

Сухви
*(аллисене тӳпенелле ҫӗклесе)*

Ҫук, ҫук! Ку – тӗлӗк.
                Ку вӑл – курӑнать...
Эй, Пӳлӗхҫӗм!
                Мӗскершӗн, мӗншӗн эсӗ,
Ахаль те ӑраскалсӑр чуруна,
Вӗлертӗн чӗптӗм совӗҫе пӗлмесӗр?!
Эй, Пӳлӗхҫӗм, кун хыҫҫӑн ман сана
Епле ӗненмелле, епле?
                Кала!
*(Аллисене вӑраххӑн антарнӑ май)*

Эй, Турӑҫӑм, каҫар, каҫар мана –
Шуйттан кӑшт арпаштарчӗ пулмалла.

Сухви Услей пуҫӗ вӗҫне чечексем татса хурать. Унтан, тем аса илнӗ пек, Киремет йывӑҫҫи енне ҫаврӑнать.

Ара, паян чӳк кунӗ, Ҫимӗк кунӗ!
Анчах та, аслӑ, ҫӑткӑн Киремет,
Услей пиччен таса та ырӑ чунӗ
Сана валли ытлашшипех парне...

Урапа кӑлтӑртатни, ура сасси илтӗнсе каять. Сухви Услей кӗсйинчен сӑвӑ тетрадьне туртса кӑларать те саппун кӑкӑрлӑхне пытарать. Сукмак кукринче пӗчӗк урапа туртнӑ Энтюк килни курӑнать.

Э н т ю к

Лаша памарĕç те, ак, кӳршĕрен
Ыйтса эп илтĕм çак урапана.

С у х в и

Мĕн урапи, ачам? Çак тĕнчерен
Халь тин нимех те кирлĕ мар ăна.
Нимех те кирлĕ мар...
Эй, пурнăç, пурнăç!
Ăçта çитсе ăçта ӳкессине —
Тур çырнине — кам пĕлнĕ те кам курнă.
Услей пиччӳн çут çăлтăр пек куçне
Мана хупмашкăн пӳрнĕ-мĕн...

Э н т ю к

Анне,
Услей пичче валли ял Советне
Милицинчен темле хут килнĕ терĕç.

С у х в и

Мĕн терĕн эс, ачам?
Э, тĕрĕс, тĕрĕс:
Пит шăрăх, пăчă иртенпех паян,
Апла каллех, каллех кăнтăрларан
Кĕтсех тăр шалкăм çумăр çăвасса,
*(Киремет йывăççи енне çаврăнса)*
Сана та аçа çаптăр, иçмасса!..

В ĕ ç ĕ.

## ХĂРУШЛĂХСĂР ХĂРУШĂ МАР-И?

(*Чăваш АССР КГБ председателĕпе Валерий Ямпольскийпе Николай Исмуков писатель калаçать)*

Çапла, темĕн çинчен те калаçрăмăр çак юлашки пилĕк çул хушшинче. Хитре те, хивре те калаçма вĕрентĕмĕр. Усси те çав кăна пулчĕ-ши эпир кĕтнĕ те эпир савнă Перестройкăран?

Куран куçа курми туса лараймăпăр ĕнтĕ текех: экономика, юн чăмакки-тромб чĕре патне çывхарнă пек, чыхăна-чыхăна кайни пирĕн ӳт-пĕве те чĕтретет. Çуралсанах вĕчĕхсе-кĕвĕçсе-тăвăнса пурăнакансем хăйсен наркăмăшлă чĕлхисене ирĕке ячĕç, вĕсен хушшинче – чирлĕ çынсем, «кенисем»; теприсем, чеерехисем обществăна тытса пăрахнă, шалкăм çапнă вăхăтра влаçа кĕрсе ларма васкарĕç; виççĕмĕшсем, темĕнле элек-мелек кунсенче те хăйсене çырлахуллă та сăпайлă тытма хăнăхнăскерсем, чунĕсене ăстăвăм хыçне пытарчĕç: поэт калашле, асту, –

> Этемĕн чунĕ – япала халькаççăн –
> Кăтартсанах, туртса илме пăхаççĕ.

Пуласлăх моделĕ çук, ĕненӳ çук. Ырана йĕркеллĕ пурăнса ирттерес тесен, паянхи çур куна çур кило çăнăхшăн черетре тăрса ирттермелле, виçми куна пĕлес тесен – юмăç ямалла, гороскоп пăхмалла. Ăçтан шанăн-ха Пуласлăха, пĕрне-пĕри те шанмастпăр пулсан! Пĕрне-пĕри те автан виççĕмĕш хут авăтиччен сутса яратпăр пулсан! Ĕлĕкхи грексем çынна усал суннă

чух, ăна ылханса: «Самана улшăннă вăхăтра пурăнмалла пултăр санăн», – тенĕ. Пĕр сăмахпа – кризис, экономика, политика, культура кризисĕ. Пĕлменлĕх, чухламанлăх, тавçăрусăрлăх. Анчах чун-чĕре кризисĕ перестройка кризисĕнчен чылай хăрушăрах... Тепĕр май шухăшласан, тен, самана улшăннă вăхăтра кăна личность тени палăрать?

Çĕршывăм тăрăх пы-ы-сăк кустăрма кустарса янă та умри мĕнпур япалана таптаса аркатса пырать тейĕн: ниепле те чарма çук ăна, – мĕн тăвăн, – сулăм-инерци вăйĕ. Ăçта çитиччен кусĕ вăл хăй хыççăн кĕл хăварса?

СССР халăх депутачĕсен 1-мĕш съездчĕ вĕçленсе те ĕлкĕрейменччĕ-ха ун чухне: эпир Н.В. Федоровпа, РСФСР юстицин хальхи министрĕпе, хавхалануллă калаçу ирттернĕччĕ (*«Ялав», 1989, 10 №*). Мĕн чухлĕ шанчăк, мĕн чухлĕ ĕмĕтчĕ пирĕн: СССР Конституциĕн 6-мĕш статйине пăрахăçласанах Çĕршывăмăр çĕнелсе, çунатланса каяс пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленместĕмĕрччĕ. Статйи те манăн «Калаçрăмăр та ирттертĕмĕр тесе калас марччĕ» ятлăччĕ. Чун сиснĕ пуль çав...

Çук иккен, чăрмавĕ коммунистсен партийĕнче кăна пулман иккен. Çиччĕ виçсе пĕрре касатпăр теççĕ-ши пур шайри Верховнăй Советра кунĕн-çĕрĕн – тырпула çăлмалла кунсенче те вĕт-ха! – съезд, сесси, пуху, лару, тĕлпулу (тата мĕн пур-ха пухăнса лармалли май?) ирттереççĕ çĕнĕ хуçасем, çăвăр автансем пек, тĕк вĕçтерсе.

Ăçта паянхи инкекĕн сăлтавĕ? Тен, перестройкăна уйрăм пуçаруçăсемпе кăна туса ирттерме хăтланнинче? Тен, ăна çиччĕмĕш пĕлĕтре ларакан парти çыннисене шанса çеç мар, пĕтĕм халăх ăстăвăмĕ çине таянса, партин çĕр çинче, льготăсăр, взнос тӳлесе пурăнакан

аслă ушкăнĕн шалти вăй-халĕ, хатарĕ çине таянса иртермеллеччĕ?.. Халь ĕнтĕ, чăваш калашле, чавса çывăх та çыртма çук.

Социализм идейине тапăнма пуçларĕç. Камсем? Чи малтан, ун кĕвелĕкĕпе йӳçсе хăпарнисем.

Социализм тенĕрен, ăна халиччен «социализм лагерĕнче» шутланнă çĕршывсенчи пулăмсемпе пĕрешкеллетме кирлĕ мар. Социализм идеалĕ Т. Кампанеллăпа Т. Мор вăхăтĕнчен чылай малтан çуралнă. Вăл канлĕхе мар – танлăха, тĕрĕслĕхе, йĕркелĕхе пĕлтернĕ. Çавна та астумалла: идеал вăл – шухăшри кермен, ăна ĕмĕр-ĕмĕр юсаса тӳрлетсе хитрелетсен те: «акă ĕнтĕ пĕтĕмпех, пур енчен те лайăхлатса çитертĕм» теме çук. Çитмĕл тăватă çул иртрĕ. Паян социализмра пурăнмаллаччĕ: ĕçлемесĕрех çителĕклĕ пурнăçпа рехетленсе пурăнмаллаччĕ, мачча çине сурса, кăвапана сăтăрса çеç выртмаллаччĕ... Çак ĕмĕт пурнăçланманни тарăхтарать ахăр нумайăшне. Мĕнле пăтрансан та, малалла туртакан лайăх пурнăç идеалĕ патне таврăнатех этемлĕх. Социализм идейи таса, эпир суйласа илнĕ меслетсем çеç таса мар пулнă.

Шыв юхать те юхать, арман кустăрмине çавăрттарать. Анчах пушăлла çавăрттарсан, чун мар, арман чулĕ те хăйăрласа пăсăлать: халь эпĕ радиона та, телевизора та çĕнĕ ăслайсем вĕрентсе калаçнă чухне лăпкă совеçпех чарса лартатăп. Çитет, тулса çитнĕ...

Çулваррипе утма вĕренеймерĕмĕр ĕнтĕ эпир: пĕр енне сулăнка çапать те лава йăвантарса ярать, мекĕрленсе çĕклетпĕр те тĕрте-тĕрте тепĕр енне йăвантаратпăр... Айкашатпăр вара çапла начар хресчен пек. Демократи чарусăрлăха куçрĕ, каярахпа демократурăна куçĕ-ши? «В России никогда не будет демократии» (*Руссо*). Ăсчах та турă мар, паллах, çапах та сăра ĕçсе

ларнă чухнехи сăмах та мар ку. Чиркӳсене пĕтертĕмĕр те – халь акă вĕсене акăш-макăш мухта пуçларăмăр. Хăçанччен? Влаç çирĕпленичченн-и, халăх лăпланиччен-и? Официаллă йĕркепе тĕн уявĕ туса пачĕç. Политикăлла акт... Пачăшкăсем паянхи саманана ырлаççĕ, ырламасăр!.. Ман вара, поэтăн, поэзие лавр кăшăлĕ тăхăнтартас вырăнне йĕплĕ пуçкăшăлĕпе хĕстернĕшĕн тав тумалла-и саккун кăларакансене? Пуç çĕклейми налук хуракансене? Çав вăхăтрах, авă, инçетри Çурçĕрте кооператорсем юхха хĕрарăмсем валли çурт лартма 2 миллион тенкĕ уйăрса параççĕ. Укçи-тенки кам аллинче пулсан та – халăхăн-çке.

Анчах – йĕрке кирлех. Çăкăр пек, сывлăш пек кирлĕ вăл пире паянхи лару-тăрура. Магазинсенче тĕркешер-тĕркешер талон тытса тĕркĕшекен халăх çех мар, влаçсем «косынка» парса ирĕксĕр эрех ĕçтерсе урмăштарнă çынсем те йĕрке тумалли çинчен «леш хитре» сăмахсемпе вырăнлă усă курса, пикенсех калаçаççĕ.

Çапла, перестройка турти пире хытах пырса тиврĕ. Çапма пĕлмен пушши теççĕ-и-ха ун пек чух? Анчах çак çурхи шыв пек çырансăр юхакан самана варринче Патшалăх Хăрушсăрлăх Комитечĕ (*ПХК, вырăсла КГБ*), «çавра тинĕс варринче çавра утрав, çавра утрав варринче ылтăн тӳре» пек пăхса ларать. Ман шутпа, хальхи вăхăтра йĕрке тытан органсенчен чи таси – суту-илӳн «хыçалти курниципе», спекуляципе, коррупципе, тĕрлĕ шайри мафисемпе, хальхи пурнăçăн тата ытти тӳнтер енĕсемпе çыхăнманни. Анчах мĕн ĕçлесе пурăнать вăл паянхи лару-тăрура? Çĕршывăмăрта йĕркесĕрлĕх хуçаланнă чухне тем кĕтсе ларни илем кӳмест-çке. Е эпир ун ĕçне-хĕлне, хăйне уйрăм ĕç меслечĕсене пĕлместпĕр те курмастпăр? Ара, ĕлĕкрех, «халăх тăшма-

нĕсене» тупса палăртнă чухне, питĕ хастарлă пулнă-ҫке вĕсем.

Ҫук, туймасть мар «ылтăн тӳре» «Аргументы и факты», «Комсомольская правда», «Литературная газета» тата ытти (вĕсен шутĕнче Мускавра листовка пек тухса тăракан вак-тĕвек те) хаҫат-журналсенчен кӳ! те кӳ! килекен вĕри сывлăш хумне. Верховнăй Советăн икĕ комитечĕ тата 100 ытла СССР халăх тепутачĕ КГБ ĕҫне-хĕлне тĕпчес тесе хистени мĕне пĕлтерет? Чĕнмесĕр тăни пур чухне те ылтăн-ши? Йăнăш ан ăнлантăр вулакан: ку сăмахпа эпĕ «ваше слово, товарищ маузер» тесшĕн мар. Тур сыхлатăрах.

Мĕн пытарса тăмалли пур: КГБ тесен пирĕн асăмăра 37-мĕш ҫул тухса тăрать. Тухса тăрать те — тăпах чарăнать, вăхăт унтанпа нимĕн чухлĕ те шуман тейĕн. КГБ ĕҫне-хĕлне, мĕн пĕлнĕ таран, 37-мĕш ҫул виҫипе-шайĕпе виҫместпĕр-и эпир? «Эффект большого события» теҫҫĕ ăна философире. Вăхăт тĕлĕшпе аякка кайса пынăҫем, пространство тĕлĕшпе ҫывăхаратăн. Япалан вăрттăнлăхĕсене пĕлсе пынăҫем, вăл пысăкланса пырать, ăна ҫывăхарах та ҫывăхарах курма пуҫлатăн. Анчах тепĕр енĕ те пур ку пулăмăн: япалана ытла ҫывăхран пăхсан, вăл хăйĕн кӳлепине, чиккине ҫухатать...

Хăй вăхăтĕнче репрессие лекнĕ ҫынсен хушамачĕсене «Коммунизм ялавĕпе» «Советская Чувашия» хаҫатсем халь пуртенкке тăршшăшер пичетлеҫҫĕ: кашни хушамат — асаплă пĕр шăпа. Чăваша таҫта ҫӳлтен вĕҫсе аннă Эсрел М. Сахъянова тăрăшнипе 1937-мĕш ҫулта кăна 445 ҫынна айăпсăр ҫĕртен персе вĕлернĕ, 2900 ҫынна тĕрмене хупнă. Чăвашăн чи ĕҫчен те ăслă-пуҫлă ывăлĕсене тĕп тума шутланă пулас. Вĕсен хушшинче — партин чи шанчăклă ĕҫченĕсем, поэт-писательсем...

Геноцид. Миттана, Ахматована, Шаламова, Солженицина, О. Волкова вулатăн та «репресси» сăмах «НКВД-ГПУ» сăмахпа пĕр пĕлтерĕшлĕ пулса каять. Вăхăт иртсен те, çав органсем тĕпрен улшăннă пулсан та, асăннă синоним картинчен ниепле те тухаймастпăр-ха эпир.

«Сĕвем-сĕвемĕн сăввăм манăн
Шур юр çине чĕр юн тумланăн
Пăчăртанса тухать чунран.
Вилсен те сурĕ ман суран», –

тесе çырнăччĕ эпĕ «Митта» поэмăра.

... Мана кунта лайăх кĕтсе илчĕç пулин те, шикленӳллĕ иккĕленӳллĕ кăмăл-туйăмпа кĕтĕм эпĕ республикăри КГБ председателĕ В.Б. Ямпольский пӳлĕмне. Патшалăх умĕнче те, халăх умĕнче те, никам умĕнче те айăпа кĕмен эпĕ халиччен, сăввăм-юррăмсене те тăван çĕре юратса, тасамарлăха питлесе çырнă. Аттем те иртнĕ вăрçăра Çĕршывăма хӳтĕлесе пуçне хунă. Çапах та, хаклă вулаканăм, ку çуртра çветтуй та канлĕ туймĕ хăйне. «Çурри шӳт, çурри чăн», – терĕм паллашнă май Валерий Борисовича хамăн çак самантри шухăшкăмăла пĕр пытармасăр. Хирĕçтăруллă еккĕм çĕнтернине пула пĕрремĕш ыйтăвăма та дипломати майне-шывне уямасăрах патăм. Тепĕр тесен, кĕретлĕх вăхăтĕнче те сăмаха куçкĕрет каламасан, хăçан ал тутрине тута çинчен илĕпĕр? Ман пуçа кăна пырса кĕмен пуль-ха кун пек ыйту. Анчах хăйпе пĕр танлă çынпа калаçнă пек вĕçне çитичченех тарăхмасăр калаçма чăтăмлăх çитерейĕ-ши вăл манпа?..

– Шалти ĕçсен Министерствин, КГБ, прокуратурăн капмар çурчĕсем республика тĕп хули варрине вырнаçнă. Мĕн ку? Ĕлĕкхи тоталитарлă-диктатурăллă патшалăх наци чĕри çине çапнă тамха-и? Нумай пулмасть

эсир тата тепĕр пысăк çурт хăпартса лартрăр, халĕ ак картишĕн сылтăм енче хушма çурт çĕклетĕр. Апла, Валерий Борисович, перестройка (хаспати, сăмахĕ те алран алла çӳренĕ вак укçа пек якалса кайрĕ-çке) Хăрушсăрлăх службине аслăлатма ыйтать? Сотрудниксен шутне те ӳстермелле пулĕ-ха тен, çивĕчрех те лайăхрах ĕçлеме тивĕ малашне?

— Хисеплĕ Николай Аверкиевич, сирĕн ыйтусенче, — вĕсен çеммине, интонацине шута илсе калатăп, — кăштах йĕплесе илес тĕллевпе (сарказмпа) пĕрлех малтанах шутласа-ĕненсе хуни те пур. Кăмăлăр пулсан, эпир сирĕнпе хăвăра интереслентерекен пур ыйтупа та калаçăпăр, КГБ çуртĕнчи пур пӳлĕмсенче те пулăпăр, пирĕн сотрудниксем еплерех условисенче ĕçленипе паллашăпăр. Вара, тен, хытарнă кăмăлăра та улăштарăр.

— Предвзятость тенĕрен, мĕнле калас, вăл ман — çук мар, анчах çав чарăнса тăнă сисĕм мана питех улталакан марччĕ. Сарказмĕ вара — пахучĕпех. Сисекенни сисет, сисейменни шăхăрса юлать, çав кăна хăтарать тепĕр чухне...

Хăрушсăрлăх Комитечĕн çурчĕ-йĕрĕ. Ĕç пӳлĕмĕсене кĕрсе тухрăмăр, ăнкараймарăм: Валерий Борисович те мана сотрудниксемпе паллаштарчĕ, те сотрудниксене — манпа?! Иккĕмĕш хута хăпармалли картлашка тӳрех пĕр стенда тĕллесе уттарать: иртнĕ вăрçăра вилнĕ чекистсен сăнӳкерчĕкĕсем. Кĕтмен çĕртен паллана хушамат — Шитов, асапçă, Миттана «урнă йытă пек туллаканни». Çук иккен, йăнăшрăм: ку урăххи. Лешĕн, Розанова персе пăрахнă хыççăн кăшт вăхăт иртсен, шалçи тулнă. Унччен хи çак хисеплĕ вырăнта Политбюро членĕсем ларнă иккен. Пĕчĕк деталь, анчах нумай пĕлтерĕшлĕ. Манса каяс марччĕ.

Акă правительство çыхăнăвĕн çурчĕ, гараж, ар-

хив. Пуху ирттермелли пĕчĕкçеç зал. Пӳлĕмсенче икшерĕн-виçшерĕн лараççĕ, эпир кĕрсе тăрсан, çаврăнса тухма çук. Сотрудникĕсем – чăн-чăн интеллигентсем: калаçупа та, хăйсене хăйсем тыткаланипе те. Мĕн калăн, милици мар ĕнтĕ. Путвалти пӳлĕмре виçĕ сĕтел лартмалăх столовăй. Пичет çуртĕнчи столовăй апат-çимĕçĕпе танлаштарас пулсан, кунта – начар.

Тултан, урамран капмар та мăнаçлă, хулăн стеналлă курăнса ларакан çуртăн ăшчикки ирĕк те мар, пуян та мар.

– Çапла, Валерий Борисович, кăмăлăм чăнахах та улшăнчĕ. Сирĕнпе пур ыйтупа та пĕр шухăшлă мар пулсан та, эпĕ халь сирĕн оппонентăр çеç мар. Анчах çырса кăтартнипе кăна ĕнентерме пулĕ-ши тулашĕпе ăшчиккине шайлашуллă курма хăнăхнă чăваша?

Пӳлĕмрен пӳлĕме, пĕр хутран тепĕр хута çӳренĕ май, Чăваш писателĕсен съездне килнĕ пĕр тутар поэчĕн сăмахне аса илтĕм. Ун чух, рескомăн иккĕмĕш хутĕнчи столовăйне апата кайнă чух, темиçе кукăрмакăр коридорпа утрăмăр. Ман иптеш унталла-кунталла питĕ тимлĕн пăхса пырать.

– Реском керменĕсем пур çĕрте те пĕрех мар-и, мĕн çĕнни куртăн, ара? – ыйтатăп хайхискертен.

– Ман кунтан каялла тухмалла-çке, çулне астуса юлас тетĕп, – хуравлать поэт.

Эпĕ те асра тытсах пытăм каялла çула. Тĕрĕссипе, мĕн аташмалли пур кунта: сулахаялла пăрăн та сылтăма çаврăнса кĕмесĕрех, тӳрех, кавир сарнă коридорваррипе ут.

... Статйине çырăп-ха, анчах самани эхер те мехер çитес пулсан, çак аслă коридорпах утса тухайăпши?..

Пуçланă калаçăва председатель пӳлĕмĕнче малал-

ла тăсатпăр. Валерий Борисович сăмахне пӳлмесĕр итлесе ларатăп.

— Йĕрке тытса пыракан органсен тĕп хула варринчи административлă çурчĕсене тоталитарлă патшалăхăн хăйне евĕр пичечĕ тенипе йăлтах килĕшесшĕн мар эпĕ. Ку вăл ĕлĕкрен-авалтан килекен хула архитектурин йăли-йĕрки. Аса илĕр-ха литература классикĕсем çырса кăтартнă хула сăн-сăпатне: губернатор çурчĕ, дворянсен керменĕ, полицмейстер, суд, патшалăхăн тата ытти атрибучĕсем.

Влаç вăл влаçах — унăн капашĕ-ячĕ мĕнле пулсан та — ăна хӳтĕлекен-сыхлакан институтсен тĕллевĕ пĕр. Влаç вĕсене хăй çывăхнерех вырнаçтарать — шанчăклăрах пултăр. Çаксене шута илсен, пирĕн республикăри Хăрушсăрлăх Комитечĕн çурчĕ тĕп хуламăр варринче, Советсен çурчĕ çывăхĕнче ларнишĕн тĕлĕнмелли çук.

Эпир, чăнах та, тепĕр çурт хăпартатпăр. Ăна эсир пирĕн сотрудниксен йышĕ ӳсме пултарнипе çыхăнтарнăччĕ. Çук, йăнăшатăр. Хăвăрах куртăр: пирĕн виçĕ хутлă çурт тултан аванах курăнать пулин те, шалтан юхăнса çитнĕ, пӳлĕмсем тăвăр. Калас пулать, халь туса пĕтерекен çуртра та комфорт пулмасть. Унта правительство çыхăнăвĕн техники вырнаçмалла. Çыхăну техники кунран-кун аталанса пырать, унăн çĕнĕ модификацине кивĕ çурт текех тивĕçтереймест. Кам усă курать тетĕр-и çав çыхăнупа? Палах, эпир хамăр, СССР Патшалăх Хăрушсăрлăх Комитечĕ, оборонăпа çыхăннă хăшпĕр министерствăсем, предприятисем. Çак çурта тума вĕсене укçа-тенкĕ уйăрса, строительство хатĕр-хĕтĕрĕсене парса пулăшнă. Çурт хакĕн пиллĕкмĕш пайне Республика Министрсен Совечĕ тӳленĕ, — ара, вăл та усă курать-çке правительство çыхăнăвĕпе. «Иртенçӳрен куçне тăрăнакан çак çурт пирки», — сирĕн

сӑмахӑр, Николай Аверкиевич, — урӑх нимӗн те хушса калаймӑн. Ӑнланмалла ӗнтӗ, ӑна пирӗн сотрудниксен шучӗ ӳсес планпа туман.

Проектировщиксемпе калаҫса татӑлса, эпир пысӑках мар спортзал тӑвасшӑн картишне урлӑ хушма ҫуртра. Халлӗхе хулари тӗрлӗ предприятисен спортзалӗсене тӳлевлӗ йӗркепе ҫӳретпӗр. Хӑйӗн ӗҫне-хӗлне тӗплӗн пӗлни ҫителӗксӗр пирӗн сотрудникшӗн, унӑн ҫирӗп сывлӑхлӑ пулмалла, кирлӗ чухне усӑ курма кӗрешӳ меслечӗсене алла илмелле. Унсӑрӑн епле хӳтӗлеме пултартӑр-ха вӑл халӑх влаҫне.

— Валерий Борисович, миҫе сотрудник шутланса тӑрать сирӗн штатра!

— Шел пулин те, вӗсен шутне пӳрне хуҫлатсах калаймастӑп. Офицерсем 150 ҫынран кӑшт ытларах, оперативлӑ ӗҫрисем унтан та сахалтарах.

— Районсенче те, ытти хуласенче те пулӗ-ха вӗсем сирӗн!

— Пур. Комитет уйрӑмӗсем Ҫӗнӗ Шупашкарта, Ҫӗрпӳре, Канашра, Ҫӗмӗрлере, Улатӑрта, Куславккара та Красноармейски районӗнче ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенче кашнинчех 5-шер офицер, Ҫӗнӗ Шупашкарта ҫеҫ ытларах.

— Сирӗн сотрудниксен шалӑвӗ пысӑк теҫҫӗ халӑхра. Хӑйсене пулӑшакансене тӳлеме те ирӗклех тыткалаҫҫӗ имӗш укҫи-тенкине?

— Ҫук, тӗрӗс мар. КГБ сотрудникӗсене Совет Ҫарӗн офицерӗсемпе танлаштарнӑ. Апла пулсан, вӗсене должность шалӑвӗ ҫумне званишӗн хушса тӳлеҫҫӗ. Ҫавӑ ҫех. Сӑмахран, аслӑ лейтенантран пуҫласа майор таран 300-400 тенкӗ илеҫҫӗ. Шутласа пӑхӑр-ха хӑвӑрах, нумай-и ку, сахал-и хальхи вӑхӑтра? Тата ҫакна асра тытмалла: КГБ офицерӗ Ҫар уставне пӑхӑнать, унӑн 25 ҫул хушши службӑра тӑмалла, ӗҫ кунӗ вара — ир

пуçласа каçчен. Эрнере икĕ кану кунĕ пирки нумайăшĕ ĕмĕтленме кăна пултарать.

— Хăвăрах пĕлетĕр, Валерий Борисович, пирĕн хулара хваттер ыйтăвĕ — пĕрремĕш ыйту... Чăваш çамрăкĕсем çырма-çатрасенче пурăнаççĕ, ачисене ача сачĕсене вырнаçтараймаççĕ. Сирĕн сотрудниксен ку тĕлĕшпе хуйхи-суйхи çук ĕнтĕ...

— КГБра ĕçлекенсен пурнăçĕ пыл та çу тесе шутлаççĕ-ши. Пирĕн сотрудниксем пурте хваттерлĕ теме питĕ йывăр, дефицитлă тавар илесси çинчен шутламалли те çук. Ачасене ясли-садсене вырнаçтарма та кашни хутĕнчех хула ĕçтăвкомне пуççапмалла. Калăрха, Николай Аверкиевич, эпир апатланакан подвалти пÿлĕме столовăй теме пулать-и? Апатне «Центральнăй» ресторанран унти хакпа илсе килетпĕр. Куратăр ĕнтĕ, эпир те хула çыннин пĕтĕм «ырлăхне» чăтса пурăнатпăр. Юрать-ха, сотрудниксен ашшĕ-амăшĕсем чылайăшĕ ялта пурăнаççĕ, — вĕсен пулăшăвĕ çăлать тепĕр чухне. Льгота-çăмăллăхсем? Çук вĕсем пирĕн, Çĕршыв умĕнчи тивĕçĕмĕр кăна пур.

— Тавах сире хăвăрăн пурнăçăрпа тĕплĕн паллаштарнăшăн. Чăн сăмахăн суйи çук: эпĕ, çынна çур сăмахранах ĕненме пăрахнăскер, кун çинчен сирĕн сотрудниксемпе маларахах та калаçса пĕлнĕччĕ.

Юлашки вăхăтра, каларăмăр ĕнтĕ, КГБ ĕçĕ-хĕлĕ çинчен, пăр тапранса кайрĕ темесен те, хускатсах тăраççĕ. Вăхăчĕ çитнĕ. Кĕркунне, авă, «Советская Чувашия» хаçатра сирĕн сотрудниксем колхоз-совхозсене çĕрулми кăларма кайни çинчен çырнăччĕ. Демократизаци витĕмĕ патшалăх системине тăвар касса кĕнĕ пек вăхăтра шкул ачи шайĕнче çырнă çак хыпар мана, савса каласан, Сармантейĕн сар чăххи кăтăклама пуçланă пек çеç туйăнчĕ.

Пур тĕрлĕ патшалăх та обществăран тухнă. Анчах пурте вĕсем, – хăшĕ çӳлерех, хăшĕ тата та çӳлерех, – халăх ирĕкĕнчен тухса çĕкленнĕскерсем. Патшалăх, тĕрĕссипе каласан, хуçалăха йĕркелесе пыракан, çĕршыва ют вăйсенчен сыхлакан институт çеç мар. Вăл – çынсем пĕр-пĕринпе çапăçса пĕрне-пĕри вĕлерсе пĕтересрен сыхлакан, тавлашăва виççĕмĕш тӳре пек тĕрĕс татса паракан вăй та. Патшалăх тĕллевĕ – уйрăм çынсен, ĕç коллективĕсене, классен, нацисен кăмăлтуйăмне, тĕллевне, интересĕсене пĕр параллелограмлă туртăма кĕртесси. Çук, ку – «общий знаменатель» текенни мар. Çак тилхепесене патшалăх мĕн чухлĕ çирĕп, анчах та вăхăтлă-вырăнлă карăнтарать, вăл çавăн чухлĕ халăха çывăхрах, хисеплĕрех. КГБ хăйĕн тĕллевĕпе, ĕç содержанийĕпе – патшалăхăн виçĕ тĕп атрибутĕнчен пĕри. Халăх хисеплесе-юратса ĕçлекен, халăха хăйне те хисеплесе-сыхласа тăракан орган пулнă-и вăл халиччен? Хальхи саманара еплерех?

Нумаях пулмасть «Советская Чувашия» хаçатра сирĕн заместительпе калаçнине пичетленĕччĕ. Унта вăл «общественность пире ушкăнланнă преступниксемпе (организованная преступность) кĕрешнĕ чухне пулăшмасть» тенĕччĕ. Епле-ха капла, халăх хăйне хĕсĕрлекенсене хирĕç кĕрешекен органсене пулăшасшăн мар? Е. Калашников сăмахне ĕненес-тĕк, партин вырăнти организацийĕсем те ăнланасшăн мар çак ырă ĕç пĕлтерĕшне, милици те кăмăлламасть.

«КГБ – хушнине пурнăçлакан, ĕçе кĕртекен влаç. Президент республикăсенче йĕрке хытармалли васкавлă самант (чрезвычайное положение) йышăнсан, Хăрушсăрлăх органĕ хăй мĕн тумаллине тăвĕ», – тенĕччĕ СССР Хăрушсăрлăх Комитечĕн председателĕ (*«АиФ», 1990, 52 №*). Каллех «ман айăпăм çук, эпĕ при-

каза çеç пурнăçланă» тейĕпĕр-ши? Ара, М.С. Горбачев та ĕмĕрлĕх Президент мар. Ун вырăнне кăра та пуçтах çын килсен? «Не сотвори себе кумира» тенĕ Сăвап кĕнекинче. Эпĕ, сăмахран, хам ирĕклĕхĕн пĕр пайне епле хисеплĕ çынна та парас çук. Кашни уйрăм çыннăн, коллективăн, организацин хăйтĕллĕнлĕхĕ пулмалла пек-çке.

Халăх шухăш-кăмăлĕпе КГБ хушшинче дистанци юлашки вăхăтра кĕскелсе пырать пулин те, вăл — пур. «Эп хам — пин çын, пин-пин чĕре» тееймесен те, мана кăна çапла туйăнмасть пулĕ ку.

Ман шутпа, КГБра демократи йĕрки çĕнтерни вăл халăх патне таврăнни пулать. Уйрăм класăн, уйрăм партин, уйрăм çыннăн тĕллевĕсене пурнăçа кĕртни мар — халăх интересĕсене хӳтĕлени. Критери текенни çакăнта çеç. Ара, «демократи» сăмахĕ те демос (халăх), кратос (влаç) тенине пĕлтерет-çке. Мĕнле меслетпе, мĕнле майпа, мĕнле йĕркепе? — ку хушма ыйту çеç. Çапла мар-и, Валерий Борисович?

— Çаплине çапла та, çапла та мар пуль. Юрать, йĕркипе калам. Эпир çĕрулми пуçтарма тухнă пирки куçкĕретех тăрăхлатăр вĕт, Николай Аверкиевич. Çавăнтах тата КГБ халăхран уйрăлнă, унăн демократийĕ чи малтан — халăха çывăх пулнинче тетĕр. Логика пур-и çакăнта?

— Каçарăр, Валерий Борисович, эсир ку ыйтăва тăрăхлани вырăнне йышăнатăр пулас. Çĕрулми кăларнă чухне ял халăхĕпе пĕрле пулни эсир халăха çывăх пулма тăрăшнине пĕлтерет, паллах. Анчах паянхи саманашăн ытла та пĕчĕк пĕлтерĕшлĕ информаци мар-и ку? Çавăнпа пуçламаллаччĕ-ши? Ытарлă каласан, хайхи Сармантейĕн сар чăххинчен халь ылтăн çăмарта кĕтетпĕр-çке.

– Эпир хамăра халăхран нимĕн чухлĕ те уйрăлман тесе шутлатпăр. Йывăр вăхăтра тырпула çăлма пулăшни те эпир халăх ĕçĕ-хĕлĕнчен, нушинчен пăрăнманнине пĕлтерет. Эпир сирĕнпе пур кабинетра та пултăмăр, – камсем вĕсем çав çамрăк офицерсем? Хресченпе рабочи, инженерпа пултарулăх интеллигенцийĕн ачисем. Вĕсен йăх тымарĕсем те халăхран пулсан, епле-ха эпир хамăр халăхран уйрăлса кайнă пулать? Халăх вăй памасан, пулăшмасан, Патшалăх Хăрушсăрлăх Комитечĕ хăйĕн ĕçне туса пырайĕччĕши? Хуравĕ паллă: пултараймасть.

Юлашки вăхăтра, чăнах та, Хăрушсăрлăх органĕнче пулса иртекен демократилле ĕç-пуç çинчен сăмах хускатсах тăра пуçларĕç. Унччченхипе танлаштарсан, эпир чылай уçăлтăмăр: пресс-конференцисем ирттеретпĕр, интервьюсем паратпăр, тĕрлĕрен ĕç коллективĕсемпе тăтăшах тĕлпулусем йĕркелетпĕр, çамрăксемпе шкул ачисене шефла пулăшу паратпăр. Кĕретлĕх тапхăрĕнче урăхла пурăнма та май çук. Пирĕн пата килсе çӳрекенсем те нумайланчĕç: шкул ачисем, журналистсем, пур шайри халăх депутачĕсем, интеллигенци çыннисем. Эпир вĕсен ыйтăвĕсене, контрразведкăн хăшпăр енĕсене пырса тивекеннисемсĕр пуçне, тивĕçтеретпĕр.

– Сăмахăр тĕрĕс, Валерий Борисович. Сирĕнпе эпир пĕр хутчен çеç мар тĕл пултăмăр, калаçрăмăр, çӳрерĕмĕр. Эпĕ тӳрремĕн панă ыйтусенчен те пăрăнса иртмерĕр эсир.

Урăхла епле пултăр-ха вăл: лекторăн е журналистăн халăх умне тухас пулсан, хăй калас тенинчен виç хут нумайрах пĕлмелле-çке. Ун чухне тин çынна ĕнентерме пултаратăн.

– Пирĕн органсенчи демократи аталанăвĕн тепĕр

енĕ вăл – хамăр коллективри ырă улшăнусем. Ун ҫинчен, паллах, эсир пĕлсех каймастăр. Тен, вăл кашнинех кăсăклантармасть те пулĕ, ҫавăнпа сăмаха вакласах та каймăп. Ҫакна ҫеҫ каласа хăварам: эпĕ коллектив руководителĕ пулнă май, кашни сотрудник хăйне личность пек туйтăр тесе хамран мĕн килнине йăлтах тăватăп. Устав йĕркине демократин хальхи аталанăвĕпе килĕшӳллĕ тума паллах, ҫăмăл мар, ма тесен, устав хушни тепĕр чухне демократи принципĕсене хирĕҫлет. Еплерех шайлаштарса пыратăп-ха эпĕ вĕсене? – ăна коллектив хак парĕ.

– Килĕшмелле ҫеҫ мар, ырламалла та сирĕн ҫак ҫынлăхлă тĕллеве. Демократи чи малтан маншăн та – этеплĕ ҫын ирĕклĕхĕ. Валерий Борисович, кашни учрежденирех чи курăмлă вырăнта политбюро членĕсен капăрлатнă санӳкерчекĕсем кĕпĕрленсе лараканччĕ. Сăнаймарăм-и тем, курăнмарĕ сирĕн ун пек стенд.

Нумаях пулмасть КГБ та, ҫĕршыври ытти пур тĕрлĕ институтсем пекех, Коммунистсен партийĕн аппаратне пăхăнса пурăнмастчĕ-и-ха? Ун витĕмĕ, халĕ те туйăнсах тăрать. Мĕн каласси, КГБн ҫӳлти эшелонĕ, тĕпрен илсен, парти, ЦК аппарачĕн шкулĕ витĕр тухнăскер. Уйрăм шайри офицерсем вара парти витĕмĕнчен тухасшăн. «Комитет госбезопасности остается в руках руководства КПСС страшным оружием в борьбе со своим собственным народом. Поэтому нужна департизация в армии, КГБ, МВД и других правоохранительных органах», – тесе ҫыраҫҫĕ сăмахран, «Комсомольская правда» хаҫатра СССР Патшалăх Хăрушсăрлăх Комитечĕн Тĕп управленийĕнчи аслă офицерсем. Шухăшламалли ҫук мар кунта.

Калăпăр, Патшалăх Хăрушсăрлăх органĕ Коммунистсен партийĕн витĕмĕнчен тухса пĕтĕ, урăхла

партисемпе çыхланмĕ. Верховнăй Совета, Президента кăна пăхăнса тăрĕ. Анчах малашне те нумай сăмахлă Верховнăй Совет саккунĕсем çеç мар, Президент указĕсем те сенĕкпе шыв çине çырнă пек çеç пулсан, КГБ нихама пăхăнман, тытса чармалла мар тилхепесĕрйĕвенсĕр вăй пулса тăмĕ-и?

Паянхи лăпкă мар лару-тăрура чекистсен тасалăхне, тӳркăмăллăхне шанас та килет манăн, анчах, сых ятне, ан тив, парти (вăл, ĕлĕкрех репрессилле функцие тĕп вырăна хунăскер, çĕнелсе-тасалса пынине шута илсе) витĕмĕнчех тăччăр вĕсем. Çавăн пек ман шухăшăм.

Чим, çав аслă офицерсен вĕрентекенĕсем партипе алла-аллăн, килĕштерсе, 37-мĕш çул туманччĕ-и-ха? Пасар пĕрле те таварĕ уйрăм... Мĕншĕн пĕрлех чăтса ирттерес мар йывăр вăхăта? 73 çул ытла социализм идейишĕн пĕрле кĕрешнĕ хыççăн 74-мĕш çулĕнче, алăсене çуса, пăрăнса кайни, вĕçкĕнленсе каласан «некорректно».

Пĕр поэт сăмахĕ аса килет:

> Ан çут эс çурта сар хĕвел тухнă чух, –
> Çутти ун мĕлке ӳкермелĕх те çук.
> Хăвна чăн-чăнах тус теетĕн пулсассăн,
> Эс пул-ха манпа эпĕ айăпла чух.

Партие эпĕ нихăçан та уйрăм çынсен, – тăхăр çынран тăракан партбюро-и вăл, генсек-и, – шайне антарса лартман. Çавăнпа унран эпĕ паян та, партие асар та писер тустарнă чухне те, сивĕнмен. Мана вăл хăшпĕр çынсене карьера картлашки çине кутĕклесе хăпартнă пек, çĕклемесен те, ачашламан пулсан та – сивĕнмен. Принцип çеç-и кунта?

Çĕршыв улшăнать, тĕнче улшăнать, анчах «ылтăн

юпа çинчи ылтĕн тӳре» саккунĕсем-йĕркисем çеç улшăнмаççĕ. Паянхи лару-тăрăва кура тата Хăрушсăрлĕх органĕсенчи тĕрлĕ шухăшсене шута илсе КГБ çинчен саккун йышăнма та кая юлмасть-и-ха СССР Верховнăй Совечĕ?

— Çапла, эпĕ те сирĕн пекех шутлатăп: СССР Верховнăй Совечĕ Патшалăх Хăрушсăрлăхĕ пирки саккун йышăнма васкаманнине тӳрре кăларма çук. Çĕршыври лару-тăрăва тĕпрен улăштарма, ăна вăхăтра юсамалайăхлатма тата ытти нумай саккунсем те йышăнмалла. Пĕр-икĕ сăмах парти аппарачĕпе КГБ хутшăнăвĕсем çинчен. 1990 çулччен центрти КГБ та, эпир те парти руководствине пăхăнса тăраттăмăр. Патшалăх тата обществăлла организацисем те, вĕсен шутĕнче творчество союзĕсемпе тĕрлĕрен институтсем те, вĕсене пăхăннă. Урăхла пулма та пултарайман, мĕншĕн тесен Коммунистсен партийĕ Патшалăх тилхепине те тытса пынă. Иртнĕ çуркуннерен вара, СССР Конституцийĕн 6-мĕш статйине пăрахăçланă хыççăн тата тепĕртакран тĕрлĕ-тĕрлĕ партисем йĕркеленсен, лару-тăру сисĕнмеллех улшăнчĕ. Тĕрлĕ платформăллă, ориентациллĕ политикăлла партисем, халăх вĕсене ăнланасса-пулăшасса шанса, влаç илме васкарĕç. Кĕр кунĕ кĕтментуман япала, сюрприз, илсе килчĕ — халĕ партисем мар, парламентсем влаçшăн кĕрешме пуçларĕç. Вĕсем, хире-хирĕç те хирĕçтăруллă ыйтусем йышăнса, Çĕршыва йĕркесĕрлĕх, аркату патне илсе пыраççĕ. Ку вăл уйрăмах экономикăра сисĕнет, йĕркесĕрлĕх çимĕçне паян кашниех тутанатпăр эпир. Çак хăвăрт улшăнса пыракан политика калейдоскопĕнче КГБ, ман шутпа, пĕртен-пĕр тĕрĕс çул суйласа илчĕ: Союз шайĕнче — Президента, Верховнăй Совета, вырăнта — республика Совечĕсене пăхăнса ĕçлет. Паллах, хамăр

саккунсенчен, тепӗр чухне ҫӗнӗ ситуаципе килӗшсе тăрайманскерсенчен те, тухмасăр.

– Сирӗн сотрудниксенчен чылайăшӗ коммунистсем. Ҫапла мар-и? Парти ретӗнчен тухнисем пур-и?

– Ҫапла, пирӗн хушшăмăрта коммунист маррисем питӗ сахал. Парти ретӗнчен тухас текен пӗрре кăна тупăнчӗ. КПСС XXVIII съезчӗн решенийӗсем халăх интересӗсене нимӗн чухлӗ те хирӗҫлемеҫҫӗ. Апла пулсан, вӗсем пирӗн интерессемпе те пӗрешкел. Паян эпир парти структури пусса тăнине пачах та туймастпăр. Ҫакна эпӗ питӗ яваплăн калатăп.

«Хальхи лару-тăрура КГБ, парти витӗмӗнчен тухса, никама пăхăнман, хăйне-хăйтӗллӗнлӗ орган пулса кайӗ» тенипе килӗшейместӗп. КГБ нихăҫан та, ылханлă 37-мӗш ҫулта та, ун пек орган пулман. Вăл яланах хăй вăхăтӗнчи влаҫа пăхăннă, вăл мӗн хушнине тунă, унăн инструменчӗ пулнă. «Тройкăсемпе» «Уйрăм канашлусем» те Хăрушсăрлăх органӗсем тăвас тенипе йӗркеленмен. Кам хушнипе, кам кăмăлӗпе тунă вӗсене – халӗ пурте паллă. Шăпах паянхи демократиллӗ йӗркепе суйланă Верховнăй Советсене пăхăнса ӗҫлени КГБна ӗлӗкхи ҫул ҫине кăлармӗ.

– Пӗлетпӗр ӗнтӗ: наци ыйтăвӗ – политикăн чи кăткăс та, чи асăрхануллă ыйтăвӗ. Кунта «шуйттанăн пӗр пӗрчӗ сухалне туртсан, пӗтӗм тӗнче пăсăлса кăять» тени питӗ те тӳр килет. Наци ăстăвăмӗ, наци туйăмӗ паянхи ҫӳллӗ шая 20-30-мӗш ҫулсенче те ҫитеймен пуль. Ҫӗршывăмăрăн хăшпӗр кӗтесӗсенче нацисем хушшинчи хирӗҫӳ хăрушланса пынăҫем тата уйрăм халăхсем суверенитетлă республикăсем йӗркеленӗ май, КГБна «Наци Харушсăрлăх Комитечӗ» ятпа улăштарас текен шухăш та пулчӗ пичетре. Мӗн шутлатăр эсир, кун пирки, Валерий Борисович?

— Халĕ Россия Федерацийĕн Хăрушсăрлăх Комитечĕ пуласси паллă темелле. Ятне мĕнле парĕç? — е республика Хăрушсăрлăх органĕ, тен, урăхларах — анчах Наци Хăрушсăрлăх Комитечĕ ятлă мар. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен ку ят Хăрушсăрлăх органĕ татса памалли ыйтусене хĕссе лартать. Пирĕн патшалăхра пĕр наци çеç мар-çке. Хăшне хӳтĕлемелле? Çапла вара эсир сĕннĕ ят нумай нациллĕ çĕршывра вырăнсăртарах, вăл КГБ функцине пĕр наци чиккине çити ансăрлатать.

— Каçарăр та, Валерий Борисович, ку ыйтăва эпĕ сĕнмерĕм-çке, — пичетре пулнине каларăм. Ыйтăвĕ те ку Союзри хăшпĕр нацисем суверенитет илсе пынă май сиксе тухнă пуль-ха. Союзран тухса тĕппипех уйрăлса каяс пулсан, тен, Наци Харушсăрлăх Комитечĕ тесе те калĕç. Ĕлĕк Францире, революци вахăтĕнче, шăп çавăн пек ятлă комитет та пулнă. Пирĕн Çĕршывшăн, çитменнине хальхи вăхăтшăн, ун пек ят, паллах, вырăнсăр.

Валерий Борисович, калаймăр-и, мĕншĕн Чăвашра КГБ пуçлăхĕ нихăçан та чăваш пулман. Ку вара çынсене «тĕрлĕ-тĕрлĕ шухăш» патне илсе çитерет, наци туйăмне чĕрсе илет. (Халăх умĕнче лекци вулакан халăхĕнчен ик-виçĕ хут нумайрах пĕлмелле-çке тесе каланăччĕ ĕнтĕ эпир).

— Йăнăшатăр, Николай Аверкиевич. Тĕрлĕ çулсенче республикăри Хăрушсăрлăх органĕсен руководителĕсем Иван Якимович Морозов, Георгий Семенович Марсельский, Федор Кириллович Шатров пулнă. Вĕсем — тĕп чăвашсем. Ку явaплă вырăна лартнă чух мĕнле халăх çынни пулнине мар, ĕçе лайăх, профессионаллă шайра пĕлнине шута илеççĕ чи малтан. Çавăнпа та Комитет пуçлăхĕ урăх наци çынни пулнишĕн нимĕн чухлĕ те кӳренмелле мар, ку вăл чăваша вырăна хуманнине пĕлтермест. Калас пулать, пирĕн коллективра руково-

дитель ĕçне-хĕлне кирлĕ шайра тытса пыма пултаракан чăвашсем çитĕнеççĕ. Анчах ку ыйтăва – Хăрушсăрлăх Комитечĕн пуçлăхĕ кам пулассине – эпир мар, Республика Аслă Совечĕ çеç татса пама пултарĕ.

– Шупашкар – пысăк ял. Кунта çынсем пĕр-пĕрне, – алран алла-и, çын-çын урлă-и, – палласçĕ. КГБ сотрудникĕсене те пĕлмеççĕ мар ĕнтĕ. Сирĕн сотрудник, сăмахран, журнал ĕçченĕ патне тăтăш кĕрсе тухма пуçласан, çав юлташ çине шанăçсăррăн пăхма тытăнатпăр: стукач. Ĕлĕк пĕр-пĕр ялта çын вĕлернĕ пулсан, чăваш йăли-йĕркипе укăлча умне хура юпа лартнă: çулçӳренĕм, асту, кунта – вĕлереççĕ... Ленин музейĕ вырнаçнă çурт умĕнчен (ĕлĕк унта НКВД çанă тавăрса ĕçленĕ) иртнĕ чух чун сӳлетсе илет. Мĕншĕн çапла? Тен хăвăр мĕн ĕçлесе пурăннине анлăрах, уçăмлăрах каласа памалла çынсене? Интервьюсем кăна çителĕклĕ-ши паянхи саманара? Сăмахран, милиципе танлаштарсан, ытларах мĕнле ыйтусемпе ĕçлетĕр эсир, Валерий Борисович?

– Халăхпа Харушсăрлăх органĕсем хушшинчи картлам-чăрмав пирки калаçрăмăр ĕнтĕ эпир. Тепĕр хут калатăп: уйăрса тăракан карта çук пирĕн хушшăмăрта. Хамăрăн ĕç тĕллевĕсене те пытармастпăр эпир. Разведка, контрразведка йĕркипе ют çĕршыв спецслужбин сăтăрла ĕçĕсене тупса палăртатпăр, патшалăх вăрттăнлăхĕсене сыхлатпăр, Конституци палăртнă Совет стройне террористсенчен, экстремистсенчен хӳтĕлетпĕр, нацисем хушшинчи хирĕçӳсене сирсе яратпăр. Правительство тата шифр меслечĕпе йĕркеленĕ çыхăнăва тытса пыратпăр, СССР правительствин членĕсене, Президента сыхлатпăр. Çĕршыв чиккине хуралатпăр. Хăвăрах чухларăр – эпĕ халь каласа тухнă ĕçсем Шалти ĕç Министерствин ĕçĕ-хĕлĕпе пĕрре те çыхăнман.

Пирĕн ĕçе РСФСР Уголовно-процессуальнăй Кодексăн 126 статйи регламентлать. Эпир пăхса тухмалли ыйтусен шутне тата 18 тĕрлĕ преступлени кĕрет. 15 тĕрлĕ преступление прокуратура тата Шалти ĕç Министерствипе пĕрле тĕпчеме пултаратпăр. СССР халăх депутачĕсен йышăнăвĕ тăрăх, эпир 1989 çул вĕçĕнчен пуçласа ушкăнпа йĕркеленĕ преступление хирĕç (организованная преступность) кĕрешме пуçларăмăр.

– Хăвăр ĕçĕрте сирĕн, паллах, помощниксен, агентсен, е, тепĕр чух сексот теççĕ-и-ха вĕсене? – вăйĕпе те усă курма лекет пулĕ. Кашни учреждениреx пур-и вĕсем сирĕн?

– Çапла, усă куратпăр. Хуть те мĕнле патшалăх спецслужби те хăйĕн гражданĕсене явăçтарать çав ĕçе. Ĕнентерсех калатăп: пире кулленхи ĕçре пулăшакансем кашни организацирех çук. Ун пек меслетрен, кашни учреждени-организацирех пулăшакансене тытса тăрасран, 50-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех пăрăннă эпир. Çитменнине, çав пулăшун характерĕ те тĕпрен улшăннă. Эсир пирĕн пулăшакансене «стукачсем» тетĕр. Анчах эпир ĕлĕкхи «стукачество» ĕç меслечĕсенчен аякра, питĕ аякра тăратпăр. Вак-тĕвек япала пирки мар, çӳлерех асăнса тухнă принциплă ыйтусем пирки пулăшу кĕтетпĕр эпир çынсенчен. Чăн-чăн усăллă хыпарпа «стукачество» хушшинчи уйрăмлăха пирĕн помощниксем хăйсем те лайăх чухлаççĕ. Çĕршывăмăр, халăхăмăр канăçне тăнăçламалли хыпар кĕтетпĕр эпир вĕсенчен. Тав тумалла çеç вĕсене пирĕн, чăн-чăн патриотизм туйăмĕ пур вĕсенче. Пулăшакансем тăрăшнипе эпир ют çĕршыв разведчикĕсене тупса палăртатпăр, урăх фирмăсем пирĕн экономикăна сăтăр тăвасран, кĕтмен лару-тăру сиксе тухасран сыхлатпăр, йывăрлăхапăтăрмаха лекнĕ çынсен пурнăçне çăлатпăр. Вĕсем пу-

лăшнипех террористсене, преступнăй ушкăнсене тăрă шыв çине кăларатпăр. Стукачество-и ку? Сахал вĕсем пирĕн, эсир шутланинчен чылай сахалтарах. Вĕсен ячĕсене эпир пĕлтерме пултараймастпăр. Калас та килет тепĕр чухне, палăртас та килет ырă ĕç тунă пулăшакана. Вăл е ку преступление сирсе яма контрразведка офицерĕ çеç мар, чи малтан республика гражданинĕ, тӳрĕ чунлă та Çĕршывшăн çунса тăракан çын пулăшнăçке!

Вăт çапла. Хисеплетпĕр эпир хамăрăн помощниксене. Общество та тав тума тивĕç вĕсене. Çавăн пек пулăшăва халăхра «стукачество» тесе сарнине эпĕ çак институтăн ятне-хисепне варалани, е, тата малалла шухăшласа кайсан, пĕтерсе лартасшăн хăтланни тесе шутлатăп. Тен, хальхи пулăшăвăн уйрăмлăхне курмасăр-ăнланмасăр калаçакан çынсем те пулĕç, анчах Хăрушсăрлăх органĕсене йĕркерен тухса критикленĕ вăхăтра хăйсен «политикине» тăвас текенсем те çук мар. Ун пек таса мар совĕçлĕ çынсем, халăха Хăрушсăрлăх органне пулăшаканĕсене хирĕç тăратса, хăйсен преступленийĕсене пытарасшăн е ун хӳттипе преступлени тума хатĕрленеççĕ.

Пирĕн ĕçре те çитменлĕхсем пур пулĕ, вĕсем тен, критикăна та тивĕç. Шухăшăма тӳрех, уççăн калас пулсан, юлашки вăхăтра сарăлса пыракан дискредитаци кампанийĕ КГБ чĕрине тĕлленĕ – ăна халăхран, ун пулăшăвĕнчен уйăрасшăн. Ку вара мĕн патне илсе çитерме пултарнине ĕнер кăна социализмла тесе шутланнă çĕршывсенчи пулăмсем лайăх кăтартса пачĕç. Çакă уйрăмах палăрăмлă: çав çĕршывсенче пылчăкпа вараласа, таптаса-аркатса пĕтернĕ хăрушсăрлăх органĕсем вырăнне тепĕр кунах çĕнĕрен хăрушсăрлăх служби йĕркеленĕ: ĕçĕ-хĕлĕ те, тĕллевĕ те – ĕлĕкхиех. Мĕн улшăнчĕ?

Организацилле ĕç принципĕсем тĕлĕшпе – нимех те, анчах пин-пин çын шăпи аманса-чăлханса кайнине шута илсен – нумай. Демократи-и ку? Мĕнле демократи, камшăн? Вулакан эпĕ лартнă ыйтусем çине хăех ответлĕ.

– Ытла та аякран, тарăнран килет-çке çав пĕлтерсе тăрас тени. Акă сире пĕр документ. Парти XIV съездне Ленинград делегацийĕ çакăн пек ыйту тăратнă: «О доносительстве в партии». Хуравне Шкирятов панă. «Это – не доносительство, это обязанность каждого члена партии», – тенĕ вал. ЦКК паллă секретарĕсенчен пĕри Гусев калани тата уçăмлăрах: «Каждый член партии должен доносить... Если мы от чего-либо страдаем, то это не от доносительства, а от недоносительства», – пусарсах каланă вăл.

Халь ĕлĕкхи мар: вăхăт иртнĕ май пурнăç та улшăнса пырать. «Стукачпа» помощник хушшинчи уйрăмлăха уйăрса илме хăнăхмалла ĕнтĕ пирĕн халиччен. Çĕршывăмăра, халăхăмăра усă кӳрес тĕллевпе хыпарласа тăракан помощниксен ĕçĕ чăннипех те пархатарлă. Элек, провокаци ан пултăр, хăй еккипе иртсе пыран пурнăçăма кăна ан кĕччĕр вĕсем. Каçарăр та мана тӳррĕн каланăшăн, Валерий Борисович, пурпĕрех çав пулăшакансене чун йышăнмасть. «Кесарю – кесарево» теççĕ-и-ха ун пек чух...

Эсир нумай пулмасть тепĕр пай йĕркеленĕччĕ пулас, обществăлла-политикăлла организацисемпе ĕçлекенни. Тĕрлĕ тĕслĕ ялав айне тăнă тĕрлĕ партисем, союзсем, ушкăнсем çумăр хыççăнхи кăмпасем пек шăтса тухнă вăхăтра ун пек пай кирлех пулĕ.

Каламасăрах паллă, Çĕршывăмăрăн таса идейине, тĕллевне сыхласа хăварасах пулать.

– Ун пек пай, чăнах та, йĕркеленĕ. Анчах вăл «об-

ществăлла-политикăлла организацисемпе ĕçлекенни» ятлă мар. Ăна нумай пулмасть салатнă «идеологилле диверсисемпе кĕрешекен» 5-мĕш пай вырăнне тунă. Çĕнĕ пай Конституцилле Совет стройне сыхлас енĕпе ĕçлет, унăн функцийĕсем те урăхларах.

— Перестройка кризисĕ, ман шутпа, пур пĕлтерĕшлĕ ĕçсене те «çурри çурмалла» принциппа туса пынинче. Ара, çар каялла чакнă чухне лава — обоза пăрахса хăварма шел-çке...

Иртнипе, историпе эпир пин-пин нервăпа çыхăнса пĕтнĕ, пăява пуртăпа пат татнă пек пĕрре сулсах татаймăн вĕсене. Анчах паян тасалмалли аслă вăхăт çитрĕ. Иртнĕ йăнăшсене, çылăхсене пĕтĕм халăх умĕнче йышăнмалла, пуçа пĕксе тăрса ӳкĕнмелле. М.С. Горбачевăн программăлла сăмахне аса илни вырăнлă кунта. «Преодоление отчуждения лежит на путях нравственного очищения нашего общества», — тет вăл. Анчах Октябрь хыççăнхи синкерлĕ ĕçсемшĕн никам та, — партипе патшалăх органĕсем те, уйрăм çынсем те, — ӳкĕнесшĕн пулмарĕç. Ӳкĕнсе каçару ыйтмасан, тӳнтерне палăксем е пушанса юлнă кивĕ пьедестал çинех тепĕр кĕлетке çĕклес шухăшпах пурăнсан, каллех, халь ĕнтĕ тепĕр енчен, ахăрсамана вутне пырса кĕрĕпĕр. Çӳлтен курăнарах парать. Ахальтен мар Шеварднадзе, хăй отставкăна тухнă чух, диктатура килессипе хăратрĕ. Хăрушсăрлăх органĕсем те истори айĕпĕн пĕр пайне, хăйне тивĕç пайне, йышăнса ӳкĕнме васкамарĕç-ха. Паллах, вĕсене те ийе чĕмламан мар: 30-50-мĕш çулсенче НКВД-ăн 20 пин ытла сотрудникне репрессиленĕ. Тĕлĕнмелле вăхăт пулнă ун чухне: пĕтĕм çĕршывĕпех, пур тĕрлĕ ĕçре те, кашни утăмрах çынсем пĕрне-пĕри сутнă. Сталин сутăнчăксене сутăнчăксен аллипех пĕтернĕ теес те килет тепĕр чухне: пĕрре сутнăскер тепре су-

татех. Сăмахран, Калугин пирки хăвăр та çаплах шутламастăр-и...

Ĕлĕкхи Римра пĕр вăхăтра çамрăк хĕрсем çакăнса вилесси йăлана кĕнĕ. Юрату ăнмарĕ – çакăнаççĕ, ашшĕ-амăшĕ хăтăрчĕ – çакăнаççĕ. Указсем те кăларнă правительство, Виçкарт тăвĕ çине те пухса калаçнă вĕсемпе, – çук, нимĕн те пулăшман. Мĕн тумалла? Пĕр ăсчах вара çапла сĕнӳ парать: çакăнса вилнĕ хĕрсене çарамаслантарса пĕтĕм халăх çӳрекен площаде тухса хумалла. Мĕн тейĕр эсир? Хĕрсем тепĕр куннех çакăнса вилме пăрахнă – халăх умĕнчи намăсран хăранă вĕсем...

– Эсир, Николай Аверкиевич, 30-50-мĕш çулсенчи НКВД айăпĕн хамăра тивĕç пайне йышăнма сĕнетĕр. Манăн, е ман ĕçтешĕмсен, Хăрушсăрлăх органне 60-мĕш çулсем варринче килнĕскерсен, мĕнле айăп пулма пултарать-ха? Апла, мĕншĕн, мĕскершĕн ӳкĕнмелле ман? Ман шутпа, кунта вăхăтпа пространствăна юри пăсса кăтартма тăрăшни сисĕнет. Манăн та, ĕçтешĕмсен те ӳкĕнмелли çук. Ман хамăн та пирĕн хăшпĕр сотрудниксен тăван-пĕтенĕсем те репрессие лекнисем пур. Эпир çын айăпне хамăр çине илес çук, туман преступленишĕн ӳкĕнес çук. Хĕрушсăрлăх Комитечĕн коллективĕ хăйĕн «Уçă çырăвĕнче» («Советская Чувашия», сентябрĕн 1-мĕшĕ) çав çулсенче тунă преступленилле ĕçсене тивĕçлипе хак пачĕ, ун пекки текех нихăçан та пулмĕ тесе тупа турĕ. (Ку вара ӳкĕнни пулмарĕ-и?..)

– Ывăнса çитрĕмĕр-ши, е эпĕ истори суранĕ çине тăвар сапсах тăтăм-ши? – калаçăвăмăр татăклăрах, (категоричнее) пула пуçларĕ. Тарăхниваскатать тенĕ чăвашсем. Эпĕ, Валерий Борисович, 30-50-мĕш çулсенчи пăтăрмахсемшĕн эсир тата сирĕн ĕçтешĕрсем

айăплă тесе каламарăм пулас. Тĕрĕс — ӳкĕнмешкĕн сăлтавĕ те çук сирĕн. Анчах пространствăпа иртнĕ вăхăт материлле пĕр объектрах çапăнса юлман-и!.. Сăмах уйрăм çын пирки мар, патшалăхăн пĕтĕмле пĕр атрибучĕ пирки пырать. «Советская Чувашия» хаçатра пичетленнĕ «Уçă çырăвăра» эпĕ питĕ пысăка хурса хаклатăп. 37-мĕш çул текех нихăçан та пулмĕ тесе тупа туни паянхи КГБ таса шухăш-кăмăлпа ĕçлесе пурăннине пĕлтерет. Çак сăмаха кĕтмен-и вара халăх сиртен.

Эпĕ маларах партипе патшалăх органĕсенче ĕçленĕ уйрăм çынсем пирки те сăмах хускатнăччĕ. Синкерлĕ самана «паттăрĕсем» вилсе пĕтнĕпе пĕрех, анчах «застой» авторĕсенчен нумайăшĕ паян та ырлăхлă-сывлăхлă. Мĕншĕн вĕсен, куçкĕрет айăплисен, каçару ыйтмалла мар? Иртнĕ çул вĕçĕнче эпĕ делегат пулса Раççей писателĕсен съездĕнче пултăм. 30 çула яхăн çак организацие ертсе пынă С. Михалков хăй вăхăтĕнче ирĕксĕртен е ирĕклĕнех тунă йăнăшсемшĕн пĕр кутăнлашса тăмасăр каçару ыйтрĕ. Арпаттăрлăх вĕт ку — съезд умĕнче каçару ыйтасси! Хăй те тасалчĕ, пирĕн те кăмăл çемçелчĕ. Чăвашра вара каçару ыйтнă тĕслĕхсем çук. Сăмахран, мĕншĕн чăваш чĕлхине уйрăм постановлени йышăнсах чăваш шкулĕсенчен хăваласа кăларакансем, — Иванов-и вăл, Петров-и, Смирнов-и, тен, Г. Сидоров? — халиччен те хăйĕн айăпне йышăнса халăхран каçару ыйтмаççĕ? Ылханлă ят ӳт çине çунтарса лартнă кĕлеме мар, хырса пăрахма та пулĕ, тен...

— Сире интереслентерекен ятсене, — эсир вĕсене юри пĕр вĕçĕм стукачсем тетĕр-ха, — калани 30-мĕш çулсене тепĕр хут, анчах тепĕр енчен илсе килни пулĕччĕ. Ун пек пропагандистла кукрашкана лекмелле ан пултăрах.

— Тепĕр тесен, килĕшме те пулать сирĕнпе. Хальхи саманара, халăх хаярланса çитнĕ вăхăтра ку, чăнах та, хăрушă япала. Тамерлан çарĕ иртнĕ хыççăн тусанне пирĕнех çăтма лекĕ.

Раççей писателĕсен съездне асăннăччĕ эпĕ. Съездчен ик-виç кун маларах «Раççей писателĕсен Çырăвĕ» пичетленчĕ. Унта çакăн пек йĕркесем пур, вырăслах илсе кăтартам: «Ежечасно помните, что мы, русские, высокоталантливый, геройски отважный, могучий духом народ». Мĕн ку? — патриотизм е национализм?

Çакăн пек «чĕнсе каланисен» хыçла ĕçĕ мар-и Митта Васлейĕн палăкне çĕмĕрни, Константин Иванов палăкне лапăртаса тăкни. Çăмах май каласан, ГПУ тăрăшнипе Митта 17 çул тĕрмесенче-лагерьсенче ирттернĕ. Çав вандалсен ятне-хушаматне калаймăр-и, Валерий Борисович? Паллах, следстви пĕтнĕ пулсан.

— «Раççей писателĕсен Çырăвĕ» пирки мĕн калам? Хăйĕн нацине «эсĕ чи чаплă та чи талантлă халăх» тесе ĕнентерме тăрăшакан çын — чирлĕ çын, национализм чирĕпе чирленĕ çын. Енчен халăхĕ хăй те çакна ĕненме пуçласан, трагеди патне çитессе кĕтсех тăр. Тĕнче историйĕнче ун пек тĕслĕхсем сахал мар. Чăваш, вырăс, ытти пур халăха та Тур хăтартăрах ун пек япаларан!

Поэтсен палăкĕсене мăшкăлласа, аркатса çӳренĕ усал шухăшлă çынсене шыратпăр. Шыраса тупасса шанатпăр, тупсан — пĕлтеретпĕрех.

— Юлашки вăхăтра тăтăшах «Хăрушсăрлăх органĕ гражданесем телефонпа калаçнине итлет» тенине илтме пулать. 1 сехет хакĕ 300-500 тенкĕ. Ку чăнах та тĕрĕс пулсан, çавăн чухлĕ тăкак лăпкă Чăвашра усса кайĕши? Çул май çеç ыйтатăп: ман телефона, сăмахран, итлеççĕ-и?

— Ăçтан илнĕ эсир ку информацие, телефонсене итлени мĕн хака ларнине? Тен, мĕнле калаççĕ-ха? — мачча çинчен?

— Валерий Борисович, мĕн хакпа илтĕм, çав хакпах сутатăп: эпĕ ăна СССР Шалти ĕçсен Министерствинче ирттернĕ брифингран илнĕччĕ. Милици полковникĕ Коломиец сăмахĕнчен (*«Комсомольская правда», октябрĕн 12-мĕшĕ*).

— Хăрушсăрлăх органĕсен, чăнах та, оперативлă-техникăлла хатĕрсем çук мар, кирлĕ чухне вĕсемпе усă куратпăр. Анчах вĕсене хăçан тата ăçта усă курма юранипе юраманнине кăтартакан, ирĕк паракан нормативлă акт пур. Хăрушсăрлăх органĕ граждансем телефонпа калаçнине кунĕн-çĕрĕн, пуринне те итлет тени пачах та тĕрĕс мар. Сирĕн телефона та, Николай Аверкиевич, тăваннăрсен тата ĕçтешĕрсен телефонĕсене те итлемеççĕ. Эпĕ сирĕнпе тӳрĕ кăмăлпа, ним пытармасăр калаçнине эсир туйăр пуль тетĕп. Юлашки ыйтăвăра та тӳрĕ кăмăлпах хуравлатăп.

— Юлашкинчен, вулакансене хăвăр пурнăçăр, кунçулăр çинчен кĕскен те пулсан каласа кăтартмăр-и!

— Нумаях каласа тăмăп хам çинчен. Вăрçăччен кăшт маларах çуралнă. Хам ăрăвăм кунçулĕ — манăн кунçул та. Аттесĕр ӳснĕ, заводра ĕçленĕ, Атăл тăрăхĕнчи Совнархозра вăй хунă, заочно йĕркепе институт пĕтернĕ, каярахпа — Хăрушсăрлăх органĕ. Мĕн пурнăç тăршшĕпех вĕреннĕ, хам тĕллĕн вĕреннĕ. Авланнă. Пирĕн çитĕнсе çитнĕ икĕ ача, виçĕ мăнук. Пурнăç çине, самана çине мĕнле пăхни сирĕн ыйтусене хуравланинченех паллă.

Эсир мана ăнлантăр пулсан, йышăнатăр пулсан — эпĕ кăмăллă юлăттăм. Ман хуравсемпе паллашма кăмăл тунă вулакансене те тав тăватăп. Кирлех пулсан,

вĕсене кăсăклантаракан ыйтусем сиксе тухсан, тархасшан, — эпĕ тепĕр хут калаçма та хатĕр.

* * *

XX ĕмĕр, çул вĕçне тухнă май, ывăннă пулĕ тенĕччĕ. Çук иккен, ывăнман, пачах урăхла — ку яхăн Вăхăт ăраснах васка пуçларĕ: кашни кун, кашни сехетре мĕн те пулин, эпир кĕтмен те туман япала, пулса иртет тĕнчере. Çавă васкатать аслă Вăхата.

Çĕршывăмăр чапĕ — пирĕн чап, ун мăшкăлĕ — пирĕн мăшкăл, ун чирĕ — пирĕн чир, сикекен чир. Акă, Чăвашъен Аслă Канашĕ республика суверенитетне йышăнчĕ, — социализмла ытти республикăсен правине чăнах та тивĕçлĕ вăл. Анчах Раççей, хăй суверенитечĕшĕн тапăçса Союза салатма пулăшаканскер, ăна йышăнасшăн мар: шалта, ăшчикре авалтан килекен чир — импери...

Йĕрке тăватпăр тесе сăмах çапса, килтен киле çӳресе депутат пулнăскерсем суйлав иртсен тепĕр куннех манса кайрĕç суйлавçисене, халь вĕсем, тиек вырăнĕсене йышăнса хăйсене хăйсем шалу хунă хыççăн, парти аллинчи тилхепене туртса илесшĕн. Ĕç йĕркине хăнăхса çитейменскерсем тилхепене унталла-кунталла туртаççĕ: лаши чăхăмăçлать...

Çуту-илӳ таврашĕнче Чăвашра та тем те пулса иртет иккен. Ун çинчен СССР Хăрушсăрлăх Комитечĕн председателĕн пĕрремĕш заместителĕ Мускав хаçатĕнче çырать. Çĕршывăмăрăн Аслă Канашĕ экономикăри саботажа хирĕç кĕрешме КГБна хушрĕ. Тахçанах çак ĕçе кӳлĕнмелле марччĕ-ши ун тăватă çул ытла тем кĕтсе лариччен... Тытма тытаççĕ-ха саботажниксене, пытарса хунă кĕрĕксене, пулă вăлчисене тупаççĕ, ан-

чах çав сăтăрçăсене айăпламалли уйрăм статья та çук иккен-ха Уголовнăй Кодексра. Апла — мĕн усси? Турти каллех çуна хыçĕнче. Лешсем, пулă вăлчи юратакансем, «хура тупкă» кĕрĕкпе Çĕпĕр сиввинче те шăнмастчĕç ĕнтĕ...

Кулленхи пулăмсем. Анчах эпир кунта вак-тĕвек çинчен мар — ĕç принципĕсм çинчен калаçрăмăр. Малтанах çип çапça хунă йĕрпе каймарĕ ман сăмахăм — хальхи лару-тăрăва кура хирĕçтăрулла та иккĕленӳллĕ пулчĕ вăл. Ара, Атăл та уяр çанталăкра кăна янкăр. Пурнăç çулĕпе таса та тӳррĕн утакан чăвашăн КГБран хăрамалла ан пултăр терĕм. Вулакан çавна туйса илчĕ пулĕ. Асăрханулла та пулас: ĕрĕхсе кайнă самана ахрат çырми тĕлĕнче тăп чарăнсан, юланучĕ çырмана ан вăркăнтăрччĕ. Хăрушлăхсăр та хăрушă иккен.

*«Ялав», 1991, 5 №.*

## ТУПМАЛЛИ


Умĕн калани ........................................ 5
*Поэт монологĕ* ........................................ 7
**ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ** ........................................ 10
Пĕрремĕш картина ........................................ 10
Иккĕмĕш картина ........................................ 41
Виççĕмĕш картина ........................................ 63
Тăваттăмĕш картина ........................................ 80
Пиллĕкмĕш картина ........................................ 103
Улттăмĕш картина ........................................ 122
*Саманапа поэт калаçăвĕ* ........................................ 128
**ИККĔМĔШ ПАЙĔ** ........................................ 132
Пĕрремĕш картина ........................................ 132
Иккĕмĕш картина ........................................ 171
Виççĕмĕш картина ........................................ 180
Тăваттăмĕш картина ........................................ 190
Пиллĕкмĕш картина ........................................ 206
Улттăмĕш картина ........................................ 230
*Самана монологĕ* ........................................ 241
**ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ** ........................................ 243
Пĕрремĕш картина ........................................ 243
Иккĕмĕш картина ........................................ 265
*Ямпольский В.Б.* Хăрушлăхсăр хăрушă мар-и? 283

**Николай ИСМУКОВ**

# СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ
# ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

*Иккĕмĕш том*

## Светопреставление
## Ахăрсамана

Редактор *В. Кервен*
Художественный редактор *А. Кокель*
Компьютерная верстка *Л. Богатеева*

Подписано в печать 25.10.2013. Бумага офсетная.
Формат 84x108 1/32. Гарнитура «Таймс». Печать офсетная.
Усл.-печ. л. 16,5. Тираж 500 экз. Зак. № К-443. Цена свободная.

# АСРА ТЫТМАЛЛИ

**АСРА ТЫТМАЛЛИ**

# АСРА ТЫТМАЛЛИ

# АСРА ТЫТМАЛЛИ

# АСРА ТЫТМАЛЛИ

# АСРА ТЫТМАЛЛИ

250.